Ю.М. Виноградов, А.С. Егорова, Л.Г. Петрова

# ЧӐВАШ ЧӖЛХИ

9-мӗш класс валли

Шупашкар

2019

## Ятарлă паллăсем

➤ –теори материалĕ;

▲– асра тытмалли правилăсем;

⊙ – çĕнĕ темăна ăнланма харпăр хăй тĕллĕн тумалли ĕç;

⭘ – вĕреннине аса илмелли ĕç;

🕮 – хуравлама йывăр ыйту е кăткăс ĕç;

◆– çыхăнуллă пуплеве аталантармалли, творчествăллă ĕç;

✪ – хутшăну хăнăхăвĕсене аталантармалли ĕç;

?! – шухăшлатпăр, ăслатпăр, ĕнентеретпĕр

✪✪ – мăшăрпа тумалли ĕç;

✪✪✪ – ушкăнпа тумалли ĕç;

– Интернетпа усă курса тумалли ĕç;

* – хăнăхтару çумне хушса панă ĕç;

тивлет[1] – фонетика тишкерĕвĕ тумалли сăмах;

тавçăрулăх[2] – пулăвне тата тытăмне тишкермелли сăмах.

**Виноградов Ю.М.** Чăваш чĕлхи: 9-мĕш класс валли / Ю.М. Виноградов, А.С. Егорова, Л.Г. Петрова – Шупашкар, 2019. – _____ с.

# ЧĂВАША ЧĂВАШ ЧĔЛХИ КИРЛĔ

*Чăвашсемĕр! Сире телей сунатăп,*
*Ан сивĕнĕр тăван чĕлхемĕртен.*
*Мансан – чĕлхесĕр янавар пулатпăр,*
*Чĕлхе пулсан – пĕтместпĕр ĕмĕрне.*

Раиса Сарпи

1. Текста вулăр та калаçу ирттерĕр.

Тăван чĕлхе вăл – атте-анне чĕлхи, асанне юмахĕ, асатте вĕрентсе калани. Тата-таçта çӳресе тĕрлĕ чĕлхе вĕреннĕ пулин те эпĕ вĕсемпе чăвашлисĕр пуçне урăхла калаçса курман. Хăйсемпе ютла калаçма тытăнас пулсан вĕсем мана аташма пуçланă çын вырăнне хунă пулĕччĕç. Пурăннăçемĕн мана тăван кĕтес, таврари улăх-çаран, ачалăхра пĕрле ӳснĕ тантăшсем ытларах та ытларах аса килеççĕ. Вĕсем çинчен вара чăвашла кăна шухăшлатăп.

Пĕр чух чĕлхемĕр пирĕншĕн сĕрме купăс сасси пек ачашшăн та асамлăн илтĕнет. Тепĕр чух аслати пек хăватлăн кĕрлет. Çук, пурăнаймасть чăваш хăйĕн тăван чĕлхисĕр! Чăваш чун-чĕрине хăйĕн тăван чĕлхи кăна туллин те тарăннăн уçса пама пултарать.

Тăван чĕлхерен ютшăнакансем ытларах чухне чăннипе çурма чĕлхеллĕ. Тăван чĕлхерен писме хăтланнипе ăна пĕлсе çитереймеççĕ, вырăсла та йĕркеллĕ вĕренеймеççĕ. Хăй вăхăтĕнче французсен аслă просветителĕ Вольтер чĕлхесем çинчен питĕ тĕрĕс каланă: «Пĕр пилĕк-ултă çул хушшинче Европăри тĕп чĕлхесенчен пурне те вĕренме пулать. Анчах та пĕр чĕлхене вара ĕмĕр тăршшĕпех вĕренес пулать. Ку вăл – тăван чĕлхе».

Малашлăх сирте, çамрăксем. Эсир аслă аттемĕр Иван Яковлевич Яковлев пехилне тытса пырсан ӳлĕм те чăваш çынни

Петĕр Хусанкай сăмахĕсене çирĕппĕнех калама пултарĕ: «Эпир пулнă, пур, пулатпăр!» *(И.А. Андреев.)*

*****?! Текста ят парăр, унăн тĕп шухăшне палăртăр. Юлашки предложенипе И.А. Андреев мĕн каласшăн пулнă-ши?

***** И.А. Андреев çинчен эсир мĕн пĕлетĕр? Чăваш чĕлхине упраса хăварас тата аталантарас енĕпе мĕнле пархатарлă ĕçсем тунă вăл?

*⭘ *Аттемĕр* сăмахăн кашни пĕлтерĕшлĕ пайне (мĕнле категорине палăртнине кăтартса) ăнлантарăр. Япала ячĕн камăнлăх формине аса илĕр.

*⭘ Текстра пĕр йышши членлă предложенисене тупăр, схемине ўкерĕр, чарăну паллисене ăнлантарăр.

*?! *Сĕрме купăс, хут купăс, хăма купăс* пĕлтерĕшĕсене словаре пăхса пĕлĕр. Вĕсене мĕншĕн çавăн пек ят панă-ши?

***Танлаштарăр***

*Тантăш* – «ровесник, сверстник»

Ытти тĕрĕк чĕлхисенче *тăңңăш (тăң + -дăш)* «ровесник», *тиңдăш (тиң + -дăш)* «ровный, подобный; ровня, пара», *тиңдəш* «ровня, чета».

Марисем *таҥаш, тăнгаш* «ровня, ровесник» сăмахсене чăвашсенчен йышăннă.

✪✪✪ 2. Схемăна тишкерĕр. Чăваш чĕлхи аталанăвне мĕн витĕм кўрет? Тĕслĕхсемпе ĕнентерĕр.



**3.** Текста вулăр та хăвăр шухăшăра палăртăр. Чĕлхе упранса юлтăр тесен, сирĕн шутпа, мĕн-мĕн тумалла?

## Чăваш пĕтсен – тĕнче пĕтет

«Чăваш пĕтсен – тĕнче пĕтет...» Чăваш пĕтсен çеç-и вара? Капла кирек хăш халăх пирки те калама пулать. Кашни культура – хăйне евĕр тĕнче. Пайăр халăх çухални – пысăк тĕнче çухалниех.

Футурологсем çирĕплетнĕ тăрăх, этемлĕх çитес вăхăтра улт çĕр чĕлхепе кăна калаçма тытăнĕ. Тепĕр тĕпчевçĕ малашне пилĕк-ултă чĕлхе çеç сыхланса юласса ĕнентерет.

Чĕлхесем манăçа тухаççĕ, çĕнни çуралмасть. Мĕн тери кичем пулĕ апла пулсан! *(Э. Фомин.)*

*○ Текстра çыхăну паллисĕр хутлă предложенисем тупăр, хутлă предложени пайĕсен пĕлтерĕшĕсене палăртăр. Предложени схемине ӳкерĕр, чарăну паллисене ăнлантарăр.

*○ Текстра кăткăсланă хутлă предложенисем пур-и? Чăваш чĕлхинче хутсăр предложенисем мĕнпе-мĕнпе кăткăсланма пултараççĕ?

*○ *Пайăр* сăмах мĕне пĕлтерет? Вăл мĕнле пуплев пайĕ пулать? *Пайăр* сăмахпа 3 сăмах майлашăвĕ йĕркелĕр.

### *Пĕлетĕр-и эсир?*

Чăваш сăмахĕсене чи малтан пуçласа çырса илекенĕ Швеци çынни Ф.И. Страленберг (1676 – 1747) пулнă. 1730 çулта пичетленнĕ хăйăн кĕнекинче вăл 28 чăваш сăмахне латин сас паллисемпе çырса кăтартнă. Ку вăл чăвашсен кивĕ çырулăхĕн пуçламăшĕ пулать.

**4.** Сăвва вулăр та ятне аса илĕр. Сăввăн тĕп шухăшне калăр. Автор шухăшĕпе килĕшетĕр-и эсир?

Эс пул академик,

Эс пул генерал,

Эс пул çĕр ĕçченĕ -

Тăван çĕр хуçи...

Çакна çеç ан ман эс,

Ан ман эс, чăваш:

Чăвашшăн чăваш – чи хаклă юлташ!

Чăвашшăн чăваш – тăван-хурăнташ! *(В. Туркай)*

*⭘ Предложенисем хутлă е хутсăр пулнине калăр.

*⭘ Чĕнӳ пулакан сăмаха (сăмахсене) палăртăр.

***Сăмах çӳпçи***

*Юлташ* – тутар чĕлхинчен кĕнĕ сăмах, чăвашла чи çывăх çынна, туса пĕлтерет (вырăсла *товарищ*). Тутар чĕлхинче ку сăмахăн пĕлтерĕшĕ кăшт урăхларах, вăл çула пĕрле тухнă çынна, пĕрле çул çӳрекене пĕлтерет (вырăсла *спутник, попутчик*).

Иккĕмĕшле сăмах, *юл ~ жол ~ дьжол* «çул» + «пĕрле» пĕлтерĕшлĕ -*таш* аффикс. Чăн чăвашла вăл *çулташ* пулмалла ĕнтĕ, анчах тутар чĕлхинчен йышăнни çирĕпленнĕ. *(Л.П. Сергеев.)*

***Танлаштарăр***

*Юлташ* «товарищ». Тутар, пушкăрт *йулдаш* «спутник, попутчик», турккă, азербайджан, туркмен *йолдаш* «товарищ по дороге, спутник; товарищ». Авалхи тĕрĕк *йулдуз.*

Йăлăмри марисен *йолдаш*, тури марисен *йалдаш, удмуртсен юлтош* сăмахĕсем тĕрĕксенчен йышăннипе пулса кайнă.

5. *Юлташ* сăмахăн ытти пĕлтерĕшĕсене Интернета е «Чăвашла-вырăсла словаре» пăхса аса илĕр.

🕮 6. *Чăваш* сăмахăн пулăвне М.Р. Федотовăн «Чăваш чĕлхин этимологи словарне» пăхса ăнлантарăр.

***Хăвăрт каларăш***

**Чăваш, чăваш, чăнах та, чăн-чăн чăвашла эс калаç.**

✪ 7. Шухăш карти. *Чăваша чăваш чĕлхи кирлĕ* тенине эсир мĕнле ăнланатăр?

## ВĔРЕННИНЕ АСА ИЛНИ

8. Текста вулăр. Чĕлхе наукин пайĕсене каласа тухăр, вĕсене хăш класра вĕреннине аса илĕр.

### Чĕлхе пĕлĕвĕн кӳртĕмĕ

### Чи кĕске урок

Сасса тĕпчекен ăслăлăха фонетика теççĕ. *Фон* – авалхи грек сăмахĕ, «сасă» тенине пĕлтерет. Сăмаха лексикологи çырса кăтартать: *лекс* каллех авалхи грекла – «сăмах», *логи* – «ăслăлăх». Тымарпа аффикса морфологи тишкерет; *морф* вăл – «кӳлепе». Синтаксис тĕллевĕ - сăмах майлашăвĕпе предложение тĕпчесси: *синтаксис* – «йĕрке».

Урок вĕçленчĕ. *(Э. Фомин.)*

*✪✪ *Фон, лекс, морф, логи* сыпăксем пур сăмахсене аса илĕр, вĕсен пĕлтерĕшĕсене ăнлантарăр.

*⭘ Мĕн вăл грамматика? Чĕлхе наукин хăш пайĕсене пĕрлештерет вăл?

*🕮 «Чăваш чĕлхин грамматикинче» антонимсем çинчен çыраççĕ-и? Мĕншĕнне ăнлантарăр?

✪✪✪ 9. Текстсене чăвашла куçарăр.

**1-мĕш ушкăн.** Все науки в грамматике нужды имеют. Тупа оратория, косноязычна поэзия, неосновательна философия, непонятна история, сомнительна юриспруденция без грамматики. *(М. Ломоносов.)*

**2-мĕш ушкăн.** Словарь языка свидетельствует, о чем думают люди, а грамматика – как они думают. *(Г.В. Степанов.)*

**3-мĕш ушкăн.** Грамматика позволяет нам связать между собой любые слова, чтобы выразить любую мысль о любом предмете. *(Л. Успенский.)*

*◆ Ученӑйсем каланине эсир мӗнле ӑнланатӑр? Вӗсен шухӑшӗпе килӗшетӗр-и? Хӑвӑр шухӑшӑра ӗнентерме кӳртӗм сӑмахсемпе усӑ курӑр.

*◆ *Грамматика* сӑмахпа синквейн тата «Мӗн вӑл?», «Мӗнле вӑл?», «Мӗн тӑвать вӑл?» ыйтусемлӗ хӗвел кластер ҫырӑр.

10. Чӗлхе наукин пайӗсем тӗпчекен единицӑсене аса илӗр те таблицӑна тултарӑр.

| Чӗлхе наукин пайӗ | Тӗпчекен единицӑсем |
|---|---|
| Фонетика | |
| Лексикологи | |
| Морфемика | |
| Морфологи | |
| Синтаксис | |

11. Вӗренӳ кӗнекин тупмаллине пӑхӑр та уроксен темисемпе паллашӑр. Ку вӗренӳ ҫулӗнче чӑваш чӗлхи урокӗсенче эсир чӗлхен мӗнле единицисене вӗренӗр?

12. Латин чӗлхине пӗлни пире кирлӗ-и? Ӑна пӗлни мӗнле професси ҫыннине уйрӑмах усӑллӑ?

## Латин чӗлхи эткерӗ

«Гостья из будущего» фильмра Алиса Селезнева 2084 ҫултан 1984 ҫула килет. Унӑн тӗллевӗ - хурахсем вӑрласа кайнӑ миелофона каялла тавӑрасси. Миелофон вӑл – чӗрӗ чун шухӑшне вуламалли хатӗр. Сӑмахӗ икӗ тымартан тӑрать: авалхи грекла *миел* «миме» тата *фон* «сасӑ». Пӗр тымарлӑ сӑмахсем шыратпӑр: *полимиелит, фонетика, телефон...*

Авалхи грекпа латин чӗлхин термин тӑвакан тымарӗсене ӑша хывсан (вӗсем нумаях мар) нихҫан курман-илтмен тӗрлӗ ӑслӑлӑх сӑмахне (вӗсем вара питӗ йышлӑ) ҫӑмӑллӑнах ӑнланма тытӑнатӑн.

Сӑмахран, *эритрофоби* – *эритр* «хӗрлӗ» тата *фоби* «хӑрани» сыпӑнчӑкран тӑрать, хӗрелсе каясран хӑранине пӗлтерет.

*Анаэроб* сӑмах виҫӗ пӗлтерӗшлӗ пая пайланать: *ан* хирӗҫлеве палӑртать, *аэр* «сывлӑш», *-об* – *микроб* сӑмах юлашкийӗ. (*Э. Фомин.)*

*?! Авалхи грекпа латин чӗлхин термин тӑвакан тымарӗсене эсир хӑш уроксенче тӑтӑш тӗл пулатӑр?

*✪✪✪ Чӑваш, вырӑс тата ют чӗлхе урокӗнче усӑ куракан мӗнле терминсене авалхи грекпа латин чӗлхисемпе ӑнлантарма пулать?

* *Библиотека, лингвистика, неологизм, омоним, тавтологи, синоним, синтаксис, Интернет* сӑмахсем мӗнле пӗлтерӗшлӗ сӑмахсенчен пулса кайнине тавҫӑрма тӑрӑшӑр. Хӑвӑр тӗрӗс е йӑнӑш шухӑшланине Интернета е словаре пӑхса пӗлӗр.

*✪✪ *Компьютер, принтер, айфон, диктофон* сӑмахсене чӑвашла мӗнле куҫарнӑ пулӑттӑр?

### *Сӑмах ҫӳпҫи*

*Эткер, еткер* I «собственность, имущество, достояние, богатство»; «наследство, наследие»; «потомок, наследник».

*Еткер* II (кивелнӗ сӑмах) «местность, край, место».

*Еткерлӗх прави* «право наследования».

Туркӑ чӗлхинче *ядыгар* «подарок на память», тутар чӗлхинче *ядкяр* «память, воспоминание; сувенир» пӗлтерӗшлӗ. Тӗрӗк чӗлхисене перс чӗлхинчен кӗнӗ.

**13. ✪✪✪ *Эткер* сӑмахпа синквейн тата «Мӗн вӑл?», «Мӗнле вӑл?», «Мӗн тӑвать вӑл?» ыйтусемлӗ хӗвел кластерсем ҫырӑр.**

### *Республикӑн пӗрлехи экзаменнне хатӗрленетпӗр*

◆ 14. *Чӑваш халӑхӑн эткерӗ* тенине эсир мӗнле ӑнланатӑр? «Мӗн вӑл чӑваш халӑхӗн эткерӗ?» темӑпа калӑпӑшӗпе пысӑках мар ӑслав хайлавӗ ҫырӑр. Хӑвӑр шухӑшӑра икӗ аргументпа ӗнентерме ан манӑр.

Ăслав хайлавĕсенче кӳртĕм сăмахсемпе предложенисем пысăк вырăн йышăннине асра тытăр.

**Ăславра усă курмалли кӳртĕм сăмахсемпе предложенисен ушкăнĕсем**

| Ушкăнĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Шухăш камран е ăçтан тухнине палăртаканнисем | *Пирĕн шухăшпа, эпĕ шутланă тăрăх, тĕпчевçĕсен шухăшĕпе, автор (çыравçă) шухăшĕпе, çыравçă палăртнă тăрăх* |
| Ĕнентерекеннисем (аргументлаканнисем) | *Акă, тĕслĕхрен, сăмахран* |
| Шухăш çыхăнăвĕн йĕркине палăртаканнисем | *Пĕрремĕшĕнчен, иккĕмĕшĕнчен, виççĕмĕшĕнчен, пĕр енчен, тепĕр енчен, чăн малтан, юлашкинчен* |
| Шухăша пĕтĕмлетекеннисем | *Çапла вара, кĕскен каласан, пĕтĕмлетсе каласан, апла пулсан, эппин* |

15. Текста вулăр. Текст авторĕн ыйтăвне эсир мĕнле хуравланă пулăттăр?

***Алфавит* сăмаха чăвашла куçаратпăр**

Нимĕçпе акăлчан[1] алфавичĕ *ABC* ятлă, вырăсла – *азбука* е *алфавит*, тутарла *элифба.*

Сас палли пуххине пĕлтерекен пур сăмах та пĕр пек – малтанхи икĕ-виçĕ сас паллийĕ тăрăх – йĕркеленнĕ: *алфавит* – *альфа* тата *бета*, *азбука* - *аз* хушас *буки*, *элифба* – *элиф* хушас *ба. ABC* пирки каламăпăр та.

Ку çулпа кайсан чăваш алфавичĕн мĕн ятлă пулмаллаччĕ вара? *(Э. Фомин.)*

*✪ Чăваш алфавичĕ вырăс алфавитĕнчен мĕнпе уйрăлса тăрать?

*✪✪ Чăваш алфавитĕнчи сас паллисене мĕне пăхса ушкăнлама пулать?

*✪✪✪ Ушкăнсене пайланăр. Пĕр ушкăнĕ чăваш чĕлхинчи уçă сасăсем çинчен, тепри чăваш чĕлхинчи хупă сасăсем çинчен каласа пама хатĕрленĕр.

*?! Чăваш чĕлхине пĕлсен нимĕç чĕлхинчи хăш сасса калама вĕренесси йывăр мар?

*◘ Юлашки предложенире сасă шучĕ сас палли шутĕнчен ытларах сăмах хăшĕ?

*✪✪ Чăвашла тин кăна вĕрене пуçлакан урăх халăх çыннисене чăваш чĕлхинче кăна пур сасăсемпе мĕнле паллаштарнă пулăттăр?

*🕮 Сирĕн шутпа, тутар чĕлхинче чăваш чĕлхинчи сасăсене çывăххисем пур-ши?

*Пĕлетĕр-и эсир?*

Чăвашсен çĕнĕ çырулăхĕн пирвайхи алфавитне 1871 çулта хатĕрленĕ, унта пурĕ 47 сас палли пулнă. Çак алфавитпа усă курса И.Я. Яковлев 1872 çулта Хусанта пĕрремĕш букварь пичетлесе кăларать. Çак çулах 47 сас паллинчен 25 сас палли çеç хăварать, алфавита пĕрремĕш хут *ă, ĕ, ç* сас паллисем кĕртет.

1926 çулта алфавита *о, ф* сас паллисене кĕртеççĕ.

1938 çулта чăваш алфавитне çĕнĕрен *б, г, д, ж, з, ц, ч, ç, щ, э, ю, я, ь, ÿ* сас паллисене кĕртнĕ. Çапла вара И.Я. Яковлев тунă алфавит 65 çул иртсен 37 сас паллиллĕ пулса тăнă.

16. Текста вулăр. Чăваш сăмахĕсем тата мĕнле-мĕнле чĕлхесенче тĕл пулаççĕ-ши?

**Чăвашпа венгр хушшинчи вăтам чĕлхе**

Мелинда Такач – венгр. Сегедра вĕренет, Будапештра пурăнать.

Мĕнле чĕлхепе калаçатпăр эпир унпа – пĕлместĕп[2]. Пăртак акăлчанла, тепĕртак вырăсла, ытларах чăвашла. Венгр чĕлхине ĕлĕк-авалах çур пине яхăн чăваш-пăлхар сăмахĕ кĕрсе юлнă (пĕр-пĕрне ăнланма пулать). Çакă та паллă: венгрсем Европăна çурçĕртен куçса

кайнă, çулĕ вĕсен Чăваш çĕрĕ урлă иртнĕ. «Улма», –тетĕп эпĕ. «Олма», –хуравлать Мелинда. – «Пурçăн». – «Баршонь». – «Сысна». – «Дисно». – «Çурла». – «Шарло». – «Кивçен. – «Кĕльчĕн». – «Çурта». – «Дертя»...

Ахрăм пек пирĕн калаçу[2]. (*Э. Фомин.)*

*⭘ Текстра çыхăну паллисĕр хутлă предложенисем тупăр, хутлă предложени пайĕсен пĕлтерĕшĕсене палăртăр. Предложени схемине ӳкерĕр, чарăну паллине ăнлантарăр.

*⭘ Текстра кăткăсланнă хутсăр предложенисене тупăр, мĕнпе кăткăсланнине палăртăр, чарăну палли лартас уйрăмлăхсене ăнлантарăр.

| *Пĕлетĕр-и эсир?* |
|---|
| *Ахрăм* сăмах *ахăр* «громко смеяться» сăмах çумне *-ăм* аффикс хушăннипе пулнă. |
| Мĕнле шутлатăр, *çухăр* сăмахран çак модельпех мĕнле сăмах пулнă? |

17. Пĕрлехи тĕрĕк сăмахĕсене вулăр, чăваш чĕлхин фонетика уйрăмлăхĕсене шута илсе вĕсем чăвашла мĕнлерех янранине тавçăрса илме тăрăшăр.

**Пĕрлехи тĕрĕк сăмахĕсем**

| Тематика ушкăнĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Çын кĕлеткин пайĕсен ячĕсем | *баш, бит, кӳз, бармак, бавыр, сакал* |
| Ăру-тăванлăх сăмахĕсем | *ана-ата, абышка, кыз, туган, карындаш* |
| Çурт-йĕрпе çыхăннă сăмахсем | *гиль, алачу, бура, йорт, мендэр* |
| Выльăх-чĕрлĕх ячĕсем | *ат, теке, инэк, тана, сарык, ит* |
| Тискер чĕр чун ячĕсем | *каскыр, арыслан, поши, турна, балык* |
| Йывăç ячĕсем | *агач, имэн, кайын, карама, чыршы, чия* |
| Тыра-пулă ячĕсем | *арба, сулу, борчак, киндер, житен* |
| Апат-çимĕç ячĕсем | *сӳт, айран, бал, сыра, йомырка, каймак* |

Таблицăри тĕслĕхсене тӳр килекен чăваш сăмахĕсем: *арăслан, уйран, хăйма, пӳрне, чие, пĕвер, юман, пит, хурăнташ, пуç, атте-анне, тăрна, упăшка, пыл, тăван, минтер, тына, çурт, хĕр, пура, лаç, йытă, кил, сурăх, хурама, ĕне, çăмарта, така, сăра, ут, йывăç, кашкăр, куç, пулă, пăрçа, пăши, чăрăш, сухал,хурăн, йĕтĕн, урпа, сĕлĕ, кантăр, сĕт.*

***Пĕлетĕр-и эсир?***

*Алă – ил* сăмахпа пĕр тымарлă. Чăвашсен *ил* глаголĕ вырăнне ытти тăванла чĕлхесенче *ал.* Тахçан авал чăвашсем те ку сăмаха *ал* тенĕ пулмалла. *Ал* глагол çумне *-ă* аффикс хушăнса *алă* пулнă. Апла пулсан, авал *алă* сăмах «тытмалли, илмелли хатĕр» тенине пĕлтернĕ. *(Л.П.Сергеев.)*

***Танлаштарăр***

*Алă (ал)* «рука». Турккă, азербайджан *äл*, авалхи тĕрĕк *el / elig.*

📖 18. Турккăлла çырнă предложенисене чăвашла куçарма тăрăшăр. Чăваш чĕлхине пĕлни ытти тĕрĕк чĕлхисене вĕренме пулăшнине ĕнентерĕр.

Analamiyorum. Bilmiyorum. Kim o? Schubaschkara geldim. Schubaschkardan geldim. Aldım yumurta.

Хăвăр тавçăрса илнине тĕрĕслемелли предложенисем: *Пĕлместĕп. Çăмарта илтĕм. Шупашкара килтĕм. Кам вăл? Ăнланмастăп. Шупашкартан килтĕм.*

***Пĕлетĕр-и эсир?***

Чăваш сăмахĕсем хытă е çемçен илтĕннине чи малтан Н.И. Золотницкий асăрханă. Унăн шухăшăпе, сăмах хыттăн е

çемçен илтĕнесси малтанхи сыпăкри уçă сасă пахалăхĕнчен килет. Чăваш сăмахĕсенче хупă сасăсем юнашар тăрса пĕр пекленнине те чи малтан Н.И. Золотницкий асăрханă.

✪✪✪ 19. *Тĕрĕк чĕлхи* сăмах майлашăвĕпе синквейн тата «Мĕн вăл?», «Мĕнле вăл?», «Мĕн тăвать вăл?» ыйтусемлĕ хĕвел кластерсем çырăр.

### *Республикăн пĕрлехи экзаменнне хатĕрленетпĕр*

◆ 20. *Эпир – тĕрĕксем* тенине эсир мĕнле ăнланатăр? «Камсем вĕсем тĕрĕксем?» темăпа калăпăшĕпе пысăках мар ăслав хайлавĕ çырăр. Хăвăр шухăшăра ĕнентерме кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе усă курма ан манăр.

21. Текста вулăр. Автор ыйтăвне хуравлăр.

## Пĕтĕмпех пысăкран çырмалла-и е пĕтĕмпех пĕчĕкрен çырмалла-и?

Ача сачĕ - шкул – вуз. Е *ВУЗ* тесе çырмалла? ВУЗ тени аслă вĕренӳ заведенийĕ пулать, вырăсла ăна высшее учебное заведение теççĕ. Сăмахне кĕскетӳ мелĕпе йĕркеленĕ: *в* – высшее, *у* – учебное, *з* – заведение, кĕскен – *вуз*. Е *ВУЗ* пулать-и?

Тахçан ку сăмаха, чăнах та, пĕтĕмпех пысăкран çырмалла пулнă. Нумай чĕлхере кĕскетĕве[2] çапла палăртма йышăннă: МГУ, РФ, ООН, USA, UNESCO. Вăхăт иртнĕçемĕн ВУЗ тенине пĕчĕкрен çырма пуçланă. Çакна орфографи словарĕнче те çирĕплетсе хăварнă. Эппин, шкул хыççăн эпир вуза вĕренме каятпăр, мĕншĕн тесен вузра пĕлӳ пухма интереслĕ.

ВУЗ пек тепĕр сăмах пур. Вăл ТЮЗ, урăхла каласан, çамрăксен театрĕ, е – театр юного зрителя. Эсир ТЮЗа çӳреме юрататăр-и? ТЮЗра паян каç мĕнле спектакль пулать? *(Э. Фомин.)*

*?! Текстра тĕл пулакан аббревиатурăсене вăрăмлатăр.

*✪✪✪ Чăваш Республикинчи аслă вĕренӳ заведенийĕсен ячĕсене çырса тухăр. Тĕрлĕ организаципе учреждени ячĕсене çырас уйрăмлăхсене аса илĕр.

*✪ Çамрăксен театрĕн тулли ятне тĕрĕс çырăр, сăмах майлашăвĕн тытăмне ăнлантарăр.

*✪ Чăваш чĕлхин сăмах пулăвĕн мелĕсене аса илĕр.

22. Текстра вырăс чĕлхин мĕнле категорийĕ пирки сăмах пырать? Вырăс чĕлхинче çук, чăваш чĕлхинче пур мĕнле морфологи категорийĕсене пĕлетĕр?

## Морфологи юмахĕ

Пурăннă тет виçĕ хĕрарăм: нимĕç, вырăс тата чăваш. Пĕррехинче çаксем улах ларнă чух кашăк ӳкет.

–Арçын килет, – тет нимĕçĕ.

– Хĕрарăм, –хирĕçлет вырăсĕ.

Чăвашĕ çеç нимĕн те шарламасть. Мĕншĕн?

Ку калаçу никĕсне чĕлхере шырамалла. *Кашăк* нимĕçле ар несĕлĕн сăмахĕ пулать: *derLöffel*. Вырăс кашăкĕ ама несĕлне кĕрет: *ложк*а. Чăваш чĕлхинче несĕл палли çук. Çавна май «derLöffel» ӳксен арçын килет, «ложка» хĕрарăм килессе пĕлтерет, «кашăк» ниме те кăтартмасть.

Хăна килессине пире кушак систерет. (*Э. Фомин.)*

*✪ К. Ивановăн «Нарспи» поэмине аса илĕр. Кушак питне çума пуçласан Нарспи мĕн тăвать?

### *Сăмах çӳпçи*

*Кашăк* «ложка»; *апат кашăкĕ* «столовая ложка»; *чей кашăкĕ* «чайная ложка»; *кашăк ăсти*, *кашăкçă* «ложкарь», «ложечник»; *кашăк пĕрни* «корзиночка для ложек»; *кашăк чĕресĕ* «прибор (корзиночка), где хранятся ложки»; *кашăк çăмахĕ* «название кушанья»; *кашăк курăкĕ* «папоротник», кашăк-тирĕк, кашăк-чашăк «посуда»; *кашăк-чашăк хурса пар* «сервировать стол, ставить приборы».

Чылай тĕрĕк чĕлхинче *кашык* «кашăк» пĕлтерĕшлĕ, Хусан

тутарĕсем *кашыклык* сăмахпа кашăксемпе чӳлмексем упранакан çӳлĕке калаççĕ.

23. Текста вулăр. Глаголăн сăпатлă тата сăпатсăр формисене тупăр та морфологи тишкерĕвĕ тăвăр.

## Ырă ир сунман халăх

*Ырă кун пултăр!* тесе сывлăх суннине эпир вырăс чĕлхи урлă нимĕç чĕлхинчен йышăннă: *guten Tag – добрый день – ырă кун пултăр.*

Тимлĕ пулăр: чăвашла ырă ир сунмаççĕ. Пирĕн халăхра ир-ирех *ырă кун пултăр* теме йышăннă. *Ырă каçĕ* вара кăнтăрла иртни пилĕк сехетрен пуçланать.

Халĕ миçе çитнĕ-ха? (*Э. Фомин.)*

*Интернетпа усă курса тутарла, пушкăртла, марилле, ирçелле, турккăлла сывлăх сунма вĕренĕр.

***Танлаштарăр***

*Ир* «утро; утром, рано».

Ытти тĕрĕк чĕлхисенче *äр* «рано утром, рано», *äрга, äрдä* «рано утром, рано»; «завтра, следующий день».

Марисем *ир, эр* «ир», *эр-кас* «ир-каç», *ирок, эрок* «ирех» сăмахсене чăвашсенчен йышăннă.

✪✪✪ 24. Проект ĕçĕ. «Чăваш чĕлхинчи салам сăмахĕсем» темăпа проект ĕçĕ çырăр.

## Проект ĕçне тума суйласа илмелли ĕçсем

| Ачасен хушамачĕ, ячĕ | Тумалли ĕçсем | Ăçта шырамалла? |
|---|---|---|
| | *Салам* сăмахăн лексика | 1. Чăвашла-вырăсла |

| | | |
|---|---|---|
| | пĕлтерĕшĕсене тĕрлĕ словарьтен çырса илĕр | словарь / М.И. Скворцов ред. Мускав, 1985.<br>2. Ашмарин Н.И. Чăваш сăмахĕсен кĕнеки. Шупашкар, 2000.<br>3. Чăваш чĕлхин ăнлантаруллă сăмах кĕнеки. Шупашкар. |
| | *Салам* сăмахăн этимологине палăртăр | 1. Егоров В.Г. Этимологический словрь чувашского языка. Чебоксары, 1964.<br>2. Федотов М.Р. Этимологический словрь чувашского языка. Чебоксары, 1996. |
| | *Салам* сăмахран пулнă сăмахсене çырса илĕр | 1. Чăвашла-вырăсла словарь / М.И. Скворцов ред. Мускав, 1985.<br>2. Ашмарин Н.И. Чăваш сăмахĕсен кĕнеки. Шупашкар, 2000. |
| | *Салам* сăмахран пулнă сăмах майлашăвĕсене çырăр | |
| | *Салам* сăмахпа синквейн çырăр | |
| | *Салам* сăмахпа кластер çырăр | |
| | *Салам* сăмахпа «Пулă шăмми» ӳкерĕр | |
| | *Салам* сăмах умне определени пулакан | |

| | | |
|---|---|---|
| | сăмахсем лартса сăмах майлашăвĕсем çырăр | |
| | *Салам* сăмах валли танлаштарусем тупăр | |
| | *Салам* сăмаха чăваш халăх сăмахлăхĕнче мĕнле палăрнине тĕпчĕр | 1. Чăваш халăх сăмахлăхĕ. V том. Шупашкар, 1984.<br>2. Чăваш халăх пултарулăхĕ. Ваттисен сăмахĕсем. Шупашкар, 2007. |
| | *Салам* сăмахпа ытти чĕлхесенче усă курнине тишкерĕр | 1. Кузнецов А.В. Речевой этикет народов Волго-Уралья. Чебоксары, 2008.<br>2. Интернет. |
| | *Салам* сăмахпа чăваш халăх йăли-йĕркинче усă курнине тĕпчĕр | Ватăсенчен ыйса пĕлни |
| | *Салам* сăмах тĕл пулакан хайлав ячĕсене çырăр | Чăваш кĕнекисен картотеки |
| | *Салам* сăмах тĕл пулакан сăвă йĕркисене çырăр | Чăваш хайлавĕсен, юррисен картотекисем |
| | *Салам* сăмахпа усă курнă çырусем тупăр | Иртнĕ ĕмĕрте çырнă çыру тĕслĕхĕсем |
| | *Салам* сăмахпа усă курса ят панă организацисемпе учрежденисен сăн ӳкречĕкĕсене тупăр | Хăвăр тунă е Интернетран илнĕ сăн ӳкерчĕксем |
| | *Салам* сăмахпа сирĕн | |

| | | |
|---|---|---|
| | шкул ачисем тата ял çыннисем усă курнине сăнаса статистика пĕтĕмлетĕвĕ тăвăр | |

25. Хутлă предложенисем çинчен мĕн пĕлнине аса илĕр те таблицăна тултарăр.

**Хутлă предложенисен тĕсĕсем**

| | | |
|---|---|---|
| | | |
| | | |
| **Шăнкăрав янăрарĕ кăна –ачасем урама чупса тухрĕç.** | **Шăнкăрав янăрарĕ те, ачасем урама чупса тухрĕç.** | **Шăнкăрав янăрасан ачасем урама чупса тухрĕç.** |

*○ Хутлă предложенисем яланах миçе пайран тăраççĕ?

*○ Пайĕсене çыхăнтаракан мелсем пуррипе çуккине кура хутлă предложенисене мĕнле икĕ пая уйăраççĕ?

*○ Çыхăну паллиллĕ хутлă предложенисем хăйсем мĕнле ушкăнсене пайланаççĕ?

*✪✪✪ Ушкăнсене уйрăлăр. Таблицăра панă предложенисенче евĕрлев сăмахĕнчен пулнă сăмахсене тупăр. Çав ĕлкесемпех пулнă сăмахсене хăш ушкăн ытларах калать?

| |
|---|
| ***Сăмах çӳпçи*** |
| *Шăнкăрав, шăнкрав* «колокольчик», «бубенчик», *хăнкăрав, хăнкрав, шăнкăрма* «бубенчик». *Шăнкăр-шăнкăр* евĕрлев сăмахĕпе шăнкăртатни уçăмлă илтĕнсен усă кураççĕ, *хăнкăр-хăнкăр* евĕрлев сăмахĕпе уçăмсăр шăнкăртатнине палăртаççĕ.<br>Ытти тĕрĕк чĕлхисенче *шыңыр-шыңыр* «звон колокольчика», *шыңгырла, шыңгылда* «звенеть», *кыгырау* «колокол». |

| |
|---|
| Чăваш чĕлхинче *шăнкăрав та шăнкăр-шăнкăр тăвать, шыв та шăнкăр-шăнкăр юхать, туй та шăнкăр-шăнкăр килет.* |

?! 26. Хутлă предложенире çыхăну паллисем пуррипе çуккине предложени тĕсне кăтартакан терминтан тавçăрса илме пулать-и? Хутлă предложенисен тĕсне кăтартакан терминсем предложение мĕн енчен уçса параççĕ?

27. Хăвăрт каларăш пулакан предложени хутсăр е хутлă пулнине калăр. Хăвăр шухăшăра ĕнентерĕр. *Хурама* вырăсла мĕнле пулать? Чăваш халăх сăмахлăхĕнче хурама кама е мĕне пĕлтерет? *Хурамала* глагол мĕнле пĕлтерĕшлĕ? Хальхи вăхăтра унпа усă кураççĕ-и?

***Хăвăрт каларăш***

**Хурамала çуна хурамалама хăвартăм – хурамаламан.**

| |
|---|
| ***Пĕлетĕр-и эсир?*** |
| *Хурама* сăмах *хура* сăмах çумне *мас* хушăннипе пулнă. Якут чĕлхинче *мас* «йывăç» пĕлтерĕшлĕ. Апла пулсан, *хурама* «хура йывăç» тени пулать. |
| Уйгур чĕлхинче те «хурама» пĕлтерĕшлĕ *караҕач* сăмах *кара* «хура» çумне *аҕач* «йывăç» хушăннипе пулса кайнă. |

✪✪✪ 28. Синтаксис терминĕсене аса илĕр те таблицăна тултарăр. Определенине пĕлмесĕрех ячĕ урлă кăна терминăн пĕлтерĕшне пĕлме пулать-и? Терминăн мĕнле пулмалла?

**Синтаксис единицисен пĕлтерĕшĕсем**

| Синтаксис единицисем | Термин пĕлтерĕшĕ |
|---|---|
| Сăмах майлашăвĕ | |
| Хутсăр предложени | |
| Хутлă предложени | |
| Çыхăну паллисĕр хутлă предложени | |
| Çыхăну паллиллĕ хутлă предложени | |

| | |
|---|---|
| Сыпăнуллă хутлă предложени | |
| Пăхăнуллă хутлă предложени | |

**29.** Текста хутсăр тата çыхăну паллисĕр хутлă предложенисене çырса илсе тишкерĕр.

## Хыснапа магазин

Араб чĕлхинче *hāzīne* сăмах пур, ăна *хазиня* тесе вуламалла. Çав сăмах чăваш чĕлхинче те пур – хысна. Вĕсен пĕлтерĕшĕ те пĕр: тухăçри *хязиня* Атăл таврашĕнче те *хысна.*

Араб сăмахĕн чăваш чĕлхинче тепĕр хурăнташĕ пур: вăл *магазин* сăмах. *Хазиня* сăмах француз чĕлхине куçса çапла улшăннă иккен.

Çакă тĕлĕнтерет: пĕр сăмах тĕрлĕ чĕлхен сасă тытăмĕпе килĕшсе улшăнать. Ятарлă тĕпчев ирттермесĕр *хязиня* тата *магазин* сăмахсен тăванлăхне ăнкарса илме те çук. *(Э. Фомин.)*

*○ Çыхăну паллисĕр хутлă предложенисене тивĕçлĕ интонаципе вулăр.

*○ Çыхăну паллисĕр хутлă предложенири хутсăр предложенисене мĕн çыхăнтарать?

*?! Араб сăмахĕсем чăваш чĕлхине мĕнле кĕнĕ-ши? Чăваш чĕлхине араб чĕлхинчен кĕнĕ тата мĕнле сăмахсене пĕлетĕр?

* Чăваш чĕлхинче «магазин» пĕлтерĕшлĕ сăмах тата пур-и? Ăна хăш чĕлхерен йышăннă? Йышăннă сăмах пулăвне Интернета е словаре пăхса пĕлĕр.

---

***Сăмах çӳпçи***

*Лавкка* «лавка, ларек, магазин», «фабричный, покупной (не кустарного производства)». *Лавкка пусми* «фабричная ткань», *лавкка çăкăрĕ* «покупной, магазинный хлеб».

*Лавккаç(ă), лавкка хуçи* – кивелнĕ сăмахсем, «лавочник», «торговец», приказчик» пĕлтерĕшлĕ.

Чăваш, тутар, пушкăрт чĕлхисенчи *лавка,* мари чĕлхинчи

| |
|---|
| *лапке* сăмахсем вырăс чĕлхинчи *лавка* сăмаха йышăннипе пулса кайнă. |

# СЫПĂНУЛЛĂ ХУТЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ

## 1. Сыпăнуллă хутлă предложенисен тĕсĕсем

⊙ 30. Таблицăна тултарăр. Мĕнле çыхăнăва сыпăнуллă çыхăну тетпĕр? Вăл пăхăнуллă çыхăнуран мĕн енчен уйрăлса тăрать?

**Çыхăну тĕсĕсем**

| Çыхăну тĕсĕ | Мĕнсене пĕрлештерет? | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| Сыпăнуллă | | |
| Пăхăнуллă | | |

*⊙ Сыпăнуллă союзсем хутсăр предложенире мĕнсене çыхăнтараççĕ? Хутлă предложени пайĕсене çыхăнтарма пултараççĕ-и вĕсем?

➤ **Сыпăнуллă союзсемпе çыхăнакан хутсăр предложенисенчен пулнă хутлă пĕрлĕхе сыпăнуллă хутлă предложени теççĕ.**

**Сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсем хушшинче сыпăнуллă çыхăну пулать. Сыпăнуллă хутлă предложение кĕрекен хутсăр предложенисем тытăмĕ енĕпе пĕр тĕп членлă та, икĕ тĕп членлă та пулма пултараççĕ.**

31. Таблицăна тишкерĕр, сыпăнуллă хутлă предложенисене мĕне кура ушкăнланине калăр.

**Сыпăнуллă хутлă предложени тĕсĕсем**

| Предложени тĕсĕ | Тĕслĕх |
|---|---|
| Сыпăнтаракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложени | *Акă хапха яри уçăлчĕ те, Валери кĕрсе тăчĕ.* |
| Хирĕçлекен союзлă сыпăнуллă хутлă предложени | *Çур çĕр те çитрĕ ĕнтĕ, анчах ыйхă килмест.* |

| | |
|---|---|
| Уйăракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложени | *Те такам кăларса илнĕ ăна, те паçăр урампа хытă чупнă чух кăларса ÿкерсе хăварнă.* |

**32.** Текста вуласа тухăр. Çыхăну паллисĕр тата сыпăнуллă хутлă предложенисене тупăр.

Хамăр халăха çутта кăларнă И.Я. Яковлев хăйĕн аса илĕвĕнче чăваш вăййи çинчен çапла каланă: «Юрри питĕ селĕмччĕ, ташши çепĕç те хÿхĕмччĕ. Мана ачалăхăм аса килчĕ. Эпĕ ку ÿкерчĕке куççульсĕр пăхаймарăм». Вырăссен паллă çыравçи Н. Гарин-Михайловский чăваш вăййине савса-юратса çырнине те чуна хускатмасăр вулаймастăн. «Çакă вăл эпĕ хальччен нихăçан та курман хăйне евĕр юрă-кĕвĕ те, тĕлĕнмелле вăйă-ташă та пулчĕ, – тет вăл. – Урăхла каласан, эпĕ ăна сцена çинче балетпа оперăра курнă, анчах ку вăл балет та, опера та марччĕ. Ку вăл пурнăçчĕ». Çĕр-шыври ытти хăш-пĕр паллă çынсем те чăваш вăййисене мухтаса çырса хăварнă. Çамрăксен ташши-юрри куракансене хăйĕн иксĕлми илемĕпе, таса чĕрĕлĕхĕпе, аслă асамлăхĕпе тыткăнланă, кăмăлне хускатнă. Унашкал паха уявсемпе йăла-йĕрке чăвашсен чылай: акатуй, çăварни, çимĕк, мăнкун ...

Вĕсенче – халăхăмăрăн чунĕ-юнĕ, кун-çулĕ, шăпи, ăраскалĕ-телейĕ, ĕмĕчĕ-тĕллевĕ, ĕненĕвĕ-шанчăкĕ, йăпанăвĕ-хавхаланăвĕ. Йăламăрсем ĕмĕртен ĕмĕре тăсăлнă, ламран лама куçса пынă. Чăвашсем шăпах çавсемпе ĕнтĕ хăйсен хуйхи-суйхине пусарнă, канăç-киленĕçне тупнă, малалла талпăннă, çутă пулăмсем патне туртăннă. Уявсемпе йăласем çамрăк ăрăва йĕркеллĕ ÿсме, сăпайлă та маттур пулса çитĕнме пулăшнă, аптраманлăхпа пиçĕхтернĕ, йывăрлăхсемпе чăрмавсене хăюллăн çĕнтерсе пыма вĕретнĕ. *(А. Аксар.)*

**«Чăваш вăййи» картина, Н. Гарин-Михайловский сăн ӳкерчĕкĕ**

*?! Текста ят парăр, текст темипе тĕп шухăшне калăр.

*◆ Ĕлĕк чăвашсем вăййа хăçан тухнă? Вăйăсенче мĕн-мĕн тунă? Эсир вăйă юррисене мĕнлисене пĕлетĕр? Кану самантĕнче картана тăрса пĕр-пĕр юррине юрлăр.

*✪ Чăвашсем пурăнакан çĕрте *Вăйă карти* ятлă улăхсемпе вырăнсем тĕл пулкалаççĕ. Сирĕн ялта çавăн пек вырăнсем пур-и? Ват çынсенчен ĕлĕк сирĕн ялта вăййа ăçта тухнине ыйтса пĕлĕр.

* Ытти халăхсем вăййа тухнă-и? Эсир камсенне пĕлетĕр?

***Пĕлетĕр-и эсир?***

*Уяв* – пурте пĕлекен сăмах, «праздник» пĕлтерĕшлĕ. *Уяв* – иккĕмĕшле сăмах, *уя* глагол çумне *-в* аффикс хушăннипе пулнă. *Уя* тымар «хисепле», «перекетле», «упра», «сыхла» пĕлтерĕшлĕ глагол шутланать, вăл ытти тĕрĕк чĕлхисенче те пур. *(Л.П. Сергеев.)*

33. *Вăйă* сăмахăн пĕлтерĕшĕсемпе паллашăр. Хăш пĕлтерĕшĕпе эсир анлă, хăшĕнпе сайра усă куратăр?

1. Вăхăта хаваслă, выляса, тупăшса ирттерни. 2. *кив.* Çурхи ĕçсем вĕçленсен ирттернĕ çамрăксен уявĕ[1]. 3. Çар çыннисен часть тулашĕнчи вĕренĕвĕ. 4. Мĕн те пулин йышлă ӳсекен вырăн.

* Сăмахăн тăваттăмăш пĕлтерĕшне Интернета вырнаçтарнă словарсеньче е «Чăваш чĕлхин ăнлантаруллă сăмах кĕнекинче» панă тĕслĕх çине таянса ăнлантарăр.

***Танлаштарăр***

*Вăйă* «игра»; «хоровод»; «музыкальная игра».

Ытти тĕрĕк чĕлхисенче *ойн* «игра», *ойун* «игра»; «шутка»; «музыкальный инструмент», *уйн* «игра»; «забава»;

«развлечение»

34. *Вăйă* сăмахран пулнă сăмахсемпе сăмах майлашăвĕсене çырса илĕр.

Вăйă-кулă, вăйлат, вăйăм, вăйлату[2], вăйăç(ă), вăйлăлан, уяв вăййи, вăй çемми, вăйă-ташă, вăйламас, вăйă карти, вăйă кала, салтак вăййи, çырла вăййи, вăй-сăй, Олимп вăййи, ĕç вăйĕ, вăрçă вăййи, вăйă вылят, вăйă çаври.

***Пĕлетĕр-и эсир?***

Тĕпчевçĕсен шухăшĕпе, *выля* сăмах *вăй(ă)* сăмах çумне *-ла* аффикс хушăннипе пулнă.

35. Япала ячĕ çумне *-ла(-ле)* аффикс хушăннипе пулнă глаголсене аса илсе калăр. Сирĕн шутпа, çĕнĕ сăмах тăвакан *-ла(-ле)* аффикс ытти пуплев пайĕсем çумне хушăнать-и?

✪✪✪ 36. *Чăваш вăййи* тенине эсир мĕнле ăнланатăр? *Чăваш вăййи* сăмах майлашăвĕпе синквейн тата «Мĕн вăл?», «Мĕнле вăл?», «Мĕн тăвать вăл?» ыйтусемлĕ хĕвел кластерсем çырăр.

***Республикăн пĕрлехи экзаменнне хатĕрленетпĕр***

37. 32-мĕш хăнăхтарури текстра палăртнă **«Ку вăл балет та, опера та марччĕ. Ку вăл пурнăçчĕ»** шухăша уçса парса е 36-мĕш хăнăхтарура тунă кластерсемпе тата синквейнсемпе усă курса **«Мĕн вăл чăваш вăййи?»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар ăслав хайлавĕ çырăр.

Хăвăр шухăшăра икĕ аргументпа ĕнентерме ан манăр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе еследстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

## 2. Сыпăнтаракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем

⊙ 38. Схемăсене тишкерĕр. Мĕн çинчен калаççĕ-ши вĕсем? Мĕншĕн пĕр юпинче запятойсем лартнă, тепринче лартман?

Иккĕмĕш юпара 1-мĕш схемăра запятоя *тата* союз умĕн, 2-мĕш схемăра *та* союз хыççăн лартнине асăрхăр.

Схемăсемпе килĕшӳллĕн предложенисем йĕркелĕр.

1. О тата О.

2.О та О.

1. [1] , тата [2]

2. [1] та, [2]

**39.** Таблицăна тултарăр, хăвăр тĕслĕхсемпе çирĕплетсе пĕтĕмлетӳ тăвăр. Сыпăнтаракан союзсем хутлă предложенин пĕрремĕш пайĕнче вырнаçнă-и е иккĕмĕш пайĕнче-и?

## Сыпăнтаракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем

| Союзсем | Схеми | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| *та (те)* | | *Улмуççийĕсем нумай* ***та,*** *пан улмийĕ курăнмасть.*<br>*Пĕр авăк çил килчĕ* ***те,*** *кантăр пуçĕсем чашăлтатса илчĕç.* |
| тата | | *Алăк сасси илтĕнчĕ,* ***тата*** *картишĕнчи йытă вĕрсе ячĕ.* |

**40.** Тупмалли юмахсен тупсăмĕсене пĕлĕр. Предложенин тĕп членĕсене тупăр, сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсем мĕнле союзпа çыхăннине калăр.

1. Хусантан хут килет те, тимĕр хăма çурăлать. 2. Уйăх пур та, çути çук. 3. Матĕрне аппа çӳреме кайнă та, çăраççи ӳкнĕ юлнă. 4. Кĕлечĕ пур та, никĕсĕ çук. 4. Кăварĕ пур та, кĕлĕ çук. 5. Пĕр хур çунатне хупларĕ те, пĕтĕм тĕнче хупланчĕ.

**41.** Таблицăна тишкерĕр. Сыпăнтаракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсем хушшинчи шухăш çыхăнăвĕсене ăнлантарăр.

## Сыпăнтаракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсем хушшинчи шухăш çыхăнăвĕсем

| Союз | Шухăш çыхăнăвĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| *та (те)* | Умлăн-хыçлăн пулса иртекен ĕçсене сăнлани | *Ватти чарăнать те, çамрăкки йĕме пуçлать.* |
| | Пĕр ĕç тепĕр ĕçĕн сăлтавĕ | *Лайăх вĕрентĕм те, атте çĕнĕ* |

| | | |
|---|---|---|
| | е результачĕ пулнине кăтартни | *телефон илсе пачĕ. Ху аван та, çын та аван. Ху усал та, çын та усал.* |
| | Хирĕçлеве палăртни | *Куç хăрать те, ал тăвать.* |
| *тата* | Пĕр вăхăтра пулса иртекен ĕçсене кăтартни | *Çăл куç шăнкăртатса юхать, тата шăрчăк чĕриклетет.* |

➤ **Пĕлтерĕшĕпе *та (те)* союз хирĕçлекеннисемпе пĕрешкел пулма пултарнă пирки сыпăнуллă хутлă предложение кĕрекен хутсăр предложенисем пĕр харăсах *та (те)* союзпа та, *анчах, çапах* союзсемпе те çыхăнма пултараççĕ.** Тĕслĕхрен: *Мулкачăн хăлхи вăрăм та, анчах хӳри кĕске.* (Ват. сăм.)

42. Вырăсларан чăвашла куçарăр. Вырăс чĕлхинчи *и* союза чăвашла мĕнле-мĕнле куçарма пулать?

1. Мне не хотелось расставаться с ним, и мы пошли вместе. *(В. Каверин.)* 2. Гости стали прощаться между собою, и каждый отправился в комнату, ему назначенную. *(А. Пушкин.)* 3. Опять раскинулся узорно над белым полем багрянец, и заливается задорно нижегородский бубенец. *(С. Есенин.)*

➤ ***Та (те)* союз яланах хутлă предложенин пĕрремĕш хутсăр предложенийĕ хыççăн тăмасан та пултарать, анчах кирек хăçан та ун сказуемăйĕ хыççăн вырнаçать.** Тĕслĕхрен:

*Кӳлле кайса тĕллевсĕр турт та ухă,*

*Йĕппи шампа пулла çакланĕ ун.* (Я. Ухсай.)

43. Текста вулăр. Сыпăнуллă хутлă предложенисене тупăр та пайĕсем хушшинчи шухăш çыхăнăвне ăнлантарăр, схемине ӳкерĕр.

### Чулхулапа Ташкент тăванлăхĕ

*Йошкар-Ола* «синонимĕ» – *Кызыл*, *Чулхулан* – *Ташкент.*

*Йошкар-Ола* çармăсларан куçарсан «Хĕрлĕ хула» пулать. *Кызыл* та çавах, анчах тувалла.

*Ташкент* тĕрĕкле, чăвашла вăл – «Чул хула». *Таш* тата *чул* сăмахсем, тĕлĕнмелле пулсан та, пĕр тымартан аталаннă сăмахсем, тата вĕсен пĕлтерĕшĕ[2] те пĕр килет. *Кент* тымар пирĕн чĕлхере курăнмасть, эпир ăна *хула* тетпĕр.

Чулхулана кайрăм та Ташкента çитсе тухрăм. Йошкар-Олана çыру ятăм та, вăл Кызыла çитнĕ пулас. (*Э. Фомин.)*

*?! Чăваш Республикинче *хĕрлĕ* тата *чул* сăмахсенчен пулнă ял ячĕсем пур-и? Эсир мĕнлисене пĕлетĕр?

**44.** Хăвăрт каларăш пулакан предложени сыпăнуллă хутлă пулать-и? Ĕнентерĕр.

**Хăвăрт каларăш**

*Тăр-тăри! тăри тăрнаран аран-аран тарнă та Тарăн варта пытаннă.*

✪✪✪ **45.** Интернетри материалпа усă курса Чăваш Республикин хулисен ячĕсем мĕнле пулнине ăнлантарăр.

***Пĕлетĕр-и эсир?***

Францире пĕр сас паллинчен тăракан ял ячĕ пур: *И*. Çĕнĕ Зеландирире тĕл пулакан топонимра вара пурĕ 85 сас палли, унăн пĕлтершĕ вырăсла çапла пулать: «Город, где Таматеа, человек с большими ногами, который выравнивал равнины и которого называли поедателем земли, играл на своей любимой флейте». Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче *Cbargoggaggogymancbaugagoggcbaubungungamaaug* ятлă кӳлĕ пур, унăн пĕлтерĕшĕ çакăн пек: «Эсĕ пулă хăвăн енче тытатăн, эпĕ хамăн енче тытатăп, пирĕнтен нихăшĕ те кӳлĕ варринче пулă тытмасть».

## 3. Сыпăнтаракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси

⊙ **46.** Икĕ хутсăр предложенирен сыпăнтаракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложени йĕркелесе çырăр.

Хутсăр предложенисем хушшине мĕнле чарăну палли лартсан вырăнлăрах? Тивĕçлĕ чарăну палли лартас тесен предложени пайĕсем хушшинчи шухăш çыхăнăвĕсене шута илмелле-и?

1. Çумăр çăвать. Çил вĕрет.
2. Концерт вĕçленчĕ. Урама тухрăм.
3. Урама тухрăм. Çумăр тăкса ячĕ.
4. Юрлатăн. Чуна çăмăл.
5. Хĕвел çук. Вăхăта ниепле те чухлаймастăп.
6. Çил тухрĕ. Тӳпе пĕлĕтрен тасалчĕ.

▲ **Сыпăнуллă хутлă предложенири хутсăр предложенисене пĕр-пĕринчен запятойпа уйăрмалла. Запятойне *та (те)* союз хыççăн, ытти чухне союз умĕн лартаççĕ.**

**Пĕтĕмĕшле йĕркерен пăрăнса *та (те)* союз хыççăн тире лартма юрать.**

**47.** Таблицăпа паллашăр та сыпăнтаракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисенче чарăну палли лартас уйрăмлăхсене ăнлантарăр.

**Сыпăнтаракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисенче чарăну палли лартас уйрăмлăхсем**

| Чарăну палли | Чарăну палли лартмалли условисем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| , | Хутсăр предложенисем пĕр вăхăтра е умлăн-хыçлăн пулса иртекен ĕçсене сăнлани | *Пĕр авăк çил килчĕ те, кантăр пуçĕсем чăшăлтатса илчĕç.* |
| – | Хутсăр предложенисенчи ĕçсем пĕрин хыççăн тепри хăвăрт е кĕтмен çĕртен пулса иртни | *Алăка уçса ятăм та – ман çине йытă сиксе ларчĕ.* |
| | Хутсăр предложенисем хирĕçле пĕлтерĕшлĕ пулни | *Улмуççийĕсем нумай та – пан улмийĕ* |

| | | |
|---|---|---|
| | | *курăнмасть.* |
| | Хыççăнхи хутсăр предложенири ĕç умĕн тăраканнин результачĕ е следствийĕ пулни | *Ирхине сипетлĕ çумăр çуса иртнĕ те — уçă.* |

**▲ Асра тытăр! Сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсене тирепе уйăрнă чухне хутсăр предложенисем хушшинче чарăну пысăкрах пулать.**

**48.** Нумай пăнчă вырăнне тивĕçлĕ сыпăнуллă союз лартса çырса илĕр. Запятой вырăнĕ союза суйласа илме пулăшать-и?

1. Çăлтăсем йăлтăртатаççĕ, ...çĕн уйăх çурла пек курăнса тăрать. 2. Çумăр çуса иртсе кайрĕ ..., асфальт йăлтăртатса выртать. 3. Кайăксем юрлаççĕ, ... шăрчăк чĕриклетет. 4. Кĕркунне çитрĕ ..., кайăксем кăнтăра вĕçсе кайрăç.

**49.** К. Ивановăн «Нарспи» поэминчен илнĕ предложенисем хутлă-и е хутсăр-и? Вĕсенче *те* сăмах хăш пупулев пайĕ — союз-и, татăк-и?

1. Çитрĕ ĕнтĕ çимĕк те, хĕрĕн туйне тумалла. 2. Пĕтнĕ мĕскĕн Сетнер те усал вăрă пурттинчен. 3. Хытă кунсем килĕç те, хытса кайĕ çемçе чун. 4. Пĕр çын çитсе кĕчĕ те хытса кайрĕ вырăнтах.

**▲ *Та (те)* сăмах чĕлхере союз пек те, татăк пек те çӳрет. Çавăнпа хутлă предложенин тытăмне тĕрĕс палăртмалла, унсăрăн сыпăнуллă хутлă предложенисене хутсăр предложенисемпе тата çыхăну паллисĕр хутлă предложенисемпе пăтраштарма пулать.**

**50.** Предложенисене чарăну палли лартса çырса илĕр. *Те* сăмах союз е татăк пулнине ĕнентерĕр. Союз пулсан мĕнле предложени пайĕсене çыхăнтарать: хутлинне-и, хутсăрринне-и?

1. Çак тарана çитĕм те хĕрĕм çирĕ пуçăма. *(К. Ив.)* 2. Апат çинĕ хыççăн мучи йыттине ертрĕ те шурлăхалла утрĕ. *(В. Алент.)* 3. Саламат та евчĕ те кирлĕ мар халь йĕкĕте. *(П. Хус.)* 4. Эпир вăрçă хыççăн ӳсрĕмĕр те пурнăç çав тери йывăрччĕ. *(М. Сениел.)*

5. Утаман тапăнма шутламарĕ, çаврăнчĕ те тайганалла уттарчĕ. *(Уяр.)* 6. Ман аннем вара ырлăхне те кураймарĕ сывлăхне те сыхлаймарĕ. *(Д. Горд.).* 7. Анне куçĕ мăч-мăч хупăнса илчĕ те каллех шывланчĕ. *(Ст. Асл.).* 8. Пăхатăп та, хĕрĕм, питĕ яка тăхăннă эсĕ. *(А. Пав.)*

**51.** Панă предложенисенчен *та (те)* союзпа сыпăнтарса малтан пĕр йышши член кĕртсе хутсăр предложении, кайран тепĕр хутсăр предложени кĕртсе сыпăнуллă хутлă предложении тăвăр.

Тĕслĕх. *Çумăр чашлаттарса çурĕ.*

1) *Çумăр чашлаттарса çурĕ те тепĕр сехетрен чарăнчĕ.*

2) *Çумăр чашлаттарса çурĕ те, эпир урама тухмарăмăр.*

1. Атте ĕçрен килчĕ. 2. Эпĕ кĕнеке вуласа тухрăм. 3. Чечексем шăтса тухрĕç. 4. Аппа шкулта ĕçлет. 5. Аслати авăтса ячĕ. 6. Асатте юнашар ялта пурăнать.

**52.** Хăвăрт каларăш пулакан предложени хутлă е хутсăр пулнине калăр. Хăвăр шухăшăра ĕнентерĕр.

**Хăвăрт каларăш**

**Хăрхăм хĕр хăп-хăрăк та та хуп-хура хурама хăраххăн тăлăх.**

*Хăрхăм хĕр* тесе кама каланă-ши чăвашсем?

**53.** Предложенисене чарăну палли тĕрĕс лартса çырса илĕр.

1. Кун иртрĕ те çĕр иртрĕ. *(П. Ег.)* 2. Ула такка хурăн вуллине таккаса шăтарчĕ те хурăн шывĕ пăтлатса юхма пуçларĕ. *(Н. Сладков.)* 3. Çак вăхăтра сасартăк пăлтăр алăкĕ уçăлса[1] каять те качака тулалла тапса сикет. *(Ю. Скв.)* 4. Пăр шăнса ларнă та çăл патне пымалла та мар. *(Кипек.)* 5. Куç курнă та чун пăлханман. *(Г. Еф.)*

**53.** Тупмалли юмахсене тумсăмне пĕлĕр. Предложенисен тĕп членĕсене тупăр. Хутлă предложени тĕсне палăртăр. Кашни хутлă предложение сыпăнуллă хутлă предложени пек йĕркелĕр.

1. Курăк çиетĕп – шăлăм мăкалать, хăйăр çиетĕп – шăлăм каллех çивĕчленет. 2. Пин сурăх шыва сикрĕç, кĕтӳ ачи вĕсем хыççăн чăмрĕ. 3. Çӳлтен чулпа переççĕ, ачи-пăчи пытанать. 4. Уйăхĕ сапалать, хĕвелĕ пуçтарать.

*?! Предложени тытăмĕ урăхланнипе чарăну палли лартасси улшăнать-и, улшăнмасть-и?

*🕮 Улшăну предложенисен стильне урăхлатать-и?

54. Ваттисен сăмахĕсенче чарăну паллисенчен хăшне лартмалла? Ăнлантарăр.

1. Çуркунне кун вăрăм та сĕм кĕске. 2. Çуркунне кун вăрăмланать те ал çитмест. 3. Мулкачăн хăлхи вăрăм та хӳри кĕске. 4. Чакакăн хӳри вăрăм та сăмси кĕске.

### *Пĕлетĕр-и эсир?*

*Мулкач* – «заяц» пĕлтрĕшлĕ сăмах, *куян* сăмахăн синонимĕ. Нихăш тĕрĕк чĕлхинче те çук. Удмурт чĕлхинче мулкач сăмах виçĕ пайран тăрать: *му* «çĕр» +*луд* «уй-хир» +*кеч* «качака». Çапла вара, *мулкач* «хирти çĕр качаки» пулса тухать. Чăвашсем виçĕ сăмах пĕрлешĕвне пĕр сăмах пек ăнланса йышăннă. *(Л.П. Сергеев.)*

55. Текстран сыпăнтаракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисене çырса илĕр, чарăну палли лартас уйрăмлăхсене ăнлантарăр.

Ял ячĕсенче тĕл пулакан *кас, касă* сăмаха тĕрлĕрен ăнлантараççĕ. Чăннипе кунта ним кăткăсси те çук. *Кас* «резать» глагол çумне ят сăмах тăвакан *-ă* аффикс хушăннă та, «касăк», «татăк», «пай» пĕлтерĕшлĕ сăмах пулнă. Ялăн *касси* вăл – ялăн пайĕ е тĕп ялтан касăлса-уйрăлса тепĕр вырăна куçса ларнă пайĕ. Апла пулсан, чăвашла *касă* тенине вырăсла «околоток», выселок», «починок» тесе куçарма та пулать. *Касси* форма касă камăн е мĕнĕн пулнине кăтартать, тата ун умĕн ялан тенĕ пекех çын ячĕ тăрать.

*Тренкасси* йышши ял ячĕсен пулăвне çăмăллăнах ăнлантарма пулать. Трен (Терен, Теренкке, Терентий) ятлă çын акапĕрти (общинăри) ватăрах ялтан çак вырăна касăлса-уйрăлса тухса ларнă та, Тренкасси (Трен+касси) пуçланса кайнă. *(Н.И. Егоров.)*

*🕮 Сирĕн районта *касси* формантпа вĕçленекен ял ячĕсем пур-и? Вĕсен пулăвне ăнлантарăр.

**56.** Таблицăна тишкерĕр те хăвăр районти ял ячĕсене тытăмĕ тăрăх ушкăнласа тухăр.

**Ял ячĕсене тытăмĕ тăрăх ушкăнлани**

| Мĕнле мелпе пулнă? | Ял ячĕсем |
|---|---|
| Тымар сăмахран | *Тени, Элĕк* |
| Тымар çумне аффикс хушăннипе | *Юманлăх, Çăкалăх* |
| Тымар çумне топоформант хушăннипе | *Ефремкасси, Кураккасси* |
| Сăмах майлашăвĕнчен | *Чӳкçырми, Сурăмпуç* |

◉ **57.** Пайăр ятсенче тĕл пулакан *касси, çырми* сăмахсене хăçан умĕнхи сăмахпа пĕрле, хăçан уйрăм çырнине аса илĕр.

## 4. Хирĕçлекен союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем

⊙ **58.** Схемăсене тишкерĕр. *Анчах* союз мĕнсене çыхăнтарать? Схемăсемпе килĕшӳллĕн предложенисем йĕркелĕр.

1. О, анчах О.

2. 


**59.** Таблицăна тултарăр, хăвăр тĕслĕхсемпе çирĕплетсе пĕтĕмлетӳ тăвăр. Сирĕн шухăшăрпа, таблицăра кăтартнă союзсенчен хăшĕсем тăтăш, хăшĕсем сайра тĕл пулаççĕ?

**Хирĕçлекен союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем**

| Союзсем | Схеми | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| Анчах | | *Кинчер варĕ тарăнах мар,* ***анчах*** *унта питĕ* |

| | | |
|---|---|---|
| | | *вăйлă çăл куçĕ тапса тăрать.* |
| Çапах | | *Витнĕ йĕтем çинче паçăрах тĕттĕмленчĕ,* ***çапах*** *сынсем хунар çутипе те пулин авăн çапаççĕ.* |
| Унсăрăн | | *Хĕр чухнехи пурнăçа пурăнма пĕлес пулать ăна,* ***унсăрăн*** *усал сăмах утпа çӳрет.* |
| Ахальлĕн | | *Ĕнесене яланах пĕр вăхăтра сумалла,* ***ахальлĕн*** *сĕт чакараççĕ вĕсем.* |
| Атту | | *Хăвăртрах кайăр,* ***атту*** *вĕри апат сивĕнет.* |

**60.** Тупмалли юмахсен тупсăмĕсене пĕлĕр. Предложенин тĕп членĕсене тупăр. Тĕслĕх мĕнле предложени пулнине калăр: сыпăнуллă хутлă предложени-и, пĕр йышши членлă хутсăр предложени-и? Шухăшăра ĕнентерĕр.

1. Пиччĕш шăллĕне хăвалать, анчах çитеймест. 2. Шăпăрлан чĕппин сăмси те çук, çапах шăтăк шăтарать. 3. Хусантан хут килет те, тимĕр хăма çурăлать. 4. Ампара кĕрес тенĕччĕ, анчах йытă пур. Уйăх пур та, çути çук.

**61.** Таблицăна тишкерĕр. Хирĕçлекен союзлă сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсем хушшинчи шухăш çыхăнăвĕсене ăнлантарăр.

### Хирĕçлекен союзлă сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсем хушшинчи шухăш çыхăнăвĕсем

| Союз | Шухăш çыхăнăвĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| *анчах* | Таса хирĕçлеве палăртни | *Çывăхрах пек туйăнать çутă, анчах ниепле те çитме çук.* |
| *çапах* | Хирĕçлев пĕлтерĕшĕнче килĕшӳсĕрлĕх сĕмĕ палăрни | *Ăмăрту çăмăл иртмерĕ, çапах эпир çĕнтертĕмĕр.* |
| *ахальлĕн унсăрăн* | Пĕрремĕш пайĕнче калани пурнăçланмасан | *Чечексене шăвармалла, ахальлĕн вĕсем типсе лараççĕ.* |

| | | |
|---|---|---|
| *атту* | мĕн пуласситне палăртни | *Хăвăртрах утăр, унсăрăн каçчен яла çитейместпĕр.*<br>*Çул парăр, атту таптаса каятăп.* |

➤ ***Çапах (та)*** **союз икĕ хутсăр предложени хушшинче çеç мар, иккĕмĕш хутсăр предложени варринче те тăма пултарать.**

*Кăнтăр çути кĕске мар та, кивĕ пӳртре çапах та тĕттĕм.* (Илп.)

**62.** Икĕ хутсăр предложенирен хирĕçлекен союзлă сыпăнуллă хутлă предложени йĕркелесе çырăр.

1. Нарспие[1] концерта чĕнтĕм. Вăл пымарĕ. 2. Концерт вĕçленчĕ. Çынсем киле васкамаççĕ. 3. Çумăр çăвать. Атте вăрмана кайрĕ. 4. Экзамена лайăх тыт. Телефон илсе памастăп. 5. Эпир кăшкăртăмăр-кăшкăртăмăр. Никам та сас памарĕ. 6. Хăвăртрах ĕçлĕр. Çумăр утта йĕпетсе каять.

🕮 **63.** Вырăсларан чăвашла куçарăр. Вырăс чĕлхинчи хирĕçлекен союзсем вырăнне чăвашла мĕнле союзсем каламалла?

1. Еще на вершинах гор догорал день, но в ущелье уже отовсюду смотрела ночь...*(М. Горький.)* 2. Вечерами меня звали гулять, Москву смотреть – а я сидела за книгами. *(Н. Ильина.)* 3. Все у нас хорошо, да воды только нет. *(И. Аксаков.)* 4. Песня над домом смокла, зато над прудом соловей заводил свою. *(В. Короленко.)*

**64.** Текста вуласа тухăр. Сыпăнтаракан тата хирĕçлекен союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисен пайĕсем хушшинче çыхăну мĕнле пĕлтерĕшлине калăр, схемине ӳкерĕр.

Çул çӳреме тухнă Пĕрремĕш Петĕр патша Сĕнтĕрвăрри патĕнче юман лартса хăварнă тет. Чылай пысăк ӳснĕ йывăç, анчах ăна паянччен сыхласа хăварайман. 1900 çулта Парижра выставка уçăлнă та, çавăнта Сăр хĕрринчи вăрманта тăват çĕр сакăр вун пилĕк çул

хушши ӳснӗ вӑтӑр пӗр метр кӗреш юмана пӗтӗм тӗнче курнӑ. «Чӑваш юманӗ» тесе ҫырнӑ тет юман ҫине.

Юман ҫара пуҫӑн, анчах кӗрӗкпе ӳсет. Ӑна ытти йывӑҫсем хушшине лартмалла тенине пӗлтерет ӗнтӗ ку. Хӗвел патне туртӑнса тем ҫӳллӗш ӳссе каять.

Юманран тунӑ катка-пичкере сӑра та шӑркаланмасть, тӑварланӑ хӑяр-купӑста та йӳҫмест. (*А. Павловская.*)

*✪✪ *Сӗнтӗрвӑрри* хула ячӗ мӗнле сӑмахсенчен пулнӑ? Ҫак ӗлкепех пулнӑ мӗнле ял ячӗсене пӗлетӗр?

*?! Чӑваш *юман* сӑмахпа кама палӑртать? Мӗнле ҫынна юманпа танлаштараҫҫӗ? *Юман* сӑмахпа усӑ курса танлаштарусем ҫырӑр: *юман пек ....*

*○ *Кӗреш* сӑмахӑн синонимӗсене тупӑр.

*◆ *Юман ҫара пуҫӑн, анчах кӗрӗкпе ӳсет* тенине эсир мӗнле ӑнланатӑр?

*🕮 *Юман* сӑмахпа пулнӑ мӗнле топонимсене пӗлетӗр?

**65.** *Юман* сӑмахран пулнӑ сӑмахсемпе сӑмах майлашӑвӗсене вырӑсла куҫарӑр.

Лашман юманӗсем, юман вутти, юман ҫӑпанӗ, юман кӑмпи, юман лӗпӗшӗ, юман ай, юманлӑх, юмансар.

| **Танлаштарӑр** |
|---|
| *Юман* «дуб». Ытти тӗрӗк чӗлхисенче: *ӓмӓн, емӓн* «дуб», *имӓн* «тополь», *имән* «дуб», *имәнлек* «дубняк, дубрава». |

**✪✪✪ 66. Проект ӗҫӗ**. «*Юман* сӑмахӑн вӑрттӑнлӑхӗ» темӑпа проект ӗҫӗ ҫырӑр.

**Проект ӗҫне тума суйласа илмелли ӗҫсем**

| Ачасен хушамачӗ, ячӗ | Тумалли ӗҫсем | Ӑҫта шырамалла? |
|---|---|---|
| | *Юман* сӑмахӑн | 1. Чӑвашла-вырӑсла словарь / |

| | | |
|---|---|---|
| | лексика пӗлтерӗшӗсене тӗрлӗ словарьтен ҫырса илӗр | М.И. Скворцов ред. Мускав, 1985.<br>2. Ашмарин Н.И. Чӑваш сӑмахӗсен кӗнеки. Шупашкар, 2000.<br>3. Чӑваш чӗлхин ӑнлантаруллӑ сӑмах кӗнеки. Шупашкар, ?????? |
| | *Юман* сӑмахӑн этимологине палӑртӑр | 1. Егоров В.Г. Этимологический словрь чувашского языка. Чебоксары, 1964.<br>2. Федотов М.Р. Этимологический словрь чувашского языка. Чебоксары, 1996.<br>3. Исаев Ю.Н. Фитонимический концептуарий как словарь нового типа (на материалах чувашского и русского языков). Чебоксары, 2013. |
| | *Юман* сӑмахран пулнӑ ҫӗнӗ сӑмахсене ҫырӑр | 1. Чӑвашла-вырӑсла словарь / М.И. Скворцов ред. Мускав, 1932.<br>2. Ашмарин Н.И. Чӑваш сӑмахӗсен кӗнеки. Шупашкар, 2000.<br>3. Исаев Ю.Н. Фитонимический концептуарий как словарь нового типа (на материалах чувашского и русского языков. Чебоксары, 2013.<br>4. Исаев Ю.Н. Ассоциативный эксперимент на материале чувашских дендронимов. |
| | *Юман* сӑмахран пулнӑ сӑмах майлашӑвӗсене ҫырӑр | |
| | *Юман* сӑмахпа синквейн ҫырӑр | |
| | *Юман* сӑмахпа кластер ҫырӑр | |
| | *Юман* сӑмахпа «Пулӑ шӑмми» | |

| | | |
|---|---|---|
| | çырăр | Чебоксары, 2014. |
| | *Юман* сăмах валли танлаштарусем тупăр | |
| | *Юман* сăмахран пулнă танлаштарусене çырăр | |
| | *Юман* сăмаха чăваш халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсенче шырăр | 1. Чăваш халăх сăмахлăхĕ. V том. Шупашкар, 1984.<br>2. Чăваш халăх пултарулăхĕ. Ваттисен сăмахĕсем. Шупашкар, 2007.<br>3. Ваттисен сăмахĕсем, каларăшсем, сутмалли юмахсем. Шупашкар, 2004.<br>3. Исаев Ю.Н. Фитонимический концептуарий как словарь нового типа (на материалах чувашского и русского языков). Чебоксары, 2013.<br>4. Культура родного края. |
| | *Юман* тата *дуб* сăмахсем чăваш тата вырăс тĕнче курăмĕнче мĕнлерех палăрнине танлаштарăр | 1. Исаев Ю.Н. Фитонимический концептуарий как словарь нового типа (на материалах чувашского и русского языков. Чебоксары, 2013.<br>2. Интернет. |

| | | |
|---|---|---|
| | *Юман* сăмахпа чăваш халăх йăли-йĕркинче усă курнине тĕпчĕр | 1. Исаев Ю.Н. Фитонимический концептуарий как словарь нового типа (на материалах чувашского и русского языков). Чебоксары, 2013.<br>2. Ватăсенчен ыйса пĕлни |
| | *Юман* сăмах тĕл пулакан хайлав ячĕсене шыраса тупăр | Чăваш хайлавĕсен, юррисен картотекисем |
| | *Юман* сăмах тĕл пулакан сăвă йĕркисене тупса çырăр | |
| | *Юман* сăмахпа салам сăмахĕсенче мĕнлерех усă курнине тĕпчĕр | Иртнĕ ĕмĕрте çырнă çыру тĕслĕхĕсем, хаçатсенче пичетленнĕ салам сăмахĕсем |

## 5. Хирĕçлекен союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси

⊙ **67.** Икĕ хутсăр предложенирен хирĕçлекен союзлă сыпăнуллă хутлă предложени йĕркелесе çырăр.

1. Тӳпе ăмăр. Çумăр çумасть-ха.
2. Урок вĕçленчĕ. Ачасем вырăнтан хускалмарĕç.
3. Эпĕ пиччене кĕтрĕм-кĕтрĕм. Вăл яла килмерĕ.
4. Чечексене куллен шăварса тăр. Вĕсем типсе лараççĕ.
5. Тăрăшса вĕрен. Университета вĕренме илмеççĕ.

* Хутсăр предложенисем хушшине мĕнле чарăну палли лартмалла? Тивĕçлĕ чарăну палли лартас тесен предложени пайĕсем хушшинчи шухăш çыхăнăвĕсене шута илмелле-и?

* Запятоя союз умĕн е хыççăн лартмалла?

| |
|---|
| ***Пĕлетĕр-и эсир?*** |
| *Куллен* – урăхла ăна кашни кун тесе ăнланатпăр. Апла пулсан *куллен* сăмах *кун* çумне *-лен* аффикс хушăнса пулни пирки иккĕленӳ çук: *кун* + *лен* > *куллен.* Ку тĕслĕхре *н* тата *л* хупă сасăсем пĕрешкелленнĕ (чĕлхе ăслăлăхĕнче çакнашкал пулăма ассимиляци теççĕ.) *-Лен* аффикс хушăнса пулнă тепĕр сăмах пур – *çуллен (çул* + *лен). (Л.П. Сергеев.)* |

**▲ Хирĕçлекен союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисенче запятоя яланах союз умĕн лартаççĕ.**

**68.** Предложенисене чарăну палли тĕрĕс лартса çырса илĕр.

1. Чӳрече карри[1] хускалкаласа илет анчах Маша хăй курăнмасть. *(Л. Тал.)* 2. Ăна каллех пулăшу памалла атту вилет. *(Талвир.)* 3. Çемен те пиччĕшĕн пурнăçне лайăхрах пĕлесшĕн анчах Антун ăна нимех те каласа кăтартаймарĕ. *(Н. Макс.)* 4. Чĕлхи ун чараксăртарах[2] та çапах колхозра аван ĕçлет. *(А. Ем.)* 5. Ашшĕ, чăнах та, чирлĕ пулмалла атту йытта вăл яланах хăйпе пĕрле илсе каяканччĕ. *(В. Сат.)* 6. Пур çĕре те хамăн çитмелле, унсăрăн йĕрке пулмасть. *(Арт.)*

**69.** Тупмалли юмахсене тумсăмне пĕлĕр. Предложенисен тĕп членĕсене тупăр. Хутлă предложени тĕсне палăртăр, Хутлă предложенисене сыпăнуллă хутлă предложени пек йĕркелĕр. Чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсене ăнлантарăр.

1. Хăлхи пур – илтмест. 2. Шăлĕ пур – çыртаймасть. 3. Ури пур – утаймасть. 4. Ури çук – чупать, çăварĕ çук – кăшкăрать.

5. Чунĕ çук – вĕçет. 6. Ĕçлет-ĕçлет – укçи çук. 7. Тумлăп-тумлăп – çĕре ӳкмĕп. 8. Пăнчăрт! шыва ятăм – путмарĕ.

*◆ Вуланă тупмалли юмахсенче *хăлха, шăл, ура* йышши сăмахсем тӳрĕ пĕлтерĕшлĕ-и е куçăмлă-и? Çак модельпех хăвăр та тупмалли юмахсем шутласа кăларăр.

**70.** Текста вуласа тухăр. Çыхăну паллисĕр тата сыпăнуллă хутлă предложенисене çырса илĕр, схемине ӳкерĕр, чарăну палли лартас уйрăмлăхсене ăнлантарăр.

## Хĕрарăм пичче

Студентсем ку термина вĕренсе çитиччен ялан тенĕ пекех пăсса калаççĕ: *оксюморо'н.* Апла каламалла мар, *оксю'морон* темелле. Кунта ăнсăртлăх та пур, кулăш та сисĕнет.

Ара аппа теме çук. Аппа ар пулма пултараймасть, çапах та арçын аппа тесе калани йăнăш мар. Ку сăмах майлашăвĕпе хăйне ар пекрех тытакан хĕрарăма палăртаççĕ.

Арçын аппана хирĕçле хĕрарăм пичче те пулмалла пек, анчах, чăваш шучĕпе, хĕрарăм пичче çук. *(Э. Фомин.)*

*🕮 Чăваш чĕлхинчи оксюморон тĕслĕхĕсене тата тупăр.

### *Чĕлхе пĕлĕвĕ*

*Оксюморон* (грек чĕлхинчи ὀξύς «çивĕч ăслă» тата μωρός («ухмах») сăмахсенчен пулнă) – пĕр-пĕринпе пĕлтерĕш енчен килĕшсе тăман икĕ е темиçе сăмах пĕрлешĕвĕ.

**71.** Текста вуласа тухăр. Çыхăну паллисĕр тата сыпăнуллă хутлă предложенисене çырса илĕр, схемине ӳкерĕр, чарăну палли лартас уйрăмлăхсене ăнлантарăр.

Пайăр ятсем йышĕнче çын ячĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Вĕсене тĕпчесе вĕренекен уйрăм ăслăлăха антропонимика теççĕ.

Чăвашсен тĕп (авалхи) ят питĕ нумай. В.К. Магницкий тĕпчевçĕ XIX ĕмĕр вĕçĕнче арçын ячĕсене пухса çырса илнĕ те,

10567 арçын ячĕ 1905 çулта Хусанта пичетленсе тухнă «Чувашские языческие имена» ятлă кĕнекере çырăнса юлнă. Шухăшласа пăхăр-ха: арçын ячĕсем кăна чăвашсен 10 пин ытла!

Хĕрарăм ячĕсем те чăвашăн йышлă пулнă, анчах вĕсене хăй вăхăтĕнче çырса илмен. Вĕсем Н.И. Ашмарин профессорăн 17 томлă «Чăваш сăмахĕсен кĕнекинче» нумай çырăннă. Хĕрарăм ячĕсене тĕплĕн çырса илмен те, вĕсен шучĕ арçын ячĕсен шутне çитеймест.

Кашни ятăнах хăйĕн пĕлтерĕшĕ пулнă, анчах та çав пĕлтерĕшсем майĕпен тĕксĕмленсе пырса пачах çухалнă. Ачана мĕнле ят хурасси тĕрлĕ сăлтавран – унăн сăн-питĕнчен, ăс-тăнĕпе кăмăлĕнчен, хăçан, хăш кун, хăш çул, ăçта çуралнинчен тата ыттисенчен те килнĕ. Ашшĕ-амăшĕ хăйсен ачине илемлĕ, чипер те сăпайлă хĕрупраç ўссе çитĕнтĕр тесе ĕмĕтленнĕ, çавăнпа та вĕсене валли янăравлă та илемлĕ ятсем шыранă, çав ятсен хăватне ĕненнĕ. *(Л.П. Сергеев.)*

*🕮 Сирĕн ялта авалхи чăваш ячĕсем сыхланса юлнă-и? Çав ятсемпе çўрекенсем ватă-и е çамрăк-и? Вĕсен паспорт çинчи ячĕ мĕнлерех?

* ✪✪✪ Илемлĕ литература хайлавĕсенче авалхи чăваш ячĕсенчен хăшĕсем тĕл пулаççĕ?

***Чĕлхе пĕлĕвĕ***

**Антропоним** (< грек *antropos* «çын»,*onoma* «ят») – çын ячĕ, хушамачĕ, ашшĕ ячĕ, хушма ячĕ.

***Пĕлетĕр-и эсир?***

Ачана арăслан тата ытти тискер кайăк ячĕсене хурасси çĕр çинче нумай халăхăн йăлинче çирĕпленнĕ: вырăссен – *Лев*, Анăç Европăри халăхсен – *Лео, Леон*; арабсен – *Асад*, перссемпе

таджиксен – *Шир*, уйгурсен – *Кайдар*, казахсен – *Хайдар* тата *Аристан*, авалхи чăвашсен – *Айтар* т. ыт. те. Çав ятсене хурса ача çирĕп те вăйлă пуласса ĕмĕтленнĕ-тĕр. *(Л.П.Сергеев.)*

**72.** «Чăвашсен авалхи ячĕсене кам нумайрах калать?» вăйă иртерĕр. Ятсене таблицăна пăхса ушкăнлăр.

**Çынсене мĕне кура ят пани**

| Ят панин сăлтавĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Сăн-сăпачĕ | *Хитрепи, Илемпи* |
| Кăмăлĕпе ăс-тăнĕ | *Кăмăлпи, Савпи* |
| Хăçан тата ăçта çурални | *Эрнепи, Туймăрса* |
| Чир-чĕртен, усал-тĕселтен сыхланни | *Курак, Чакак* |

## 6. Уйăракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем

⊙ **73.** Схемăсене тишкерĕр. *Е* союз мĕнсене çыхăнтарать? Схемăсемпе килĕшӳллĕн предложенисем йĕркелĕр.

1. Е О,е О.

2. 


**74.** Таблицăна тултарăр, хăвăр тĕслĕхсемпе çирĕплетсе пĕтĕмлетӳ тăвăр.

**Уйăракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем**

| Союзсем | Схеми | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| Е - е | | ***Е*** *эпĕ Мускава каятăп,* ***е*** *эсĕ Хусана каятăн..* |
| Те - те | | ***Те*** *çутă çитмест,* ***те*** *куçăм япăх курать.* |
| Пĕрре – тепре | | ***Пĕрре*** *хĕвел пăхать,* ***тепре*** *çумăр çăвать.* |

**75.** Икĕ хутсăр предложение уйăракан союзсемпе çыхăнтарса сыпăнуллă хутлă предложени йĕркелесе çырăр.

1. Анне хулана каять. Пичче яла килет.

2. Самолет вĕçет. Çăлтăр çутатать.

3. Юр çăвать. Хĕвел пăхать.

4. Кашкăр улать. Çил сасси çавăн пек илтĕнет.

5. Йăмăк калаçмасть. Пичче сăмах хушмасть.

*Пĕлетĕр-и эсир?*

Тĕпчевçĕсем *çăлтăр* сăмах пулăвне сăнлăха евĕрлекен сăмахпа çыхăнтараççĕ. Эпир *çутă йăлт! турĕ, йăлтăртатса çунать, йăлтăр турĕ* тесе калатпăр, ку тĕслĕхсенче пуринче те çутта сăнласа евĕрлекен *йăл* пур. *Çăлтăр* сăмах та, ытти тĕрĕк чĕлхисенчи çăлтăра пĕлтерекен сăмахсем те сăнлăха евĕрлекен *йăл* тымартан пулнă. *(Л.П. Сергеев.)*

*Танлаштарăр*

*Çăлтăр* «звезда», *хўреллĕ çăлтăр* «комета». Тутар *йолдыз*, пушкăрт *йондыҙ*, уйгур *йулдус*, авалхи тĕрĕк *йулдуз.*

Йăлăмри марисен *шўдыр*, тури марисен *шӹдыр* сăмахĕсем чăвашсен *çăлтăр* сăмахĕнчен пулса кайнă.

**76.** Уйăракан союзсем яланах мăшăрлă çўреççĕ-и е хăраххăн та çўреме пултараççĕ-и? Таблицăна тултарăр та тивĕçлĕ пĕтĕмлетў тăвăр.

**Сыпăнуллă хутлă предложенири уйăракан союзсем**

| Союзсем | Мăшăррăн çўрет-и е хăраххăн-и? | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| Е - е | Хăраххăн та, мăшăррăн та, темиçешерĕн те | |
| Те - те | Мăшăррăн | |
| Пĕрре – тепре | Мăшăррăн | |

**▲ Уйӑракан союзсем пурте сыпӑнуллӑ хутлӑ предложени пайӗсене уйӑрмаҫҫӗ. *Пӗр-пӗр* мӑшӑрлӑ союз пӗр йышши членсемпе кӑна ҫӳрет: *Сӳс хӳреллӗ хурҫӑ йытӑ пӗр кӗрет те, пӗр тухать.***

***Е* союзпа хӑраххӑн та, мӑшӑррӑн та, темиҫешерӗн те усӑ кураҫҫӗ. *Те-те, пӗрре –тепре* – мӑшӑрлӑ союзсем.**

**77.** Таблицӑна тишкерӗр. Уйӑракан союзлӑ сыпӑнуллӑ хутлӑ предложени пайӗсем хушшинчи шухӑш ҫыхӑнӑвӗсене ӑнлантарӑр.

**Уйӑракан союзлӑ сыпӑнуллӑ хутлӑ предложени пайӗсем хушшинчи шухӑш ҫыхӑнӑвӗсем**

| Союз | Шухӑш ҫыхӑнӑвӗ | Тӗслӗхсем |
|---|---|---|
| *е – е* | икӗ е темиҫе ӗҫрен пӗри пурнӑҫланнине, ҫав ӗҫсенчен пӗрин ҫинче чарӑнмаллине пӗлтерет | *Е эпӗ мала тухатӑп, е эсӗ ҫӗнтеретӗн* |
| *те – те* | | *Те аслати авӑтрӗ, те темскер кӗмсӗртетрӗ.* |
| *пӗрре – тепре* | умлӑн-хыҫлӑн улшӑнса пыракан ӗҫсене сӑнлани | *Пӗрре асанне юмах каласа парать, тепре асатте тупмалли юмах юптарать.* |

**78.** Сыпӑнуллӑ хутлӑ предложени пайӗсем мӗнле союзпа ҫыхӑннине, унпа мӑшӑррӑн е хӑраххӑн усӑ курнине, ҫыхӑну пӗлтерӗшне калӑр. Предложенисен схемине ӳкерӗр.

1. Ухмаха тухнӑ-и эп, е кӑштах ӑс пур-и-ха ман? *(Л. Агаков.)* 2. Те ҫыннисем пахчисене ҫыран хӑрринелле тӑснӑ, те ҫырма пахча картисем ҫумне сӗвеннӗ. *(В. Элпи.)* 2. Ни чӗлӗм тӗтӗмӗ касмасть сан ӑшна, ни ятлаҫакан ҫук. *(Хв.Уяр.)* 3. Пӗрре чухӑнсем ҫӗнтерсе пыраҫҫӗ пек, тепре пуянсем усалтарах кӑшкӑраҫҫӗ. *(Юхма М.)*

**79.** Тектри *е* союз мӗнсене ҫыхӑнтарать: пӗр йышши членсене-и, сыпӑнуллӑ хутлӑ предложени пайӗсене-и?

Чăваш хăйне ĕненччĕр тесе ант е тупа тунă. Ку ĕçĕн хăйĕн йĕрки пулнă. Е судра тупа тунă чăваш, е киремет пăхакан çын тупа тутарнă.

Киремет пăхакан тупа тума йывăçран ятарласа касса тунă патака ик енчен чĕртсе янă. Тупа тăваканни патак урлă: «Тупата Турăшăн, суятăп пулсан çак патак пек типсе каймалла пултăр», – тесе каçнă, тăварлă шыв ĕçнĕ, çĕре чуп тунă та тăвар сапнă çăкăр чĕллине[1] çинĕ.

Судра вара тупа сăмахĕсем урăхларах пулма пултарнă. «Тупата Туршăн, хĕвел пур, уйăх пур. Ак кĕтесри Турă, эпĕ апла туман (е каламан). Эпĕ хам сăмах çине хам тăмасан хам ача-пăчана ан курам. Икĕ аллăм та типсе лартăр. Çын курмасан Турă курать», – тенĕ.

Алă парса сăмах пани те чăвашсемшĕн тупа вырăнĕнчех пулнă. *(С. Мясников.)*

*?! *Тупа* сăмах сирĕн калаçура час-счасах тĕл пулать-и? *Тупата* сăмах *тупа* сăмахпа çыхăннă-ши?

*◆ *Тупа ту* тенине тата мĕнле сăмах майлашăвĕсемпе палăртма пулать?

*◆ Эсир час-часах тупа тăватăр-и? Тупа тусан кайран хăвăр сăмахăра тытатăр-и?

* Хальхи вăхăтра *ант* сăмахпа усă куратпăр-и? Чĕлхе наукинче ун пек сăмахсене мĕн теççĕ? Интернетра е словарьсенче ку сăмах пирки мĕн çыраççĕ?

*?! Мĕнле професси çыннисем тупа тăваççĕ?

***Сăмах çӳпçи***

*Тупа* «клятва», «обещание», *тупа ту* «клясться». Н.И. Ашмарин çырнă тăрăх, *тупата* сăмах *тупа* сăмахран пулнă, вырăсла *ей-богу* тенипе тӳр килет.

Уйгур, кăркăс чĕлхисенче *тауба* «раскаяние», пушкăрт

чӗлхинче *тәубә* «покаяние, исповедь, раскаяние» пӗлтерӗшлӗ. Пурте араб чӗлхинчи «раскаяние, покаяние» пӗлтерӗшлӗ сӑмахран пулнӑ. Марисен *товат*, мордвасен *тоба* сӑмахӗсем «правда, ей-богу» пӗлтерӗшлӗ, вӗсене чӑваш чӗлхинчен йышӑннӑ.

✪✪✪ 80. Шухӑш карти. *Сӑмах патӑн пулсан – пурнӑҫла* тенине эсир мӗнле йышӑнатӑр? Сӑмах тытман ҫынна хисеплеҫҫӗ-и?

## 7. Уйӑракан союзлӑ сыпӑнуллӑ хутлӑ предложенисенче чарӑну паллисем лартасси

⊙ 81. Икӗ хутсӑр предложенирен уйӑракан союзлӑ сыпӑнуллӑ хутлӑ предложени йӗркелесе ҫырӑр. Союз хутсӑр предложенисенче иккӗшӗнче те кирлӗ-и е пӗринче пулсан ҫителӗклӗ-и?

1. Тӑман вӗҫтерет. Уяртать.
2. Пичче Мускава илсе каять. Аппа Хусанта ӗҫе вырнаҫтарать.
3. Куҫ курмасть. Йӗп ҫӗрти пӗчӗк.

***Пӗлетӗр-и эсир?***

*Йӗп* «игла» кашни тӗрӗк чӗлхинчех пулмалла пек, анчах та ытти тӗрӗк чӗлхисенче ҫак хатӗр пачах урӑх ятлӑ.

*Йӗп* сӑмах Ҫӗпӗр тӗрӗкӗсен икӗ чӗлхинче ҫеҫ упраннине палӑртмалла: алтай чӗлхин телеут диалектӗнчи *йӑбӑ* – «хӗҫ; ухӑ йӗппин тимӗртен тунӑ вӗҫӗ» пӗлтерӗшлӗ сӑмах; хакас чӗлхин койбал диалектӗнчи *йебӑ* ухӑ йӗппине пӗлтерет.

Ҫапла вара, чӑваш чӗлхинчи *йӗп* – сӗм авалтан пыракан сӑмах, историн вӑрӑм тапхӑрӗнче чӑваш сӑмахӗ хӑйӗн пӗлтерӗшне тата фонетика сӑнарне упраса хӑварнӑ. *(Л.П. Сергеев.)*

**▲ Уйӑракан союзлӑ сыпӑнуллӑ хутлӑ предложени пайӗсене яланах запятойпа уйӑраҫҫӗ.**

**82.** Предложенисене чарăну палли тĕрĕс лартса çырса илĕр, интонаци енчен килĕшӳллĕ вулăр.

1. Ни Михечĕ нимĕнле хыпар та памасть ни Ваççи шарламасть. *(Н. Макс.)* 2. Те хам лайăхах паллаймарăм те вăл йăнăш илтрĕ. (Г. Кр.) 3. Сывлăшра куракпа чана мăшăрĕсем хавассăн вĕçкелеççĕ е кăвакарчăн ушкăнĕсем вăркăшаççĕ. *(Элкер.)* 4. Хумккан пĕрре кĕресси те килчĕ тепре кĕме те хăраса тăчĕ. *(А. Аф.)*

> ***Пĕлетĕр-и эсир?***
>
> *Чана* «галка» евĕрлев сăмахĕнчен пулнă кайăк ячĕ. Ытти тĕрĕк чĕлхисенче те çак анлă сарăлнă кайăкăн ячĕ чăваш чĕлхинчи евĕрлех: *чэӳке ~ сэӳке ~ шавке ~ таан* т.ыт.те. *(Л.П. Сергеев.)*

**83.** Схемăсемпе килĕшӳллĕн предложенисем çырăр.




**84.** Вырăсларан чăвашла куçарăр. Вырăс чĕлхинчи уйăракан союзсем чăвашла мĕнле куçарăнаççĕ?

1. То падал как будто туман, то вдруг припускал косой дождь. *(Л. Толстой.)* 2. Либо я все устрою по-прежнему, либо я его на дуэль вызову. *(А. Чехов.)* 3. Из туч то летит холодный дождь, то вдруг туманом, залепляя глаза, повалит водянистый снег. *(К. Паустовский.)* 4. Или я не понимаю, или ты не хочешь меня понять. *(А. Чехов.)*

**85.** Тектри *е* союз мĕнсене çыхăнтарать: пĕр йышши членсене-и, сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсене-и? *Та* сăмах мĕн пулать: татăк-и, союз-и? Предложенисем хутлă е хутсăр пулнине, хутлă пулсан хăш ушкăна кĕнине калăр.

Ĕçе çăмăл е йывăр тесе хаклама çук. Вăл е кăмăла каять е эпир ăна юратмастпăр. Юратнă ĕçе тума та лайăх: ун патне ал та пырать. Юратман ĕçе тăвас та килмест: ун патне ал та пымасть.

Ĕçе юратса туни – культура палли. Чунран туманни – цивилизаци. Культура цивилизациреҫн пахарах. *(Э. Фомин.)*

*◆ Юлашки виçĕ предложение эсир мĕнле ăнланатăр? Автор вĕсемпе мĕн каласшăн пулнă?

✪✪✪ **86. Шухăш карти.** 85-мĕш хăнăхтарура Эдуард Фомин каланипе килĕшетĕр-и эсир? Професси суйласа илнĕ чух малти вырăна мĕн лартнă пулăттăр?

**87.** Текста вулăр. Уйăракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисене чарăну палли лартса çырса илĕр.

Паян ман кăмăл вылянчăк. Пĕрре эпĕ ахăлтатса кулатăп тепре куçăмран куççуль[1] юхать. Те кунĕ çапла пулчĕ те хам çавнашкал çын. Апла пулсан, мĕн те пулин тумалла. Хаваслă кĕвĕ кăмăла хăпартĕ-и е пĕчĕк йăмăк чуна савăнтарĕ-и?

*✪✪ Сирĕн кăмăл еплерех паян? Кăмăл пусăрăнчăк чухне эсир мĕн тăватăр? Уйăракан союзлă сыпăнуллă предложенисемпе усă курса хăвăр кăмăл çинчен каласа е çырса парăр.

**88.** Предложенисене чарăну палли тĕрĕс лартса çырса илĕр, интонаци енчен килĕшӳллĕ вулăр.

1. Пĕрре чашлаттарса[2] çумăр çăвать тепре тӳсме çук сивĕ шăнтса пăрахать. *(Элк.)* 2. Е конвоир пирĕн çинчен куçне илмест е ун патне ытти эсэсовецсем пыра-пыра каяççĕ. *(Арт.).* 3. Пĕрре шăм-шак çӳçенчĕ тепре сивĕ юхăм кĕлетки тăрăх каллĕ-маллĕ выляма тытăнчĕ. *(Агак.)* 4. Те вăл каçхи шевле те таçта ял çунать. *(Уяр.)* к

◆ 89. Илсе панӑ ваттисен сӑмахӗ мӗне пӗлтерет? Уйӑракан союзлӑ сыпӑнуллӑ предложенисемпе усӑ курса ӑнлантарӑр.

Ҫурхи ҫанталӑк ҫур ӑслӑ, кӗрхи ҫанталӑк кӗтӗк ӑслӑ.

## 8. Сыпӑнуллӑ хутлӑ предложенисене тишкересси

⊙ 88. Ҫыхӑну паллисӗр хутлӑ предложенисене тишкермелли йӗркене аса илӗр. Ку йӗркепе сыпӑнуллӑ хутлӑ предложение тишкерме пулать-и?

⊙ 89. Сыпӑнуллӑ хутлӑ предложение тишкермелли йӗркепе паллашӑр.

### Сыпӑнуллӑ хутлӑ предложенисене тишкермелли йӗрке

1. Панӑ тӗслӗх сыпӑнуллӑ хутлӑ предложени пулнине каламалла.

2. Хутлӑ предложенин пайӗсем.

3 Пайсене ҫыхӑнтаракан союз.

4. Пайсем хушшинче палӑракан шухӑш ҫыхӑнӑвӗ: умлӑн-хыҫлӑн е пӗр вӑхӑтра пулса иртекен ӗҫсене кӑтартни пайсем пӗр-пӗринпе пиркепе следстви, ӗҫпе результат ҫыхӑнӑвӗнче тӑни, пӗр-пӗрне хирӗҫлени, хӑвӑрт улшӑнакан ӗҫсене кӑтартни тата ытти те.

6. Чарӑну палли лартассипе ҫыхӑннӑ уйрӑмлӑхсем.

### Тишкерӳ тӗслӗхӗ

*Куҫ курать те*[1] *– шӑл витмест*[2]. (Ваттисен сӑмахӗ.)

Панӑ тӗслӗх – сыпӑнуллӑ хутлӑ предложени. Вӑл икӗ пайран тӑрать: пӗрремӗш пайне 1-мӗш предложени кӗрет, иккӗмӗшне – 2-мӗш предложени. Пайсем *те* сыпӑнтаракан союзпа ҫхӑннӑ. Шухӑш енчен пайсем пӗр-пӗрне хирӗҫлеҫҫӗ. Хутлӑ предложенин пӗрремӗш пайӗ – хутсӑр предложени (подлежащийӗ – *куҫ*; сказуемӑйӗ – *курать*), икӗ тӗп членлӑ, ансӑр, тулли, ыйтусӑр, пурлӑ, эмоцисӗр. Иккӗмӗш пайӗ те – хутсӑр предложени (подлежащийӗ – *шӑл*; сказуемӑйӗ – *витмест*), икӗ тӗп членлӑ, ансӑр, тулли, ыйтусӑр, ҫуклӑ, эмоцисӗр.

Сыпӑнуллӑ хутлӑ предложени пайӗсем шухӑш тӗлӗшӗнчен пӗр-пӗрне хирӗҫленӗ пирки *те* союз хыҫҫӑн тире лартнӑ.

**90.** Текста вуласа тухăр та сыпăнуллă хутлă предложенисене тупса вĕсен тытăмне тишкерӳ йĕрки тăрăх ăнлантарăр.

Революциччен *чĕлхеçĕ* тесе вĕрӳ-суру чĕлхин ăстине, тĕрлĕ чир-чĕртен, шăтан-сурантан, инкек-синкерен чĕлхе каласа «сиплеме» пĕлекен çынна каланă. Революцин малтанхи çулĕсенче тăван чĕлхене тĕпчесе, литература чĕлхине наука никĕсĕ çинче йĕркелесе аталантарасси социализм строительствин çивĕч ыйтăвĕ пулса тăнă та, чĕлхе пĕлĕмçине *чĕлхеçĕ* сăмахпа палăртма пуçланă. Халăх вĕрсе-сурса сыватакансене шанма пăрахать, тата медицина пулăшăвĕ парасси кулленхи пурнăçа кĕрсе пырать. Çавна май вĕрӳ-суру чĕлхи хăйĕн пĕлтерĕшне çухатса манăçа тухать те, *чĕлхеçĕ* сăмах семантикинче «чĕлхе пĕлĕмçи», «чĕлхе тĕпчевçи», «лингвист» пĕлтерĕш тĕп пĕлтерĕш пулса тăрать. *(Н.П. Петров.)*

*🕮 Вăхăт иртнĕçемĕн хăш-пĕр сăмахсен малтанхи пĕлтерĕшĕсем тĕксĕмленсе пынине, çĕнĕ пĕлтерĕшĕсем вара вĕсем вырăнне йышăнса тĕп пĕлтерĕш пулса тăнине *çул пуç* сăмах майлашăвĕпе ĕнентерсе парăр.

* *Пĕлĕмçĕ* сăмах пĕлтерĕшне Интернета е словаре пăхса пĕлĕр. ку сăмахпа хальхи вăхăтра усă кураççĕ-и? Чĕлхе наукинче ун пек сăмахсене мĕн теççĕ?

### *Пĕлетĕр-и эсир?*

*Чĕлхеçĕ* сăмах «чĕлхе тĕпчевçи» пĕлтерĕшпе пĕрремĕш хут «Канаш» хаçатăн 1919 çулхи июлĕн 4-мĕшĕнчи номерĕнче пичетленнĕ дискуссиллĕ статьяра тĕл пулать.

**91.** Текстран сыпăнуллă хутлă предложенисене çырса илĕр те тишкерĕр.

Палиндром – грек сăмахĕ, чăвашла «каялла чупакан» пĕлтерĕшлĕ. Çак терминăн чăвашла тӳр килĕвĕ ку таранччен пулман та, эпир ăна *таврăнкка* тесе ят патăмăр. *Çаврăнкка, çаврăнчăк, çаврăнтăк, таврăнчăк, таврăнтăк* сăмахсемпе те усă курма

пулать, анчах вĕсем пулăвĕпе янравлăхĕ, пĕлтерĕшĕ тĕлĕшĕнчен асăннă сăмаха çитеймеççĕ.

Кĕскен каласан, таврăнкка вăл – ик енчен те пĕр пек вуланакан сăмах, сăмах майлашăвĕ, предложени, сăвă йĕрки, çаврăмĕ. Тĕслĕхсем:

1) *ана, ача, ăшă, кăпăк, кăсăк, куккук, Куçук, кăтăк, кăсăк;*

2) *типĕ пит, çакă каç, кăра карăк, урă ăру, çĕр ĕç, ӳрĕк кĕ*рӳ;

3) *Ананас сана на; Куккук! тет куккук*;

4) *Лăкăш-лăкăш ут, ту шăкăл-шăкăл;*

5) *Утса ас ту,*

*Ас ту утса:*

*Ку – çав Ваçук,*

*Аппа. (В. Андреев.)*

*🕮 Эсир тата мĕнле таврăнккасене пĕлетĕр?

*⭘ *Çаврăнкка, çаврăнчăк, çаврăнтăк, таврăнчăк, таврăнтăк, таврăнкка* сăмахсен пулăвне ăнлантарăр.

*🕮 Чăваш поэзийĕнче таврăнкка çырас ăсталăхпа уйрăмах кам палăрса тăрать?

*✪✪✪ Ушкăнсем çине пайланса таврăккасем çырăр.

**92.** Предложенисен тытăмне тишкерӳ йĕрки тăрăх ăнлантарăр.

1. Туй пулмасть[1] пек туйăнчĕ,

Анчах кăçал туй ăнчĕ.

2. Кĕтĕмĕр те «Капкăна»,

Ячĕç тытрĕç кап! кăна. *(В. Андреев.)*

*?! 2-мĕш предложенире *те* союз икĕ хутсăр предложение пĕрлештерет теме пултаратпăр-и? Хăвăр шухăшăра ĕнентерĕр.

*⭘ *«Капкăн»* сăмаха мĕншĕн пысăкран тата кавычкăна хупса çырнă?

*◆ Мĕн вăл каламбур? Ăна чăвашла *сăмах вăййи* теме пулать-и? Çак хăнăхтарура тишкерме панă предложенисем каламбур пулаççĕ-и? Хăвăр та каламбур çырса пăхăр.

**93.** Хăвăрт каларăш пулакан предложени хутсăр е сыпăнуллă хутлă пулнине калăр. Хăвăр шухăшăра ĕнентерĕр.

*Хăвăрт каларăш*

**Лаптак пулман лапаткана лаптаклатрăм та ялалла лаплаттартăм.**

⭘ «*Сыпăнуллă хутлă предложени» темăна вĕреннĕ хыççăн аса илмелли тĕрлĕ ыйтупа ĕç*

1. Хутлă предложени тесе мĕнле пĕрлĕхе калаççĕ? Шухăшăра тĕслĕхсемпе ĕнентерĕр.

2. Хутлă предложенисен мĕнле-мĕнле ушкăнĕсем пур? Шухăшăра тĕслĕхсем тупса ĕнентерĕр.

3. Сыпăнуллă хутлă предложенисене çыхăну паллисĕр хутлă предложенисенчен епле уйăрса илмелле?

4. Сыпăнуллă хутлă предложение кĕрекен хутсăр предложенисем мĕнле-мĕнле союзсемпе çыхăнаççĕ?

5. Сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсем хушшинче шухăш çыхăнăвĕсем мĕнлисем пулаççĕ?

6. Сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсене çыхăнтаракан союзсем ăçта тăраççĕ?

7. Сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсене пĕр-пĕринчен чарăну паллисемпе епле уйăраççĕ?

8. Сыпăнуллă хутлă предложенисен интонацийĕ пирки мĕн калама пултаратăр?

**94.** Текста вуласа тухăр та тĕп шухăшне калăр.

**Виçĕ юрă**

Кирек мĕнле чăваш та пин-пин юрăран виççĕшне юрлатех. Вĕсем – хурлăх юрри, тав юрри, тупа юрри. Иртнĕ вăхăт, хальхи вăхăт, малашлăх...

*Уй варринче лаштра юман,*
*Атте тесе эп кайрăм та...*

Юрлать те йĕрет чăваш. Иртсе кайнишĕн хурланать. Ашшĕ те çук, амăшĕ те. Асаплă аваллăх ку. Хĕнлĕх, тертлĕх, хурлăх юрри. Сăмахĕсенче – куççулĕ, кĕввинче - ĕсĕклӳ, анчах та юрринче пурпĕрех ытарайми илем.

Тав юррине пĕччен юрламаççĕ. Сыв пуллашу юрри-çке-ха ку.

*Вĕс, вĕç, куккук, вĕç, куккук,*

*Вăрман хĕрне çитиччен...*

Каллех –тăван сăнар: вăрман хĕрри, вăрман варри, юман тăрне ларса канакан чăпар куккук... Ку юрăра тăван халăх кăмăлĕ те, тăван халăхăн ырă йăли те: хăна – патшаран малта, хăна – кĕрекере, хуçа – ура çинче...Хуçана мухтать хăна. Тав тăвать. Юрă халăхăн ырă енĕсене асра тытма сĕнет, халăх чунне чĕрене илсе упрама чĕнет.

Тепĕр юрă халăх мухтавĕн юрри, тупа юрри. Тĕлĕнтермĕш юрă.

*Алран кайми аки-сухи,*

*Асран кайми ати-ани...*

Сăмахĕсем мĕнле!.. Пĕрер сас палли улшăнать те – йĕрке пĕлтерĕшĕ йăлтах урăх. Сăмахĕсенче – пиншер çулхи шухăш-кăмăл, ĕмĕт-туйăм, кĕввинче – ĕмĕрлĕх сасси. Мĕнле çĕкленӳ, мĕнле хавхалану! Юррăн юлашки йĕркинче – чи хăватлă чĕнӳ:

*Ĕмĕр пĕрле, ай, пурнар-и!*

Ку – пĕрлĕх юрри, чăмăртану юрри. Кĕввипе те, сăмахĕпе те. «Уй варринче лаштра юман» – пĕчченлĕх юрри, вăл иртни çинчен. «Вĕç-вĕç, куккук! – хурăнташлăх юрри, паянхи çинчен, «Алран кайми аки-сухи» – пĕрлешӳ юрри, пуласси çинчен... Анчах ыранхи ĕнерхипе паянхисĕр кун курас çук. «Алран кайми аки-сухи» – аваллăха асра тытать, хальхи вăхăта мухтать, малашлăхшăн пĕрле пулма чĕнет.

Виçĕ юррăн – пĕр шухăш, пĕр йыхрав. Вĕсем чун-чĕре пуянлăхне упраттарасшăн. Мĕн пур юрра мансан та çак виçĕ юрра манаймăпăр. *(Г. Волков)*

*○ *Пĕрер сас палли улшăнать те – йĕрке пĕлтерĕшĕ йăлтах урăх* предложенин тытăмне тишкерӳ йĕрки тăрăх ăнлантарăр.

*✪ Сирĕн килте чăваш халăх юррисенчен хăшĕсене юрлаççĕ? Сана хăшĕ ытларах тата мĕншĕн килĕшет?

*🕮 А.Г. Николаев космонавтăн чи юратнă юрри хăшĕ пулнă?

*◆ *Юрă, кĕвĕ, çемĕ* сăмахсемпе синквейн çырăр.

**Танлаштарăр**

*Юрă* «песня». Ытти тĕрĕк чĕлхисенче:*йыр, ыр, жыр, жир, джыр, ырыа* «песня», *йырла, ырда, ырла, жырла, ыллаа* «петь», *жырчи, жырлаучы, йырсы, йырлаусы, жыршы, ырчы* «певец».

**Сăмах çӳпçи**

*Хурăнташ* – пĕр тăвансене пĕлтерекен сăмах. Чăн-чăн чăваш сăмахĕ тесе калас килет. Анчах, тĕрĕссипе, вăл пирĕн чĕлхене тутар чĕлхинчен кĕнĕ пулас, унта çак сăмах *карынташ* сăнарлă.Вăл *карын* (чăвашла *хырăм*) çумне -*таш* аффикс хушăннипепулнă. Çапла вара, *карынташ* сăмах пĕр хырăмран тухнă çынсене пĕлтерет. Чăн чăвашла ку сăмах сасă тĕлĕшĕнчен урăхларах пулмаллаччĕ – *хырăмташ*, анчах та тутар чĕлхинчи евĕр вăл *хурăнташ* сăнарлă çирĕпленнĕ. *(Л.П. Сергеев.)*

✪✪✪ 95. *Чăваш юрри* тенине эсир мĕнле ăнланатăр? *Чăваш юрри* сăмах майлашăвĕпе синквейн тата «Мĕн вăл?», «Мĕнле вăл?», «Мĕн тăвать вăл?» ыйтусемлĕ хĕвел кластерсем çырăр.

***Республикăн пĕрлехи экзаменнне хатĕрленетпĕр***

◆ **96.** 94-мӗш хӑнӑхтарури текстра палӑртнӑ **«Виҫӗ юррӑн – пӗр шухӑш, пӗр йыхрав»** шухӑша уҫса парса е 95-мӗш хӑнӑхтарура тунӑ синквейнпа тата кластерсемпе усӑ курса **«Мӗн вӑл чӑваш юрри?»** темӑпа калӑпӑшӗпе пысӑках мар ӑслав хайлавӗ ҫырӑр.

Хӑвӑр шухӑшӑра икӗ аргументпа ӗнентерме ан манӑр. Ҫакна тума ӑславӑн ӗнентерӳ мелӗсемпе (кӳртӗм сӑмахсемпе, ыйтупа хурав пӗрлӗхӗпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тӗллевпе услови, хирӗҫлев ҫыхӑнӑвне палӑртакан чӗлхе мелӗсемпе) сахалтан та икӗ хут усӑ курӑр.

# ПӐХӐНУЛЛӐ ХУТЛӐ ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ

## 9. Пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени пайӗсем

⊙ **97.** Тӗслӗхсене танлаштарӑр, вӗсен пӗрешкеллӗхӗсемпе уйрӑмлӑхӗсене калӑр.

1. Хӗвел анать, каҫ пулать.
2. Хӗвел анать те, каҫ пулать.
3. Хӗвел ансан каҫ пулать.

* Илнӗ тӗслӗхсенчен хӑшӗ сыпӑнуллӑ хутлӑ, хӑшӗ ҫыхӑну паллисӗр хутлӑ, хӑшӗ пӑхӑнуллӑ хутлӑ?

* Хутлӑ предложенисенчен хӑшӗнче хутсӑр предложенисем пӗр-пӗринпе сӑмах майлашӑвӗ пек ҫыхӑнаҫҫӗ?

* Хутлӑ предложенисенчен хӑшӗнче хутсӑр предложенисем хушшинчи ҫыхӑну тачӑрах?

* Илсе панӑ предложенисем стиль тӗлӗшӗнчен пӗрех-и?

➤ **Пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени тесе пайӗсем пӗр-пӗринпе пӑхӑнуллӑ ҫыхӑнура тӑракан пӗрлӗхе калаҫҫӗ.**

**Пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложенире хутсӑр предложенисем пӗр-пӗринпе сӑмах майлашӑвӗн пайӗсем пек ҫыхӑнаҫҫӗ: пӗри теприне пӑхӑнать, пӑхӑнаканни пӑхӑнтараканнинчен тухса тӑракан ыйтӑва хуравлать. Ҫавна пула сӑмах майлашӑвӗсене ҫыхӑнтаракан мелсем (аффикссем, хыҫ сӑмахсем, вырӑнӗ-йӗрки) пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени пайӗсене те ҫыхӑнтараҫҫӗ.**

98. Сăмах майлашăвĕпе пăхăнуллă хутлă предложение танлаштарăр та пăхăнуллă хутлă предложени çинчен каласа парăр, хăвăр тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

## Сăмах майлашăвĕпе пăхăнуллă хутлă предложени хушшинчи пĕрешкеллĕхсем

| Сăмах майлашăвĕсем | Пăхăнуллă хутлă предложенисем |
|---|---|
| Пĕр пайĕ теприне пăхăнать | |
| *Хĕвелпе тăр* | *Хĕвел аннипе тавралăх тĕттĕмленет.* |
| Пăхăнаканни пăхăнтараканнинчен тухса тăракан ыйтăва хуравлать | |
| *Мĕнпе тăр? – Хĕвелпе тăр* | *Мĕн пирки тĕттĕмленет? – Хĕвел аннипе тавралăх тĕттĕмленет.* |
| Çыхăну мелĕ пăхăнакан пайĕ çумне хушăнать. | |
| *Хĕвел**пе** тăр* | *Хĕвел аннипе[1] тавралăх тĕттĕмленет[2].* |
| Пĕр пайĕ – тĕп пай, тепри – пăхăнакан пай. | Пĕр пайĕ – тĕп предложени (2), тепри – пăхăнуллă предложени (1). |
| *Хĕвелпе тăр*  |  |

➤ **Содержани енчен пĕр-пĕринпе мĕнле çыхăнура тăнине кура пăхăнуллă хутлă предложени пайĕсенчен пĕрне пăхăнуллă предложени, теприне тĕп предложени теççĕ.**

**Тĕп предложенин тытăмĕнче çыхăну мелĕ пулмасть. Тĕп предложени пăхăнулливаррине кĕрсе лараймасть.**

**Пăхăнуллă предложени тĕп предложение е унăн пĕр-пĕр пайне ăнлантарса парать, вĕсене пăхăнса тăрать. Пăхăнуллă предложенин ыйтăвĕ тĕп предложенирен тухса тăрать. Çыхăну мелĕсем пурте пăхăнуллă предложение кĕреççĕ.**

99. Схемăна тишкерсе пăхăнуллă хутлă предложени пайĕсем çинчен каласа парăр.

## Пăхăнуллă хутлă предложенин пайĕсем

Тĕп предложени → Ыйтăвĕ хайĕнчен тухса тăрать.
→ Тытăмĕнче çыхăну мелĕ пулмасть.

Пăхăнуллă предложени → Тĕп предложение е унăн пĕр-пĕр пайне ăнлантарса парать.
→ Тĕп предложение пăхăнса тăрать.
→ Ыйтăвĕ тĕп предложенирен тухса тăрать.
→ Çыхăну мелĕсем пурте пăхăнуллă предложение кĕреççĕ.

**100.** Хăш предложени хутлă, хăшĕ хутсăр иккенне ăнлантарăр. Пăхăнуллă хутлă предложенисене çырса илĕр, тĕп тата пăхăнуллă предложенисене цифрăсемпе кăтартăр, тĕп членĕсене паллă тăвăр.

1. Купăс сасси илтĕнсен кĕрхи каç та илемлĕ. *(А. Арт.)* 2. Тепĕр хут кĕрсе çăвăнсан, пуç тăрăх шыв ярсан виççĕмĕр те мунчаран тухрăмăр. *(В. Алент.)* 3. Юр кĕлетке пулса çитсен арçын ача ун питне вак чул катăкĕсемпе сăн кĕртрĕ. *(В. Григорьев.)* 4. Лена патне пырса ларнă хĕрсем журнал пăхма тытăнчĕç. *(А. Арт.)* 5. Шăпăр сасси чарăнсан туй юррийĕ пуçланать. *(К. Ив.)* 6. Кунĕпех çунă çумăр анчахрах чарăнчĕ. *(А. Арт.)*

📖* Пăхăнуллă хутлă предложенисене пайсем хушшинчи çыхăну пĕлтерĕшне кура ытти йышши хутлă предложенисемпе ылмаштарăр. Улшăну предложенисен сăн-сăпачĕпе стильне, шухăш сĕмĕсене витĕм кӳрет-и?

***Пĕлетĕр-и эсир?***

Ухсай Яккăвĕн произведенийĕнчи Кĕлпук мучи сăнарне нумайăшĕ пĕлет-тĕр. *Кĕлпук* – авалхи чăваш ячĕ. Унпа пĕр тымарлисен шутне *Кĕлпи, Кĕлпике* кĕреççĕ. Тĕрĕк чĕлхисенче *кĕл* чечеке пĕлтерекен сăмах шутланать, вăл перс сĕмахĕ. (Халĕ эпир усă куракан *чечек* сăмаха чăваш чĕлхи тутар чĕлхинчен йышăннă, ку сăмахăн чăвашла форми – *çеçке. Çеçке* – *çеç* «ешер, чечеклен»

глагол çумне *-ке* аффикс хушăннипе пулнă сăмах.) *Кĕлпике, Кĕлпи* тени вара «чечек пек хитре пике» тенине пĕлтерет. *Кĕлпук, Кĕлеслу, Кĕлпус, Кĕлнюк, Кĕлпинес* ятсенче те «чечек пек хитре» пĕлтерĕш пур. *(Л.П. Сергеев.)*

**101.** Текста вуласа тухăр, пăхăнуллă хутлă предложенисене çырса илĕр. Хутлă предложенин тĕп тата пăхăнуллă пайĕсене кăтартăр.

Авалхи ятсем хушшинче кайăка пĕлтерекен ятсем те тĕл пулаççĕ: *Шăпчăк, Чĕкеç, Пăрчăкан* т. ыт. те. Çак ятсене парса авалхи чăваш хăйĕн ачисем ĕçчен, илемлĕ пуласса шаннă, ĕненнĕ. Чăваш шăпчăкне те, чĕкеçне те, пăрчăканне те хисепленĕрен ку кайăк ячĕсем тĕрлĕ сăмах çаврăнăшĕпе каларăшра та тĕл пулаççĕ.

Халăх сăмахлăхĕнче чăваш хăш-пĕр кайăка килĕштерменни, ырăпа асăнманни сисĕнет. Апла пулин те, çав кайăксен ячĕсем авалхи çын ячĕсен йышĕнче те тĕл пулаççĕ: *Чакак, Курак, Çерçи, Чана.* И.А. Андреев профессор шухăшĕпе, ку вăл авалхи чăваш сăмахăн асамлă вăйне ĕненнинчен килнĕ. Ача-пăчана килĕшӳсĕр, илемсĕр, сăпайсăр ят пани хаяр ӳкесрен, тĕрлĕ усал-тĕсел çыпăçасран сыхланă имĕш. Çакăн пек йăла чăвашсен çеç мар, тĕнчере ытти халăхсен те пулнă. *(Л.П. Сергеев.)*

* Сирĕн ялта *Чакак, Курак, Çерçи* йышши ятсем тĕл пулаççĕ-и? Халĕ тĕл пулмаççĕ пулсан ĕлĕкрех вĕсемпе усă курнипе курманнине ял ваттисенчен ыйтса пĕлĕр.

* Вырăс халăхĕ çавăн йышши ятсемпе усă курнă-ши? Интернетпа усă курса тĕслĕхсем тупăр.

* «Чĕвĕлти чĕкеç» конкурса мĕншĕн çавăн пек ят панă-ши?

***Сăмах çӳпçи***

*Чĕкеç* «ласточка», *çыр (çĕр) чĕкеçĕ* «ласточка-береговушка», «стриж», *тинĕс чĕкеçĕ* «морская ласточка». Куçăмлă пĕлтерĕшĕ -

«касатка», «милая». *Чĕкеç курăкĕ* «подорожник», *чĕкеç шатри* «веснушки».

Ытти тĕрĕк чĕлхисенче ку кайăк ячĕ пачах урăхла, чăваш чĕлхинчипе тӳр килмест. В.Г. Егоров профессор *чĕкеç* ят *чĕв-чĕв, чĕвĕт-чĕвĕт* евĕрлев сăмахĕнчен пулса кайма пултарнă тет.

Хăш-пĕр тĕпчевçĕсем хакас чĕлхин диалекчĕсенчи *карачкай, карчыҕай* «ласточка», тува чĕлхинчи *хараачыгай*, якут чĕлхинчи *харанҕаччы* «ласточка», «стриж» сăмахсем тĕрĕк чĕлхисенчи *кара* «черный» тата чăваш чĕлхинчи *чĕкеç* сăмахсем пĕрлешнипе пулнă теççĕ.

➤ **Пăхăнуллă предложени сказуемăйĕ глаголăн сăпатлă е сăпатсăр формисенчен те (причастипе деепричастирен), ытти пуплев пайĕсенчен те пулма пултарать. Сăпатсăр формăри глаголсемпе ытти пуплев пайĕсен пĕрлешĕвĕсене пăхăнуллă предложени тесе уйрăм подлежащи пур чухне çеç калаççĕ.**

**102.** Ваттисен сăмахĕсене вулăр. Хутлă предложенин тĕп тата пăхăнуллă пайĕсене кăтартăр. Пăхăнуллă пайри сказуемăй глаголăн сăпатлă е сăпатсăр форминчен пулнине калăр.

1. Çил тухмасăр тăман тапранмасть. 2. Вăрман каснă çĕрте (вырăнта) турпас ӳкмесĕр пулмасть. 3. Тăрна вĕçерĕнсессĕн сенĕкпе тытма çук. 4. Хуçалăх юхăнасси хуçаран килет. 4. Кĕрпи пулсан пăтти пиçет. 5. Кивĕ кĕрĕк çил вĕрнипех çĕтĕлет.

**103.** Сăмах вăййине (каламбура) вулăр. Пăхăнуллă хутлă предложенин пайĕсене кăтартăр. Деепричастисенчен хăшĕ сказуемăй пулать, хăшĕ пулмасть?

Кăшт лăплансан каçхи тусан,
Уроксене йăлтах тусан
Ман патăма паян, тус, ан. *(В. Андреев.)*

*⊙ Предложенире пĕр пек çырăнакан сăмахсене тупăр. Вĕсене чĕлхе наукинче мĕн теççĕ? Пĕр пек çырăнакан сăмахсемпе мĕн тĕллевпе усă курнă-ши?

## 10. Пăхăнуллă предложение тĕп предложенипе çыхăнтаракан мелсем

⊙ **104.** Тĕслĕхсенче тĕп тата пăхăнуллă предложенисене тупăр. Вĕсем пĕр-пĕринпе мĕнле мелсемпе çыхăннă?

1. Çил-тăман лăпланнăран çанталăк сивĕтрĕ.
2. Çил-тăман лăплансан çанталăк сивĕтрĕ.
3. Çил-тăман лăпланнă хыççăн çанталăк сивĕтрĕ.

⊙ **105.** Таблицăна тишкерĕр те пăхăнуллă предложение тĕп предложенипе çыхăнтаракан мелсем çинчен каласа парăр.

**Пăхăнуллă предложение тĕп предложенипе çыхăнтаракан мелсем**

| Çыхăну мелĕсем | | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| Аффикссем | Деепричасти аффиксĕсем | *Анне килсен чун лăпланчĕ.* |
| | Падеж аффиксĕсем | *Анне килнĕрен чун лăпланчĕ.* |
| | -*и* аффикс | *Анне килни чуна лăплантарчĕ.* |
| Хыç сăмахсем | | *Анне килнĕ хыççăн чун лăпланчĕ.* |
| Пайсен вырăнĕ-йĕрки | | *Çанталăк лайăх кун чун лăпланчĕ.* |
| Пăхăнуллă союзсем | | *Анне килчĕ пулсан чун лăпланать.*<br>*Чун лăпланчĕ, мĕншĕн тесен анне килчĕ.* |
| Союзла сăмахсем | | *Хăçан анне килет, çавăн чухне чун лăпланать.* |

*⊙ Çак мелсенчен хăшĕсем сăмах майлашăвĕн пайĕсене те çыхăнтараççĕ?

*⊙ Çыхăну мелĕсем кашнинчех ăçта вырнаçнă?

* 🕮 Хăвăр тĕллĕн пăхăнуллă хутлă предложени çырăр, пăхăнуллă предложенин çыхăну мелнне епле улăштарма (таблицăри пек) май пуррине кăтартăр.

🕮 **106.** Теори текстне вуласа ăнланăр та схема е таблица тăвăр.

➤ **Аффикссем** те, **хыç сăмахсем** те пăхăнуллă предложени сказуемăйĕ çумне çеç хушăнаççĕ.

**Вырăнĕ-йĕркипе** çыхăнакан пăхăнуллă предложенисем, тĕпрен илсен, тĕп предложенири пĕр-пĕр ят сăмаха е ят сăмах ушкăнне вĕсем умĕнче тăрса ăнлантараççĕ.

Пăхăнуллă предложение тĕп предложенипе çыхăнтаракан **пăхăнуллă союзсем** чылай: *тесе, тесен, пулсан, пулсан та, пулин те, мĕншĕн тесен* тыт.те.

**Союзла сăмахсем** шутне *кам, мĕн, ăçта, хăçан* йышши ыйту местоименийĕсемпе наречисем кĕреççĕ. Вĕсемпе пĕлтерĕш енчен шайлашуллă местоименисемпе наречисем тĕп предложенире тăраççĕ. Тĕп предложенире тăракан тӳр килӳсене кăтарту сăмахĕсем теççĕ: *кам – çав, мĕн – çав, ăçта – çавăнта, хăçан – çавăн чух.*

**107.** Текста вуласа тухăр. Пăхăнуллă хутлă предложенисене çырса илĕр, схемине ӳкерĕр, пăхăнуллă предложение тĕп предложенипе çыхăнтаракан мелсене калăр.

*Хушамат* сăмах ĕлĕкрех «прозвище» пĕлтерĕшпе çӳренĕ пулсан каярах вара сăмах хăйĕн хальхи «фамилия» пĕлтерĕшне туяннă. Чăваш йышĕнче хушма ятсем ĕлĕкех анлă сарăлнă. Хăш-пĕр ялсенче хушма ятсăр çын та пулман пулĕ: *Пĕчĕк Раман, Мăнтăр Кулине, Вĕçкĕн Траххи, Хаяр Хветут* т.ыт.те.

Хушма ятсем тухасси çыннăн сăн-пичĕпе кăмăлĕнчен, тыткаларăшĕнчен, ĕçĕ-хĕлĕнчен тата ыттисенчен те килнĕ.

Пурăна киле çырулăх сарăлнине пула хушма ятсенчен хальхи хушаматсем пулса кайнă. Тĕслĕхсем:

| Ĕлĕкхи хушма ятсем | Хальхи хушаматсем |
|---|---|
| Кăсăя | Синицын |
| Чĕкеç | Ласточкин |
| Кăтра | Кудряшов, Кудрявцев |
| Автан | Петухов |

Хушаматсем пире ĕлĕк чăвашсем мĕнле ĕçпе пурăннине те лайăх кăтартса параççĕ. *Рыбаков, Охотников* хушаматсен пулăвне çăмăллăнах тупатпăр, вĕсем мĕне пĕлтернине тӳрех ăнланатпăр. *Кожевников, Шорников, Бочаров* хушаматсем мĕнле пулса кайни вара хальхи çамрăксемшĕн тӳрех паллă мар. *(Л.П.Сергеев.)*

* Авалхи чăваш ячĕсенчен пулнă хушаматсене мĕнлисене пĕлетĕр? Вĕсем мĕнле ятран пулнине ăнлантарăр.

* Интернетпа усă курса *Кожевников, Шорников, Бочаров* хушаматсем мĕнле пулса кайнине ăнлантарăр.

***Пĕлетĕр-и эсир?***

Нумай вăхăт хушши чăвашсен хушамачĕсене ашшĕ ятĕнчен йĕркелесе пынă. Çавăнпа та час-часах хушамачĕпе ашшĕ ячĕ пĕрешкеллине тĕл пулатăн: *Иванов Петр Иванович, Захарова Мария Захаровна, Васильева Вера Васильевна* т. ыт. те. Халĕ ку йĕркене улăштарнă: çуралакан ачан хушаматне ашшĕ ятĕнчен тумаççĕ, ашшĕ хушаматне унăн хушамачĕ туса çырмалла тунă. *(Л.П. Сергеев.)*

**108.** Хăвăрт каларăшра тĕл пулакан хушма ятсем мĕнле мелпе пулса кайнă?

***Хăвăрт каларăш***

**Хура Хĕветĕр Хĕветлине Хĕлип Хĕлимунĕ хĕтĕртнĕ.**

**109.** Схемăна тишкерĕр. Пăхăнуллă хутлă предложени пайĕсене çыхăнтаракан мелсем хăйсем предложени членĕ пулаççĕ-и?

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| **Хыç сăмахсем Союзсем** | ⟶ | уйрăм ыйтăва хуравламаççĕ | ⟶ | предложени членĕ пулмаççĕ. |
| **Союзла сăмахсем Кăтарту сăмахĕсем** | ⟶ | уйрăм ыйтăва хуравлаççĕ | ⟶ | предложени членĕ пулаççĕ. |

🕮 **110.** Тутар предложенийĕсене вырăс куçарăвĕ çине таянса чăвашла куçарăр та пăхăнуллă хутлă предложени пайĕсене çыхăнтаракан мелсене танлаштарăр. Чăваш чĕлхинчи пăхăнуллă хутлă предложенисен тытăмĕ вырăссенне çывăх-и, тутарсенне-и?

| Тутарла | Вырăсла | Чăвашла |
|---|---|---|
| *Кем эшләми, шул ашамый.* | Кто не работает, тот не ест. | |
| *Син* әйткәнне мин эшләдем. | То, что ты просил, я сделал. | |
| Дусты бар кеше бәхетле. | У кого друг есть, тот счастлив. | |

**111.** Текста вуласа тухăр. Пăхăнуллă хутлă предложенисене çырса илĕр, схемине ӳкерĕр, пăхăнуллă преддлложение тĕп предложенипе çыхăнтаракан мелсене калăр.

## Хушамачĕ тăрăх халăхне палăртни

Ман *Илиади* хушаматлă юлташ[1] пур. Вăл пăртак грек. *Сааринен* пĕлĕш Финляндире пурăнать. *Винклерпа Гай*лер нимĕçсем Шупашкара килсе çӳреме юратаççĕ. *Амонашвилипе Чавчавадзе* грузин пулма тивĕç. *Мкртчянпа Саркисьянц* эрмен пирки иккĕленместпĕр[2]. Ива´новпа Пе´тров – пăлхар. Ивано´впа Петро´в – вырăс, тен, чăваш.

Таса чăваш хушамачĕ те пур-ха: *Вакку, Турхан, Митта, Туринке...* Эпир православи тĕнĕпе пурăннăран пиртен ытларахăшĕн ячĕ-хушамачĕ вырăс евĕрлĕ.

Дарья Бастригина – Пермь тăрăхĕнчен Шупашкара куçса килнĕ вырăс хĕрĕ. Вăл словарь тăрăх *бастриг* сăмах Çурçĕрте пурăнакан вырăс пуплевĕнче «шалча» пĕлтерĕшлĕ пулнине тупса палăртнă. Хушаматне вĕçлекен *-ин* сыпăк камăнлăха пĕлтернĕрен Дарйăн чăвашла хушамачĕ *Шалчасен* пулса тухать.

Петр Яковлев сăвăç Петĕр Яккусен тесе ал пусать. Вăл – чĕлхеçĕ. Аван псевдоним тупнă мар-и?

Сирĕн хушамат вара *Хĕветĕрсен*-и, *Петĕрсен*-и е *Сантăрсен*-и? (*Э. Фомин.)*

* Петĕр Яккусен поэтăн хăш сăввисене пĕлетĕр? Унăн поэзийĕ мĕнпе палăрса тăрать?

112. Хăвăр тĕллĕн проект е тĕпчев ĕçĕ çырăр.

1. **Тĕпчев ĕçĕ.** «Пирĕн йăх ячĕ» е «Манăн хушамат вăрттăнлăхĕ» темçпа тĕпчев ирттерĕр. Тĕпчев ĕçĕн кирлĕлĕхне (актуаллăхне), тĕллевĕсемпе задачисене, çăл куçĕсене, теорипе практика пĕлтерĕшне çырма ан манăр. Ĕç тытăмне не çирĕп тытса пырăр, унта «Кӳртĕм», «Тĕп пай», «Пĕтĕмлетӳ», «Усă курнă литература» пайсем пулччăр.

2. **Проект ĕçĕ.** «Никнеймсем мĕн çинчен калаççĕ?» темăпа проект ĕçĕ çырăр.

Проекта пурнăçа кĕртмелли тапхăрсем:

1. Хатĕрленӳ тапхăрĕ:

1.1. Тĕрлĕ литература вуласа *никнейм* ăнлавпа паллашни.

1.2. Лару-тăрăва (Интернет уçлăхĕнче никнеймсемпе тăтăш усă курнине) тишкерни.

1.3. Проект ĕçĕн тытăмне (тĕллевĕсемпе задачисене, тухăçлăхне, кирлĕлĕхне, мелсемпе меслетсене т. ыт. те) палăртни.

1.4. Шкул ачисем валли «Манăн электрон адрес» анкета хатĕрлени.

2. Тĕп ĕç тапхăрĕ:

2.1. Тĕрлĕ литература вуласа антропонимсен тĕсĕсене тишкерни, вĕсем хушшинче никнеймсен вырăнне палăртни, *никнейм* ăнлава палăртма чăваш сăмахĕ шырани.

2.2. Никнеймсене пуçтарни, «Манăн электрон адрес» ыйтăма ирттерсе унăн результачĕсене тишкерни.

2.3. Никнеймсене тытăмĕ (пĕр сăмахран е темиçе сăмахран), пулăвĕ ( япала, паллă ячĕсенчен, глаголтан е ытти пуплев пайĕсенчен аффикс хушăнса е хушăнмасăр), пĕлтерĕшĕ (çын, чĕр чун, йывăç ятĕнчен пулнисем т. ыт. те), несĕлĕ (чăваш, вырăс, акăлчан е тата урăх чĕлхе) тăрăх ушкăнласа тухни, тишкерсе тĕрлĕ диаграмма хатĕрлени.

2.4. Никнеймсемпе мĕншĕн усă курнине тĕпчени.

2.5. «Никнеймсем мĕнле пулсан лайăхрах?» сĕнӳсем хатĕрлени.

3. Пĕтĕмлетӳ тапхăрĕ:

3.1. Тĕпчев результачĕсемпе мультимедиа презентацийĕ хатĕрлени.

3.2. «Никнеймсем мĕн çинчен калаççĕ?» темăпа наукăпа практика конференцийĕнче калаçни.

**_Чĕлхе пĕлĕвĕ_**

*Никнейм, ник* – интернет уçлăхĕнче усă куракан ят. Акăлчан чĕлхинчи «хушма ят» пĕлтерĕшлĕ *nickname* сăмахран пулнă.

## 11. Пăхăнуллă предложенин хутлă пĕрлĕхри вырăнĕ

⊙ **113.** Предложенисене вулăр. Пăхăнуллă предложени тĕп предложени умĕн, хыççăн е варринче тăнине асăрхăр. Пăхăнуллă предложени тĕп предложение епле ăнлантарнине сăнăр – пĕтĕмĕшлĕн-и е унăн пĕр пайне çеç-и?

1. Çумăр çунă хыççăн çанталăк сивĕтрĕ.
2. Çумăр çунă вăхăтра çанталăк сивĕтрĕ.
3. Çанталăк çумăр çунă хыççăн сивĕтрĕ.
4. Сивĕтрĕ çанталăк çумăр çунă хыççăн.

* Пăхăнуллă предложени вырăнне улăштарни пĕтĕм пĕрлĕхĕн шухăшне мĕнле витĕм кӳрет?

**114.** Таблицăпа паллашăр та пăхăнуллă предложенин хутлă пĕрлĕхри вырăнĕ пирки каласа парăр.

**Пăхăнуллă предложенин хутлă пĕрлĕхри вырăнĕ**

| Вырăнĕ | Шухăш çыхăнăвĕ | Схеми | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|---|
| Тĕп предложени умĕнче | Тĕп предложение пĕтĕмĕшлĕн ăнлантарать |  | *Çĕмĕрт шап-шурă çеçкере ларнă чух пĕтĕм тавралăх илемленет.* |
| | Тĕп предложенин пĕр-пĕр пайне ăнлантарать |  | *Çĕмĕрт шап-шурă çеçкере ларнă вăхăтра пĕтĕм тавралăх илемленет.* |
| Тĕп предложени варринче | Тĕп предложение пĕтĕмĕшлĕн ăнлантарать |  | *Эпĕ яла хĕвел ансан çитрĕм.* |
| | Тĕп | | *Эпĕ яла хĕвел* |



| | | | |
|---|---|---|---|
| | предложенин пĕр-пĕр пайне ăнлантарать | | *аннă вăхăтра çитрĕм.* |
| Тĕп предложени хыçĕнче | Тĕп предложение пĕтĕмĕшлĕн ăнлантарать |  | *Эпĕ паян хулана каймарăм, мĕншĕн тесен иртенпех тăман вĕçтерет.* |

➤ **Кашни пăхăнуллă предложенин хутлă пĕрлĕхре хăйне тивĕçлĕ вырăнĕ пур. Вăл вырăна мĕнле кирлĕ апла улăштарма май килмест. Тĕпрен илсен, пăхăнуллă предложенин хутлă пĕрлĕхри вырăнĕ шухăш енчен тĕп предложенипе епле çыхăннинчен килет. Шухăшăпе пăхăнуллă предложени тĕп предложенипе пĕтĕмĕшлĕн те, унăн пайĕпе те çыхăнма пултарать. Çавна кура унăн вырăнĕ те улшăнать.**

**Асра тытăр! Тĕп предложени пăхăнуллин ăшĕнче тăма пултараймасть.**

**115.** Тĕп членсене палăртăр, пăхăнуллă тата тĕп предложенисене цифрăсемпе кăтартăр. Предложенисен схемисене ўкерĕр.

1. Салампи тул çутăличченех канма пĕлмесĕр ĕçлерĕ. *(А. Артемьев.)* 2. Хур кайăксем Çавал патне çитнĕ чух шăпах хĕвел хĕмленсе тухрĕ. *(М. Кипек.)* 3. Çтаппан авалхи йăлапа куккук миçе авăтнине шутлама тытăнчĕ. *(Н. Мранькка.)* 4. Хăлха çурăласла шăв-шав çĕкленчĕ. *(А. Павловская.)* 5. Павăл култарма тăрăшрĕ пулин те çамрăксем кулмарĕç, шăпланса итлеме пикенчĕç. *(А. Артемьев.)* 6. Халăх калани яланах тĕрĕс. *(Ват. сăм.)*

🕮 **116.** Тутар предложенийĕсене вырăсла тата чăвашла куçарнине сăнăр, пăхăнуллă предложенисен вырăнне кăтартăр, тивĕçлĕ пĕтĕмлетў тăвăр.

| Тутарла | Вырăсла | Чăвашла |
|---|---|---|

| | | |
|---|---|---|
| Син нәрсә әйттең, мин шуны эшләдем. | Ты что сказал, я то сделал | Эсӗ мӗн каланине эпӗ турӑм. |
| Мин укып чыккан китап бик кызыклы. | Прочитанная мной книга очень интересная. | Эпӗ вуланӑ кӗнеке питӗ кӑсӑклӑ. |
| Син кайда булсаң, мин дә шунда килермен. | Где ты будешь, туда и я приду. | Эсӗ ӑҫта пулатӑн, ҫавӑнта эпӗ пыратӑп. |

**117.** Сӑвӑ сыпӑкне вулӑр, пӑхӑнуллӑ предложенисен вырӑнне кӑтартӑр. Сӑвӑласа ҫырман пулсан пӑхӑнуллӑ предложенисен вырӑнӗ ӑҫта пулмаллаччӗ?

Аса илӳсенче эс ҫывӑх
Инҫе-инҫе ҫул иртнӗҫем.
Ан пулччӗ нишлӗ, пул эс сывӑ,
Ҫулла, хӗлле те ... кӗр ҫитсен. *(Н. Петровский)*

**118.** Хӑвӑрт каларӑш предложени хутсӑр е пӑхӑнуллӑ хутлӑ пулнине калӑр. Хӑвӑр шухӑшӑра ӗнентерӗр.

***Хӑвӑрт каларӑш***

**Ҫичкассинчи ҫич ҫӑка ҫичӗ ҫӗрте ҫитӗнет, ҫимӗк ҫитсен ҫулҫине ҫавра-ҫавра ҫиҫкӗнет.**

*?! Хӑвӑрт каларӑшра тӗл пулакан *Ҫичкасси* мӗн ячӗ-ши? Тавҫӑрса илме мӗн пулӑшрӗ?

**119.** Текста вуласа тухӑр. Пӑхӑнуллӑ предложенин хутлӑ пӗрлӗхри вырӑнӗ ҫинчен чӑваш чӗлхине вырӑс чӗлхипе танлаштарса мӗн калама пултаратӑр?

**Юрланман юрӑ**

Я оглянулся посмотреть,
Не оглянулась ли она,

Чтоб посмотреть

Не оглянулся ли я...

Çак юрра чăвашла та юрлас килет. «Эпĕ çаврăнса пăхрăм, эсĕ çаврăнса пăхмарăн-ши тесе эпĕ çаврăнса пăхнипе пăхманнине». Ăнăçлă мар. Тен, çапларах куçармалла: «Эпĕ вăл эпĕ çаврăнса пăхнипе пăхманнине çаврăнса пăхрĕ-ши тесе çаврăнса пăхрăм». Халĕ чăвашларах пек, ăнланма та пулать. Анчах предложени тытăмĕ вырăслинчен нумай кăткăсрах.

Вырăслинче хутсăр предложенисем пĕр-пĕрин хыççăн сыпăнса пыраççĕ: «(1) Я оглянулся посмотреть, (2) не оглянулась ли она, чтоб посмотреть, (3) не оглянулся ли я». Чăвашлисем пĕр-пĕрин ăшне кĕрсе лараççĕ: «(1) Эпĕ (2) вăл (3) эпĕ çаврăнса пăхнипе пăхманнине (2) çаврăнса пăхрĕ-ши тесе (1) çаврăнса пăхрăм». Матрешка пек.

Кун пек кăткăс предложение тем тесен те юрлама çук ĕнтĕ. Ансатлатма пулать: «Эпĕ çаврăнса пăхнипе пăхманнине вăл çаврăнса пăхрĕ-ши тесе çаврăнса пăхрăм». *(Э. Фомин.)*

*🕮 Текстри хутлă предложенисене ăнланас тесен интонаци тĕлĕшĕнчен мĕнлерех вуламалла-ши?

*?! Текст мĕншĕн «Юрланман юрă» ятлă?

*🕮 Чăваш чĕлхинчи пăхăнуллă предложенин хутлă пĕрлĕхри вырăнне вырăс чĕлхинчипе танлаштарсан тата мĕнле уйрăмлăх пур-ши? Хăш-пĕр пăхăнуллă хутлă предложени тытăмĕпе, сăмахсен йĕркипе хутсăр предложени енне туртăнмасть-и? Тĕслĕхсемпе ĕнентерĕр.

**▲ Тĕп предложение пĕтĕмĕшлĕн ăнлантарнă чухне пăхăнуллă предложени унран интонаципе те уйрăлса тăрать: ун пек чухне пăхăнуллă предложенипе тĕп предложени хушшинче пысăк чарăну тăватпăр, анчах та çырура чарăну палли пур чух та лартмастпăр.**

**120.** Ваттисен сăмахĕсене вулăр, предложенири интонацие сăнăр. Пăхăнуллă предложени тĕп предложенипе пĕтĕмĕшлĕн е унăн пĕр-пĕр пайне çеç ăнлантарнине калăр.

1. Пуçĕ пулсан çӳçĕ шăтать. 2. Халăх калани яланах тĕрĕс. 3. Инкек килсен чул та çурăлать. 3. Кайăк çитсе курман çĕре салтак çитсе курать. 4. Кушак çывăрни шăшисене савăнăç. 5. Турчăка пур чухне алла[1] никам та вута чикмест. 6. Ал-ура пур çинче ахаль ларни килĕшмест.

> ***Пĕлетĕр-и эсир?***
>
> Тĕпчевçĕсен шухăшĕпе, *кушак* сăмаха чăвашсем вырăссенчен йышăннă. Унччен чăвашсем кушак усраман-ши вара?
>
> Этем кушака сĕм авалах алла вĕрентнĕ. Тăван чĕлхемĕрте те кушака пĕлтерекен *пăçăк* сăмах пулнă, анчах тĕрлĕ сăлтава пула вăл пăрахăçа тухнă. *(Л.П.Сергеев.)*

✪✪✪ **121.** Схемăсемпе килĕшӳллĕ предложенисем çырăр.

1. 


2. 


3. 


4. 


**122.** Пăхăнуллă хутлă предложенисене кирлĕ çĕрте чарăну туса вулăр, хутлă предложенири интонацие сăнăр. Чарăну пăхăнуллă предложенипе тĕп предложени хушшинче пулать-и?

1. Сантăр киле таврăннă малтанхи кунсенче çанталăк тикĕс тăчĕ. *(А. Ĕçхĕл.)* 2. Май çитнĕ таран эпĕ те пулăшăп. *(Г. Ефимов.)* 3. Хĕлимун çитнĕ тĕле вăйă хĕрсе кайнăччĕ ĕнтĕ. *(Н. Максимов.)*. 4. Кам чухламĕ эсĕ мĕншĕн Эрхипе кĕрӳ тунине? *(Л. Таллеров.)* 5. Хам пур çинчен теприн птне çыру çырать. *(А. Емельянов.)*

**▲ Пăхăнуллă предложени тĕп предложенири пĕр-пĕр сăмаха е сăмах майлашăвне ăнлантарнă чухне хăй ăнлантаракан сăмахсемпе юнашар вĕсем умĕн тăрса пĕр пĕрлĕх тăвать. Интонаци енĕпе те пăхăнуллă предложенипе вăл ăнлантаракан сăмахсем пĕр ушкăна пĕрлешеççĕ. Çавăнпа хутлă предложенири тĕп чарăну та кун пек чухне пăхăнуллă предложенипе тĕп предложени хушшине мар, урăх çĕре лекет.**

123. Текстран пăхăнуллă хутлă предложенисем çырса илĕр, пăхăнуллă предложенисен вырăнне кăтартăр.

## Тĕревпе тĕрек

Ват çын хăйĕн икĕ ывăлне нӳхреп тӳрлетме хушнă. Ăна вăл хăй çамрăк чухнех тунă пулнă. «Эсир, ачасем, уратасене улăштариччен, ишĕлсе анасран, вăхăтлăха тĕревсем лартăр», – тенĕ. Ывăлĕсем: «Юрĕ[1]», – тенĕ.

Ашшĕ нӳхрепе анаймасса[2] пĕлсе вĕсем çапла юри каланă. Ĕçе васкаса пĕтерес тесе тĕревсем лартман. Хăйсем ашшĕнчен вăрттăн ахăлтатса кулнă.

Ĕç вĕçне çитсен нӳхреп лаштăр-р! ишĕлсе ання...

Ĕçри йĕркесĕрлĕх инкексĕр пулмасть иккен. Çамрăксен çăмăлттайлăхĕ[2] – ваттисене йывăрлăх. Ваттисем калани – тĕрек те, тĕрев те. Вĕрентнине итлемесен пархатар пулас çук. Ваттисен хăвачĕ – пуçри ăс. Ку хăват ваттисене мар, вĕттисене кирлĕ. *(Г. Волков.)*

* *Тĕрек* тата *тĕрев* сăмахсем пĕр пĕлтерĕшлех-и? Мĕнле сăмахран пулса кайнă вĕсем?

---

### *Пĕлетĕр-и эсир?*

*Тĕре* «сделать опору, прислонить»; *тĕреле* «подпереть»; *тĕрен* «опираться»; *тĕрев* «опора, подпорка»; *тĕревле* «подпирать»,

---

| |
|---|
| *тĕреклен* «опираться, упираться»; *тĕревлĕ* «с подпорками»; *тĕрек* «опора, подставка; мощь, сила», *тĕрекле* «подпирать, укреплять», *тĕреклĕ* «прочный, крепкий, сильный», *тĕрексĕр* «непрочный, некрепкий, слабый». |

| *Танлаштарăр* |
|---|
| *Турккă чĕлхинче дирä-* «упирать», *айак дирäмäк* «ногу упирать в землю», *дирäк (дирä- + -к)* «столб, колонна, мачта»; *дирäкли (дирäк+ ли)* «снабженный столбами, колоннами, парусами». |

✪✪✪ 124. *Тĕрек* сăмахпа синквейн тата «Мĕн вăл?», «Мĕнле вăл?», «Мĕн тăвать вăл?» ыйтусемлĕ хĕвел кластерсем çырăр.

***Республикăн пĕрлехи экзаменнне хатĕрленетпĕр***

◆ 125. 123-мĕш хăнăхтарури текстра палăртнă **«**Ваттисем калани – тĕрек те, тĕрев те**»** шухăша уçса парса е 124-мĕш хăнăхтарура тунă кластерсемпе тата синквейнсемпе усă курса **«Мĕн вăл тĕрек?»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар ăслав хайлавĕ çырăр.

## 12. Пăхăнуллă хутлă предложенисенче чарăну палли лартасси

⊙ 126. Предложенисену вулăр. Чарăну паллисене мĕне кура лартнине ăнлантарăр.

1. Çанталăк лайăхлансан çул çӳреве кайăп.
2. Çул çӳреве кайăп, мĕншĕн тесен çанталăк лайăхланчĕ.
3. Хăçан çанталăк лайăхланать, çавăн чухне çул çӳреве кайăп.

⊙ 127. Таблицăна тишкерĕр те пăхăнуллă хутлă предложенисенче чарăну палли лартас уйрăмлăхсем çинчен каласа парăр.

### Пăхăнуллă хутлă предложенире чарăну паллисене грамматикăна тата сăмахсен çыхăнăвне шута илсе лартасси

| Правилăсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Союзла сăмахсемпе тата | *Кам ĕçлет, çав çиет.* |

| | |
|---|---|
| *мĕншĕн тесен (мĕн-ма тесен, ма тесен)* союзпа çыхăнакан пăхăнуллă предложенисене тĕп предложенире запятой лартса уйăраççĕ. | *Эпĕ вулама юрататăп, мĕншĕн тесен кĕнеке çĕннипе паллаштарать.* |
| Ытти союзсемпе е урăх мелсемпе çыхăнакан пăхăнуллă предложенисене сăмахсен çыхăнăвне уçăмлатас тĕллевпе кăна уйрăмлатмалла. | *Каç пулсан, Мускавран килекн пуйăсран Толя кукка анса юлчĕ.* (Танлаштарăр: *Каç пулсан Мускавран килекн пуйăсран Толя кукка анса юлчĕ.)* |
| Пĕлтерĕшĕпе пăхăнуллă предложенипе тĕп предложение иккĕшне те ăнлантаракан сăмахсене пăхăнуллă предложенирен запятойпа уйăрмаççĕ, тĕп предложение кăна ăнлантараканнисене уйăраççĕ. | *Спортра кам ытларах тăрăшать, çав çĕнтерет.*<br>*Кун пек çынсем, çил хăш еннеле хытăрах вĕрет, çавăнталла тайăлаççĕ.* |
| Пăхăнуллă предложенисем шухăшĕ тăрăх икĕ е ытларах тĕп предложенипе çыхăннă чухне пăхăнуллă предложение запятойпа уйăраççĕ. | *Тупрам-пурлăхăм пулас пулсан, эпĕ ăна йăлтах сана парăттăм та хам сан патăнта тарçăра ĕçлесе пурнăттăм.* |
| Сăмах е сăмах ушкăнĕ пăхăнуллă предложение мар, тĕп предложение кĕнине кăтартма çав сăмахсене запятойпа уйрăмлатмалла, анчах пăхăнуллă предложени | *Каçхине, хĕвел ансан хĕрсем вăййа тухрĕç.*<br>(Танлаштарăр: *Каçхине хĕвел ансан хĕрсем вăййа тухрĕç.)* |

| | |
|---|---|
| хыççăн запятой лартмалла мар. | |
| Пахăнуллă предложенисем пĕр йышши пулсан – чарăну паллисем хутсăр предложенири пекех. | Йывăççене тайса çил вĕрни, çумăр чашлаттарса çуни мана пĕртте чăрмантармарĕ. |
| Пăхăнуллă предложенипе тĕп предложени хушшине вĕсен иккĕшĕн те сказуемăйĕсем *-и* аффикс йышăннă чухне тире лартаççĕ. | *Юн юхни – шыв юхни мар.* |

**▲ Асра тытăр! Тĕп предложенири кăтарту сăмахĕ тухса ӳкме пултарать. Калаçура вăл тухса ӳкнине чарăну туса, çырура тире лартса палăртатпăр. Тĕслĕхрен:** ***Кам ĕçлемест – çимест.***

🕮 **128.** 127-мĕш хăнăхтарури таблица çине таянса пăхăнуллă хутлă предложенисенче чарăну палли лартас уйрăмлăхсем çинчен схема е алгоритм тăвăр.

**129.** Чарăну палли лартас уйрăмлăхсене ăнлантарăр.

1. Çенĕкре алăк шатлатни, такам васкаса утни илтĕнсен Ятманов шăпланчĕ. *(А. Арт.)* 2. Тем тĕрлĕ вăйă[1] та шутласа кăлараççĕ, ашшĕ-амăшне чăрмантармаççĕ, каç пулсан вара аслисем çумне куршанак пекех çыпçăнаççĕ.(*А. Павловская.*) 3. Картлашка тумалли хăмасем те, юпа лартмалли кĕске пĕренесем кашни бригада ĕçлекен вырăна çитсе выртсан, пуртă кĕрĕслетни те пăчкă янăрани[2] çеç илтĕнсе тăракан пулчĕ. *(А. Талв.)* 4. Пире пуринчен ытла çывăхатанни вара – иксĕмĕрĕн те атте-аннесем çав Хĕлимун пиркиех пăчланни. (Н. Макс.) 5. Кам тăрăшать – çĕнтерет. *(Ват. сăм.)*

130. Таблицăна тишкерĕр та пăхăнуллă хутлă предложенире чарăну паллисене пайĕсем хушшинчи çыхăну пĕлтерĕшне шута илсе еплерех лартассине ăнлантарăр. хăвăр тĕслĕхсемпе ĕнентерĕр.

**Пăхăнуллă хутлă предложенире чарăну паллисене пайĕсем хушшинчи пазăна кура лартасси**

| Правилăсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Тĕп пай следстви е результат пĕлтерĕшлĕ пулнине интонаци енчен палăртма пăхăнулли хыççăн тире лартма юрать. | *Туссем пĕр-пĕрне улталаса пурăнсан – туслăх арканать.* |
| Шухăш уçăмлăхĕшĕн, палăртулăхĕшĕн, подлежащи е сказуемăй пулакан пăхăнуллă предложенипе тĕп предложени хушшине тире лартмалла. | *Хырăм выççи – çăкăр ямшăкĕ.* *Чĕлхе пĕтни – халăх пĕтни.* |

131. Текста вуласа тухăр, пăхăнуллă хутлă предложенисене çырса илăр, схемине ўкерĕр, чарăну палли лартас уйрăмлăхсене ăнлантарăр.

Эпĕ сĕм авалах Рим таврашĕнче çуралса ўснĕрен малтанах мана *quaestio* (квестио) тесе чĕннĕ. Ку сăмах пайăр мар ят пулнă пирки ăна пĕчĕкренех çырмалла.

*Quaestio* тени латинла пулсан чăвашла *шырав* теме пулать. Ку ăнсăртран мар. Ыйту палли хуравлама хистекен паллă-çке. Вăхăт иртнĕçем ятăм «*qo*» таран кĕскелнĕ. Кайран *q* паллă пĕкĕ пек çырăнма пуçланă, *o* вара унăн айĕнче тăракан пăнчă пулса юлнă. Çапла иртрĕ пурнăçăм. *(Э. Фомин.)*

*?! Текста мĕнле ят пама пулать?

| *Танлаштарăр* |
|---|
| *Ыйт* «спрашивать, просить». Авлхи тĕрĕк *aj* -«говорить, расказывать; разъяснять, толковать; называть, указывать, |

распоряжаться, руководить»; турккă *айт-* «говорить, сообщать, передать, высказывать»; пушкăрт *ăйт* «говорить»: якут *ыйыт-* «спрашивать, распрашивать».

**▲ Пăхăнуллă хутлă предложени хыççăн ыйту паллине тĕп предложенийĕ ыйтуллă чухне çеç лартаççĕ.**

**132.** Пăхăнуллă хутлă предложенин хăш пайĕ пăхăнуллă? Ыйту палли лартасси мĕнрет килет?

1. Мĕн пурринчен мĕн юлнă халь? *(В. Эктел.)* 2. Каçхине Генка картуна çитнĕ-çитменех аслашшĕпе асламăшне паян хăй ăçта-ăçта пулнине, мĕн-мĕн курнине каласа парасшăнччĕ - килĕнче ют çын пурри чăрмантарчĕ. *(А. Талвир.)* 3. Ăçтан пĕлĕн-ха вăл ăçта йăва çавăрнине? (Г. Луч.) 4. Ар çын менюра мĕн пуррине суйлать. *(А. Волков.)* 5. Темле паллана çын мĕлтлетсе илчĕ-ши, е такам тимлĕ пăхнине куçпа мар, ӳтпе куртăм-ши? *(Л. Таллеров.)*

**133.** Чарăну паллисене тĕрĕс лартса çырса илĕр.

1. Хуçи епле лаши çапла *(Ват. сăм.)* 2. Хĕр ăçта пурăннине пĕлмест *(Хв. Уяр.)* 3. Калăпĕ мĕнле çăпати çапла *(Ват. сăм.)* 4. Камăн шутлас килет шутлатăрах *(Л. Тал.)* 5. *Вакунсем килесси паллă мар-и (А. Ем.)* 6. *Мĕн акатăн çав шăтать (Ват. сăм.)*

**134.** Текста вуласа тухăр, пăхăнуллă хутлă предложенисене çырса илăр, схемине ӳкерĕр, чарăну палли лартас уйрăмлăхсене ăнлантарăр.

### Кутăнла «вырăс» чĕлхи

Пĕррехинче чăваш ăслăлăхĕн классикĕ Николай Золотницкий икĕ çын тавлашнине илтет. Пĕр çапла калать: «Странно что-то! Но хотелось бы знать, что вы скажете на счет той бестолковщины, с какою чуваши расставляют слова. Скажу одно выражение, которое я хорошо запомнил: *«Сӳрьбӳ холынэ лажа ильме каяс тезе окся кивзэнь ильдем».* Ведь это в буквальном переводе значит: *«В Цивильск город лошадь купить идти говоря деньги взаем взял я».* Что же это за толк, что за порядок?»

Тĕпчевçĕ çапла хурав парать: «В расстановке слов этого предложения и толк настоящий, и порядок совершенно правильный – во всем согласный с синтаксисом чувашского наречия. Объяснять подробности этого порядка было бы долго, но посмотрите, что будет, когда я стану переводить это предложение с конца: *ем* – я, *ильд* – взял, *кивзэнь* – взаем, *окся* – деньги, *тезе* – чтобы, *каяс* – отправиться, *ильмэ* – для покупки, *лажа* – лошадь, *холынэ* – в ород, *Сӳрьбӳ* – Цивильск».

*Çĕрпӳ хулине лаша илме каяс тесе укçа кивçен илтĕм.* – Я взял взаймы денег, чтобы отправиться для покупки лошади в город Цивильск.

Пирĕн чĕлхе – тухăç чĕлхи. Тухăç халăхĕсем ăнсăртран сылтăмран сулахаялла çырмаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсен шухăшĕ те çапла аталанать. Эпир те пуплеве вĕсем евĕр сылтăмран пуçласа йĕркеленĕ хушăрах пирĕн чĕлхемĕр тулашĕнчен – анăç чĕлхи. Хамăр «араблараx» шутлатпăр пулин те эпир Европăри пек сулахайран сылтăмалла çыратпăр. Акăлчан, вырăс, венгр пек. (*Э. Фомин.)*

| *Пĕлетĕр-и Эсир?* |
| --- |
| Чăваш сăмахĕсем хытă е çемçен илтĕннине чи малтан Н.И. Золотницкий асăрханă. Унăн шухăшĕпе, сăмах хыттăн е çемçен илтĕнесси малтанхи сыпăкри уçă сасă пахалăхĕнчен килет. Чăваш сăмахĕсенче хупă сасăсем юнашар тăрса пĕрешкелленнине те чи малтан Н.И. Золотницкий асăрханă. |

**135.** Хăвăрт каларăш пулакан предложени хутсăр е хутлă пулнине калăр. Хăвăр шухăшăра ĕнентерĕр.

*Хăвăрт каларăш*

**Хурамала ҫуна хурамалама панăччĕ, те хурамаланă, те хурамаламан, хурамаланă пулсан та, хурамаламан пулсан та кайса пăх та илсе кил.**

## 13. Пăхăнуллă хутлă предложени ушкăнĕсем

⊙ **136.** Ҫыхăну паллисĕр тата сыпăнуллă хутлă предложенисене мĕне кура ушкăнланине аса илĕр. Сирĕн шутпа, пăхăнуллă хутлă предложенисене еплерех ушкăнламалла?

**137.** Таблицăна тĕплĕн тишкерĕр: пăхăнуллă хутлă предложенисене мĕне кура ушкăнланă? Кашни ушкăнпа хăвăр тĕслĕхсене ҫырăр.

**Пăхăнуллă хутлă предложенисен ушкăнĕсем**

| № | Предложени тĕсĕсем | Ҫыхăну мелĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|---|
| 1. | Союзлă пăхăнуллă хутлă предложенисем | Пăхăнуллă союзсем: *тесе, тесен, пулсан, пулсан та,*пулин те, *эхер, ешĕл, енчен, хуть (хăть), тăк (тĕк), мĕншĕн тесен (ма тесен)* | *Ҫумăр ӳккелеме тытăнчĕ пулин те халăх уявран саланмарĕ.* |
| 2. | Союзла сăмахлă пăхăнуллă хутлă предложенисем | Союзла сăмахсем: *кам, мĕн, ăҫта, хăҫан, мĕншĕн* т. ыт. те. | *Кам кĕнеке вулама юратать, ҫав нумай пĕлет.* |
| 3. | Хыҫ сăмахлă пăхăнуллă хутлă предложенисем | Хыҫ сăмахсем: *чух, хыҫҫăн, пек, евĕр, май, валли* т. ыт. те. | *Ҫиҫĕм хуҫкаланса илнĕ хыҫҫăн аслати юлхавлăн хăлтăртатрĕ.* |
| 4. | Пайĕсене аффикссемпе ҫыхăнтаракан | Падеж, деепричасти, причасти тата *-и* субстантиваци | *Шевле вылянине курсан чĕрере шанчăк ҫуралать.* |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | пăхăнуллă хутлă предложенисем | аффиксĕ | |
| 5. | Пайĕсене вырăнĕ-йĕркипе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложенисем | Пайĕсен вырăнĕ-йĕрки | *Кайăк йышлă вăрманта йывăç чирлемест.* |

**138.** Ваттисен сăмахĕсем пулакан пăхăнуллă хутлă предложенисене çыхăну мелне кура ушкăнлăр.

1. Хĕвел ансан уйăх çути те хаклă. 2. Çил вĕрмесĕр йывăççем хумханмаççĕ. 3. Хĕмĕ çук пулсан çулăмĕ те пулмасть. 4. Кушак вилнĕрен шăши йĕрес çук. 5. Кушак çывăрни шăшисене савăнăç. 6. Лаша çукки – пурнăç çукки. 7. Хурчăка çук чух çерçи те паттăр. 8. Хуçи епле, ĕни çапла. 8. Сывлăм типиччен çулса пăрахма хушнă. 9. Ашшĕ-амăшă панă ырлăха ывăлĕ нихăçан та тавăрса пĕтерейместь.

**139.** Таблицăна тĕплĕн тишкерĕр. Пăхăнуллă предложенисене мĕншĕн предложени членĕсем пек ушкăнланине ăнлантарăр. Кашни ушкăнпа хăвăр тĕслĕхсене çырăр.

## Пăхăнуллă предложенисене пĕлтерĕш енчен ушкăнлани

| № | Предложени тĕсĕсем | Ыйтăвĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|---|
| 1. | Подлежащи пулакан пăхăнуллă предложенисем | Подлежащи ыйтăвĕсем | *Кам тăрăшать, çав çĕнтерет.*<br>*Ал тивменни алă çул выртать* |
| 2. | Сказуемăй пулакан пăхăнуллă предложенисем | Сказуемăй ыйтăвĕсем | *Ĕçĕ епле, чысĕ çапла.*<br>*Чи кирли – юлташусем хăвна хисеплени* |
| 3. | Дополнени пулакан пăхăнуллă | Дополнени ыйтăвĕсем | *Анне юрланине итлеме юрататăп* |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | предложенисем | | |
| 4. | Определени пулакан пăхăнуллă предложенисем | Определени ыйтăвĕсем | *Атте ăсталанă пукан питĕ илемлĕ.* |
| 5. | Обстоятельство пулакан пăхăнуллă предложенисем | Обстоятельство ыйтăвĕсем | *Хĕвел ансан яла таврăнтăмăр.* |

➤ **Пăхăнуллă предложенисен пĕлтерĕшĕсем йышлă. Вĕсем ĕç тăваканнине, калаçу кам е мĕн çинчен пынине, япалан паллине, ĕçĕн паллине, вăхăтне, вырăнне тата ыттине те палăртма пултараççĕ. Пĕлтерĕшĕсемпе предложени членĕсем евĕр пулнине кура пăхăнуллă предложенисене те предложени членĕсем пекех ушкăнлама пулать: подложащи, сказуемăй, определени, дополнени, обстоятельство пулакан пăхăнуллă предложенисем.**

?! **140.** Тĕпчекен объекта ушкăнлани ăна кирлĕ пек ăнланма, унăн уйрăмлăхĕсене тупса палăртма пулăшать-и? Пăхăнуллă хутлă предложенисене мĕншĕн икĕ тĕрлĕ ушкăнлаççĕ?

**141.** Сăвва тĕрĕс интонаципе вулăр, тĕп шухăшне калăр. Пăхăнуллă хутлă предложенисен пайĕсене цифрăсемпе кăтартăр, чарăну палли лартас уйрăмлăхсене ăнлантарăр.

Кам тăван чĕлхене юратмасть,
Вăл тăван амăшне юратмасть.
Кам тăван амăшне юратмасть,
Вăл тăван халăхне юратмасть.
Кам тăван халăхне юратмасть,
Вăл тăван çĕр-шывне юратмасть. *(П. Эйзин.)*

**142.** Текстра тĕл пулакан пăхăнуллă хутлă предложенисене икĕ тĕрлĕ ушкăнлăр: çыхăну мелĕсем тăрăх тата пĕлтерĕшне кура.

**Хуплу, шăрттан, пӳремеч...**

Пӗчӗк чухне эпир, ял ачисем, Ҫӑварнипе Аслӑ кун, Ҫимӗк е ытти уяв ҫитессе чун пек кӗтеттӗмӗр. Уяв ячӗпе атте-анне пире ҫӗнӗ тумтир ҫӗлесе тӑхӑнтартатчӗ, выляма-савӑнма май туса паратчӗ. Чи ырри вара – тутлӑ апат-ҫимӗҫпе сӑйланиччӗ. Ӑна хатӗрлеме хамӑр та хутшӑнаттӑмӑр. Шӑрттан туни акӑ халӗ те асрах. Сурӑх ашне анне кӑтартнӑ пек вакласа пӗчӗк-пӗчӗк татӑксем тӑваттӑмӑр. Кайран ҫавна ыхрапа, пӑрӑҫпа, тӑварпа варса сиктереттӗмӗр. Юлашкинчен аша выльӑхӑн[1] хырӑмлӑхне чиксе тултараттӑмӑр та ҫатма ҫине хурса вӗри кӑмакана лартаттӑмӑр. Вӑрах тӑратчӗ вӑл унта. Шӑрттан пиҫессе тӳсеймесӗр кӗтеттӗмӗр. Ӗлкӗрсен вара техӗмлӗ те сӗтеклӗ апата ӑш каниччен ҫисе киленеттӗмӗр. Ӑстаччӗ ҫав аннемӗр. Мӗн кӑна ҫукчӗ-ши унӑн уяв сӗтелӗ ҫинче: тултармӑшӗ те, хуплӑвӗ те, пӳремечӗ те, чӑкӑчӗ те, капӑртми те, юр-варӗ те?!.. Аннене аса илетӗп те халӑхӑм ҫинчен шухӑшлатӑп. Ыттисенчен ним енӗпе те катӑк мар-ҫке вӑл. Ҫав шутра – апат-ҫимӗҫ хатӗрлес тӗлӗшпе те. Тем те пӗлет, тем те пӗҫерет. Апачӗсем унӑн хӑйне евӗр, урӑх халӑхӑннипе пӑтрашӑнми, чӑн чӑвашла, илемлӗ, тутлӑ, сӗтеклӗ, сипетлӗ. Чӑвашсен ҫак ӑсталӑхӗ[2] авалтан, ӑруран ӑрӑва куҫса, пуянланса пынӑ. *(А. Аксар.)*

* Текстра асӑннӑ апат-ҫимӗҫрен хӑшне сирӗн килте халӗ те пӗҫереҫҫӗ? Эсӗ аннӳне вӗсене хатӗрлеме пулӑшатӑн-и?

* Чӑвашсен тата мӗнле апат-ҫимӗҫне пӗлетӗр? Ячӗсене ҫырса тухӑр.

***Танлаштарӑр***

*Шӑрттан* «бараний желудок, начиненный кусками мяса и прожаренный».

Узбек чӗлхинче *ширдон* «сычуг». Перс чӗлхинчи «род кушанья из овечьего желудка, начиненный мясом и рисом» пӗлтерӗшлӗ сӑмахран пулнӑ. Эрмен чӗлхинче *чортан* сӑмах

| «сушенная пахтыня» тенине пĕлтерет. |
| --- |

✪✪✪ **143. Проект ĕçĕ**. «Чăваш апат-çимĕçĕ» темăпа проект ĕçĕ çырăр.

## Проект ĕçне тума суйласа илмелли ĕçсем

| Ачасен хушамачĕ, ячĕ | Тумалли ĕçсем | Ăçта шырамалла? |
| --- | --- | --- |
| | Словарьсенчен чăвашсен апат-çимĕç ячĕсене çырса илĕр | 1. Чăвашла-вырăсла словарь / М.И. Скворцов ред. Мускав, 1985.<br>2. Ашмарин Н.И. Чăваш сăмахĕсен кĕнеки. Шупашкар, 2000. |
| | Чăваш апат-çимĕç ячĕсене пĕлтерĕшĕ енчен ушкăнлăр | 1. Чăвашла-вырăсла словарь / М.И. Скворцов ред. Мускав, 1985.<br>2. Ашмарин Н.И. Чăваш сăмахĕсен кĕнеки. Шупашкар, 2000. |
| | Чăваш апат-çимĕç ячĕсене пулăвĕ (этимологийĕ) тăрăх ушкăнлăр | 1. Егоров В.Г. Этимологический словрь чувашского языка. Чебоксары, 1964.<br>2. Федотов М.Р. Этимологический словрь чувашского языка. Чебоксары, 1996. |
| | Чăваш апат-çимĕç ячĕсене тытăмĕ тăрăх ушкăнлăр | Чăвашла-вырăсла словарь / М.И. Скворцов ред. Мускав, 1985. |

| | | |
|---|---|---|
| | Чăваш апат-çимĕç ячĕсем тĕл пулакан ваттисен сăмахĕсене çырса илĕр | 1. Чăваш халăх сăмахлăхĕ. V том. Шупашкар, 1984.<br>2. Чăваш халăх пултарулăхĕ. Ваттисен сăмахĕсем. Шупашкар, 2007.<br>3. Ваттисен сăмахĕсем, каларăшсем, сутмалли юмахсем. Шупашкар, 2004. |
| | Чăваш апат-çимĕç ячĕсем çинчен тупмалли юмахсем çырса илĕр | |
| | Чăваш апат-çимĕç ячĕсем тĕл пулакан фразеологизмсене çырса илĕр | 1. Чернов М.Ф. Чăвашла-вырăсла фразеологи словарĕ. Шупашкар, 1982.<br>2. Сергеев Л.П., Павлов В.В. Чăваш чĕлхин фразеологи словарĕ. Шупашкар, 2007. |
| | Чăваш апат-çимĕçĕпе чăваш халăх йăли-йĕркинче усă курнине тĕпчĕр | Ватăсенчен ыйса пĕлни |
| | Чăваш апат-çимĕç ячĕсем тĕл пулакан хайлав ячĕсене шыраса тупăр | Чăваш хайлавĕсен, юррисен картотекисем |
| | Чăваш апат-çимĕç ячĕсем тĕл пулакан сăвă йĕркисене тупса çырăр | |
| | Чăваш апат-çимĕçне хальхи вăхăтра килте хатĕрлени çинчен | Шкул ачисенчен, ялти çынсенчен ыйтса пĕлни |

| | | |
|---|---|---|
| | ыйтăм ирттерсе пĕтĕмлетӳ тăвăр | |
| | Чăваш апат-çимĕçне завод-фабрикăсенче хатĕрленине тĕпчĕр | Чĕваш ен завочĕсемпе фабрикисен сайчĕсем, вĕсенче çырса панă ассортиментсем |
| | Чăваш апат-çимĕçне пĕтĕмĕшле е пĕр-пĕр апатне халалласа реклама çырăр | |

*Танлаштарăр*

*Уйран* «пахтанье». Авалхи тĕрĕк чĕлхинче *ajran* «напиток из кислого снятого молока». Турккӑ, азербайджан, кăркăс, пушкăрт *айран*, узбек *айрон*, тутар *әйрән* «кислое молоко», «пахтанье».

**144.** 🕮 Сăвва вулăр. Предложени миçе хутсăр предложенирен тăрать?

Ху ĕçлесе илмен япалапа
Каппайланни, тен, иртекен ухмахлăх,
Анчах та хӳхĕм сăн-сăпатупа
вĕçкĕнленни – тур каçарми ухмахлăх. *(Н. Исмуков.)*

**145.** Хăвăрт каларăш пулакан предложени хутсăр е пăхăнуллă хутлă пулнине калăр. Хăвăр шухăшăра ĕнентерĕр.

*Хăвăрт каларăш*

**Мăнтарăн Караçăмĕ Караç вăрманне каврăç касма кайсан таврăнуçăн Тăрăн вăрманĕнчи тарăн варăн пуçĕпе çаврăнса килнĕ.**

**146.** Текста вулăр та пăхăнуллă хутлă предложенисене тупăр, вĕсен ушкăнĕсене палăртăр.

Пурăнах, çут çанталăк!

(1)Эпĕ çиччĕ-саккăрта чухне пĕррехинче аттепе пĕрле Шăхаль вăрманне кайрăмăр. (2)Çамрăк çăкалăх тĕлне çитсен çăпата тума тĕмĕн-тĕмĕн ӳсекен çăкасене каса пуçларăмăр.

(3)Хам тĕме пĕтериччен икĕ хунав кăна юлсан атте мана вĕсене касма чарчĕ. (4)«Юлччăр, çĕнĕ хунавсем сарччăр, йышланччăр. (5)Тĕппипех пĕтерер мар», – терĕ атте. (6)Çапла эпир кашни тĕмрех сахалтан та икĕ вулă хăварса пытăмăр.

(7)Юманлăха çитсен çĕре тăкăннă йĕкелсене пухма тытăнтăмăр. (8)«Сысна йĕкел çисен унăн какайĕ таса та тутлă пулать», – ăнлантарчĕ атте. (9)Эпĕ хавхаланса кайса юмансем айĕнчи йĕкелсене пĕр хăварми пуçтарма пикенни аттене каллех темшĕн килĕшмерĕ. (10)«Йĕкелсене кăштах хăваркалас та пулать, - терĕ. – (11)Ним юлмасан вăрманти чĕр чунсем мĕнле пурăнĕç, епле хĕл каçĕç. (12)Вĕсемсĕр хунав та шăтса тухаймĕ». (13)Эпĕ атте калană пек турăм...

(14)Çаксене аса илсен тăван халăхăн çут çанталăка упрас, хӳтĕлес ырă йăли-йĕрки куç умне тепĕр хут яр-уççăн тухса тăчĕ.

(15)Чăваш çынни тата яланах вĕçен кайăксен çывăх тусĕ пулнă. (16)Эпĕ пĕчĕк чух хам çурална Еншикре килсеренех шăнкăрч вĕлли туса çакатчĕç. (17)Пӳрт çамкисемпе кĕтесĕсене кăвакарчăнсемпе чĕкеçсем йăва çавăрччăр тесе ятарласа шăтăксем, çӳлĕксем туса хăварнăччĕ атте. (18)Çуркунне-çулласенче вара çунатлă туссем хăйсен кĕвви-çеммипе тавралăха янратни çынсене килентеретчĕ. (19)Мĕн тесен те, халĕ хамăр енне пырсан шăнкăрч вĕллисем сахаллине куратăп. (20)Вĕçен кайăксен йышĕ те сахалланнă пек. (21)Йывăç-курăкĕпе те савăнмаллиех çук. (22)Чылай çĕрте чăвашăн çеремлĕхри çăлсене пурасем ярса тирпейлĕ те таса тытас, çыранри çăл куçĕсене валаксем лартса пăхса тăрас ырă йăли çухалсах пырать.

(23)Çĕре шыв-шур çурасран, çил касса çĕмĕресрен, хура тăпра сийĕ чакасран сыхланă, ăна тислĕкпе юшкăн-туйăн тăкса тулăхлатма тăрăшнă. (24)Çырмасем ишĕлесрен çырансене çеремсем хурса, йывăçсем лартса, çатансем тытса çирĕплетнĕ. (25)Шел, эпир чылай çĕрте çак ĕç кирлĕ шайра пырать тесе калама пултараймастпăр. (26)Халĕ çулсеренех çырмасем çĕмĕрнине пула пирĕн республикăра 300-400 гектар çĕр çухалать.

(27)Çут çанталăка сыхлама та хӳтĕлеме пĕтĕм халăхăн, çав шутра ачасен те, хастаррăн хутшăнмалла, чăвашсен ку ĕçри ламран лама куçса пыракан пархатарлă йăлине малалла çĕнĕрен вăйлатса ямалла. *(А. Аксар.)*

***Сăмах çӳпçи***

*Йăла* «обычай», «нравы», «обряд», *авалхи йăла* «старинный обычай», *йăла юрри* «обрядовая песня», *сиенлĕ йăла* «вредная привычк», *йăлана кĕнĕ уявсем* «традиционные праздники», *йăла служби* «служба быта», *йăла-йĕрке* «обычаи, нравы», «обряды», «поведение», *йăла-сăлай* «обычаи», «сложившийся уклад».

Ытти тĕрĕк чĕлхисенче *йола, йула* «обычай, нрав».

***Республикăн пĕрлехи экзаменнне хатĕрленетпĕр.***

**147. I.** 146-мĕш хăнăхтарури «Пурăнах, çут çанталăк!» текста тепĕр хут вулăр та çак ыйтусем çине хуравлăр.

**1.** Вуланă текстăн тĕп шухăшне калăр.

1) Йывăç-курăка упрасси.

2) Тăван çĕр-шыва юратасси.

3) Кайăксене юратасси.

4) Чăвашсен çут çанталăка упрас йăлине çĕнĕрен вăйлатасси.

**2.** Хăвăр вуланă текстра автор шухăшне хăш предложени уçса парать?

1) 5 2) 15 3) 23 4) 27

**3.** Текста мĕнле стильпе çырнă?

1) калаçу стилĕпе

2) наука стилĕпе

3) публицистика стилĕпе

4) илемлĕлитературастилĕпе

**4.** Синоним пулакан глаголсем хăш предложенире тĕл пулаççĕ?

1) 1 2) 3 3) 13 4) 27

**5.** 15-мĕш предложенире сасă шучĕ сас палли шутĕнчен ытларах сăмах хăшĕ?

1) чăваш 2) çынни 3) яланах 4) пулнă

**6.** 13-мĕш предложенире мĕнле илемлĕх мелĕ пур?

1) танлаштару 2) метафора 3) сăпатлантару 4) эпитет

**7.** 2-мĕш предложенири иккĕмĕшле сăмах (*çăкалăх)* мĕнле пулнă?

1) *çăк* япала ячĕ çумне *-а* тата *-лăх*аффикссем хушăннипе

2) *çă* евĕрлев сăмахĕ çумне *-калăх* аффикс хушăннипе

3) *çăкалă* паллă ячĕ çумне *-х* аффикс хушăннипе

4) *çăка* япала ячĕ çумне *-лă х*аффикс хушăннипе

8. 23-мĕш предложенире *шыв-шур* сăмаха мĕншĕн дефиспа çырнă?

1) мăшăр сăмах пулнă пирки

2) хутлă сăмах пулнă пирки

3) икĕ хутк алакан сăмах пулнă пирки

4) *шур* татăка яланах дефиспа çырнă пирки

**9.** 16-мĕш предложенири *чух* сăмах мĕнле пуплев пайĕ пулать?

1) паллă ячĕ 2) япала ячĕ 3) глагол 4) хыç сăмах

**10.** *Вĕçен кайăксен йышĕ те сахалланнă пек* (20 №) шухăш тĕшши хăш сăмахсем çине ӳкет?

1) вӗҫен 2) кайӑксен 3) *вӗҫен кайӑксен йышӗ те* 4) сахаланнӑ пек

11. *Юманлӑха ҫитсен ҫӗре тӑкӑннӑ йӗкелсене пухма тытӑнтӑмӑр* предложенире (7 №) дополнени пулакан сӑмах хӑшӗ?

1) юманлӑха 2) ҫӗре 3) йӗкелсене 4) тӑкӑннӑ

12. 19-мӗш предложени тытӑмӗ енчен хӑш ушкӑна кӗрет?

1) сыпӑнуллӑ хутлӑ предложени

2) союзсӑр хутлӑ предложени

3) пайӗсене падеж аффиксӗпе ҫыхӑнтаракан пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени

4) пайӗсене вырӑнӗ-йӗркипе ҫыхӑнтаракан пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени

13. 4-мӗшпредложенире запятой лартнин сӑлтавне ӑнлантарӑр.

1) пӗр йышши членсем союзсӑр ҫыхӑннӑ пирки

2) сыпӑнуллӑ хутлӑ предложени пайӗсем умлӑн-хыҫлӑн пулса иртекен ӗҫсене кӑтартнӑ пирки

3) сыпӑнуллӑ хутлӑ предложени пайӗсем пӗр вӑхӑтра пулса иртекен ӗҫсене кӑтартнӑ пирки

4) союзсӑр хутлӑ предложени пайӗсем умлӑн-хыҫлӑн пулса иртекен ӗҫсене кӑтартнӑ пирки

**II. Итленӗ тата вуланӑ текстсемпе усӑ курса виҫӗ ӗҫрен пӗрне тӑвӑр.**

1. **«Ҫут ҫанталӑка сыхлар»** темӑпа калӑпӑшӗпе пысӑках мар (70 сӑмахран кая ан пултӑр) ӑслав хайлавӗ ҫырӑр. Тема пирки хӑвӑр мӗн шухӑшланине уҫса парӑр.

Хӑвӑр шухӑшӑра икӗ аргументпа ӗнентерӗр: пӗр аргументне итленӗ текстран, теприне вуланӑ текстран илӗр. Ҫакна тума ӑславӑн ӗнентерӳ мелӗсемпе (кӳртӗм сӑмахсемпе, ыйтупа хурав пӗрлӗхӗпе,

пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

2. Вуланă текстра палăртнă **«Çут çанталăка сыхлама та хӳтĕлеме пĕтĕм халăхăн, çав шутра ачасен те, хастаррăн хутшăнмалла, чăвашсен ку ĕçри ламран лама куçса пыракан пархатарлă йăлисене малалла çĕнĕрен вăйлатса ямалла»** шухăша уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.

Хăвăр шухăшăра вуланă текстри икĕ аргументпа ĕнентерĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

3. ***Ырă йăла-йĕрке*** ăнлава Эсир мĕнле ăнланатăр? Хăвăр панă определение уçса парăр. **«Мĕн вăл ырă йăла-йĕрке?»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр.

Тезис вырăнне Хăвăр панă определенипе усă курăр. Тезиса аргументлама икĕ аргумент тĕслĕхпе усă курăр: пĕр аргументне вуланă текстран, теприне Хăвăр пурнăçăр опытĕнчен илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

## Союзлă пăхăнуллă хутлă предложенисем

⊙ **148.** 7-мĕш класра союзсене вĕреннине аса илĕр: пăхăнуллă союзсем шутне хăшĕсем кĕреççĕ?

⊙ **149**. Пăхăнуллă предложенисене тупăр, вĕсене çыхăнтаракан пăхăнуллă союзсене кăтартăр.

1. *Вера витене кĕрекенсем хăйне тӳрех ан асăрхаччăр тесе кĕтесе кайса тĕршĕнчĕ.* (Н. Петровская.) 2. *Лавраç мучи ывăлне шыраса тупаймарĕ, мĕншĕн тесен ывăлĕн адресне çухатни чăрмантарчĕ.* (А. Артемьев.) 3. *Хĕл ноябрь уйăхĕнчех ларнă пулин те хирте юр çукпа пĕрех.* (М. Кипек.)

➤ Пăхăнуллă предложение тĕп предложенипе çыхăнтаракан пăхăнуллă союзсем йышлă: *тесе, тесен, пулсан, пулсан та, пулин те.* Вĕсем глаголăн сăпатсăр тата сăпатлă формисенчен пулнăскерсем: *Тарăн пĕлӳ пултăр тесен вĕренĕве ĕçпе çыхăнтармалла. Çĕрĕпе çумăр çурĕ пулин те ирхине пылчăк курăнмарĕ.*

Пайĕсем союзпа çыхăннăран пăхăнуллă хутлă предложение союзлă пăхăнуллă хутлă теме йышăннă.

Хутлă предложени пайĕсене пĕр-пĕринпе çыхăнтаракан пăхăнуллă союзсен пĕр пайĕ – ют чĕлхесенчен йышăннисем. Вĕсен шутĕнче *эхер, ешĕл, хуть (хăть), тăк (тĕк), как, мĕншĕн тесен (ма тесен)* союзсем: *Эпĕ юлташа юрататăп, мĕншĕн тесен вăл ĕçчен те пултаруллă.*

Союзсем, хыç сăмахсем пекех, пулăшу сăмахĕсем шутланаççĕ, çавăнпа та уйрăм ыйтăва хуравламаççĕ, предложени членĕ пулмаççĕ.

⊙ **150.** Вулăр. Пăхăнуллă предложенисене цифрăсем лартса палăртăр, вĕсем тĕп предложенипе хăш союзпа çыхăннине ăнлантарăр.

1. Енчен те эпĕ йăнăшатăп пулсан ыттисем мана тӳрлетсе калĕç. *(Л. Агаков.)* 2. Ун умĕнче хăть çĕр çурăлтăр, хăть тӳпе ӳпĕнсе кайтăр, вăл ним чухлĕ те пăшăрханмасть, айвана перет те шӳтлесе ирттерсе ярать. *(И. Григорьев.)* 3. Çумăр çумасть пулин те çанталăка кăвак пĕлĕтсем хупласа тăраççĕ. *(В. Д.-Чалтун.)* 4. Эхер те мехер Петĕре хăй качча тухма килĕшрĕ пулсан эпĕ ним тума та пултараймастăп. *(Н. Терентьев.)* 5. Паян вăрман урлă велосипедпа

каҫма ҫук, мӗншӗн тесен ӗнер вӑйлӑ ҫумӑр ҫурӗ. 6. «Хам ӑшчикӗмре вырӑс юнӗ чупать пулин те эпӗ чӑваш патриочӗ. Чӑваш кӗввисене эпӗ нихӑҫан та юратма пӑрахмӑп, вӗсене ҫӗнетсе, тасатса пухса малаш ӑрусем валли упраса хӑварма тӑрӑшӑп», – терӗ Тогаев мӑшӑрне. *(И. Ахрат.)*

*✪ Кам вӑл А.Н. Тогаев? Эсир ун ҫинчен мӗн пӗлетӗр? Презентаци е буклет хатӗрлӗр. Ыттисен умӗнче тухса калаҫма хатӗрленӗр, калаҫура созлӑ пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложенисемпе усӑ курма тӑрӑшӑр. (А.Н. Тогаев пултарулӑхӗ ҫинчен И.В. Ахратӑн «Ҫичӗ юлташ ҫулӗпе» (1987) кӗнекине вуласа пӗлме пултаратӑр.)

## Пӗлетӗр-и эсир?

*Эхер* – перс сӑмахӗ. Ӑна ытти тӗрӗк чӗлхисем те чылайӑшӗ йышӑннӑ. Вӗсенче те *эхер* сӑмах союз пӗлтерӗшӗпех ҫӳрет. Чӑваш чӗлхине тахҫан тутарсем урлӑ та кӗме пултарнӑ.

**151.** Текста вуласа тухӑр. Пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложенисене ҫырса илӗр. Пӑхӑнуллӑ предложенисене аялтан туртӑр, тӗп предложенипе епле ҫыхӑннине сӑмах вӗҫҫӗн ӑнлантарӑр.

Февраль

Сивӗ, ҫил-тӑманлӑ кунсем тӑраҫҫӗ пулин те, ҫуркунне ҫывхарни сисӗнет. Кунсем вӑрӑмланаҫҫӗ, ҫӗрсем кӗскелеҫҫӗ.

Ӑшӑтать пулин те тискер чӗр чунсемпе кайӑксене хӗл хӑратма пӑрахмасть-ха. Юр кӑшт ирӗлнӗ пирки ҫиелтен кантӑк пек ҫӳхе пӑрпа витӗнет. Хытӑ пӑр пӑшисен, кайӑксен урине суранлатать. Ҫавна май пӑшисене те, кайӑксене те апат пама манмалла мар. Мулкачсем вара ҫӳхе пӑртан хӑрамаҫҫӗ – ҫӑмӑллӑнах тарса ӳкеҫҫӗ. Мулкача эпир хӑравҫӑ чӗр чунсен шутне кӗртме хӑнӑхнӑ. Чӑннипе вара мулкач хӑравҫӑ мар, асӑрханулла та чее. Хыҫран хӑваланӑ самантра утӑ купи ӑшне кӗрсе пытанма, шыв-шур урлӑ сиксе каҫма

пултарать. Мулкачсем февральте, ытларах, садсемпе пахчасене çӳреме пуçлаççĕ.

**152.** Тĕслĕхсене пăхăнуллă предложени тĕп предложенипе епле çыхăннине кура ушкăнласа çырса илĕр (союзпа çыхăнаканнисене – пĕр ушкăна, хыç сăмахпа çыхăнаканнисене – тепĕр ушкăна т. ыт. те).

1. Çил-тăман ĕнер кăна чарăннă пулин те çул çийĕ лайăхах якалнă. *(Н. Петровская.)* 2. Асатте эпир мĕн çăмăлпа çӳренине пĕлтерсен сторож шухăша кайнă пек пулчĕ. *(А. Талвир.)* 3. Пĕр йăнăш турăн тăк – тепĕр йăнăшĕ сыхласах тăрать. 4. Кунĕ уяр та хĕвеллĕ пулсан та – çĕр те, сывлăш та чĕтренĕн туйăнчĕ. *(Г. Ефимов.)* 5. Шăпăрçăсем хăйсем хушшинче тавлашу пуçламаççĕ, мĕншĕн тесен лайăх вăйăçа та çĕнтерме *май* пуррине ăнланса илеççĕ. *(С. Михайлов.)*

* Паллă тунă сăмах хăш пуплев пайĕ пулнине ăнлантарăр.

➤ Пăхăнуллă союзсем яланах пăхăнуллă предложенипе тĕп предложение çыхăнтармаççĕ, хутсăр предложенин членĕсене те çыхăнтарма пултараççĕ. Тĕслĕхрен: *Çак хĕрĕх пилĕк минута усăсăр ирттерес мар тесе Петĕр кĕнеке вулама ларчĕ.*

Пăхăнуллă союзпа çыхăнакан сăмахсен пĕрлешĕвне вĕсен шутĕнче подлежащипе сказуемăй пек çыхăнакан сăмахсем е сăпатлă формăри глагол пулсан кăна пăхăнуллă предложени теме пулать. Унашкал сăмахсем пулмасан пăхăнуллă предложени çинчен калаçма та сăлтав çук. Акă ***Çирĕп пĕлӳ илес тесен*** *кулленех тăрăшса вĕренес пулать* предложенире палăртнă сăмахсем пăхăнуллă предложени пулмаççĕ, мĕншĕн тесен кунта уйрăм подлежащипе сказуемăй та, сăпатлă формăри глагол та çук. Ку тĕслĕх хутсăр предложени çеç пулать.

***Пĕлӳ çирĕп пултăр тесен*** *кулленех тăрăшса вĕренес пулать.* Палăртнă сăмахсем кунта пăхăнуллă предложени пулаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсен шутĕнче уйрăм подлежащипе сказуемăй пур (*пĕлӳ* – подл., *çирĕп пултăр* – сказ.). Ку тĕслĕх пăхăнуллă хутлă предложени пулать.

Пăхăнуллă хутлă предложени çинчен пăхăнуллă союз иртнĕ причасти хыççăн тăрсан та калаçма пулать, çапах пăхăнуллă предложени подлежащисĕр пулмасть: ***Уйрăлу пулнă пулсассăн*** *тĕл пулу та пулмаллах.* Ку тĕслĕре пăхăнуллă предложенин подлежащийĕ те *(уйрăлу),* сказуемăйĕ те *(пулнă)* пур. Подлежащи çук чухне пăхăнуллă предложенин сказуемăйĕ сăпатлă формăра тăмалла: *Пушшине хуçи* ***çирĕпрех пултăр тесе*** *мунчала çумне пушăт хушса явнă иккен.*

**153.** Вулăр. Пăхăнуллă союзпа çыхăнакан конструкцисенчен хăшĕ сăмах майлашăвĕ, хăшĕ пăхăнуллă предложени пулнине ăнлантарăр.

1. Стланик хура кĕркунне çĕр çийĕн тăсăлса выртрĕ пулсан тепĕр ик-виçĕ кунтан хĕл ларать. *(З. Нестерова.)* 2. Вăрçă кăварĕ ан амалантăр тесен пирĕн халăхăн ялан сыхă тăмалла, çĕр-шывăн тĕрекне вăйлатса пымалла. 3. Тулта йĕпхӳ пĕрĕхетчĕ пулин те çав кун Настьăшăн чи илемлĕ кун пек туйăнчĕ. *(В. Алентей.)* 4. Капăр пулас тесе ан шухăшла, ăслă пулас тесе шухăшла. *(Ват. сăм.)* 5. Пирĕн япăх хăнăхусем пулса каясран яланах сыхă тăмалла, мĕншĕн тесен япăххине çын лайăххинчен хăвăртрах хăнăхать. *(К. Ушинский.)* 6. Пурнăç йывăр пулсан та аптраман чăваш çынни. *(И. Ахрат.)* 7. Вĕллесенче пыл çителĕксĕр пулсан хуртсене сахăр шывĕпе тăрантармалла. 8. Лайăх канас, вăй-хал пухас тесен çу кунĕсен ырлăхĕпе пĕлсе усă курмалла.*(«Çил çунат».)*

* *Стланик* – кедровник, пĕчĕк кедр.

**154.** Союз хăш тĕслĕхре пăхăнуллă предложенипе тĕп предложение, хăшĕнче хутсăр предложени пайĕсене çыхăнтарнине ăнлантарăр. Пăхăнуллă союзпа çыхăнакан пĕрлешӳсен вырăнĕ ăçта пулнине палăртăр.

1. Полковникăн йĕрĕпе пĕр пăрăнмасăр пырас тăк пуçа çапса çурма та, йĕлтĕре хуçма та пулать. *(В. Алентей.)* 2. Вăл ман арăм тăк эпĕ унăн упăшки ĕнтĕ. *(Н. Волков.)* 3. Поезда ĕлкĕрес тесе эпĕ васкаса утрăм. 4. Ача-пăча валли çыратăн тăк шухăшу та вулакансене ăнланмалла пултăр. 5. Хуралти ĕçсем çинчен сăмах тапратнă тăк итлĕр: татах каласа парам. *(В. Алентей.)* 6. Хура кĕркунне çитеймен пулин те – пĕлĕтлĕ, çил-тăвăллă кунсем ылмашăнса пычĕç. 7. Эпир çĕнтеретпĕр, мĕншĕн тесен пирĕн енче тĕрĕслĕх. 8. Юратăва тивĕçлĕ пулас тесен çын чунпа юрату шайне çĕкленме тивĕç. *(Г. Ефимов.)* 9. Ыран мĕнле çанталăк пулассине пĕлес тесен ӳсен-тăрансене, чĕр чунсене, кайăксене сăнама пĕлмелле иккен. *(Г. Орлов.)* 10. Халь те Сайте Тухтар умĕнче вăтанмалла ан пултăр тесе пикенсех тăрăшрĕ. *(М. Илпек.)*

**155.** Хăвăр тупса 6 предложени тупса çырăр. Виçĕ тĕслĕхĕнче пăхăнуллă союзсем пăхăнуллă предложенипе тĕп предложение çыхăнтарччăр, виççĕшĕнче – хутсăр предложени пайĕсене (сăмахсемпе сăмах майлашăвĕсене).

**156.** Таблицăна тимлĕ сăнăр.

| Пĕлтерĕшĕ | Союзсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1) пирке | *мĕншĕн тесен, ма тесен, тесе* | Çак уйрăлми туссене учительсем чунтан юратнă, *ма тесессĕн* вĕсем яланах йĕркеллĕ пулнă, лайăх вĕреннĕ. |
| 2) тĕллев | *тесе* | Эпĕ аслати иртнĕ пулĕ *тесе* сак айĕнчен купăса илме тăтăм. |

| | | |
|---|---|---|
| 3) тĕллевпе услови | *тесен* | Лайăххи пултăр *тесен* вăй хумалла. |
| 4) килĕшӳ | *пулсан та, пулин те, хуть* | Вăрманти сукмак çумăр ирех çуса иртнĕ *пулин те* типсе çитеймен иккен. Ыйхă пусмарĕ *пулсан* итле эппин. |
| 5) услови | *пулсан, енчен, эхер, ытах, тăк(тĕк)* | Çын хăйне упрама пĕлмест *тĕк* ман ăна епле упрас? |

⊙ **157.** Таблицăна пăхса тухăр та çак ыйтусене хуравлăр.

1. Хăйсен пĕлтерĕшĕ тăрăх пăхăнуллă союзсем мĕнлисем пулаççĕ?

2. Пăхăнуллă союзсемпе мĕн тĕллевпе усă кураççĕ?

**158.** Хутлă предложени пайĕсене палăртăр. Пăхăнуллă предложени мĕнле мелпе çыхăннине, пĕлтерĕшне уçса парăр, сказуемăйĕ мĕнле пуплев пайĕнчен пулнине калăр.

1. Ял ĕçченĕшĕн кашни сехет, кашни минут хаклă, мĕншĕн тесен пур ĕçе те лайăх та хăвăрт туса пĕтермелле. 2. Мишша техникăна юратать пулсан Валерин те хăй юратнă ĕçĕ пур. *(В. Элпи.)* 3. Салампие ку иментерчĕ пулин те хĕр ăна-кăна

систересшĕн пулмарĕ. *(А. Артемьев.)* 4. Ку хирĕçӳ хам кăштах тытăнса тăман пулсан пирĕн туслăха йăлтах пĕтерсе лартма та пултаратчĕ пулмалла. *(Ç. Элкер.)* 5. Çанталăк шăрăх тăрать пулсан та хура вăрман хăйĕн уçă сывлăшне çухатман. *(В. Долгов.)* 6. Кĕр çывхарчĕ пулин те кунсем çав-çавах ăшă тăраççĕ. *(И. Егоров.)*

**159.** Тĕп членсене палăртăр. Пăхăнуллă предложенин çыхăну мелĕсене, пĕлтерĕшне, тĕп предложенин хăш сăмахĕсене ăнлантарнине калăр.

1. Карчăкăн сасси вăйсăррăн тухать пулин те çав чĕтрекен сасăра телей туйăмĕ сисĕнет. *(А. Артемьев.)* 2. Ешĕл çын эпĕ каласа панă хыççăн çеç ĕненнĕ пулсан кунашкал тус-йышлăх пĕр пуса та тăмĕччĕ. 3. Микула хĕр ятне асăнмарĕ пулсан та Анук хăй çинчен каланине сисрĕ. *(Н. Мранькка.)* 4. Тумтир килĕштĕр тесен этемĕн çӳçĕпе куçĕ мĕн тĕслине те, кĕлетки мĕнлине те шута илмелле. *(М. Кипек.)* 5. Çанталăк пăсăлчĕ тесе алла усса ларма юрамасть. *(В. Д.-Анатри.)* 6. Енчен те эпĕ йăнăшатăп пулсан ыттисем мана тӳрлетсе калĕç. *(Л. Агаков.)* 7. Пăр шывра путмасть, мĕншĕн тесен вăл шывран çамăлрах.

**160.** Тĕллев е пирке пĕлтерĕшлĕ пăхăнуллă предложенисене тупăр, тытăмне ăнлантарăр.

1. Вилсе кайиччен чĕлхи те пулин уçăлинччĕ тесе тăванĕсем аякри юмăçсем патне те çӳрерĕç. (*М. Илпек.)* 2. Хĕвел анса ларчĕ пулин те, тавралăх ниепле те тĕттĕмленмест. *(В. Кр.-Асли.)* 3. Çынна ура çине тăма пулăшас тесен ăна куçран çухатас пулмасть. *(А. Талвир.)* 4. Лаша хӳхĕм тесе çынтан иртсе чупас мар. (Н. Ашмарин.) 5. Мишша куçĕнчи куççульне ыттисем ан курччăр тесе коридора тухма васкарĕ. *(В. Тарават.)*

**161.** Услови пĕлтерĕшлĕ пăхăнуллă предложенисене тупăр, тытăмне ăнлантарăр.

1. Сăпани паянхи ырă кăмăла чĕрпĕнсе кайма парас мар тесе сăмаха урăх çĕрелле куçарма васкарĕ. *(А. Ĕçхĕл.)* 2. Кинеми килте çукчĕ пулсан кантăкĕ халĕ те çĕмĕрĕлнипех тăрать пуль. *(А. Кăлкан.)* 3.Салампи ăна хăй пăрусем пăхма кĕрессине пĕркунах пĕлтернĕччĕ пулин те, Лена çапах ĕненесшĕн пулмарĕ. *(А. Артемьев.)* 4. Çĕртме уйăхĕн 10-мĕшĕнче кун лăпкă, çилсĕр тăчĕ тĕк кĕр кунĕсем пысăк тухăçпа савăнтарĕç. *(Сăнанинчен.)* 5. Унтан кĕтӳ çӳрекен вырăн пуçланса каять. 6. Пуçĕ пулсан çӳçĕ шăтать. (Ват. сăм.) 7. Çак сăмахсене Вера Петровна паттăрланса каларĕ пулин те ун сассинче ĕмĕр сирĕлми хурлăх пурри сисĕнчĕ. *(В. Петров.)*

**162.** Çырăр. Пăхăнуллă предложенин сказуемăйĕ хăш наклоненире пулнине кăтартăр. Пăхăнуллă предложенин пĕлтерĕшне калăр.

1. Хваттерӳ пушă ан пултăр тесен ун валли лайăхрах сĕтел-пукан туянмалла. *(Ç. Элкер.)* 2. Ашшĕпе амăшĕ хушнипе Кĕтерук упăшки килне таврăнчĕ пулсан та – унăн пурнăçĕ çав-çавах салхуллă та тертлĕ. *(Н. Мранькка.)* 3. Амăшĕ макăрнине çын ан туртăр тесе чăлана кĕрсе кайрĕ. *(А. Артемьев.)* 4. Çăм хакланнăçемĕн хакланнă, мĕншĕн тесен пустав ытларах тума пуçланă. *(Е. Агибалова.)*

**163.** Вулăр. *Пулсан* союз услови пĕлтерĕшлĕ предложение çыхăнтарать-и е танлаштарса, хирĕçлетсе кăтартма пулăшать-и? Ăнлантарăр.

1. Юлан утлă çын пырса çитмен пулсан çак çын мана хĕнеттерсе вĕлеретчĕ. *(М. Ухсай.)* 2. Унăн юлташĕсем пурте сап-сарă çеçкеллĕ пулсан ку пĕчченех сип-симĕс çулçисемпе тăлăххăн çатăлтатса ларать. *(Н. Мартынов.)* 3. Ăшра юрату çуралчĕ пулсан çав таса та вăйлă туйăма пытарса пурăнма никам та хăват

çитерейместаа. *(К. Пайраш.)* 4. Йăлăмра чухне Микулапа ташлама май килмерĕ пулсан халь май килĕ. *(Н. Мранькка.)* 5. Енчен те çак самантра вăл кунта ларнине кам та пулин курас пулсан – Тимрук хăйне вăрра тытăннă пек туйнă пулĕччĕ. *(М. Илпек.)* 6. Уретник пĕччен е пĕр-пĕр стражникпе çеç пулнă пулсан Касмухха ытлашши сехĕрленмĕччĕ те. *(Н. Мранькка.)*

➤ **Мĕншĕн тесен** союзпа çыхăнакан пăхăнуллă предложенисене тĕп предложенирен яланах запятойпа уйăрмалла.

Ытти союзсемпе (тесе, тесен, пулсан, пулсан та, пулин те) çыхăнакан пăхăнуллă предложенисене сăмахсемпе епле çыхăннине кура уйрăмлатмалла. Енчен те пăхăнуллă предложени шухăш енчен хăй хыççăн юнашар тăракан сăмахсемпе çыхăнсан чарăну палли кирлĕ мар*: Пӳрт(1) çутă(2) пултăр(3) тесе* ***кăнтăралла(4) кастарнă(5)*** *чӳречисене(6) карăсемпе(7) хупламан(8).*



Юнашар сăмахсемпе мар, предложенин сăмахĕсемпе пĕтĕмĕшлĕн çыхăннине кăтартма пăхăнуллă предложени хыççăн чарăну палли лартмалла: *Пӳрт(1) çутă(2) пултăр(3) тесе,* ***кăнтăралла(4) кастарнă(5) чӳречисене(6) карăсемпе(7) хупламан(8).***



Сӑмахсен ҫыхӑнӑвӗ уҫӑмлӑ чухне нимле чарӑну палли те кирлӗ мар: ***Вӑхӑт усӑллӑ ирттӗр тесен***[1] *пур ачан та ӗҫлемелле*[2].

Пӗтӗмӗшлӗн ӑнлантаракан пӑхӑнуллӑ предложение паузӑпа палӑртса каланине тире лартса кӑтартмалла: ***Вӑхӑт усӑллӑ ирттӗр тесен***[1] *– пур ачан та ӗҫлемелле*[2].

**164.** Вулӑр. Мӑшӑрӑн илнӗ тӗслӗхсенче пауза ӑҫта-ӑҫта пулнине асӑрхӑр.

1. Хӗвел анӑҫалла сулӑннӑ пулин те шӑрӑх чакман-ха. – Шӑрӑх хӗвел анӑҫалла сулӑннӑ пулин те чакман-ха. 2.Пуҫӗ сывӑ юлтӑр тесе пуҫне ҫунат айне пытарать Шурҫунат. – Шурҫунат пуҫӗ сывӑ юлтӑр тесе пуҫне ҫунат айне пытарать. 3. Ҫанталӑк кӗркунне енне кайнӑ пулсан та каҫ пит лайӑх. – Каҫ ҫанталӑк кӗркунне енне кайнӑ пулсан та пит лайӑх.

**165.** Союзпа ҫыхӑннӑ пӑхӑнуллӑ предложенин вырӑнне кӑтартӑр.

1.Йӗри-тавра сӗм вӑрман кашланӑ пулсан халӗ йывӑҫсем унта-кунта кӑна тӑрса юлнӑ. *(Р. Петрова.)* 2. Пурнӑҫӗн ытларах пайӗ ҫӗр айӗнче иртет пулин те ку чӗр чун хӑйӗн шӑтӑкӗнчен сайра хутра та пулин тухкалать. *(Г. Орлов.)* 3. Мошков сасси яланхи пекех туслӑ илтӗнчӗ пулин те Касмухха лӑпланаймарӗ. *(Н. Мранькка.)* 4. Эпӗ сӑмахсӑрах килӗшрӗм, мӗншӗн тесен эпир унччене те аялти кӗпесем таранах исленнӗччӗ те, текех йӗпенес килмерӗ. *(Л. Агаков.)*

**166.** Паллӑ тунӑ сӑмахсен пӗрлӗхне мӗншӗн пӑхӑнуллӑ предложени темелле?

1. **Самани йывӑр пулнӑ пулин те** тӗттӗме шӑтарса, сайра, пӑт-пат курӑнакан ҫӑлтӑрсем пек авалтанах палӑркаланӑ пирӗн халӑхӑн талантлӑ ҫыннисем. 2. **Кӑнтӑрлахи апата киле таврӑнса вӑхӑта ан ирттерччӗр тесе** Митюк ҫынсене ана ҫинчех апатлантарать. *(А. Артемьев.)*

**🞇 167.** Ыйтусене хуравлăр, тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

1. *Тесе, тесен, пулсан* союзсем хутсăр предложенин пайĕсене те, хутлă предложенин пайĕсене те çыхăнтарма пултараççĕ-и?

2. *Тесе, тесен, пулсан* союзсемпе çыхăнакан сăмах пĕрлĕхĕсене хăçан пăхăнуллă предложени теме пулать?

3. Асăннă союзсемпе çыхăнакан пăхăнуллă предложенисене чарăну палли лартасси мĕншĕн хутсăр предложенири пек?

## Союзла сăмахлă пăхăнуллă хутлă предложенисем

⊙ 1. **Кам** хăйĕн тăван çĕрне юртать – **çав** çын унăн малашлăхĕшĕн ĕçлет. *(Ват. сăм.)* 2. *Ăмăртура **кам** канăçсăр – телейлĕ, **ăна** мухтавлă ăнăçлăх кĕтет. (Г. Орлов.)*

Вулăр. Паллă тунă местоименисем епле килĕшсе тăнине сăнăр, мĕне пĕлтернине, хăш член пулнине асăрхăр.

➤ *Кам, мĕн, ăçта, хăçан, камăн, мĕне, мĕн чухлĕ* йышши ыйту местоименийĕсемпе наречисем союзла сăмахсем шутне кĕреççĕ. Вĕсем пăхăнуллă предложенирех пулаççĕ. Тĕп предложенире союзла сăмахсемпе пĕлтерĕш енчен шайлашуллă местоименисемпе наречисем тăраççĕ. Вĕсене **кăтарту** сăмахĕсем теççĕ.

| Союзла сăмахсем | Кăтарту сăмахĕсем |
|---|---|
| *кам* | вăл |
| *мĕн* | çавă |
| *камăн* | унăн |
| *кама* | çавна |
| *ăçта* | çавăнта |
| *хăçан* | çавăн чухне |
| *мĕн чухлĕ* | çавăн чухлĕ |

Пăхăнуллă предложенири союзла сăмах та, тĕп предложенири кăтарту сăмахĕ те çыхăну тунипе пĕрлех хăйсен пĕлтерĕшне те çухатмаççĕ, уйрăм ыйтăва хуравлаççĕ, предложени членĕ пулаççĕ.

Союзла сăмахлă пăхăнуллă предложени, тĕпрен илсен, малти вырăнта тăрать, тĕп предложени – иккĕмĕш вырăнта. Пăхăнуллă прдложени тĕп предложенин кăтарту сăмахĕ мĕне пĕлтернине уçăмлатать: ***Камăн*** *тӳрĕ кăмăл,* ***ăна*** *ялан çăмăл.*

**168.** Ваттисен сăмахĕсене вулăр, сăмах мĕн çинчен пынине ăнланăр. Япала ятне е унăн ушкăнне ăнлантаракан пăхăнуллă предложенисене пĕр ушкăна, глаголпа унăн ушкăнне е тĕп предложение пĕтĕмĕшлĕн ăнлантараканнисене тепĕр ушкăна çырăр.

1. Кам ĕçрен хăрамасть, тар тăкать те шӳт тăвать, çавăн ячĕ ял çинче те хисепре. *(М. Илпек.)* 2. Кам таната карса хурать – вăл хăй танатана çакланать. 3. Сăнĕ мĕнле, чунĕ çапла. 4. Кам тăшмана парăнмасть – ăна халăх манмасть. 5. Кам çуни çине ларатăн, çавăн юррине юрлама тивет. 6. Кам чĕлĕм туртать те эрех ĕçет, вăл хăйĕн сывлăхне сиен кӳрет. 7. Ăçта пĕрлĕх – унта вăй. 8. Çын ăçта çуралнă, чĕри çавăнта туртать. *(Ват. сăм.)*

### Асăрхăр

Ĕçе, хăнăхтарăва тăваççĕ – ĕмĕте, шухăша, хатĕр планпа проекта пурнăçлаççĕ.

**169.** Çырса илĕр. Пăхăнуллă предложенисене аялтан туртăр. Чарăну паллисене епле лартнине асăрхăр.

1. Кам кулать – кайран хăй те макăрать. 2. Ăçта çинçе вырăн пур, çип çав тĕлтен татăлать. 3. Камăн тӳрĕ кăмăл, ăна ялан çăмăл. 4. Кăмăлĕ мĕнле, ĕçченлĕхĕ те çавнашкал. 5. Ăсти епле, ĕçĕ çапла. 6.

Кампа пуç шуратнă, çавăнпа ĕмĕр ирттермелле.*(Ват. сăм.)* 7. Ăçта пур çирĕп юрату, ĕмĕр унта çирĕп тату. *(Г. Ефимов.)*

▲ Союзла сăмахпа çыхăнакан пăхăнуллă предложенисене тĕп предложенирен запятой лартса уйăраççĕ. Тĕслĕхрен: *Кам хĕвне пытарнă чул, çавăнпа эс сыхă пул.* (П. Хусанкай.)

Союзла сăмахлă пăхăнуллă хутлă предложенин икĕ пайне те ăнлантаракан сăмах е сăмах ушкăнĕ пулсан – çав сăмахсем хыççăн запятой лартмаççĕ: ***Вăрçăра** кам вăйлă, çавă çĕнтерет.*

Сюзла сăмахлă пăхăнуллă предложенире тĕп предложенири кăтарту сăмахĕ тухса ӳкме пултарать. Калаçура вăл тухса ӳкнине чарăну туса, çырура тире лартса палăртатпăр.

Тĕслĕхрен: *Кам ир тăрать – улма çиет, кам кая юлать – пилеш çиет.* (Ват. сăм.)

**170.** Текста чарăну паллисем лартса çырса илĕр.

1. Мĕн асăнатăн вăл пулать. 2. Мĕн чухлĕ ĕç кунĕ тăвăн çавăн чухлĕ тупăш пулĕ. 3. Ĕç тухăçĕ мĕн чухлĕ пысăкланĕ, тупăш та çавăн чухлĕ ӳсĕ. 4. Çын хăçан тăрăшса ĕçлет ырă ячĕ çавăн чухне сарăлать. 5. Ăçта карта-хура çук унта пурлăх саланать. *(Ват.сăм.)*

**171.** Пăхăнуллă хутлă предложенисем пиллĕк тупса çырăр. Пăхăнуллă предложени тĕп предложенипе союзла сăмахпа çыхăнтăр.

Тĕслĕх: *Кам ашшĕ-амăшне хисеп тăвать, вăл хăй ывăлĕ-хĕрĕнчен те чыс курать.*

**172.** Вуласа тухăр. Пăхăнуллă предложени мĕнле союзла сăмахпа çыхăннине кăтартăр, тĕп предложенире кăтарту сăмахĕ мĕне пĕлтерине калăр.

1. Кам тăван тавралăха юрататать, вăл унăн илемне упрама тăрăшать. *(М. Кипек.)* 2. Ăçта туслăхпа юлташлăх çирĕп, унта ĕç те

ӑнса пырать. *(Ват. сӑм.)* 3. Кам тӑпрари нӳрӗке сыхласа усрать, вӑл тырӑллӑ пулать. *(«Хыпар».)* 4. Юлташу мӗнле, эсӗ ху та ҫапла теҫҫӗ. *(Ват. сӑм.)* 5. Ялта мӗн пулса иртнӗ, ҫавӑн ҫинчен юрланӑ хӗр. *(Л. Агаков.)*

♦ **173.** *«Кам тӑван тавралӑха юратать, вӑл унӑн илемне упрама тӑрӑшать»* темӑпа ӑслав ҫырӑр. Ӑславра пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложенисемпе усӑ курӑр. Пӑхӑнуллӑ предложенин ыйтӑвӗ тӗп предложенири хӑш сӑмах ыйтӑвӗпе пӗр килнине ӑнлантарӑр. Чарӑну паллисене епле лартмаллине асӑрхаса пырӑр.

**174.** Союзла сӑмахлӑ пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложенисене май пур ҫӗрте хутсӑр предложенисемпе ылмаштарӑр. Шухӑш енчен мӗнле те пулин уйрӑмлӑх пуррине сӑнӑр.

Тӗслӗх: *Кам юрӑпа туслӑ, вӑл темле пусӑрӑнчӑк кӑмӑла та ҫӗклеме пултарать* – пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени; *Юрӑпа туслӑ ҫын темле пусӑрӑнчӑк кӑмӑла та ҫӗклеме пултарать* – хутсӑр предложени.

1. Кам кулач ҫиес тет, вӑл кӑмака ҫинче выртмасть. 2. Ар епле, йыш ҫапла. 3. Кам ӗҫлет, вӑл питӗ аван пурӑнать. *(Ват. сӑм.)*

**175.** Панӑ ыйтусене хуравласа союзла сӑмахлӑ пӑхӑнуллӑ предложенисем ҫырӑр, кирлӗ чарӑну паллисем лартӑр.

Тӗслӗхрен: *Кам лайӑх пӗлет, вӑл лайӑх каласа парать.*

1. Кам лайӑх каласа парать? 2. Ӑҫтан ҫумӑр килет? 3. Пӑрахутсене ҫӳреме ӑҫта аван? 4. Вӗлле хурчӗсем ӑҫталла вӗҫеҫҫӗ? 5. Ӑҫта улмуҫҫисем лайӑх ҫитӗнеҫҫӗ? 6. Кӗнекерен мӗн ҫырса ил?

**176.** Хӑвӑр шухӑшласа тупса пилӗк предложени ҫырӑр. Пурте вӗсем пӑхӑнуллӑ хутлӑ прдложенисем пулччӑр. Пӑхӑнуллӑ предложенийӗ тӗп предложенипе союзла сӑмахпа ҫыхӑнтӑр.

**177.** Союзла сăмахлă пăхăнуллă хутлă предложенисене çырса илĕр, кирлĕ чарăну паллисем лартăр. Хăш предложенисем союзла сăмахлă пăхăнуллă хутлă мар?

1. Кам ĕçлет те ĕçре ӳркенмест вăл нихçан та выçă çӳремест. *(Н. Шупуççынни.)* 2. Пĕр тăшман пуличчен çĕр тус пултăр. 3. Манăн шухăшпа, камăн ӳпки табак тĕтĕмне йытă патака юратнă пек юратать çавсем çеç туртаççĕ. *(И. Мучи.)* 4. Чан çурăкки çапса пăхмасăр та палăрмасть. (Ват. сăм.) 5. Ыттисем мĕнле шутлĕç çавнашкл пурăнăпăр. *(Н. Мранька.)* 6. Ăçта пăхатăн унта халăх. *(В. Ухли.)* 7. Кам ĕçрен хăрамасть, тар тăкать те шӳт тăвать, çавăн ячĕ ял çинче те хисепре. *(М. Илпек.)* 8. Мĕн чухлĕ лайăх ĕçлетпĕр, çавăн чухлĕ хамăра лайăх. *(С. Лашман.)* 9. Ку хĕр хăй кам иккенне пытарма тăрăшрĕ пулин те унăн ашшĕ-амăшĕ çĕрме пуянни тӳрех паллă. *(Н. Мранька.)*

✪ **178.** Н.И. Ашмарин словарĕпе усă курса *çĕрме* сăмахăн пĕлтерĕшĕсене тупăр. Кашни пĕлтерĕшĕпе пĕрер предложени çырăр. Ку сăмах предложенисенче мĕнле пуплев пайĕ пулнине ăнлантарăр.

**179.** Ваттисен сăмахĕсене çырса илĕр. Пăхăнуллă предложенисем мĕнле пĕлтерĕшлĕ пулнине калăр.

1. Камăн пурнăçĕ ăнать, унăн телейĕ хапхаранах упаленсе кĕрет. 2. Хунямăшĕ епле, кинĕ çапла. 3. Камăн урапи çине ларатăн, çавăн юррине юрлатăн. 4. Ăçта чечек, унта пыл. 5. Кам ĕçлет, çав çиет.

🕮 **180.** Çак предложенисене чăвашла куçарăр. Вырăс чĕлхинчи союзла сăмахсен пĕлтерĕшне чăвашла мĕнле палăртнине ăнлантарма тăрăшăр.

1. Папа решил купить то самое пальто, **которое** так понравилось маме. 2. Откуда он мог знать, **чей** это портфель. Они все же решили, **куда** пойдут на выходных. Она не могла понять,

**зачем** он так сказал. Все мы уже догадались, **где** нам предстоит ночевать. Он так и не смог объяснить, **почему** выбрал именно ее.

## Хыҫ сӑмахлӑ пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложенисем

⊙ 181. Тӗслӗхсене вулӑр. Пӑхӑнуллӑ предложенисем тӗп предложенипе мӗнле мелпе ҫыхӑннине сӑнӑр.

1. Ванюк кимӗ патне ҫитнӗ ҫӗре утарҫӑ пулӑсене тасатма та ӗлкӗрчӗ. *(Н. Мранькка.)* 2. Ялсем тӑрӑх асапланса ҫӳресе темиҫе кун иртнӗ хыҫҫӑн Урасмет Криуша ҫитсе килме шутларӗ. 3. Иҫниксем хӑйсен ӗҫне пӗтернӗ тӗле яла юлан утпа Чапкун килсе ҫитрӗ. *(К. Турхан.)*

➤ Пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени пайӗсене ҫыхӑнтаракан хыҫ сӑмахсем йышлӑ: *хирӗҫ, ҫине, пирки, пек, евӗр, май, чух (чухне), умӗн, хыҫҫӑн, ҫӗре, тӗле, ҫинче (ҫинчен), вара, кура, пула, чухлӗ (чул), таран, ҫӗртен, тӑркач.* Хыҫ сӑмахсем пӑхӑнуллӑ предложенин сказуемӑйӗ хыҫҫӑн тӑраҫҫӗ.

Хутлӑ пӗрлӗхӗн пайӗсем хыҫ сӑмахпа ҫыхӑннӑ чухне пӑхӑнуллӑ предложенин сказуемӑйӗ е ят сӑмахран, е причастирен пулать. Пӑхӑнуллӑ предложенийӗ е тӗп предложени умӗн, е унваррине вырнаҫать, анчах сайра пӗрре вӗҫне те тухса тӑрать: ***Эпӗ киле таврӑннӑ чухне*** *кӳршӗ Хветӗрӗн калинки чӗриклетрӗ.* (В. Кервен.) *Тепӗр кун ирхине,* ***Ахтупайпа Иливан ҫывӑрса тӑнӑ тӗле*** *мунчана Северьянпа Иван Домидонтович пычӗҫ.* (К. Турхан.)

**⊙ 182.** Хыҫ сӑмахсем вӗҫленекен сӑмахсен ҫыхӑнӑвӗн мӗнле пӗлтерӗшӗсене палӑртма пулӑшнине аса илӗр.

Пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени пайӗсене ҫыхӑнтаракан хыҫ сӑмахсем тӗрлӗ пӗлтерӗшлӗ пулаҫҫӗ:

*Хирĕç, çине* хыç сăмахсем объект пĕлтерĕшлĕ: *Салампи текех сăмах вакламарĕ, юлташĕсем ыйтнине хирĕç кĕскен кăна сасă паркаларĕ.* (А. Артемьев.)

*Пирки* хыç сăмах объект тата пирке пĕлтерĕшлĕ: *Корроспондент шкулăн футбол команди çитес вăйăйа епле хатĕрленнĕ пирки ыйтрĕ.* (Л. Маяксем.)

*Пек, евĕр, май (майĕпе, майăн)* хыç сăмахсем япалан е ĕçĕн паллине, ĕçĕн вăхăтне тата танлаштарăва кăтартаççĕ: *Халăх ĕмĕрхи юман кашланă пек калаçса илчĕ.* (В. Ухли.) *Çавăнтах залра хумсем тӳлеккĕн шăмпăлтатнă евĕр лăпкă та çепĕç кĕвĕ янăраса кайрĕ.* (Хв. Уяр.) *Шурăм пуç хĕрелсе килнĕ май тĕтре кĕреннĕн курăнма тытăнать.* (А. Ĕçхĕл.)

*Чух (чухне), умĕн, хыççăн, çĕре, тĕле, çинче (çинчен), вара* хыç сăмахсем вăхăт çыхăнăвне кăтартаççĕ: *Хĕвел аннă çĕре хыçалти пӳлĕме йĕркене кĕртсе çитертĕмĕр. Сăпани аппа качча тухнă хыççăн аннĕр эпир ку çуртра ытлашши пулнине систерчĕ.* (Л. Маяксем.) *Тăван ялăма эпĕ çурхи ака пуçланнă тĕле çитеймерĕм, каярах юлтăм.* (В. Сатай.)

*Кура, пула* хыç сăмахсем пирке çыхăнăвне палăртаççĕ: *Ĕçе вăй мĕн чухлĕ пулнине кура суйласа илеççĕ.* (К. Турхан.)

*Чухлĕ, чул, таран* хыç сăмахсем пăхăнуллă хутлă предложенин пайĕсене виçе пĕлтерĕшĕпе çыхăнтараççĕ: *Вăй çитнĕ таран кĕрешрĕç тăшманпа партизансем.* (Л. Агаков.)

*Çинче, çинчен, çĕртен, тăркач* хыç сăмахсем вăхăт пĕлтерĕшĕсĕр пуçне хирĕçлеве кăтартма пултараççĕ: *Алăк пур çинче чӳречерен кĕме пăхатăн.*

**183.** Вулăр. Тĕп предложенипе пăхăнуллă предложение кăтартăр, вĕсем епле çыхăннине ăнлантарăр.

1. Çамрăксем çитнĕ çĕре пуху пуçланнăччĕ ĕнтĕ. *(А. Емельянов.)* 2. Ниме çыннисем кĕлет тăррине сӳтнĕ чухне Макар пĕренесене *сăхă* лартса тухрĕ. 3. Вĕтĕ йĕпхӳ пĕрĕхкелесе илнĕ хыççăн тусан та тухмасть. *(С. Аслан.)* 4. Хĕрĕн сăмахĕ сиплĕ варкăш çил чупса иртнĕ пекех чуна уçса ярать. *(В. Алентей.)* 5. Çемен çырманалла аннă чухне тахăш хĕрĕ шӳтлесе тăпра панкрипе печĕ. *(А. Артемьев.)* 6. Яшка лăкăртатма тытăннă тĕле амăшĕ тăрать. *(Хв. Акивер.)* 7. Çуна кĕрт хӳсе кайнă çул тăрăх йывăррăн шунă май Сарыев мăрса ӳлĕмрен Бурнаш тĕлĕшĕнчен хăй мĕн тăвасси çинчен шутлать. *(К. Турхан.)*

* Паллă тунă сăмахăн синонимĕсене тупăр, кашнинпе пĕрер предложени çырăр.

**184.** Пăхăнуллă предложенисен тĕп членĕсене аялтан пĕр тата икĕ йĕр туртса çырса илĕр.

1. Анна Ивановна тем саплать. Йĕппи калама çук хăвăрт кĕрсе тухнă май алли выляса кăна тăрать. 2. Юр хулăнах мар чухне пăшисем çиччĕн-саккăрăн апат шырама тухаççĕ. 3. Атăл çинче ăрша вылянă пирки çур çухрăмри пăрахута та курма йывăр. 4. Пирĕн пурин те сочиненисене урок пĕтнĕ çĕре çырса пĕтермелле. *(М. Кипек.)* 5. Никам та çут çанталăка упрама кашни çыннăн тивĕç пур пирки шухăшламан. *(А. Емельянов.)* 7. Атте çĕре кĕнĕ хыççăн аннене йывăр килчĕ паллах. *(«Хыпар».)* 8. Кӳме кĕпер урлă каçнă чух кашта вăр-вăр тăвайрĕ. *(Чăв. хал. юрри.)*

**185.** Паллă тунă сăмахсем хăш пуплев пайĕ пулнине тавçăрса илме пулать-и?

1. Ахтупай каялла таврăннă *çĕре* дружинниксем çула тухнăччĕ ĕнтĕ. *(К. Турхан.)* 2. Типĕ курăк ӳсекен *çĕре* вут хыпса ан илтĕрччĕ. («Хресчен сасси») 3. Кашкăр йĕнни яланах питĕ улах вырăнта, çу каçичченех ĕçмелли шыв пур *çĕрте*, пулаканччĕ*. (М. Кипек.)* 4. Артук мучи хăй калавне каласа пĕтернĕ *çĕре* тул çутăлса çитрĕ. *(И. Тукташ.)* 5. Зинаида Николаевна çитнĕ *тĕле* пурте пухăннăччĕ ĕнтĕ. *(В. Тарават.)* 6. Ту айккин хĕвел ӳкекен *тĕлĕсенче* юр ирĕлме пуçларĕ. *(В. Николаев.)*

➤ ***Çĕр* тата *тĕл* сăмахсен вырăна пĕлтерекен формисем япала ячĕ пулаççĕ, ытти пĕлерĕшлисем – хыç сăмах.**

**186.** Çырса илĕр. Пăхăнуллă хутлă предложенисене тупăр. Пăхăнуллă предложенисен пĕлтерĕшĕсене калăр, тĕп членĕсене аялтан туртса паллă тăвăр.

1. Çӳлтен çӳле çĕкленекен хĕвел вăрман ăшĕнчен тĕттĕме хуса кăларнă май сывлăш ăшăнсах пырать. *(М. Кипек.)* 2. Ушкăн халăх уй хапхинчен тухнă чух хушка çăлтăр пек радиорупорта çĕнĕ кĕвĕ янăраса кайрĕ. *(С. Шавли.)* 3. Çĕмĕрт çурăлнă хыççăн пĕр-икĕ кунтан чие шап-шурă пĕркенчĕкпе хупланать. *(Г. Орлов.)* 4. Хĕр ача йăл-йăл кулкаласа хăйĕн мĕлкине чечекпе печĕ те каллех юрласа ячĕ. Шывра сăн тавра хумсемункăланса сарăлнă майăн тавралла савăк юрă янăраса сарăлчĕ. *(А. Артемьев.)* 5. Черненко патĕнче калаçу пĕтнĕ хыççăн эпир тарават кил хуçипе унăн кăмăллă мăшăрне тав туса тухрăмăр. *(Уйăп М.)*

**187.** Хыç сăмахлă пăхăнуллă хутлă предложенисене çырса илĕр. Пăхăнуллă предложени тĕп предложенипе епле çыхăннине сăмахпа ăнлантарăр.

Тул çутăлса çитнĕ çĕре Виктор вăрмана пырса кĕчĕ. Çамрăка хаваслантарас тенĕ пекех, çанталăк тĕлĕнмелле ырă пулчĕ. Кăвак тӳпе тап-таса. Ниçта пĕр пĕлĕт татăкĕ курăнмасть. Каç сулхăнĕнче тӳлеккĕн тĕлĕрнĕ ватă вăрман халĕ те ыйхăран вăранасшăн мар-ха. Çил пачах çук пирки çулçăсем пĕр хускалмасăр çакăнса тăраççĕ. Пĕтĕм тĕнче канăçа путнă. Ĕçчен хĕвел çеç ывăна пĕлмесĕр ĕçлет: тул çутăла пуçласанах тухăçри пĕлĕте ылтăн шывпа сăрларĕ, унтан инçетри сăртсем хыçĕнчен илемлĕ питне кăтартрĕ те ăшă ыйтакансене ăшă пачĕ, çутă кĕтекенсене – çутă. Вара пĕтĕм тĕнче хавасланса ӳкрĕ: каçхи сивĕ нӳрĕкрен хăраса пĕрĕннĕ чечексем уçăлчĕç, таврана ырă шăршă сарчĕç, кайăк-кĕшĕк юрă шăрантарма пуçларĕ, ӳсен-тăран çĕр сĕткенне ĕмсе пĕве ячĕ. *(М. Кипек.)*

◆ **188.** Тул çутăлнине сăнлав мелĕпе çырса парăр. Май килнĕ çĕрте пăхăнуллă хутлă предоженисемпе усă курма тăрăшăр.

**189.** Вуласа тухăр. Пăхăнуллă хутлă предложенисене çырса илĕр, пăхăнуллă пайăн пĕлтерĕшне, сказуемăйĕ хăш формăра тăнине палăртăр.

1. Кушлавăш уйĕ, тăсăк виç кĕтес евĕр курăннă уй, пĕр хĕрĕхалă çул ĕлĕкрех çеç йĕри-таврах вăрманпа хупланса выртатчĕ-ха. Унăн сăн-сăпачĕ, юлашки вăтăр çул хушшинче, таврари вăрмана касса пĕтернĕ пирки нумай улшăнчĕ*. Йышлă катасем (рашчасем) пĕтрĕç. Çырмалăхра çатракасем çаралчĕç. Вăрмансене касса çаратнă пирки çырмасем типсе ларчĕç, çыран тулли юхса выртакан шывсем те хухрĕç. *(Ç. Элкер.)* 2. Хĕрсемпе каччăсем пухăннă май шăв-шав ӳссех пычĕ. *(И. Ахрат.)* 3. Лаша тăват ураллă, çапах та такăнать. *(Ват. сăм.)* 4. Уяв кунĕсенче çамрăксем клубра концерт кăтартнă чух Ирина яланах юрлатчĕ. *(Г. Ефимов.)* 5. Шывĕ те пăтранса та кăпăкланса мар, тӳлеккĕн те сарлакан юхнă. (Хв. Уяр.) 6. Пурте

пĕрле асăнмалăх сăн ӳкерттернĕ хыççĕн эпир вăрманалла кĕпĕрленсе утрăмăр. *(Л. Маяксем.)*

*Çăлтăрпа паллă тунă предложенире запятой лартнин сăлтавне ăнлантарăр. Запятой лартмасан мĕн пулать?

**190.** Пăхăнуллă хутлă предложенисене кирлĕ çĕрте чарăну туса вулăр. Пăхăнуллă предложени ăçта вырнаçнă: тĕп предложени умĕнче-и, хыççăн-и е ун варринче-и? Пăхăнуллă предложени тĕп предложение пĕтĕмĕшлĕн ăнлантарать-и е ун уйрăм пайне кăна-и? Чарăну паллисене мĕншĕн лартнă?

1. Тĕтре хытă юхнă май пĕве варринче хумсем кусма тытăнаççĕ. *(Ю. Скворцов.)* 2. Хур кайăксем Çавал патне çитнĕ чух шăпах хĕвел хĕмленсе тухрĕ. *(М. Кипек.)* 3. Чĕмпĕр чăваш шкулĕ çумĕнче училищĕн хĕрсен уйрăмĕ уçăлассии çинчен тахçанах шутлаттăм эпĕ. *(И. Яковлев.)* 4. Ĕлĕксенче, ку енчи чăвашсем Утиле ĕçлесе пурăннă чухне кунти тĕнче пĕрре те хальхи пек пулман. *(Г. Тимофеев.)* 5. Андриян, сенкер çăлтăр курăнас пек, пĕлĕтелле пăхрĕ. *(К. Петров.)* 6. Хĕвел хĕртсе пăхнă хыççăн пĕр кас çумăр килсе çурĕ. *(А. Талвир.)*

📖 **191.** Хăвăр шухăшласа е илемлĕ литературăран пăхăнуллă хутлă предложени пиллĕк тупса çырăр. Вĕсем пурте хыç сăмахлисем пулччăр. Виçĕ тĕслĕхĕнче пăхăнуллă предложени тĕп предложени умĕнче тăтăр, иккĕшĕнче – тĕп предложени варринче.

**192.** Çырса илĕр. Пăхăнуллă предложенисен тĕп членĕсене паллă тăвăр. Пăхăнуллă предложенисен ыйтăвĕсемпе пĕлтерĕшĕсене сăмахпа ăнлантарăр.

1. Шăпăрçă туйра шăпăр каланă чухне, чăвашсенчен никам та унпа тавлашма пултараймасть, хăй пек шăпăрçă кăна унпа тупăшма пултарать*. *(С. Михайлов.)* 2. Тӳпере, куçа курăнман çĕр-çĕр пĕчĕк шăнкăрав çакăнса тăнă евĕр, ӳркенмен тăрисем ĕмĕрхи хаваслă юррине шăрантараççĕ. 3. Муçça халăх вăрçинчен таврăннă çĕре

Хӗлип хӑйӗн хуҫалӑхне ура ҫине тӑратнӑ. *(А. Артемьев.)* 4. Илья Петрович киле ҫитнӗ тӗле Ксения Кирилловна та, Николай та ӗҫрен таврӑнман пулнӑ-ха. *(А. Ӗҫхӗл.)* 5. Ҫанталӑк пӑсӑлас умӗн хурт-кӑпшанкӑ ҫӗре анать. *(А. Александров.)* 6. Эсӗ килесси ҫинчен пире Австрирен таврӑнакан Кӗркури ятлӑ салтак кӗрсе пӗлтерчӗ. *(Ҫ. Элкер.)*

***Ҫ**ӑлтӑрпа кӑтартнӑ предложенире чарӑну паллисене мӗншӗн лартнине ӗнентерӗр.

**193.** Вулӑр. Пирке тата виҫе пӗлтерӗшлӗ ҫыхӑнӑва кӑтартакан пӑхӑнуллӑ предложенисене ҫырса илӗр.

1. Ҫапла самана улшӑнса пынине кура ытти япали те улшӑнса пырать. *(Г. Тимофеев.)* 2. Ялта тӑванӗсенчен никам та юлман пирки Лисукӑн ҫывӑрма ирӗксӗрех Униҫӗм патне каймалла пулчӗ. *(М. Исаев.)* 3. Ҫумӑр ҫунине пула тырра вӑхӑтра пуҫтарса кӗртеймерӗмӗр. *(С. Павлов.)* 4. Пӗтӗм тавралӑх куҫ мӗн чухлӗ курма пултарнӑ таранах шап-шурӑ юрпа витӗннӗ. *(С. Аслан.)* 5. Ашшӗ ывӑлӗ пит тертленсе пӗтнине кура урлӑ нимех те шарламарӗ. *(Хв. Агивер.)* 6. Северьян тухса кайнӑ хыҫҫӑн, кунта юлнӑ таркӑнсем те кӑмӑлтан нумай сӗлкӗшленчӗҫ. *(К. Турхан.)*

***Ю**лашки предложенире запятой лартнин тӗллевне калӑр.

**194.** Пӑхӑнуллӑ предложенири ӗҫ тӗп предложенири ӗҫ умӗн пулнине кӑтартакан предложенисене ҫырса илӗр.

1. Пулӑсем вӑлча пӑрахма хӑпарнӑ чухне шыв ҫийӗ вӗреме кӗнӗ пек тӗрать. 2. Тӗттӗм пулнӑ ҫӗре мана вӑрман варрине антарса хӑварчӗҫ. *(Хв. Уяр.)* 3. Ҫулсем иртнӗ май хӑй мӗнле улшӑнса пынине асӑрхасах каймасть этем. 4. Ял чухӑнӗсем хуҫалӑх юхӑнса ҫитнине пула юлашки выльӑх-чӗрлӗхне сутса яраҫҫӗ. *(М. Сироткин.)* 5. Ҫӗмӗрт ҫурӑлнӑ хыҫҫӑн пӗр-икӗ кунтан чие шап-

шурă пĕркенчĕкпе хупланть. *(Г. Орлов.)* 6. Виталий выльăхсене хупса кĕнĕ тĕле Тоня Урнавăшран таврăннăччĕ ĕнтĕ. 7. Тоня та кĕтӳ анас умĕн ĕçрен таврăннă. *(Хв. Акивер.)* 8. Куççуль тăхлан пĕлĕтрен çумăр лӳшкенĕ пек юхрĕ. *(П. Егоров.)*

## Йăнăш тăвасран асăрханăр

*Валли* хыç сăмах çыхăнтаркан япапа ячĕсене тĕп падежра, сăпат тата таврăну местоименийĕсене камăнлăх падежĕнче каламалла: *атте валли, юлташ валли,* анчах *ман валли, сан валли, ун валли, пирĕн валли, сирĕн валли.* Местоименисене камăнлăх падежĕнче калас йĕрке, М.Р. Федотов профессор çырнă тăрăх, сĕм авалтантанах пырать, мĕншĕн тесен ун чухне хальхи камăнлăх падеж формипе тĕп падеж пек усă курнă. *Мана валли, сана валли* тени йăнăш.

**195.** Вулăр. Пăхăнуллă предложенисене тупăр та мĕнле пĕлтерĕшлĕ пулнине калăр. Пăхăнуллă предложенипе тĕп предложенин тĕп членĕсене кăтартăр. Хутсăр предложенисем пур-и?

1. Каç пулас умĕн акацие нумай хурт-кăпшанкă сырса илет. *(А. Александров.)* 2. Çул хывнă чух кăткă темĕнле шĕвек кăларса пырать иккен. 3. Çемье апат çинĕ хыççăн пичче, аппа, эпĕ хамăр ума урама тухса лартăмăр. *(М. Трубина.)* 4. Çумăр халех чарăнас çуккине кура Ваççили хăйĕн бригадинчи юлташĕсемпе пĕрле килнелле утрĕ. *(А. Лазарева.)* 5. Çамрăксем клуба кĕрлеттерсе пырса кĕнĕ çĕре пĕчĕк зала çирĕм – вăтăр ача пуçтарăннăччĕ ĕнтĕ. *(Хв. Акивер.)* 6. Эрнепи яла таврăннă хыççăнах çумăрлă кунсем пуçланчĕç. *(К. Турхан.)*

**196.** Пăхăнуллă хутлă предложенисене çырса илĕр. Пăхăнуллă предложени тĕп предложенипе епле çыхăннине ăнлантарăр.

1. Тутлă апат йăлăхтарнă пек, вĕçĕмсĕр ырлани те йăлăхтарать иккен. 2. Ятламас курка йăтса кӳлĕ хĕррине шыв ăсма чупрĕ. 3.Тукай Юмансартан тухнă чухне çуна çулĕ йăлтах пăсăлнăччĕ ĕнтĕ. 4. Каç пулнăçем вăрмана сасă каять хытăрах. *(К. Иванов.)* 5. Ватă юман ӳкнĕ хыççăн чул муклашкисемпе тĕрлĕ йывăç тăрăхĕсем капланса анма тытăнчĕç. 6. Урам кĕтессинче темĕн чухлĕ пĕрене купаласа хунă çĕрте ват çынсем йышлăн лараççĕ. *(К. Турхан.)* 7. *Эпир вĕреннĕ чух картишĕнче ларатчĕ пианино. (Л. Маяксем.)* 8. Ӳркев ӳкерет, хастарлăх хăтарать. *(Ват. сăм.)* 9. Тавралăха тĕттĕм çавăрса илес умĕн Сарыев хăйĕн тарçине лашасене Юмансаралла пăрма хушрĕ. *(К. Турхан.)*

*1-мĕш номерлă предложенире зппятой мĕн тĕллевпе лартнă?

⭘ 7-мĕш номерлă предложенире сăмахсем епле çыхăннине кăтартакан схема ӳкерĕр.

## Пайĕсене аффикссемпе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложенисем

## Пайĕсене *-и* аффикспа çыхăнтаркан пăхăнуллă хутлă предложенисем

⊙ **197**. Тĕслĕхсене вулăр, пăхăнуллă предложенисене тупăр. Вĕсем, сирĕн шухăшпа, тĕп предложенипе мĕнле мелпе çыхăннă?

*1.* Ырă çынсем кĕркунне çитсен ясак пуçтараканччĕ. 2. Куççуль юхнипе аптранăран Тукай хăйне кам çапнине палласа юлма пултараймарĕ. *(К. Турхан.)* 3. Шуррăн-шуррăн çĕмĕрт çурăлсассăн Тутлă шăршă тулчĕ таврана. *(Ю. Петров-Вирьял.)* 4. Икĕ кайăк ĕнтĕркесе ларнине Илемпи курах кайрĕ. 5. Аслисем пӳрте кĕрсен Алик Байкала чĕлпĕр вĕççĕн çитерчĕ. Кукашшĕпе Маниç аппăшĕ мĕн калаçнине пĕлмерĕ паллах. *(Д. Гордеев.)* 6. Выльăх йышĕ

хушăнни палăрсах каймасть. *(А. Савельев-Сас.)* 7. Юлташăм çирĕп хуçалăхпа пурăнни тӳрех сисĕнет.

- Хутсăр предложени пайĕсем пекех, пăхăнуллă хутлă предложени пайĕсем те аффикспа çыхăнма пултараççĕ.

Хутлă пĕрлĕхĕн пайĕсене çыхăнтаракан аффикссен йышĕнче чи малтан ***-и*** аффикса, падеж аффиксĕсене тата деепричасти аффиксĕсене палăртас пулать. Çак аффикссем пурте, хыç сăмахсем пекех, пăхăнуллă предложенин сказуемăйĕ çумне хушăнаççĕ. Тĕслĕхрен: *Володьăн статья тухасси те пăчланчĕ.* (А. Емельянов.) *Кăçал тырă пĕлтĕрхинчен лайăхрах пуласса ĕмĕтленнеччĕ халăх.* (М. Илпек.) *Сĕтел çинче вĕр çĕнĕ сăмавар курăнса кайсан кинеми тĕлĕнмеллипех тĕлĕнчĕ* (Г. Луч.)

**-И** аффикс ят мар сăмахсене япала ячĕ функцийĕпе çӳреме май паракан аффикс. Пăхăнуллă предложени сказуемăйĕ ят сăмахран (паллă е япала ячĕсенчен) е причастирен пулнă чухне çак аффикса йышăнмасăр пулмасть. Кун пек чух тĕп предложенире подлежащи пулмасть, мĕншĕн тесен ун вырăнĕнче пăхăнуллă предложени пулать. Тĕслĕхрен: ***Ал тивменни*** *алă çул выртать.* ***Этем лайăххи*** *калаçнинчен курăнать.*

**198.** Вуласа тухăр. Пăхăнуллă предложенисене тупăр, вĕсен сказуемăйĕсене палăртăр, -и аффикс йышăнакан пăхăнуллă предложенин сказуемăйĕ мĕнле пуплев пайĕ пулнине калăр.

1. Касмухха çемйи хăраса ӳкни Мошкова савăнтарчĕ. *(Н. Мранькка.)* 2. Музыка енĕпе унăн тĕлĕнмелле пысăк пултарулăх пурри палăрать. 3. Вăрман çывăххи урампа пынă чух та лайăх сисĕнет. *(А. Артемьев)* 4. Çитменнине, хырăм выçни хытă аптратрĕ. *(М. Кипек.)* 5. Мĕн кирли пурте пур-мĕн ун. *(А. Талвир.)* 6. Ял çыннисем çырмасемпе урамсене йывăçсем лартасси

Шарпашрта тахçанах йӑлана кӗнӗ. *(С. Аслан.)* 7. Сире хӑвӑра шансан – ыранах мӗн пурри арканса каять. *(Д. Гордеев.)* 8. Каç пуласси инçе мар ӗнтӗ. *(А. Савельев–Сас.)* 9. Сан чун савни миçемӗш хутра пурӑнать? *(Р. Ярантай.)*

**199.** Илемлӗ литературӑран пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени улттӑ тупса çырӑр. Пӑхӑнуллӑ предложени тӗп предложенипе *-и* аффикс пулӑшнипе çыхӑнтӑр. *-И* аффикс йышӑнакан пӑхӑнуллӑ предложнин сказуемӑйӗ глаголӑн причасти форминчен, 2-шӗнче япала ятӗнчен, 2-шӗнче паллӑ ятӗнчен пултӑр.

Тӗслӗх: *Ӗç-пуç мӗнле çаврӑнса тухасси ытларах чухне лару-тӑруран килет* (В. Кервен.) Ку предложенин пӑхӑнуллӑ пайӗ – *Ӗç-пуç мӗнле çаврӑнса тухасси* (подлежащи – *ӗç-пуç,* сказуемӑй – *çаврӑнса тухасси*). Пӑхӑнуллӑ предложенин ***-и*** аффикс йышӑнас умӗнхи форми – глаголӑн пулас причасти форми.

## Пайӗсене падеж аффиксӗсемпе çыхӑнтаракан пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложенисем

Падеж аффиксӗсем пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени пайӗсене çыхӑнтарма пурте тенӗ пекех пултараççӗ. Пӑхӑнуллӑ предложени тӗп предложенипе хӑш падеж аффиксӗпе çыхӑнасси сказуемӑй вырӑнӗнчен тата çыхӑну пӗлтерӗшӗнчен, причастин хӑш форми тӑнинчен килет. Аффикссем йышӑнас енӗпе пӑхӑнуллӑ предложенин кашнин тенӗ пекех хӑйне евӗр уйрӑмлӑх пур.

**Камӑнлӑх** падеж аффиксӗ иртнӗ тата пулас причастирен пулнӑ сказуемӑйлӑ пӑхӑнуллӑ предложенисене кӑна çыхӑнтарать. Падеж аффиксӗ причасти форми çумне тӳррӗн хушӑннӑ чухне пӑхӑнуллӑ предложени ӗçӗн паллине кӑтартать: *Ку вӑл –* ***çӗлен сӑхнин*** *палли.*

**Пару** падежӗн аффиксӗпе çыхӑнакан пӑхӑнуллӑ предложенисем объект пӗлтерӗшлӗ: *Çур еннелле эпир* ***аттепе пичче***

***Кукшакран таврӑнасса*** *кӗтме тытӑнтӑмӑр. Анна Ивановна* ***кӗрекене ларма вӑхӑт ҫитнине*** *ас тутарчӗ.*

**Туху** падежӗн аффиксӗпе ҫыхӑнакан пӑхӑнуллӑ предложенисем объект тата пирке пӗлтерӗшлӗ пулаҫҫӗ: *Тӑпрана* ***юрпа ҫумӑр шывӗ ишӗлтересрен*** *сыхлама уй-хире хӳтлӗх вӑрман тӑрӑхӗсем лартса ӳстермелле. Туй курма пынӑ ҫынсем* ***Ҫтаппан кӗсле пит илемлӗ каланинчен*** *пурте тӗлӗнетчӗҫ.* ***Хӗвел хӗртнӗрен*** *сывлӑш температури ӳссех пырать.*

**Пӗрлелӗх** падежӗн аффиксӗпе ҫыхӑнакан пӑхӑнуллӗ предложенисем объект, пирке, вӑхӑт пӗлтерӗшлӗ пулаҫҫӗ: Ҫӗрле **ҫумӑр шӑпӑртатса илнипе** ҫанталӑк кӑштах сулхӑнланчӗ. ***Хӗвел анаспа*** *кӗтӳ яла таврӑнчӗ.*

**Пирке** падежӗн аффиксӗ объект е пирке пӗлтерӗшлӗ пӑхӑнуллӑ предложенисене ҫыхӑнтарать: ***Сап-сарӑ ҫурхи хӗвел ӑшӑтса пӑхнӑшӑн*** *ҫав тери хӗпӗртетӗп.* ***Хӗвел ӑшӑтса пӑхнӑшӑн*** *пӗтӗм ача-пӑча савӑнать.*

**200.** Ҫырӑр. Пӑхӑнуллӑ предложенисене тупӑр, вӗсем тӗп предложенипе падеж аффиксӗсенчен хӑшӗнпе ҫыхӑннине сӑмах вӗҫҫӗн ӑнлантарӑр, тӗп членӗсене калӑр.

1. Темле тӗпчесен те ача хӑйне мӗн сехӗрлентернине каламарӗ. *(Д. Гореев.)* 2. Эс пирӗн патӑртан кайнӑранпа ман никампа ҫӳреме ҫукчӗ-ха. 3. Юлан утсем укӑлча хапхинчен кӗнӗ вӑхӑтра ялта ҫур ҫӗр ҫитнине систерсе автансем авӑтатчӗҫ. 4. Урасмет хӑйне Чалӑма кӑларса янӑшӑн Тукай мӑрсана тав тӑвать. 5. Йӗкӗт сӗрме купӑс калама ӑста пулнӑран Тукай ӑна хӑйӗн ӗҫкине чӗнтерет. 6. Ывӑлӗ купӑс калама вӗренме шут тытнӑран ашшӗ-амӑшӗ купӑсне те килтех ҫакӑнса тӑмалла турӗҫ. *(К. Турхан.)* 7. Августра ҫӑлтӑр ҫуни – кӗр часах килессин палли. *(«Хресчен сасси».)*

**201.** Вуласа тухăр. Пăхăнуллă предложенисене тупса вĕсен пĕлтерĕшне, тĕп членĕпе сказуемăйĕ хăш формăра тăнине палăртăр. Шухăш тăрăх пăхăнуллă предложени тĕп предложение мĕнле ăнлантарать – пĕтĕмĕшлĕн-и, пĕр-пĕр пайне çеç-и? Пăхăнуллă предложенин ыйтăвĕ епле?

1. Уçка тем каласшăн пулнипе Анук кулма чарăнчĕ. *(Н. Мранькка.)* 2. Сулхăн çукран пĕвесем типе-типе ларчĕç. *(А. Артемьев.)* 3. Наталье ним пытармасăр ӳпкелени Кĕтерук чĕрине тиврĕ. 4. Хĕрĕ Муравьев патĕнчен таврăннине Прахăр ура çинче кĕтсе илчĕ. 5. Ашшĕ хăй сăмахĕ çине тăрасса пĕлнипе Натюш килĕшрĕ. 6. Марье Уçка кăмăлсăррине сисрĕ. 7. Хапха умне лав çитсе тăнине пуринчен малтан Марье асăрхарĕ. 8. Ваçли ним шарламасăр ал тытнинчен Микулапа Анук тем сас-хура сиксе тухнине сисрĕç. *(Н. Мранькка.)* 9. Эс ялти тӳре-шарана пăхăнманнишĕн иçниксем умĕнче ман явап тытса лармалла иккен. *(К. Турхан.)*

* *Иçниксем* – Хусан ханствин аякри хуралта тăракан çар çыннийĕсем.

*****📖 Пăхăнуллă предложенисем хăш тĕслĕхре иккĕ?

**202.** Пăхăнуллă хутлă предложенисене синтаксис тишкерĕвĕ тăвăр.

Кустăрмасем кăлтăртатнипе Макар Иванович шухăша путрĕ. Мăнукĕ вара пуçне каçăртнă та мăнаçлăн ларса пырать, лаша хăйне итленĕшĕн савăнмаллипех савăнать. Ĕнтĕ Макар Иванович хăйĕн икĕ хĕрĕ епле ӳснине маннă ĕнтĕ. Мăнукне мĕн те пулин туянса памаллах. Мĕн япала туянсан мĕн пулассине пĕлсе тăмалла. *(Д. Гордеев.)*

## Пайĕсем падеж системине кĕмен аффикссемпе çыхăнакан пăхăнуллă хутлă предложенисем

**203.** Тĕслĕхсене вуласа тухăр. Пăхăнуллă хутлă предложенисен пăхăнуллă пайĕ йышăннă аффикссене сăнăр. Вĕсене морфологи вĕреннĕ чухне мĕнле терминсемпе паллă тунине, епле ят панине аса илĕр.

1. Çĕр сум пули**ччен** çĕр тус пултăр. *(Ват. сăм.)* 2. Ăмăрту пули**ччен** вăхăт нумай та юлмарĕ. 3. Юр кайса пĕти**ччен**ех йывăçсем кăчкă кăларма тытăннă. *(Г. Луч.)* 4. Манăн пыра темскер чăмакки кĕрсе ларнă**н** туйăнчĕ. *(В. Кервен.)* 5. Çирĕм çул каялла, пĕтĕм ял кисренме**лле,** туй кĕрлерĕ Çĕньялта. *(О. Васильева.)* 6. Вырăнĕ шăпах икĕ çын лярма**лăх.** 7. Юрă-кĕвĕ çичĕ асамлă сасран çуралать. Эпир Сашăпа çемье çавăрнă**ранпа** та çичĕ çул иртрĕ. *(Е. Нарпи.)* 8. Хăй ĕçне тĕплĕн те тирпейлĕн туса тăракан Анюта куç умĕнче пулма юратмасть. Ытларах чухне, çын курма**лла** мар, ĕмĕлке пек утса çӳрет. *(А. Мышкина.)* 9. Чăрăш ялан симĕс ларать пулин те йĕпписем вăхăт иртнĕ**çемĕн** саралса тăкăнаççĕ. *(О. Васильева.)*

* 5-мĕш тĕслĕре тата 8-мĕш тĕслĕхĕн юлашки предложенийĕнче чарăну паллисене мĕн тĕллевпе лартнине ăнлантарăр.

➤Пăхăнуллă предложенисене падеж системинче тăман (ятарлă) аффикссем те çыхăнтарма пултараççĕ. Вĕсенчен паллăраххисем – ***-ччен, -серен, -ранпа(-ренпе), -ла(-ле)*** т. ыт. те. Ку аффикссемпе çыхăнакан пăхăнуллă предложенин сказуемăйĕ глаголăн тĕрлĕ сăпатсăр форминчен пулма пултарать – пули-пулми форминчен, инфинитивĕнчен, иртнĕ тата пулас причастийĕсенчен.

Пăхăнуллă предложенин сказуемăйĕ ***-ччен*** аффикслă чухне хутлă пĕрлĕхĕн пайĕсем пĕр-пĕринпе вăхăт, мĕнлелĕх, виçе пĕлтерĕшĕсемпе çыхăнаççĕ: *Хăнасене студентсем* ***ывăç тупанĕ ыратакан пуличченех*** *алă çупса саламларĕç.*

Пăхăнуллă предложенин сказуемăйĕ инфинитивăн ***-серен*** тăтăшлăх форми аффиксĕнчен пулнă чухне хутлă пĕрлĕхĕн пайĕсем

хушшинче вăхăт çыхăнăвĕ палăрать: ***Мăлатук лекмессерен*** *çава сасси вăрман çумне кайса перĕнет.*

Пăхăнуллă предложенин сказуемăйĕ иртнĕ причастин ***-çем(-çемĕн)*** тăсăмлăх форми афиксĕнчен пулнă чухне хутлă пĕрлĕхĕн пайĕсем хушшинче вăхăт е танлаштару çыхăнăвĕ пулать: ***Хĕвел тухнăçем*** *çаранри сывлăм типсе пырать.* ***Касмухха каланăçемĕн*** *пуп кăмăлĕ йывăрланса пычĕ.*

Пăхăнуллă хутлă предложенин пайĕсене çыхăнтаракан ***-ла(-ле)*** аффикс танлаштару пĕлтерĕшлĕ пулать: *Йытă* ***сăнчăрĕ татăласла*** *талпăнать.*

Танлаштару пĕлтерĕшĕ ***-ăн(-ĕн)*** аффиксăн та пур: *Хĕвел çинче ĕçлесе ывăннăран пире* ***кун иртессĕн*** *туйăнмасть.*

Пăхăнуллă хутлă предложенин пайĕсене çыхăнтаракан ***-ранпа(-ренпе)*** аффикс глаголăн иртнĕ причасти форми çумне хушăнать, вăхăта пĕлтерет: ***Пичче кайнăранпа*** *уйăх çитрĕ.*

204. Вуласа тухăр. Пăхăнуллă предложенисене çыхăнтаркан аффикссене тупăр, вĕсем хăш ушкăна кĕнине калăр.

1. Тепĕр çул, салтакран таврăнсанах, ял тĕлĕнмелле туй тăвăпăр. *(А. Ырьят.)* 2. Чăнах та, хĕрарăм çĕклемелли япала мар ку. *(Р. Ярантай.)* 3. Вун икĕ çул çитет паян Иванпа Нина пĕрлешнĕренпе, вун икĕ çул... *(А. Ырьят.)* 4. Оренбург облаçĕн хастарĕсем пĕр чăмăра пуçтарăнма пуçланăранпа çирĕм çул та иртрĕ. *(Н. Смирнова.)* 5. Саккăрччен нумаях та юлман. Планерка пуçланиччен вара ман кирлĕ хутсене хатĕрлесе çитермелле. *(Р. Прокопьева.)* 6. Çакăн хыççăн Лявуç эпĕ тулли лавпа пымассерен пулăшма пуçларĕ. *(Н. Ишентей.)* 7. Аçу вилнĕренпе чуна ахаль те йывăр. Хушăран, чăтма тӳсĕм çитмессĕнех туйăнать. *(Б. Чиндыков.)* 8. Теплица алăкĕсене хупмалла та пĕр форточкине уçă сывлăш

кĕмелĕх тайса хăвармалла («Хресчен сасси») 9. Мĕнле пурăнмалла кунта тепĕр смена вĕçлениччен? (Е. Нарпи.) 10. Хĕрне эпĕ эс Кисловодскран кайиччен лĕхе Пятигорск больницине ăсатрăм. *(Ю. Сворцов.)* 11. Çавра çил çĕкленĕн ялт! сиксе тăчĕ салтак. (Л. Маяксем,) 12. Суд залĕнчен тухсан Иван пирус чĕртсе ярать. Ик хут çеç çăвар туллин сывлать. *(Р. Ярантай.)* 13. Уçă сывлăша кăкăр туллин çăта-çăта пыратăп. *(Ç. Элкер.)*

**205.** Çыхăну аффикс умĕн мĕнле форма тăма пултарнине кăтартса çырăр. Пăхăнуллă предложенин тĕп членĕсене паллă тăвăр.

*1.* Тимĕр шапа хăйне хӳтĕлекен тумĕ айне кĕрсе пытан... ăн çăлăнăçа таçта шалта шырарăм пулас. *(Е. Нарпи.)* 2. Пĕр кунхине арăмĕ, çулсем ирт...çемĕн упăшки пекех хулăнланнă Альтуç, почта ешчĕкĕнчен илсе кĕнĕ хаçатсемпе пĕрле ăна çыру та тыттарчĕ. *(А. Казанов.)* 3. Вăрçă пĕт...ренпе нумай çул иртрĕ. *(В.Элпи.).* 4. Вăрçăра çĕнтернĕренпе утмăл çул çит... ччен пурĕ те икĕ йăх юлать. *(П. Сидоров.)* 5. Улькка та хăйне такам хăмсар...ăн сулăнса кайрĕ, самантлăха куçне хупрĕ. *(А. Казанов.)* 6. Чунăм савăнать манăн. Алурана çĕнĕ вăй хутшăн...ăн туйăнать. *(Уйăп М.)* 7. Эпĕ больицăна кил...ренпе çур уйăх ытла иртсе кайрĕ. *(Ç. Элкер.)* 8. Хырăм çурăлса кай...ччен апатне çи, сăйлан. *(В. Кервен.)* 9. Веркка çырăвĕсене вуланăçемĕн, тăван ен сывлăшĕ кăкăра капланса тул...ăн туйăнать. *(Д. Гордеев.)*

**206.** Çырса илĕр, точкăсем вырăнне глаголăн шухăш тăрăх кирлĕ сăпатсăр формисене лартăр. Хăш сăмахсем тĕп предложение, хăшĕсем пăхăнуллине кĕнине калăр. Пăхăнуллин тĕп членĕсене йĕрсем туртса палăртăр.

1. Садсем пул...лли вырăнта тайга çаплипех юлтăр. 2. Икĕ патшалăх пуçлăхĕ эпир кил...ччен темиçе кун маларах çеç, 1973 çулхи ноябрь вĕçĕнче, Делире тĕл пулса калаçнăччĕ. *(Хв. Уяр.)* 3.

Эпĕ салтакаран таврăн...ччен кĕтме килĕшмĕн-и, Анюк? *(Н. Ишентей.)* 4. Каллех куç умне Кирилловсен пĕлтĕр ял кисрен...лле кĕрлесе irttерне туйĕ тухса тăчĕ. *(О. Васильева.)* 5. Вырăнĕ те шăпах ик çын лар...лăх. *(Е. Нарпи.)* 6. Пӳлĕм алăкĕ хупăн... ччен Никандр тепĕр хут каялла çаврăнса пăхрĕ. *(А. Мышкина.)* 7. Аçу вил...ренпе чуна ахаль те йывăр. Хушăран, чăтма тӳсĕм çитме...ĕнех туйăнать. 8. Тавралăха каç сĕмĕ ним курăн.. лла марлах хупларĕ. *(Б.Чиндыков.)* 9. Хирте ĕçсем пуçлан...чен ман пата час-часах кӳршĕ çыннисем пырса ларатчĕç. *(Ç. Элкер.)* 10. Вăрçă пуçлан... ранпа çул юхăнса кайнă. *(А. Савельев–Сас.)*

**207.** Пайĕсене падеж системине кĕмен аффикссем çыхăнтаркан пăхăнуллă хутлă предложени виççĕ шухăшласа тупса çырăр. Çыхăну мелĕ мĕн иккенне ăнлантарăр.

## Пайĕсене глаголăн деепричасти аффиксĕсемпе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложенисем

**208.** Предложенисем мĕншĕн пăхăнуллă хутлă иккенне ĕнентерĕр, пăхăнуллă предложение тĕп предложенипе çыхăнтаркан аффикссене кăтартăр. Ку аффикссем хăш пуплев пайĕн аффиксĕсем?

*1.* Хĕрарăм, вăрçă кĕрлесе иртсен те, мăшăрне кĕтсе илес шанчăкне çухатман. *(Р. Власова.)* 2. Тепĕр уйăх иртсен Иван чăнах та телеграмма илчĕ. *(А. Ырьят.)* 3. ÇуркуннеАтăл пăртыткăнĕнченхăтăлса çитсенех туристсен теплохочĕ Шупашкартан Аçтăрханалла çул тытрĕ. *(А. Аслут.)* 4. Вăхăт çитсен хамăн билетпа хамах этем ĕретлĕ килсе куратăп. 5. Вĕсене, штрафĕ пысăк пулсан пулăшмалла мар-ши? *(Р. Прокопьева.)* 6. Ирхине чӳречерен çуллахи чăрсăр хĕвел пайăркисем кĕрсен тин куçне вăйсăррăн уçрĕ Акуш. *(Ю. Смирнова.)*

- Пăхăнуллă хутлă предложенин пайĕсене çыхăнтаркан аффикссем шутне глаголăн ***-сан (-сен, -сассăн, -сессĕн)*** деепричасти аффиксĕсем çыхăнтарма пултараççĕ.

Глаголăн ***-сан (-сен, -сассăн, -сессĕн)*** деепричасти аффиксне йышăннă пăхăнуллă предложени вăхăт, услови, хирĕçлев пĕлтерĕшлĕ пулать: ***Çемен станувуй патĕнчен кайсанах*** *Натюш кил хушшинчен тухрĕ те хапха умĕнче чарăнса сивĕ те уçă сывлăша ӳпке тулли сывларĕ. Ир те каç* ***сана курсассăн*** *Ăш çунать кăварланса.*

Хирĕçлеве палăртмалла чухне ***-сан(-сен)*** аффикслă деепричасти çумне ***та(те)*** татăк хушăнать: *Улмуççи чечекĕ тăкăнса пĕтсен те Таврана илемлĕх кӳрĕç улмасем...*

**209.** Çырăр. Тĕп членсене палăртăр, пăхăнуллă тата тĕп предложенисене цифрăсемпе кăтартăр. Пăхăнуллă предложенин пĕлтерĕшне калăр, çыхăну хатĕрĕсене тупăр. Пăхăнуллă предложение тĕп предложенипе çыхăнтаркан аффикссенчен хăшĕсене падеж аффиксĕ темелле, хăшĕсене деепричасти аффиксĕсен шутне кĕртмелле?

1. Çĕр-шыв шурă пĕркенчĕкпе витĕнсен тилĕ тытас ĕмĕт мана канăç пами пулчĕ. 2. Тилĕ тытасси çăмăл ĕç маррине часах пĕлтĕм. 3. Вар ыратсан çиме тăхта; куç пăсалсан шăлма ан васка. (Ч. х. с.) 4. Çырма-çатра çулсерен сарăлса пынипе çĕр ишĕлсе юрăхсăра тухать. 5. Юр тарăнланса çитсен пăшисем пысăк чăтлăха пытанаççĕ. 6. Июль кунĕсем тӳлек те вĕри тăнăран ыраш хăвăрт саралать. *(В. Алентей.)* 7. Юнĕ вĕриленсе чупнипе хĕр пит-куçĕ вутăн-хĕмĕн çунма пуçларĕ. *(Н. Мранькка.)* 8. Туй кайсассăн тахçанччен янăрарĕ сĕм вăрман. *(К. Иванов.)* 9. Сивĕ хĕл çитсен те хырпа чăрăш хăйсен капăр тумне пăрахмаççĕ. 10. Лартрăм эп улмуççине Улми пулмасассăн та. *(Ю. Петров-Вирьял.)*

**210.** *-Сан(-сен)* деепричасти аффиксĕпе çыхăннă пăхăнуллă предложенисем мĕнле пĕлтерĕшлĕ пулнине ăнлантарăр.

1. Халăх тăрăшсан вăхăтра акатăн, вăхăтра выратăн, вăйлă тырă-пул пуçтарса илетĕн. *(Н. Орлов.)* 2. Тĕрĕслев иртсе кайсан студентсем Унтрие каллех чĕнсе кăлараççĕ. *(Ç. Элкер.)* 3. Пĕр касă кăна çумăр çуса иртсен те ăш-чик уçăлса каять. *(М. Илпек.)* 4. Ачи часах вăрансан Анук Луккарье патне заклада кайса илме шут турĕ. 5. *Енчен те Мошковăн хăват çитсен вăл Миххана та çыхса пăрахăччĕ те хăй умĕнче упалентерĕччĕ. (Н. Мранькка)* 6. Усрав шывĕ пăртан тасалсан эпĕ тăлăх хура илсе тухса шыва кăкарса пăхрăм. *(М. Кипек.)* 7. Хĕрарăмсем темĕн чул шавласан та ар çынсем урама тухмарĕç. (А. Талвир.)

* Паллă тунă предложенире пăхăнуллă пая аффикссăр пуçне тата мĕн çыхăнтарать?

### Шута илĕр

Темиçе сăмахлă хисеп ячĕ *пĕрре* сăмахпа пĕтсен ***-мĕш*** йĕрке аффиксĕ умĕн пĕр [р] каламалла: *вун пĕрмĕш, çирĕм пĕрмĕш, вăтăр пĕрмĕш, ал(ă) пĕрмĕш, çĕр пĕрмĕш* т. ыт. те.

**211.** Икĕ хутсăр предложенирен хутлă предложени тăвăр.

Тĕслĕх: *Хĕвел тухрĕ. Ял халăхĕ ĕçе кайрĕ. – Хĕвел тухсан ял халăхĕ ĕçе кайрĕ. Хĕвел тухиччен ял халăхĕ ĕçе кайрĕ.*

1. Тул çутăлчĕ. Ял кĕтĕвĕ улăха анчĕ. 2. Анне ĕçе кайрĕ. Эпĕ уроксене туса туса пĕтертĕм. 3. Эпĕ пахчана кĕтĕм. Шăпчăк юрри тыткăна илчĕ. 4. Вăштăр кăна çил вĕрет. Хыр-чăрăш кашлать, лапсака турачĕсем çинчен лаплатса юр тăкăнать. 5. Çуркунне хĕвел хĕртсе пăхать. Тулта ăшă. *(И. Яковлев.)*

212. Хутлă предложенирен хутсăр предложенисем туса çырăр.

Тĕслĕх: *Çĕр-шыв типсен Ахтупай яла чылайлăхах таврăнчĕ. – Çĕр-шыв типрĕ. Ахтупай яла чылайлăхах таврăнчĕ.*

1. Çумăр çусан калчасем вăйлă ĕшереççĕ. 2. Икĕ кун иртсен эпир экскурсирен таврăнтăмăр. 3. Сивĕ хĕл çитсен те хырпа чăрăш хăйсен капăр тумне пăрахмаççĕ. 4. Каникул пуçлансан эпир Хусан курма каятпăр. 5. Кун каç еннелле сулăнсан хĕвеле пĕр пĕлĕт татăкĕ хупларĕ.

213. Вуласа тухăр. Пайĕсене деепричасти аффиксĕпе çыхăнтаркан пăхăнуллă хутлă предложенисене тупăр. Пăхăнуллă предложенисем мĕнле пĕлтерĕшлĕ пулнине, мĕнле член ушкăнне кĕнине ăнлантарăр.

1. Кашни пасар пулмассерен тислĕк пухакан бригада кĕреçесемпе, шăпăрсемпе тухса ĕçе тытăнатчĕ. *(М. Трубина.)* 2. Кăшт вăхăт иртсен алăк уçăлни илтĕнчĕ. *(В. Тимаков.)* 3. Тул çутăласпа Якку куçĕ яр уçăлчĕ. *(И. Тенюшев.)* 4. Олимп çинчи чаплă вăйăсенче Геродот авалхи халапсене вулама тытăнсанах халăх шавлама чарăннă та сас кăлармасăр тимленĕ. *(С. Михайлов.)* 5. Марине, пĕчĕк чухнехилле, амăшĕ алăк урати урлă каçсанах ун мăйĕнчен уртăнчĕ. 6. Пурнăç йĕрки-тытăмĕ улшăнса çĕнĕ самана пуçланнăранпа çул хыççăн çул иртрĕ. *(В. Таракат.)*

*5-мĕш тĕслĕхре *пĕчĕк чухнехилле* сăмахсене запятойсемпе уйрăмлатни мĕнпе çыхăннă?

## Пайĕсене глаголăн причасти афиксĕпе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложенисем

**214.** Пăхăнуллă предложенин сказуемăйĕ мĕнле формăра тăнине асăрхăр. Пăхăнуллă предложени тĕп предложение пĕтĕмĕшлĕн ăнлантарать-и, унăн уйрăм сăмахĕсене çеç-и?

*1.* Евчĕ пынă сас-хура Ананий хăлхине те çитнĕ ĕнтĕ. 2. Инкек-синкек пулнă вырăна тишкернĕ чух пунеттейсем кирлĕ. 3. Эпир ларакан пӳлĕме яштака пӳ-силлĕ Ивана, шкулта пĕрле вĕреннĕ тусăма, илсе кĕчĕç. 4. Оля Акрама, Иван кăмăлламан çынна, качча тухать. *(Р. Ярантай.)* 5. Иртнĕ вăхăтăм – никам хаклайми тата ытарайми пурлăхăм! Ватăлма вăхăтăм та, тивĕçĕм те çук! *(Н. Ларионов.)* 6. Валентинпа Вероника пурăнакан пӳлĕм. *(Р. Прокопьева.*) 7. Вăрманта, яланах, пушар тухас хăрушлăх пысăк. («Хресчен сасси».) 8. Атте-анне парнеленĕ сăн-питрен, пӳ-сирен пахараххи мĕн пултăр?! (О. Австрийская.) 9. Тул çутăлнă-çутăлман чăрмантарса çӳретĕп. *(Р. Ярантай.)* 10. Çулталăкран Оренбург енне Чăваш наци конгресĕн президенчĕ Г.Н. Архипов ертсе пыракан ушкăн пырса çитсеччĕ. *(Н. Смирнова.)*

➤ Пăхăнуллă предложенисем тĕп предложенипе глаголăн причасти аффиксĕсемпе çыхăнма пултараççĕ. Çав аффикссенчен чи анлă сарăлнисем çаксем: ирнĕ пичасти аффиксĕ ***-нă(-нĕ),*** хальхи причасти аффиксĕ -***акан(-екен),*** пулас причасти аффиксĕ ***-ас(-ес).*** Сайра хутра тĕл пулакан аффикссем шутне пултаракан причастин ***-и*** аффиксĕ кĕрет. Анлă сарăлнă аффикспа çыхăнакан пăхăнуллă предложенисем, тĕпрен илсен, япала паллине пĕлтереççĕ определени ушкăнне кĕреççĕ: *Çĕмĕрт чечек çур**нă**(1) вăхăтра çанталăк сивĕ плать(2). Çамрăксем пухăн**акан**(1) вырăна паян аслисем те пычĕç(2). Çĕмĕрт чечек çурас(1) вăхăт çитсе пырать(2).*

Глаголăн пултаракан причасти аффиксĕпе çыхăнакан пăхăнуллă предложени япалан, ĕçĕн, пĕр-пĕр паллăн паллине е предикацилĕхе пĕлтерет: *Кукка салтакран(1) çĕр çĕклейми(2) салам*

*ярать(1). Куккан салтакран янă саламĕ(1) çĕр çĕклейми(2) пысăк. Кукка саламĕн пысăкăшĕ(1) <u>çĕр</u> <u>çĕклейми</u>(2).*

**215.** Нумай точка вырăнне глаголăн иртнĕ причасти аффиксне лартса çырăр. Пăхăнуллă предложенипе тĕп предложенисене схема ӳкерсе кăтартăр.

1.Эп пырса кĕ... вăхăтра карчăк пӳртрен лаçа, лаçран пӳрте кускалатчĕ. 2. Тепĕр кун кăнтăрла сулахай çырана тăрри çарала пуçла... сăрт ӳссе ларчĕ. *(Хв. Уяр.)* 3. Хветĕр Уяр, вилес умĕн, хăй çурал... Сухари Матак шкулĕнче музей уçса хăварчĕ. *(В. Симаков.)* 4. Элекçи кăшт мĕнтерехчĕ вăл. Килтисем выльăхпа аппалан... хушăра ĕне пуçне çĕклесе тухса тарма та ĕлкĕрнĕ. *(А. Угольников.)* 5. Сусанна çывăр... пӳлĕме Иван балконран кĕрет. 6. Тул çутăл...-çутăлма... чăрмантарса çӳретĕп. *(Р. Ярантай.)* 7. Хĕлип чĕр... касă вара – кукăр-макăр. *(Н. Ишентей.)* 8. Чĕрене йывăр кăмăл пусса тă... вăхăтра манăн сан пата çыру çырма алă çĕкленмерĕ...*(Ç. Элкер.)* 9. Шоссен икĕ енĕпе те, ал лаппи хулăнăш тусан пус... урапа çулĕ тăсăлать. *(А. Савельев–Сас.)*

**216.** Нумай точка вырăнне глаголăн хальхи причастийĕн аффиксне лартса çырăр. Хăш предложени пăхăнулли, хăшĕ тĕп предложени пулнине схемăласа кăтартăр. Пăхăнуллă предлоенин çыхăну мелĕ мĕн?

*1.* Эс пурăн... урама часах шыраса тупрăм. *(Н. Ишентей.)* 2. Апла, эпир шăп кăна ирĕкри пăлансем ирт... çул çинче-мĕн. 3. Çывăхрах, асат хуç... лиçвансемпе хурăнсен, çӳçесемпе çирĕксен кати курăнать. *(Хв. Уяр.).* 4. Ахăртнех, манра тĕлĕрекен туйăмсене эсĕ çырупа яр... кăмăл ăшши вăратрĕ-тĕр. 5. Кĕрхи йĕпхӳ пĕрĕх... урама самаях шавлă ушкăнпа пĕрле тухрăм. 6. Эпир транспорт чарăн... тĕлелле утрăмăр. 7. Пĕррехинче эпир Сашăпа хамăр вĕрен... корпусран общежитие çити çуран таврăнтăмăр.*(Е. Нарпи.)* 8. Анне

пĕрин хыççăн теприне тăва... ĕçе, паллах, пăхмасăр пĕлсе тăратăп. *(В. Антонов.)* 9. Пурăнмаллах манăн. Пурнăçра пуиншĕн те усăллă тата хам тума пултар... ĕçе çеç вĕренмелле. *(Ç. Элкер.)*

**217.** Нумай точка вырăнне глаголăн пулас причасти аффиксне лартса çырăр. Пăхăнуллă предложенин тĕп членĕсене аялтан тивĕçлĕ йĕрсем туртса пллă тăвăр.

1. Вăрçă чарăннă теççĕ. Салтаксем таврăн... кунсене кĕтеççĕ. *(А. Угольников.)* 2. Шăпах кустăрмасем çĕре сĕртĕн... тĕлте çынсем пулнă иккен. 3. Акă юлашкинчен, тĕнче хăçан пĕт... кунне те, каçне те каласа хучĕç. *(Уйăп М.)* 4. Çу вĕçлен... кунсем çывхарса пыраççĕ. («Хресчен сасси») 5. Эпир пĕрлеш... кун çеç каç енне çумăр пат! пат! çĕре нӳретсе кайрĕ. *(О. Васильева.)* 6. Константин Кузьмич, Ангелина Эдуардовна, Николай Константинович тата Борис – питĕ шăрăх çанталăкра вăйлă çил-тăвăл илсе кил... хура пĕлĕт пекех курăнчĕç. *(В. Кервен.)* 7. Çитменнине, эпĕ ларса ка... поезд перрон çумĕнчех тăрать иккен. *(Д. Гордеев.)*

- 3-мĕш предложенин тытăмне ăнлантарăр, схемин ӳкерĕр.

🕮 **218.** Текста вуласа тухăр та пăхăнуллă хутлă предложение тупăр. Шухăшласа пăхăр: тупнă предложеннн пăхăнуллă пайĕ тĕп пайĕпе мĕнле мелпе çыхăнать?

«Курăс кӳллине çитсе курар-ха», – терĕ мана пĕррехинче атте.

Тухрăмăр вĕтлĕхе. Çĕрсе пĕтеймен тункатасем лараççĕ. Çăкасеннисенчен хунав йăвă шăтса тухнă. Тахçан кунта хутăш вăрман кашласа ларнă ĕнтĕ. Халь юман, чăрăш, хыр пачах курăнмаççĕ.

Умра уçă вырăн курăнса кайрĕ. Пăхатăп та – пысăк мар кӳлĕ. Унта шыв çийĕ палăрми пĕр ушкăн кайăк кăвакал хĕвĕшет.

– Эх, кунта йĕтрепе авăрланă пăшалпа персен пĕр пăт аш тума пулать, – терĕм аттене.

– Шăркалчăсем кусем. Вĕсене те çиеççĕ-ха, анчах тивмелле мар – тĕнчене илем кӳччĕр. *(В. Кервен.)*

*◆ *Йĕтрепе авăрланă пăшалтан пер* тенĕ пулсан мĕнле йăнăш çинчен калаçмалла? Ку йăнăш мĕн витĕмĕпе пулать?

**219.** Текстра пайĕсене глаголăн причасти аффиксĕпе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложенисене тупăр, аффиксĕсене кăтартăр.

Çĕнĕ çул каникулĕнче пирĕн киле шкул директорĕ Е.Л. Петрова пырса кĕчĕ. Мана шкулта ĕçлеме ыйтрĕ. Пĕрремĕш классен вĕрентекенĕ качча кайнă иккен.

Çапла майпа эпĕ хĕрĕх ачаллă пĕрремĕш класа вĕрентме тытăнтăм. Çитĕнсе çитменскер йывăр та яваплă ĕçе кӳлĕнтĕм. Турă парнеленĕ пултарулăх манра пытанса пурăннă курăнать.

Иртнĕ вăхăтăм – никам хаклайми тата ытарайми харпăр пурлăхăм! Ватăлма вăхăтăм та, тивĕçĕм те çук! *(Н. Ларионов.)*

**220.** Вуласа тухăр. Пăхăнуллă хутлă предложенисене тупăр. Вĕсен пайĕсене мĕн çыхăнтарать? Пăхăнуллă пай тĕппине мĕнле ăнлантарать: пĕтĕмĕшлĕн-и, пĕр-пĕр пайне кăна-и?

Шăп та шай çав вăхăтра, эпир тавлашнă пӳлĕме милици полковникĕ пырса тухать. Сăмахсăрах мана хăй пĕлĕмне илсе каять. Иванпа хăй пуплет, ăнлантару хучĕ çыртарать. Пульницăна та шăнкăравлать. Шел, профессор халь те тăна кĕреймен-ха.

Эпир вара инкек-синкек пулнă вырăна тĕпчеме тухса каятпăр. Çак ĕçе милици полковникĕ хăй те хутшăнать.

Юстици çурчĕ ту айккинче ларать. Çырма хĕррипе, асфальт сарнă çул кукăр-макăр тăсăлса выртать.

Иван, латсăр пăшăрханса ӳкнĕскер, кунта та тытăнчăклăн калаçать. Судран тухсан хăш сукмакпа утнине, ăçта чарăнса тăнине, çырмана ăçтан чупса аннине – йăлтах тĕллесе кăтартать. Операци ушкăнĕ Иван кăтартнă вырăна питĕ тĕплĕн тĕпчет. Сусаннăпа профессор тĕккелешнĕ вырăна та фотоаппаратпа ӳкере-ӳкере илеççĕ.

Профессор тăнă вырăнта шĕвĕр пуçлă пушмак кĕллисем çĕре шăтара-шăтара кĕнĕ. Калаçтарса-астарса тăнă пулмалла Сусанна профессора. Çав вăхăтра хăй питĕ вĕчĕрхеннĕ ахăр – туй качаки пек сиккеленĕ-тăпăртатнă.

Профессор тăнă вырăнта Иван пушмакĕн йĕрĕсем курăнмарĕç. Шар курнă çын патне каччă пачах урăх вырăнтан чупса аннă. Апла, профессор инкекĕшĕн Иван айăплă мар. *(Р. Ярантай.)*

* Сирĕн шухăшăрпа, пăхăнуллă предложенисем пурте тенĕ пек пĕр мелпе çыхăнни мĕнрен килет?

* *Шăп та шай çав вăхăтра, эпир тавлашнă пӳлĕме милици полковникĕ пырса тухать* тата *Çырма хĕррипе, асфальт сарнă çул кукăр-макăр тăсăлса выртать* предложенисенче запятой мĕншĕн лартнине ăнлантарăр.

## Пайĕсене вырĕнĕ-йĕркипе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложенисем

221. Пăхăнуллă предложенисем мĕнле те пулин союз, хыç сăмах еаффикс йышăннипе йышăнманнине сăнăр.

1. Левентее ăсатрĕç. Ачи-пăчи пĕр пӳрт тулли юлчĕ. *(А. Угольников.)* 2. Ма вăрттăн вырăнта, çынсем çук çĕрте, курнăçланмалла вĕсен? 3. Иван – вăй питти каччă. 4. Пур пĕрех манăн телейлĕ кун-çул пулмасть 5. Хĕрарăм тав тăвать те чĕрĕ чечек çыххине кăкăр тулли медаль çанă мучие тыттарать. *(Р. Ярантай.)* 6.

Эпĕ, хамăн чун сисĕмне итлесе, салтакран килнĕ чух сана пур пĕрех чечек çыххипе кĕтсе илĕп. 7. Мĕн пур асапне те, телейне те пĕрле чăтмалла пулнă та... 8. Эпир, çав яваланчăк хĕрĕн мĕн пур курнăçланăвне пĕлсе- курса тăраканскерсем, хамăра та хĕн кăтартасса кĕтмерĕмĕр. *(Н. Ишентей.)* 9. Мĕн чухлĕ вăй питти ар йышĕ вăхăтсăр пĕтет?! *(Ç. Элкер.)* 10. Эпир унта пур пĕрех общежитире çеç пурăнатпăр вĕт. *(О. Васильева.)*

➤ Пăхăнуллă предложенисем тĕп предложенин сăмахĕсемпе нимле кĕрет çыхăну мелĕ йышăнмасăр та çыхăнма пултараççĕ. Кун пек чухне çыхăну мелĕ тесе пăхăнуллă предложенин вырăнĕ-йĕркине калаççĕ. Пăхăнуллă предложенин сказуемăйĕ, тĕпрен илсен, паллă ятĕнчен, япала ятĕнчен е хисеп ятĕнчен пулать. Пăхăнуллă предложени, тĕпрен илсен, япала паллине пĕлтерет, определени ушкăнне кĕрет: *Çанталăк сивĕ(1) вăхăтра эпир урама ăшăрах тăхăнса тухатпăр(2). Намăсĕ çук(1) çынна сăмахпа каласа вăтантараймăн(2). Килтен тухса кайнă чух(1) мĕн пур(2) кĕнекене çӳлĕк çине тирпейлесе вырнаçтартăм(1). Каччă(1) кнопкисем перламутр (2) хут купăса тӳрех аллине илчĕ(1).*

Ĕçĕн е паллăн паллине пĕлтерсе обстоятельство ушкăнне, предикацилĕхе пĕлтерсе сказуемăй ушкăнне кĕрекен пăхăнуллă предложнисем те пур: Уçă сывлăша(1) кăкăр тулли(2) сывласа илтĕм (1). *Куккан çемйинче ача-пăча(1) пӳрт тулли(2).*

**222.** Текст сыпăкĕсене вуласа тухăр. Пайĕсене вырĕнĕ-йĕркипе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложенисене тупăр. Вĕсен пăхăнуллă пайĕсем мĕн енчен пĕрешкел, мĕн енчен уйрăм?

**1**

Темиçе купăсçă ялта. Библиотекăн хăйĕн те çĕнĕ баян пур. Кĕчĕ те икĕ тĕреклĕ салтак – клуба илем кĕрсе кайрĕ. Иккĕшĕ те хитре,

вăйлă, сарлака хул пуççиллĕ. Ытарми каччăсем. Салтаксем çамрăксене алă парса тухрĕç.

– Макар. Хĕсметре пĕрле пулнă тусăм, – паллаштарчĕ юлташĕпе Сергей. – тăванран та тăван, çывăхран та çывăх пĕртен пĕр тус.

Хаваслă кулă, ăшă шăкăл-шăкăл калаçу клуб тулли. Хаваслăх, савăнăç – çурт тулли. *(А. Павловская.)*

* *Кĕчĕ те икĕ тĕреклĕ салтак – клуба илем кĕрсе кайрĕ* предложени мĕншĕн хутлă? Хутлисен хăш ушкăнне кĕрет? Мĕншĕн?

**2**

– Макар, килте-и эс? Кирек ăçта кайсан та, кирек кампа калаçсан та – пуç тулли шухăш. Мĕнле пурăнса пĕтермелле ку пурнăçа? Ачасене мĕнле ӳстерсе çын тумалла?

Тĕпелте тем ĕçлетчĕ Макар – Сахрун сассине илтсе тухрĕ.

– Килех, ирт, лар! Ытла ан хуçăл-ха. Ахлатнипе Юля чĕрĕлсе тăрас çук. Хывăн, лар. Кукăль çийĕпĕр. Вĕçелис кукăль пĕçернĕ.

– Анас çук пыртан кукăлĕ те: пыр куççульпе тулчĕ. Макар, кунĕн-çĕрĕн куç тулли ачасем çинчен шухăшлатăп. Амăшĕшĕн пенси килет-ха ĕнтĕ. Ĕçлемесĕр мĕнле пурăнăн? Ара, хĕрĕхри çын, ĕçлемесĕр мĕнле пурăнăп-ха эп? Хуçалăх аптрамасть-ха. Пахча тулли вĕлле. Пуçăм усăнчĕ. Тем тăва пĕлес? *(А. Павловская.)*

* Пăхăнуллă хутлă предложенисен тытăмне ăнлантарăр, схемисене ӳкерĕр.

* *Анас çук пыртан кукăлĕ те: пыр куççульпе тулчĕ* предложени тытăмĕпе мĕнле – схема ӳкерсе ăнлантарăр.

* *Куç тулли ачасем* синтагмăн пăхăнуллă пайĕ мĕне пĕлтерет: *нумай* тенине-и, *хитре, илемлĕ* тенине-и?

**3**

– Хамăр ял хĕрĕсемпе паллашаймарăм-ха.

– Чӑнах та... Тепре тӗл пулма сӑлтав пулчӗ те ак. Унччен, кӑмӑлна килнине тупса хурӑп. Пирӗн ял ҫамрӑкӗсем ытти ялсенни пек мар – тӳрех хулана тухса вӗҫмеҫҫӗ. Кашни каҫах клуб тулли пуҫтарӑнатпӑр. Ӑна хӑвах куратӑн... *(Д. Гордеев.)*

* *Тепре тӗл пулма сӑлтав пулчӗ те ак* предложенин темӑпа рема ушкӑнӗсене, шухӑш тӗшшине тупӑр. Шухӑш тӗшшине уйӑракан чӗлхе мелӗсене кӑтартӑр.

* *Пирӗн ял ҫамрӑкӗсем ытти ялсенни пек мар – тӳрех хулана тухса вӗҫмеҫҫӗ* предложенире пӗр пуплев пайне тепӗр пуплев пайӗ вырӑнне, сӑмаха куҫӑмлӑ пӗлтерӗшпе каланине тупӑр.

**223.** Пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложенисен тытӑмне ӑнлантарӑр, схемисене кӑтартӑр. Япала паллине пӗлтермен пӑхӑнуллӑ предложенисем ӑҫта-ӑҫта тӗл пулаҫҫӗ? Япала паллине пӗлтерменни мӗнрен паллӑ?

1. Турӑ пире хӑех енчӗк тулли укҫа пӑрахса пачӗ-и? *(Е. Нарпи.)* 2. Ытти мӗн пур хӗр ачанни пекех, Наташӑн та, паллах, ҫав тери телейлӗ пулас килнӗ. *(Б. Чиндыков.)* 3. Ҫумӑр ҫук та ҫук. Эрне хыҫҫӑн эрне иртет. Чи ҫумӑр кирлӗ кунсем иртсе пыраҫҫӗ. *(Уйӑп М.)* 4. Мӗн пур хӗре хӑй сӑмахне тытман пӗр чунсӑр хӗрпе танлаштарма юрамасть. 5. Ну, упӑшкам чӑнах та усал пулнӑ манӑн. Ӑна хупман пулсан та пурӗ пӗр унпа пурӑнма май ҫукчӗ. *(Ҫ. Элкер.)* 6. Пур пӗрех – Эдгар хӑйӗн ашшӗпе амӑшне юрататъ. *(А. Мышкина.)* 7. Ку вара – вӑй питти ҫын. *(В. Кервен.)*

### *Пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложенисене вӗреннине аса илетпӗр*

**224.** Пӑхӑнуллӑ тата тӗп предложенисене цифрӑсемпе кӑтартӑр, пӑхӑнуллин тӗп членӗсене палӑртӑр, вӗсем мӗнле пуплев пайӗсенчен пулнине уҫса парӑр.

1. Çанталăк янкăр уяр тăнăран тап-таса сенкер тӳпере сайра шурă çӳхе пĕлĕт татăккисем вăраххăн шăвăнса иртеççĕ. *(М. Уйăп.)* 2. Кăнтăрла иртсен кĕркуннехи пек вĕтĕ çумăр пĕрĕхме пуçларĕ. Вăл сехете яхăн çапла чашлаттарса тăрсан тĕнчене пĕр уçлăх хăвармасăр витсе хунă пĕлĕтсем хыçĕпе пирвайхи аслати кĕрлесе иртрĕ. *(М. Кипек.)* 3. Сăмах хам çинчен пынине тавçăрнипе чĕре яланхинчен икĕ хут хăвăртрах тапрĕ. 4. Хурăн çулçи сарăлма пуçлани çĕр улми лартас вăхăт çитнине пĕлтерет. *(Г. Орлов.)* 5. Юр хăвăрт ирĕлнĕрен çуркунне ир пуçланчĕ. *(А. Артемьев.)* 6. Шыв çине уйăх çути ӳксен çуйăн хăй йăвинчен тухать имĕш. *(А. Ĕсхĕл.)* 7. Çеçпĕл хăйне профессор ăшшăн сăнанине асăрхаманçи пулчĕ. *(П. Чичканов.)* 8. Ахтупай хăйне мăрса чĕнтерессе кĕтсе тăмарĕ, хăех кайма шут турĕ. *(К. Турхан.)*

## Асра тытăр

Анлă ят майлашăвĕн пăхăнакан пайĕнче паллă ячĕпе хисеп ячĕ пулсан – хисеп ячĕ паллă ячĕ умĕнче тăмалла: *пĕр лайăх çын, икĕ шурă тутăр, виçĕ лутра йывăç.* Ку йĕрке паллă ячĕ вырăнне япала ячĕ каласан та сыхланать: *вунă тимĕр кĕреçе, пилĕк чул çурт.*

**225.** Тĕслĕхсене пăхăнуллă предложени тĕп предложенипе епле çыхăннине кура ушкăнлăр, хăш предложени хăш ушкăна кĕнине таблицăра кăтартăр.

1. Çумăр иртрĕ пулсан та çанталăк çаплах шăмарса тăрать. 2. Кируксем çул çинче пынă чухне каç пулчĕ. 3. Кирук пӳрте кĕрсенех ăна амăшĕ палласа илчĕ. *(В. Митта.)* 4. Аттепе анне ывăлĕ мĕнле сусăрланнине курсан малтан чăн та хытă кулянчĕç, пăшăрханчĕç. *(Ç. Элкер.)* 5. Çурла уйăхĕнче, кăнтăрла иртсен кĕрхи пек. *(«Хыпар».)* 6. Анюк чĕнмерĕ. Упăшки чĕрре кĕме сăлтав çуккипе

пăрăнса утрĕ. *(В. Тараватˇ.)* 7. Якур лав еннелле утрĕ, арăмĕ юр çине кĕрĕслетсе ӳкнине курмарĕ. 8. Урхамах куçран çухалсан Анук кил хушшине кĕресшĕнччĕ – Кĕтерука курнипе чарăнса тăчĕ. 9. Уйăх çути пӳрт ăш-чиккине çутатнипе, унта мĕн пуррипе çуккине лампа çутмасăрах сăнама пулать. *(Н. Мранькка.)* 10. Ачасене лагерте интереслĕ пултăр тесе темĕн те шухăшласа кăларма лекет пире. *(Е. Нарпи.)* 11. Çанталăк типĕ çул пыл хурчĕ валли чечексенче нектар пухăнаймасть. («Хресчен сасси»)

| Пăхăнуллă хутлă предложени ушкăнĕсем | Предложени номерĕсем |
|---|---|
| Союзлă пăхăнуллă хутлă предложенисем | |
| Союзла сăмахлă пăхăнуллă хутлă предложенисем | |
| Хыç сăмахлă пăхăнуллă хутлă предложенисем | |
| Пайĕсене аффикссемпе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложенисем | |
| Пайĕсене вырăнĕ-йĕркипе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложенисем | |

* Словарьсемпе усă курса *амаланать* сăмахăн пĕлтерĕшне тупăр, синонимĕсене кăтартăр.

**226.** Çак союзсăр хутлă предложенисенчен пăхăнуллă хутлă предложенисем туса çырăр.

Тĕслĕх: *Тӳрех куç умне пулчĕ: ял сăн-сăпачĕ юлашки çулсенче палăрмаллах улшăннă. – Ял сăн-сăпачĕ юлашки çулсенче палăрмаллах улшăнни тӳрех куç умне пулчĕ.*

1. Пӳрт-çуртсем пушанса юлчĕç, шуршăлсем иккĕмĕш кун ĕнтĕ ыраш выраççĕ. *(М. Юхма.)* 2. Уççăнах илтĕнет: çĕрте выртакан

типĕ çулçă çине хыр йĕппи ӳкет. *(М. Кипек.)* 3. Машинине чарнă водитель газ пачĕ – грузовик хăвăрттăн тапранчĕ, хăй çулĕпе малалла вĕçтерчĕ. *(Л. Агаков.)* 4. Кашкăрпа тиллĕн кĕрĕкĕсем йăлтах çурăлса-çĕтĕлсе пĕтнĕ; вĕсем çăм тăкаççĕ. *(Г. Орлов.)*

**227.** Вулăр. Пăхăнуллă предложенисен вырăнне улăштарма май пуррипе çуккине ăнлантарăр.

1. 1. Тиман тăрăшнипех пирĕн шкулта çулăмпа кĕрешекенсен отрячĕ йĕркеленчĕ. 2. Çын утăм ярса пусмассерен ун ури айĕнче темскер шатăртатать. *(К. Турхан.)* 3. Сухал тухиччен сухана тухакан сакăр вунна çитнĕ. *(Ват. сăм.)* 4. Çултан чылай пăрăнса кĕмелле пулсан та темиçе юлан ут Тукая хапха тĕлне çитиччене ăсатрĕ. *(К. Турхан.)* 5. Çуркунне çитсессĕн ун-чĕрем çĕкленчĕ. *(Ю. Петров-Вирьял.)* 6. Вăштăр кăна çил вĕрнипе хыр-чăрăш кашлать. (М. Кипек.) 7. Юр кайса пĕтиччене йывăçсем кăчкă кăларма тытăннă. *(Г. Орлов.)* 8. Хама тăруках сывлăш пырса çапнипе эпĕ чутах сарай тăрринчен персе анаттăм. *(Л. Агаков.)*

**228.** Вулăр. Пăхăнуллă предложенисене тупăр та калăр: вĕсем тĕп предложение пĕтĕмĕшлĕн ăнлантараççĕ-и е уйрăм сăмахĕсене кăна-и? Çыхăну хатĕрĕ мĕн?

2. 1. Тукай Хусана кайма хатĕрленнине пĕлсессĕн чи малтан ун тарçисемпе дружинникĕсем хĕпĕртесе ӳкеççĕ. 2. Ахтупай каялла килнĕшĕн мăрса арăмĕпе Нухрат çеç мар, тарçăсем те чунтан савăнчĕç. *(К. Турхан.)* 3. Каç ĕнтрĕкĕ çапрĕ пулин те Илемпи темшĕн çывăрасшăн мар. 4. Çерçисем мана темле усал çын тесе шутлаççĕ пуль ĕнтĕ, мĕншĕн тесессĕн эпĕ мĕн тунине ăнланаймаççĕ вĕт-ха вĕсем. 5. Эпĕ ыйхăран вăранса картишне тухнă тĕле вĕлле умĕнче икĕ шăнкăрч ларать. 6. Пĕррехинче Вĕрене вăйĕ пĕтсе çитнипе тĕлĕрсе кайнă. *(О. Туркай.)* 7. Икĕ Пăла хушшинчи çур

пилĕке тутар арăмĕсем вырса панă хыççăн пирĕн хирти ĕç пĕтрĕ. 8. Йĕпреç çулĕ çинче Ухике тĕл пулнăранпа атте пĕрмаях ун пирки калаçать. *(А. Талвир.)* 9. Утăм ярса пусмассерен урана темскер çыхланать. Такăнса ӳкетĕн те сиксе тăрса татах малалла утатăн. Тем чул утсан та çул вĕçленессĕн туйăнмасть.

229. Вулăр. Пăхăнуллă предложенисене тупăр, вĕсем хăш сăмахсене ăнлантарнине, ăçта тăнине (тĕп предложени умĕн, варринче е хыççăн) кăтартăр.

Урамра килĕсене таврăнакан сунарçăсемпе ĕçрен килекен ытти çынсем те курăнми пулчĕç. Ял хушши пĕчĕккĕнех тӳлекленсе пычĕ. Унăн хĕсĕк те кукăр-макăр тăкăрлăкĕсем кăнтăр кунĕнче те ытлашши шавлă тăмаççĕ – халĕ вара унта нимĕнле сас-чĕв те илтĕнмест.

Ял çийĕнчен каçхи апат пĕçернĕ вăхăтра çĕкленнĕ тĕтĕм те сирĕлсе пĕтнĕ ĕнтĕ. Ун вырăнне таврана Атăл енчен çăра тĕтре сарăлать.

Çуртсен çывăхĕнчи картасенче кун каça сĕтеклĕ апат çинĕ ĕне-сурăх кавленине илтме пулать. Теплере пĕрре тата, çĕр хута çывăрма пĕлмен кушакпа е хăйсене сыхлакан йытăпа тавлашса хурсем çуйханса илеççĕ.

Тилĕ-кашкăр халь яла кĕрсе выльăха аптратмасть: тискер чĕр чунсем кĕркунне унсăрăнах тутă. Мĕн тесен те, хăйĕн малтанхи сукмакне манайман çăткăн кайăк тавралăх тĕттĕмленсе çитсен ял патнелле çывхарса ун йĕри-тавра пĕрре чупса çаврăнатех. Ăна сиссе вара йытăсем тулашма пуçлаççĕ. Çăткăн кайăк вăрмана кĕрсе çухалсан ял шăпланса каллех тутлă ыйха путать. *(К. Турхан.)*

**230.** Вулăр. Пăхăнуллă хутлă предложенисене çырса илĕр. Пăхăнуллă предложенисем тĕп предложенипе епле çыхăннине сăмах вĕççĕн ăнлантарăр, тĕп членĕсене кăтартăр.

## Юрăçă сасси

Хаклăран та хаклă пуянлăх-çке вăл сасă тени!

Юрă кĕнекисене *укçалла* туянма пулать. Магазинта пулмасан – лар та çыр. Ик-виçĕ кун иртсе кайĕ-и, уйăх-и – çав-çавах мĕскер те пулин шухăшласа кăларма пулать. Мĕн тесен те, этем сассине нимĕнле хакпа та сутăн илме çук. Вăл эрне е уйăха яхăн тумалли япала мар. Енчен тата çут çанталăк паман пулсан кĕтме те кирлĕ мар.

Сасă этем чунне тыткăнлатăр тесен юрăçăн нумай çул пĕр канăç пĕлмесĕр вĕренмелле, ĕçлемелле, пуянлатмалла хăй сассине, çĕнĕрен те çĕнĕ тĕссем шырамалла. Ку çеç те сахал-ха. Юрăçăн хăй культурипе этики çинчен те нумай шухăшламалла, вуламалла, чылай курмалла, ăс-хакăла самана идейисемпе тĕрĕслесе тăмалла, мĕншĕн тесен эстрада çине тухакан çын вăл искусство произведенийĕ евĕр. Халăх ăс-хакăлĕнче *нихăçан* манăçа тухми ырă йĕрсем хăварасси юрăçран нумай килет. Юрă хăй искусство произведенийĕн идейи пек пулсан – ăна *юрлаканĕ* унăн форми пулать. Апла, çак формăна май килнĕ таран *илĕртӳллĕрех* тума тăрăшмалла. *(И. Ахрат.)*

**231.** И. Ахрат çырнă текста вулăр та ĕçсене тăвăр.

1. Текст стилĕпе тĕсне палăртăр.

2. Паллă тунă сăмахсем мĕнле пуплев пайĕ тата предложенире мĕнле член пулнине калăр.

3. Союзпа çыхăнакан пăхăнуллă предложенисене тупăр, запятой мĕншĕн лартнипе лартманнине ăнлантарăр.

4. 1-мĕш предложенире кăшкăру палли лартнин сăлтавне ăнлантарăр.

5. Тĕп членсăр предложенисене çырса илĕр, хăш ушкăна кĕнине ăнлантарăр.

6. Пĕр йышши членсене тупăр, вĕсем мĕнле пуплев пайĕ тата мĕнле член пулнине, пĕр-пĕринпе мĕнле çыхăннине калăр. Запятой мĕншĕн лартнипе лартманнине ăнлантарăр.

7. Пĕр ĕçĕ теприн хыççăнах, хăвăрт пулнине кăтартма тире хăш предложенире лартнă?

8. Çирĕплетсе каланине кăтартакан сăмах хыççăн запятой хăш предложенире лартнă? Предложени тытăмне ăнлантарăр.

**232.** Хăвăр тĕллĕн пăхăнуллă хутлă предложени пиллĕк тупса çырăр. Пăхăнуллă предложени тĕп предложенипе аффикссемпе çыхăнтăр.

Тĕслĕх: *Сăмавар вĕреме кĕриччен атте Андрей Павлович патне çитсе килме пулчĕ.*

**233.** Вулăр. Пăхăнуллă предложенисене тупăр та вĕсем мĕнле пĕлтерĕшлĕ пулнине калăр.

1. Хирти ĕçсем пуçланиччен ман пата час-часах кӳршĕ çыннисем пырса ларатчĕç. 2. Лена пырса çитсен манăн кăмăл уçăлсах каять. 3. Çапла вара эпĕ больницăран тухса кайиччен татах вунă кун ытла иртсе кайрĕ. *(Ç. Элкер.)* 4. Вăхăт çуркунне енне сулăнсан чăваш хĕрарăмĕн пурнăçĕ татах йывăрланать. 5. Упăшки ыйхăллăран Хĕветлен хальччен те ваттисен умĕнче намăса кĕме тивкеленĕ. *(Н. Мранькка.)* 6. Туслăхран хакли нимĕн те çук. Тус-йыш пулсан таçта та килти пекех ырă, аван. *(М. Юхма.)* 7. Амăшĕ чирлесе тăнипе (ашшĕ ир çĕре кĕчĕ) ялтан инçете тухса каймарĕ хĕр. *(В. Тарават.)* 8. Тимĕрçĕ кăмăлĕ пăсăлнине курсан Кĕтерук

шухăша кайрĕ. 9. Ку ĕç ытла та ăнсăртран сиксе тухнăран Çемен арăмĕ килĕшесшĕн марччĕ. *(Н. Мранькка.)*

**Пăхăнуллă хутлă предложенисене тишкерелли йĕрке**

1. Предложени пăхăнуллă хутлă пулнине асăрхаттармалла. 2. Тĕп предложенипе унăн тĕп членĕсене каламалла; пăхăнуллă предложенипе унăн тĕп членĕсене кăтартмалла. 3. Пăхăнуллă предложенин вырăнĕ. 4. Пăхăнуллă предложени тĕппине мĕнле ăнлантарать: пĕтĕмĕшлĕн-и, уйрăм сăмахĕсене кăна-и? 5. Çыхăну хатĕрĕ мĕн? 6. Пăхăнуллă предложени мĕне пĕлтерет? 7. Пăхăнуллă предложени хăш ушкăна кĕрет – подлежащи-и, сказуемăй-и, определени-и, обстоятельство-и, дополнени-и? 8. Пăхăнуллă предложение мĕнле ыйту памалла? 9. Чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсем.

Тишкерӳ тĕслĕхĕ:

*Ашшĕ*[1] *Анисса çухăрнине*[2] *илтрĕ, пахчана вирхĕнсе тухрĕ*[1] (А. Павловская.)

Панă тĕслĕх – пăхăнуллă хутлă предложени. Тĕп предложени – 1-мĕшĕ (подлежащи – *ашшĕ*, сказуемăйсем – *илтрĕ, тухрĕ*). Пăхăнуллă предложени – 2-мĕш предложени (подлежащи – *Анисса,* сказуемăй – *çухăрнине*). Пăхăнуллă предложени тĕп предложени ăшĕнче тăрать, унăн *илтрĕ* сăмахне ăнлантарать, ***-е*** пару падеж аффиксĕпе çыхăнать, ĕç объектне пĕлтерет, дополнени ушкăнне кĕрет, *мĕне илтрĕ?* ыйтуллă.

Союзсăр çыхăннăран пĕр йышши *илтрĕ, тухрĕ* сказуемăйсем хушшине запятой лартнă. Интонаципе палăртса уйăрман пирки *ашшĕ* сăмах хыççăн тире лартман.

Предложенин схеми:




## Кăткăс тытăмлă хутлă предложенисем

**234.** Вуласа тухăр. Кашни тĕслĕхре хутсăр предложени миçе: иккĕ-и, иккĕрен нумайрах-и? Кашни предложение уйăрммăн калăр,тĕп членĕсене кăтартăр.

1. Тăван килĕмĕн хапхи çинче çăра çакăнса тăрать пулин те пĕлетĕп: питĕрмен ăна, ятне туса кăна урлă янă. 2. Тантăшăмăн хăш-пĕр шухăшне пула хушăран тавлашу та сиксе тухкалать пирĕн, анчах пурĕ пĕр пĕри пĕрне лайăх ăнланатпăр. 3. Çак асаплă юншăху хăçан та пулин иртессе шанни тата Саша шанчăклă каччă пулнине пĕлсе тăни кăна вăй паратчĕç. *(Е. Нарпи.)* 4. Пӳрт ум алăкĕ уçăлса хупăнчĕ пулас: çынсем калаçса кĕни те илтĕнет. 5. Кăмăлĕ пĕтнĕрен çиесех килмест пулин те – тепре калаттармарĕ Виталик, тепре ятлаçасран хăрарĕ. 6. Вăй пĕтсе куç хуралса килнипе эпĕ стена çумне тĕшĕрĕлсе антăм. *(Н. Ильина.)* 7. Ĕçе иртерех кайнине пула халь Игорь килте мар. Суту-илӳпе аппаланса мул пухнăскер кил-çуртне те кайăк вĕçсе каçайми, вăрă-хурах çĕмĕрсе кĕрейми купаласа лартнă. *(О. Васильева.)*

➤ Хутлă предложенисем икĕ хутсăр предложенирен çеç мар, виçĕ е ытларах хутсăр предложенирен тăрса кăткăсланма пултараççĕ. Кăткăс тытăмлă хутлă предложенисем, кăткăсланманнисем пекех, икĕ пайран тăраççĕ. Çав пайсем мĕнле мелпе çыхăннине кура кăткăс тытăмлă хутлă предложенисене те виçĕ ушкăна уйăраççĕ: кăткăс тытăмлă çыхăну паллисĕр хутлă

предложенисем, кăткăс тытăмлă сыпăнуллă хутлă предложенисем, кăткăс тытăмлă пăхăнуллă хутлă предложенисем.

**235.** Предложенисем чăннипех кăткăс тытăмлă пулнине вĕсен хутсăр предложенийĕсене номерсем лартса тата тĕп членĕсене йĕрсемпе паллă туса ĕнентерĕр.

1. Мана хамăн сăн курăнмасть те, эпĕ Раманран та хĕрлĕрех пек туйăнса каять мана. 2. Хĕвел тухнă-тухманах ман çĕр çине юлнă йĕрĕмсем ейĕлсе кайса нӳрлĕ курăк хушшинче çухаласса пĕлтĕм. 3. Пирĕн хамăрăн та çамрăксемпе пĕрлех кулас килчĕ, анчах Раман мана çав вăхăтра айăкран чĕпĕтсе илчĕ те, кулас вырăнне тута тăсса тăма тиврĕ. 4. Хам та сисместĕп – таçтан арăш-пирĕш çил çаврăнса килнĕ пек, кăмăл арпăшăнать те каять. 5. Раман ахаль те асăрханоллă çын – пуçра мĕн пуррине, чунра мĕн хĕрсе тăнине пит тăрук персе ямасть. *(Д. Гордеев.)*

**236.** Предложенисене шухăш тăрăх икĕ пая пайлăр. Пайĕсем епле çыхннине кура тĕлĕхсене хăш ушкăна кĕртмелле? Çыхăну хатĕрĕсене калăр.

1. Этеме телейлĕ пулма нумай та кирлĕ мар иккен: юнашар утакан çынну сана ăнланнине пĕлни те çителĕклĕ. 2. Пĕрлешнĕренпе уйăх иртичченех ăраскалăмăр пиртен çаврăнса урăх çĕрелле вĕçтернине ман çапса пăрахсан та шухăшлас килмест.*(Е. Нарпи.)* 3. Тухса çӳреме хăтлăрах пултăр тесе Юра сĕтеле куçарма тытăнчĕ те, мачча йăлтăр-йăлтăр турĕ. 4. Паллах, Андрее хуйхă вăхăтлăха хуçса хăварнă пулин те, Полина чĕртнĕ ыра туйăм чун-чĕринче сӳнеймен. 5. Сцена çине хĕр акăш ишнĕ евĕр утса тухни уяр çанталăкра аçа çапнă пекех пулнă каччăшăн. 6. Çемен паян юнашар ялтан ырă хыпар илсе килнĕ: ĕç пур – вите

пураласа лартмалла иккен. 7. Аркадий Николаевич тĕртсе илнине сисмерĕ мар-ха хĕр, анчах хаваслă кăмălне пăсас килмерĕ унăн. *(В. Кервен.)*

**237.** Предложенисенчен хăшĕ хăш ушкăна кĕнине шута илсе номерĕсене таблицăна çырăр.

1. Тахçанах килĕнче шкул ачи пулман та, Макар Иванович мĕн те пулин кирлине пĕлмест. 2 Куç хупăнма-хупăнма патнех çитсен çав çутă курăнса каять те – ыйхă таçта тарса пытанать. 3. Çатма çине шыв тăкăннă чухнехи евĕр тем чашлатнă пек туйăнса кайрĕ. 4. Юркка хăйне сăппăн тыткалама тăрăшрĕ, анчах хырăм выççи мĕн пур пек сăпайлăха мантарчĕ. 5. Вăхăт иртнĕ хыççăн яланах çапла-ха: пурте манăçать, пурăнса иртнĕ вăхăт пĕр кун пек кăна туйăнма тытăнать. 6. Çу варринче Юркка Алика шыраса килсен Серинкка сехĕрленсех ӳкрĕ: каллех инкек килсе çапнă иккен. 7. Хăй суйнине ан сисчĕр тесе Макар Иванович пăрăнса кайма сăлтав шырарĕ. 8. Пирĕн киле канăçсăрлăх йăпшăнса кĕнине пурте сисеттĕмĕр – вăл хăçан пĕтессе нихăшĕ те пĕлместчĕ. 9. Каç-каç тăм ӳкет, çил час та часах çурçĕрелле куçать пулин те Раман лаç умĕнчех выртса тăрать-ха. *(Д. Гордеев.)*

| Предложени ушкăнĕсем | Предложенисен номерĕсем |
|---|---|
| Çыхăну паллисĕр хутлă предложенисем | |
| Сыпăнуллă хутлă предложенисем | |
| Пăхăнуллă хутлă предложенисем | |

## Кăткăс тытăмлă
## çыхăну паллисĕр хутлă предложенисем

**238.** Предложенисене шухăш тăрăх икке пайлăр та пайсем епле çыхăннине сăнăр. Кашни пайра хутсăр предложенисем миçешер?

1. Борис Владимирович таса аттепе калаçнă май çакна пĕлчĕ: Турă каçарман çылăх çук-мĕн. *(В. Кервен.)* 2. Çитмĕл çулти Константин Кузьмич алăка уçса хваттере кĕрсе тăрсан ывăлĕпе кинĕ хытă тĕлĕнни вĕсен сăн-питĕнченех сисĕнчĕ: ват çынна паян никам та кĕтмен. *(В. Кервен.)* 3. Çак вырăнта яланах пӳрт тулли ача-пăча пултăр, вучах нихçан та ан сӳнтĕр. *(Р. Власова.)* 4. Часрах яла таврăнасчĕ: мăн аккана пăхакан çукки касать. 5. Кун хыççăн кун иртсе пычĕ – Чĕкеç тунсăхлани çеç иртмерĕ. *(М. Кипек.)* 6. Ĕçĕ каламалăх та çук – Иван бака пĕр енчен çĕклет те, лешĕ тӳрленсе те ларать. *(Р. Ярантай.)* 7. Иксĕмĕрĕн те нуша-терчĕ пĕрех пулчĕ: Лявуç мана, эпĕ ăна курасшăн çунаттăмăр (Н. Ишентей.) 8. Ан курнăçлан, лейтенант: эпĕ сакăр вуннăмĕшĕнче Афган хĕвелĕ çинче хĕртĕнсе выртнă чух эс училищӳне вĕренме кĕнĕ пулнă. *(Б. Чиндыков.)*

## Шута илĕр

<Ă>, <ĕ> фонемăсемпе пĕтекен чăн чăваш сăмахĕ пару падеж аффиксне йышăннă чухне аффикс умне <н> кĕртсе лартни (*атăна, çӳпĕне, ĕсенкĕне, улттăна, çиччĕне*) – йăнăш. *Атта, çӳппе, ĕсенке, ултта, çичче* темелле.

**239.** Предложенисене синтаксис тишкерĕвĕ тăвăр, схемисене ӳкерĕр.

1. Симĕс курăк хушшинче – икĕ чечек: пĕри – кăвак, тепри – курăнмаççĕ. 2. Ара, ăнкаратăп: эп лартнă ыйтусене хурав парас

пулсан ку ĕçе тепĕр хут тĕпчемелле, айăплава сивлемелле, Ивана ирĕке кăлармалла. *(Р. Ярантай.)* 3. Паçăр шыв ĕçес килни аптратнипе çиес кăмăл пулмарĕ Таньăн – халь акă аса илчĕ те хăй те хырăм выçнине туйрĕ. 4. Тĕттĕмленнĕ çул çинче çын утните курăнмасть, мотор сасси те илтĕнмест. *(З. Нестерова.)* 5. Эсĕ каланипе килĕшетĕп: юрату – пурнăç тыткăчи. 6. Чухлатăп: ачаллă хĕрарăмăн пурнăçĕ çăмăл пулас çук, хăраххин – пушшех те *(Н. Ишентей.)*

Тишкерӳ тĕслĕхĕ:

*Вĕсем сана асра та тытмаççĕ*[1] [I] *– эсĕ вара*[2] *ху сăнакан*[3] *çыннăн*[2] *мĕн пур*[4] *вăрттăнлăхне пĕлсе тăма пултаратăн*[2] [II]. (Н. Андреев.)

Панă тĕслĕх – кăткăс тытăмлă çыхăну паллисĕр хутлă предложени. Икĕ пайран тăрать: I пайĕ – 1-мĕш предложени, II – 2-мĕш, 3-мĕш тата 4-мĕш предложенисен пĕрлĕхĕ.

Пайсем расна тытăмлă, мĕншĕн тесен I пай çуклă предложени (*тытмаççĕ* скауемăя пăхăр), II пай – пурлă (*пултаратăн* скауемăй пурлă формăри глаголтан пулнă). Шухăш енчен пайсем пĕри теприне хирĕçлеççĕ.

I пай – хутсăр предложени (подлежащи – *вĕсем*, скауемăй – *тытмаççĕ*), икĕ тĕп членлă, анлă, тулли, ыйтусăр, çуклă.

II пай – пăхăнуллă хутлă предложени. Унăн тĕп пайĕ –2-мĕшпе 4-мĕш предложенисен пĕрлĕхĕ. Пăхăнуллă пайĕ - 3-мĕш предложени

Пăхăнуллă пай тĕп пай ăшне вырнаçнă, унăн *çыннăн* япала ятне ăнлантарать, глаголăн *-акан* причасти аффиксĕпе çыхăнать, япала паллине пĕлтерет, определени ушкăнне кĕрет, *мĕнле çыннăн?* ыйтуллă.

Пăхăнуллă пай – хутсăр предложени (подлежащи – *ху*, скауемăй – *сăнакан*).

Тĕп пай – пăхăнуллă хутлă предложени. Унăн тĕп пайĕ - 2-мĕш предложени, пăхăнулли – 4-мĕш предложени.

Пăхăнуллă пай тĕп пай ăшĕнче тăрать, унăн *вăрттăнлăхне* сăмахне ăнлантарать, унпа вырăнĕ-йĕркипе çыхăнать, япала паллине пĕлтерет, определени ушкăнне, *мĕнле вăрттăнлăхне?* ыйтуллă.

Тĕп пай – хутсăр предложени (подлежащи – *эсĕ*, скауемăй – *пултаратăн*). Пăхăнуллă пай та хутсăр предложени (подлежащи - *мĕн,* скауемăй – *пур*).

Пĕр-пĕрне хирĕçленине палăртса калас тĕллевпе пĕтĕм предложенин пайĕсем хушшине тире лартнă. Интонаци енчен палăртса уйăрман пирки *эсĕ вара* сăмахсем хыççăн тире лартман. (Тире çукки предложенире тепĕр тире пуррипе те çыхăннă.)

Схема:




*Ара, <u>суранĕ</u> питĕ <u>йывăр</u>[1] [I]: пуç <u>мими</u> <u>тапраннă</u>[2], пуç <u>шăмми</u> <u>суранланнă</u>[3], <u>юн</u> самай <u>юхнă</u>[4]...* [II](Р.Ярантай.)

Ку тĕслĕх – кăткăс тытăмлă çыхăну паллисĕр хутлă предложени. Икĕ пайран тăрать: I пайĕ – 1-мĕш предложени, II пайĕ –1-мĕш, 2-мĕш тата 3-мĕш предложенисен пĕрлĕхĕ.

Пайсем расна тытăмлă, мĕншĕн тесен I пай хальхи вăхăтпа çыхăннă (глаголсăр предложени хальхи вăхăта пĕлтерет), II пай – иртнĕ вăхăтпа (сказуемăйсем – *тапраннă*, *суранланнă, юхнă* – глаголăн иртнĕ причасти формисенчен пулнă). Шухăш тăрăх II пай I пайăн содержанине ăнлантарать.

I пай – хутсăр предложени (подлежащи – *суранĕ*, сказуемăй – *йывăр*), тĕп членлă, анлă, тулли, ыйтусăр, пурлă, эмоцисĕр.

II пай – пĕр йышши виçĕ предложенин ярăмĕ.

Ярăмăн пĕрремĕш предложенийĕ (2 №) – хутсăр (подлежащи – *мими*, сказуемăй – *тапраннă*), тĕп членлă, анлă, тулли, ыйтусăр, пурлă, эмоцисĕр.

Ярăмăн иккĕмĕш предложенийĕ (3 №) – хутсăр (подлежащи – *шăмми*, сказуемăй – *суранланнă*), тĕп членлă, анлă, тулли, ыйтусăр, пурлă, эмоцисĕр.

Ярăмăн иккĕмĕш предложенийĕ (4 №) – хутсăр (подлежащи – *юн*, сказуемăй – *юхнă*), тĕп членлă, анлă, тулли, ыйтусăр, пурлă, эмоцисĕр.

Пĕтĕм çыхăну паллисĕр хутлă предложенин II пайĕ I пайне ăнлантарнă пирки пайсем хушшине икĕ пăнчă (икĕ точка) лартнă. пĕрешкел лару-тăрура пулса иртекен виçĕ ĕçе пĕлтернĕрен ярăмăн пĕр йышши хутсăр предложенийĕсем (II пай) хушшине хӳреллĕ пăнчăсем (запятойсем) лартнă.

Схема:



**Кăткăс тытăмлă çыхăну паллиллĕ хутлă предложенисем**

**240.** Кăткăс тытăмлă сыпăнуллă хутлă предложенисем

1.Талăк иртнĕ хыççăн хурал нарячĕ казармăна таврăнчĕ те, пурнăç хаваслăрах кайрĕ. 2. Çыру çине ӳкекен кашни сăмах чун асапĕ витĕр тухать те, ăна çынна аласан чун нишлĕленсе юласран хăратăп. 3. Чăнах та, ачасем маншăнах пăшăрханнине туйса илтĕм те, куç шывланса килчĕ. *(Д. Гордеев.)* 4. Кĕсйинче Варвара

Григорьевна чиксе янă çăкăр татăкĕ пур-ха, анчах ăна Симунăн килне илсе таврăнас, амăшне те çăкăр тутантарса пăхас килчĕ. (*А. Савельев–Сас.)* 5. Вара çулăм чĕлхисем вăрăмланаççĕ, хĕрлĕ хĕлхемсем тата çӳлерех çĕкленеççĕ те – хура тĕтĕм каялла чакать. *(М. Кипек.)*

**241.** Предложенисене синтаксис тишкерĕвĕ тăвăр, схемисене ӳкерĕр.

1. Митюк хитре калама хăнăхман, анчах та вăл калани Уринене те, ыттисене те килĕшрĕ. (В. Константинов.) 2. Организаци алăкĕ тавралăх тĕттĕмленме пуçласан çеç уçăлчĕ те, Аня курăнчĕ. (В. Алиме.) 3. Чăнах ĕнтĕ, чи малтан пĕлӳ пухмалла, унсăрăн тантăшсем шут тытнă машинăна туса пĕтерме пĕлӳ çитмест. *(З. Нестерова.)* 4. Амăшĕн юратăвĕ ывăлĕпе хĕрне телейсĕре кăларнине, çын каласан ĕненмен пулăттăм. *(Н. Ишентей.)* 5. Вăл мана куçран тинкерсе пăхрĕ, кĕтрĕ эпĕ мĕн те пулин каласса, анчах эпĕ ним калама та пĕлмерĕм. *(Б. Чиндыков.)*

Тишкерӳ тĕслĕхĕсем:

*Çирĕп <u>пĕлӳ</u> <u>кирли</u>[1] <u>паллă</u>-ха[2] [I], анчах <u>вăл</u> çеç <u>çителĕксĕр</u>[3] [II].* (А. Ильин.)

Панă тĕслĕх – кăткăс тытăмлă сыпăнуллă хутлă предложени. Вăл икĕ пайран тăрать. Пĕрремĕш пайне 1-мĕшпе 2-мĕш предложенисем кĕреççĕ, иккĕмĕшне – 3-мĕш предложени. Пайсем хирĕçлекен *анчах* союзпа çыхăнаççĕ. Союзне кура пĕтĕм предложени хирĕçлекен союзлисем шутне кĕрет. Шухăш тăрăх иккĕмĕш пай пĕрремĕшне хирĕçлет.

Иккĕмĕш пай – хутсăр предложени (подлежащи – *вăл*, скауемăй – *çителĕксĕр*), икĕ тĕп членлă, анлă, тулли, ыйтусăр, пурлă, эмоцисĕр.

Пĕрремĕш пай – пăхăнуллă хутлă предложени. Унăн тĕп пайĕ - 2-мĕш предложени, пăхăнулли – 1-мĕшĕ.

Пăхăнуллă пай тĕп пай умĕнче тăрать, ăна пĕтĕмĕшлĕн ăнлантарать, *-и* субстантиваци аффиксĕпе çыхăнать, ĕç субъктне пĕлтерет, подлежащи ушкăнне кĕрет, *мĕн паллă?* ыйтуллă. Тĕп пай - *вăл çеç* хутсăр предложени (подлежащи – *пĕлӳ*, скауемăй – *кирли*).

Пайсем *анчах* союзпа çыхăннăран запятой союз умне лартнă. Палăртса уйăрманнине кура ни *çирĕп пĕлӳ кирли* сăмахсем хыççăн, ни *вăл çеç* сăмахсем хыççăн тире лартман.

Схема:




**Кăткăс тытăмлă пăхăнуллă хутлă предложенисем**

**242.** Кăткăс тытăмлă пăхăнуллă хутлă предложенисене сăнăр, тĕп тата пăхăнуллă пайĕсене тупăр. Пайсене уйăрма хăш предложенисенче йывăр? анчах

1. Кун таврăнма тытăнмасăр, хĕвел вăрман тăррине хăпарса çитмесĕр кăмăл та уçăлмасть. 2. Чăнах та, мунча хыççăн хам çăмăлланнине, чун ирĕкленнине туятăп. *(Д. Гордеев.)* 3. Рудик аллине хаклă япала çаклансан тӳрех тапса сикнĕ те тул çутăлма пуçличченех киле таврăнман. *(В. Кервен.)* 4. Салтак туслăхĕ мĕн иккенне, ху тӳсмесен пĕлейместĕн çав. *(Д. Гордеев.)* 5. Элекçей кĕтмен çĕртен пырса пĕлтерни Çеменпе арăмĕшĕн уяр кун аслати авăтнăн туйăнчĕ. *(Н. Мранькка.)* 6. Таврара мĕн пуррине, хам ăçтине самантрах манса кайрăм та вулама пуçларăм. *(Д. Гордеев.)* 7.

Ашшӗ-амӑшӗ ӗҫрен, пиччӗшӗ шкултан таврӑниччен Тимук килте пӗчченех ларать. *(О. Туркай.)* 8. Пӑшал сасси хӑлхана янлаттарнӑ самантрах Тараев хӑйне сулахай айӑкран такам тукмакпа ҫапнӑ пек туйрӗ. 9. Вара, ҫур сехете яхӑн, ӑсансем юрланине итлесе, вӗсем ҫапӑҫнине пӑхса лартӑм. *(М. Кипек.)* 10. Пуҫне ҫӗклемесӗр ӗҫлерӗ хӗрарӑм. Кӑнтӑрла иртсен лӑштах сывласа ячӗ те Витиалий Сидорович шӑнкӑравласса кӗтме пуҫларӗ. *(В. Константинов.)* 11. Ҫур ҫӗр иртни виҫ сехетре кам ҫывӑрмасть пултӑр? *(Б. Чиндыков.)*

243. Предложенисене синтаксис тишкерӗвӗ тӑвӑр, схемисене ӳкерӗр.

1.Зачетсем пынӑ чух, кашни каҫах урама тухма май ҫукчӗ, ӗҫ нумайччӗ. *(И. Тукташ.)* 2. Ҫумӑр ҫӑвас умӗн хура пӗлӗт айӗнчен хӗвел самантлӑх курӑнса илнӗ пек кӑна пулнӑ Тарье аппан савӑнӑҫӗ. *(Р. Власова.)* 3. Эс, Лена, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче кашкӑрсем ялах ҫӳрени ҫинчен аннӳ каласа панине илтнӗ пулӗ. 4. Аннӳпе иксӗмӗр калаҫни пурнӑҫа кӗменшӗн ҫав тери кулянатӑп. 5. Кин чӳрече карри витӗр сӑнанине асӑрхасан ҫав пысӑк пӳртре ман валли кӗтес тупӑнманшӑн пушшех чун хурланчӗ. *(О. Куликова.)* 6. Вӑхӑт ҫитсен, никам пулӑшмасӑрах илӗн правуна. *(В. Антонов.)* 7. Йӑвӑҫсем ҫара пулин те, вӗсене чӗрӗлӗх кӗни сисӗнет. 8. Ашшӗпе ывӑлӗ ҫавӑн пек аппаланма тытӑннӑранпа ҫулталӑк иртсен такӑнчӗ Алексейӗн пурнӑҫ урапи. 9. Ҫурла уйӑхӗ ял халӑхне кӗҫех кӗрхи хӗрӳ тапхӑр пуҫланасса, ҫӗр улми, чӗкӗнтӗр кӑларма вӑхӑт ҫитессе уҫҫӑн систерет. *(Н. Андреев)* 10. Эпӗ ҫывхарни сехрӳне хӑпартать пулсан карта урлах калаҫӑпӑр. *(Н. Ишентей.)* 11. Пассажирсем пӗри чӗнмесӗр, тепри кӑмӑлсӑррӑн мӑкӑртатса салонран туха-туха утрӗҫ. *(З. Нестерова.)* 12. Пирӗн юрату мӗншӗн телейсӗр пулнине, халӗ, ҫур ӗмӗр иртсен палӑртма тӑрӑшатӑп. *(Н. Ишентей.)*

Тишкерӳ тӗслӗхӗсем:

*Сӗпене уҫланкине хӗрлӗ «Жигули» пынине[1], каччӑ Жаннӑна парне панине[2] тата кам курчӗ?[3]* (Р. Ярантай.)

Панӑ тӗслӗх – кӑткӑстытӑмлӑ пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени. Унӑн тӗп пайӗ – 3-мӗш предложени, пӑхӑнулли – 1-мӗшпе 2-мӗш предложенисен пӗрлӗхӗ. Пӑхӑнуллӑ пай тӗп пай умӗнче тӑрать, ӑна пӗтӗмӗшлӗн ӑнлантарать, ***-е*** пару падеж аффиксӗпе ҫыхӑнать, ӗҫ объектне пӗлтерет, дополнени ушкӑнне кӗрет, *мӗне асӑрхарӗҫ?* ыйтуллӑ.

Тӗп пай – хутсӑр предложени (подлежащи – *кам*, сказуемӑй – *курчӗ*).

Пӑхӑнуллӑ пай – пӗр йышши икӗ предложенин пӗрлӗхӗ: пӗрремӗш пӑхӑнуллӑ предложени хутсӑр (подлежащи – «*Жигули*», сказуемӑй – *пынине*); иккӗмӗшӗ те хутсӑр (подлежащи – *каччӑ,* сказуемӑй – *панине*).

Союссӑр ҫыхӑннӑран пӗр йышши пӑхӑнуллӑ предложенисем хушшине запятой лартнӑ. Палӑртса уйӑрман пирки *Сӗпене уҫланкине* сӑмахсем хыҫҫӑн тире лартман. Ыйтуллӑ пулнӑран пӗтӗм предложени хыҫҫӑн ыйту палли лартнӑ.

Схема:




*Тата* сыпӑнуллӑ союзпа ҫыхӑннӑ пулсан пӗр йышши пӑхӑнуллӑ предложенисем хушшине запятой лартмастӑмӑр, схемӑра икӗ ҫаврашкана тӳрӗ йӗрпе ҫыхӑнтараттӑмӑр, ун айне е ҫине *тата* сӑмах ҫырса хураттӑмӑр:



*Çумăр çăвас умĕн*[1] *хура пĕлĕт айĕнчен хĕвел самантлăх курăнса илнĕ пек кăна*[2] *пулнă Тарье аппан савăнăçĕ.* (Р. Власова.)

Панă тĕслĕх – кăткăстытăмлă пăхăнуллă хутлă предложени. Унăн тĕп пайĕ – 3-мĕш предложени, пăхăнулли – 1-мĕшпе 2-мĕш предложенисен пĕрлĕхĕ. Пăхăнуллă пай тĕп пай умĕнче тăрать, унăн *пулнă* сăмахне ăнантарать, *пек* хыç сăмахпа çыхăнать, ĕç паллине (танлаштарса) пĕлтерет, обстоятельство ушкăнне кĕрет, *мĕнле пулнă?* ыйтуллă.

Тĕп пай – хутсăр предложени (подлежщи - *савăнăçĕ,* сказуемăй – *пулнă*).

Пăхăнуллă пай – пăхăнуллă хутлă предложени. Унăн тĕп предложенийĕ - 2-мĕш предложени (подлежащи – *хĕвел*, скауемăйĕ - *курăнса илнĕ*), пăхăнулли – 1-мĕшĕ (подлежащи – *çумăр*, скауемăй – *çăвас*). Пăхăнуллă предложени тĕп предложени умĕнче тăрать, ăна пĕтĕмĕшлĕн ăнлантарать, *умĕн* хыç сăмахпа çыхăнать, ĕç вăхăтне пĕлтерет, обстоятельство ушкăнне кĕрет, *хăçан курăнса илнĕ пек?* ыйтуллă.

Палăртса уйăрман пирки *Тарье аппан савăнăçĕ* сăмахсем умĕн тире лартман.

Схема:




**Шута илĕр**

*Кампа-ха клаçмалла ман?* теме юрамасть – *Кампа калаçмалла-ха ман?* темелле.

*Çил çук пирки*[1], *сывлăмпа йĕпеннĕ çулçăсем хускалмаççĕ*[2] *çӳллĕ йывăç тăррисем те силленмеççĕ*[3]. (М. Кипек.)

Панă тĕслĕх – кăткăс тытăмлă пăхăнуллă хутлă предложени. Унăн тĕп пайĕ – 2-мĕшпе 3-мĕш предложенисен пĕрлĕхĕ, пăхăнулли –1-мĕш предложени. Пăхăнуллă пай тĕп пай умĕнче тăрать, ăна пĕтĕмĕшлĕн ăнантарать, *пирки* хыç сăмахпа çыхăнать, ĕç сăлтавне пĕлтерет, обстоятельство ушкăнне кĕрет, *мĕн пирки хускалмаççĕ, силленмеççĕ?* ыйтуллă.

Пăхăнуллă пай – хутсăр предложени (подлежащи – *çил*, скауемăй – *çук).*

Тĕп пай – çыхăну паллисĕр хутлă предложени. Пайĕсем пĕрешкел тытăмлă, мĕншĕн тесен икĕ пайĕпе те çыхăнакан пăхăнуллă предложени (1-мĕш предложени) пур. Пайсем пĕр вăхăтра пулса иртеен ĕçсене пĕлтереççĕ. Пĕрремĕш пай – хутсăр предложени (подлежащи – *çулçăсем*, скауемăй – *хускалмаççĕ*), икĕ тĕп членлă, анлă, тулли, ыйтусăр, çуклă, эмоцисĕр. Иккĕмĕш пай та – хутсăр предложени (подлежащи – *тăррисем*, скауемăй – *силленмеççĕ*), икĕ тĕп членлă, анлă, тулли, ыйтусăр, çуклă, эмоцисĕр.

Тĕп пайăн икĕ предложенийĕпе те çыхăннăран пăхăнуллă пай хыççăн запятой лартнă. Пĕрешкел вăхăтра пулса иртекен ĕçсене пĕлтернĕрен çыхăну паллисĕр хутлă предложенин пайĕсем (2-мĕшпе 3-мĕш предложенисем) хушшине запятой лартнă.

Схема:




*Хаяр сасă хыççăн темле инкек-синкек пуласса*[1] *кĕтнипе*[2] *мĕн пур*[3] *чĕр чун шăпланчĕ*[2]. (М. Кипек.)

Панă тĕслĕх – кăткăс тытăмлă пăхăнуллă хутлă предложени. Унăн тĕп пайне -2-мĕшпе 3-мĕш предложенисен пĕрлĕхĕ кĕрет, пăхăнуллине – 1-мĕш предложени.

Пăхăнуллă пай тĕп пай умĕнче тăрать, унăн *кĕтнипе* сăмахне ăнантарать, ***-а*** пару падеж аффиксĕпе çыхăнать, ĕç объектне пĕлтерет, дополнени ушкăнне кĕрет, *мĕне кĕтнипе?* ыйтуллă.

Тĕп пай хăй – пăхăнуллă хутлă предложени. Унăн тĕп пайĕ - 2-мĕш предложени, пăхăнулли – 3-мĕшĕ.

Пăхăнуллă тĕп пай ăшĕнче тăрать, унăн *чĕр чун* сăмах майлашăвне ăнантарать, вырăнĕ-йĕркипе çыхăнать, япала паллине пĕлтерет, определени ушкăнне кĕрет, *мĕнле чĕр чун?* ыйтуллă. Тĕп пай хутсăр предложени (подлежащи – *чĕр чун*, сказуемăй – *шăпланчĕ*). Пăхăнуллă пай та – хутсăр предложени (подлежащи – *мĕн*, скауемăй – *пур*).

Схема:




## ТЕКСТ

### Чĕлхе, пуплев тата çыру

**244.** Таблицăна пăхăр. Чĕлхен паллисене аса илĕр те пуплев чĕлхерен мĕн енчен уйрăлса тăнине танлаштарса калăр.

## Чĕлхепе пуплев хушшинчи уйрăмлăхсем

| № № | Чĕлхе | Пуплев |
|---|---|---|
| 1 | Пуплевре усă куракан хатĕрсене пĕтĕмлетекен схема. Тĕслĕхрен, *Ача ӳсет. Шыв юхать* предложенисем пĕр ĕлкепе пулаççĕ. Ку ĕлкене алăпа тытса пăхма, куçпа курма çук. | |
| 2 | Чĕлхе единицисем пĕр-пĕринпе иерархи çыхăнăвне кĕреççĕ. Тĕслĕхрен, фонемăсем морфемăсемшĕн пай шутланаççĕ, морфемăсем лексема тытăмĕнче пулаççĕ. Лексема е сăмах майлашăвĕ тытăмне, е предложени тытăмне кĕрет: *ача ĕмĕчĕ; Ача шкула çӳрет.* | |
| 3 | Кашни сăмах уйрăм единица статусне сыхлать. Тĕслĕхрен, *хĕр* тата *ача* сăмахсем чĕлхе енчен уйрăм единицăсем шутланаççĕ. | |
| 4 | Тĕрĕс пулнипе пулманни енчен хаклама çук. | |
| 5 | Яланах тата вĕçĕмсĕр усă курма юрăхлă. Тĕслĕхрен, *Çумăр çăвать. Хĕвел пăхать* йышши предложенисен моделĕ пĕр пек (**SP**), тивĕçлĕ лару-тăрура усă курма хатĕр. | |
| 6 | Кирек мĕнле лару-тăрура та усă курмалăх вăйĕ пур. Тĕслĕхрен, **SP** ĕлке *Çумăр çăвать* предложенишĕн те, *Хĕвел пăхать* предложенишĕн пĕрешкел, çавăнпа пуплев | |

| | | |
|---|---|---|
| | лару-тăрăвне пăхăнмасть. | |
| 7 | Пĕр шайра тăрать. Тĕслĕхрен, чĕлхере архаизмсем, историзмсем, неологизмсем пур. Вĕсем чĕлхерех юлаççĕ, çухалмаççĕ. | |
| 8 | Хатĕрсен хисепĕ, тĕпрен илсен, пĕр виçере тăрать. Тĕслĕхрен, хутлă предложенисем икĕ тĕрлĕ çеç пулаççĕ: çыхăну паллисĕррисем тата çыхăну паллилисем. | |
| 9 | Вариантсăр. Тĕслĕхрен, чăваш чĕлхинче <х> фонема пур. | |
| 10 | Объективлă. Тĕслĕхрен, пирĕн чĕлхере çуклăха палăртакан мелсем сказуемăй тытăмне кĕреççĕ. | |

**245.** Ыйтусене хуравлăр, кăтарнă ку е вăл ĕçе тăвăр.

1. Пуплевре калакан çыннăн темпераменчĕ, характерĕ, хăнăхăвĕ, пуплев аппарачĕн уйрăмлăхĕ епле палăрать?
2. Çынна пуплевĕ тăрăх хаклама май пуррине ĕнентерĕр.
3. Чĕлхе тытăмне пĕлес тесен мĕншĕн пуплев тĕслĕхĕсене тĕпчемелле?
4. Пуплев ĕçне-хĕлне тĕпчеме мĕншĕн йывăр?
5. Ăслăлăх çыннисем пуплев ĕçĕ-хĕлĕн миçе тапхăрне уйăраççĕ?

➤ Куртăмăр ĕнтĕ: чĕлхепе пуплев пĕр-пĕринпе тачă çыхăннă, çапах пĕр-пĕринчен чылай енчен уйрăлса тăраççĕ. Чĕлхе хутшăну хатĕрĕ шутланать пулсан – пуплев хутшăну тăвать. Чĕлхе абстрактлă пулсан – пуплев конкретлă. Пуплевĕн конкретлă факĕсене тĕпчесе учĕнăйсем чĕлхе тытăмне палăртаççĕ.

Пуплевĕн икĕ форми пур: ***чĕрĕ пуплев*** тата ***çыру.***

Чĕрĕ пуплеве кĕрет итлеме, хут çине, магнитлă носительсене çырса хума пулать. Çырса хуман пуплев хăйĕн чăн вăхăтĕнче илтĕнет те хăй вăхăтĕнчех юлать. Калаçура йĕркеленсе пĕр пĕтĕмлĕх тупнă текст йĕркеленсе çитет те çавăнтах çухалать.

Иртсе кайнă пуплевĕн содержанине сăмах вĕççĕн тепĕр хут каласа панă чухне чăн пуплеве евĕрлетсен те ун кашни элементне сыхласа хăварма йывăр. Çыру вара чăн пуплевĕн мĕнлерех уйрăмлăхĕ пур, вĕсене туллин сыхласа хăварма май парать. Ку енчен, уйрăмах, техника хатĕрĕсемпе усă курса çырнă текста ним те çитмест. Ку текст тăрăх пуплевпе чĕлхене кашнине уйрăммăн е танлаштарса тĕпчеме меллĕ. Хут çине алăпа çырнă е техника хатĕрĕсемпе пичетленĕ текст, паллах, пуплевĕн интонаци уйрăмлăхĕсене кăтартаймасть, çапах чĕлхе тытăмне лайăх ăнланса илме май парать.

Пуплев чĕлхепе кăна мар, шухăшлавпа та тачă çыхăннă. Çавăнпа шухăшлава ăнланса илме епле йывăр, чĕлхене пĕлме те çавнашкалах хĕн.

**246.** Текстсене вуласа тухăр, вĕсенче тĕл пулакан фактсем тăрăх чăваш чĕлхин лексики перекетлĕхпе (сăмах вырăнне сăмах майлашăвĕсемпе усă курас туртăм пуррипе, пĕр пуплев пайĕ теприн пĕлтерĕшне илнипе), фонетики сингармонизмпа, сăмах тытăмĕ агглютинаципе, синтаксисĕ грамматикăран тата шухăш тытăмĕнчен килнине ĕнентерĕр.

### 1

### Тилĕ çурисем

Тилĕ хăйĕн çурисем валли кăнтăр апачĕ çиме шăшисем йăтса килчĕ. Çурисем выçман иккен-ха – шăшисемпе выляма пуçларĕç. Вылярĕç-вылярĕç те шăтăка кĕрсе кайрĕç.

Тĕттĕмрен çутă тĕнчи çине пăхса выртаççĕ. Тарăн шăтăк умне пăрчкан вĕçсе килчĕ.  Хӳрине вылятса астарать. Тилĕ çурисем виксе тухрĕç те пăрчкана кăшт çеç тытаймарĕç.

Тӳперен хĕвеле тем хупласа илчĕ. Тилĕ çурисем шăтăка ыткăнчĕç. Хĕвеле хупласа илекенни ăмăрт кайăк пулчĕ иккен. Вăл та вăйă вылярĕ пуль. Пĕтĕм тискер кайăкпа вĕçен кайăк сунара тухмалла вылять-ха. *(Н. Сладков.)*

* Вырăс сăмахĕсемпе тӳр килекен  сăмах майлашăвĕсене текстра тупăр та таблицăна çырса хурăр.

| Вырăс сăмахĕсем | Чăвашла тӳр килӳсем |
|---|---|
| закрыть | |
| птица | |
| зайти | |
| охотиться | |
| обедать | |
| орел | |
| зверь | |
| выскочить | |
| играть | |

## 2

### Шур çырли

– Ах, шур çырли мăк çине мĕнле тухса ларнă?! Хĕп-хĕрлĕ! Ялтраса, çунса тăрать!

– Ялтратăп çав. Манăн халь шăпах ялтрамалли вăхăт! Темиçе эрне каялла пĕтĕм вăрманĕпех: «Ах, çĕр çырли! Ах, хура çырла! Ах,

хăмла çырли!» – тени кăна илтĕнсе тăратчĕ. Халĕ, кĕркунне, вăрманта эпĕ – тĕп çырла. Эпĕ – шур çырли! *(Н. Сладков.)*

* Тӳр килӳсене тӳрĕ йĕрсем туртса çыхăнтарăр.

| | |
|---|---|
| çĕр çырли | черника |
| шур çырли | малина |
| хăмла çырли | клубника |
| хура çырла | клюква |

* Манерĕ енчен текстсем мĕнле: калав-и, сăнлав-и, ăслав-и?

* Текст ячĕсем каланин содержанийĕпе килĕшсе тăраççĕ-и?

* Текстсен ячĕсенче мĕн палăрать – тема-и, тĕп шухăш-и?

➤Çыру текста вăрах вăхăт сыхлама, пĕр çĕртен тепĕр çĕре ярса пама май парать. Çавна пула пĕр вăхăтра пурăнакан çынсем кăна мар, расна вăхăтрисем те «хутшăнаççĕ». Тĕслĕхрен, иртнĕ вăрçă вăхăтĕнче çыру фронтпа тыла пĕрлештерсе тăнă, çынсене пурăнма хавхалантарнă, тăшмана çĕнтерессе шанăç кӳнĕ. Вăрçă вăхăтĕнче çырнă çырусене вулатăн та, ун чухнехи паттăр çынсемпе паллашатăн, вĕсем мĕн курни-илтнине куç умне кăлара-кăлара тăрататăн.

Çырăвăн тĕп тĕллевĕ – хыпар тăвасси. Çавăнпа чи малтанхи çырусем пуплеве евĕрлемен, шухăша палăртнă.

Çыру ӳкерчĕксенчен пуçланнă. Ку çырăва ***пиктографи*** (фразеографи) çырăвĕ теççĕ. Пиктографи çырăвĕн авторĕ мĕн калас тенине вулаканнин, тĕпрен илсен, тавçăрса илсе ăнланма тивĕç пулнă. Çыру ĕçе кам, хăçан тунине е тума палăртнине кăтартман. Тĕслĕхрен, кимме, виç хĕвеле тата месерле выртакан чĕр чунсене ӳкерсе кăтартнине *Юхан шыв тăрăх виçĕ кун ишнĕ сунарта нумай чĕр чун тытрăм(ăр)* предложенипе танлаштарма май пур.

Пиктографи çырăвĕн элеменчĕсем ӳкерчĕклĕ рекламăра хальхи вăхăтра та тĕл пулаççĕ.

Каярахпа ӳкерчĕкре конкретлă япаласене ӳкерес йăла пĕтет – çынсем çав япаласен символ паллисемпе усă курма тытăнаççĕ. Ку çырăва ăслăлăхра ***идеографи*** (логографи) çырăвĕ теççĕ.

Идеографи çырăвĕпе усă куракансен нумай-нумай палла асра тытма тата çырма тивнĕ. Кунашкал çырупа Китайра тата Японире паян кун та усă кураççĕ.

Идеографи çырăвĕ йывăр пулнăран çынсем тата меллĕрех çыру шырама тытăнаççĕ. Халăхсен историне сăмахăн сыпăкĕсене тата сассисене палăртакан çырусем килеççĕ. Сыпăксене палăртакан çыру вăл – ***морфемографи***. Вăл идеографи евĕрлĕ çыру. Унăн кашни палли сăмахăн пĕлтерĕшлĕ пайне кăтартать.

Сасăсене палăртакан çырăва ăслăлăхра ***фонетика*** (силлабографи) **çырăвĕ** теме йышăннă. Ку çырура кашни паллă сăмах сыпăкне пĕлтерет, анчах ун тытăмĕнче мĕнле сасăсем пуррине кăтартаймасть.

Сасене палăртма пултаракан çыру вăл – сас паллисемпе усă курма тунă çыру. Калаçура сасăсем нумай. Кашни сасă валли уйрăм паллă туни сас палли йышне ӳстерсе яма пултарать, çырăва йывăрлатать. Тĕслĕхрен, *пулăм* тата *пӳлĕм* сăмахсенче хупă фонемăсен хытă тата çемçе варианчĕсенчен кашнишĕн уйрăм паллăпа усă курсан 3 паллă вырăнне 6 паллă пулать. Пĕр çĕрте *турат (т* лартса*)*, тепĕр çĕрте *турада (д* лартса) çырни хирĕçӳллĕ. Çавăнпа тĕп вырăна фонемăсене палăртакан **сас палли** çырăвĕ ***(фонемографи)*** тухса тăрать: *турат, туратăн, турата, туратпа.* Фонема çине таянса тунă çыру меллĕрех, тухăçлăрах.

**248.** Тĕслĕхсене танлаштарăр. Паллă тунă сас паллисем фонемăна палăртнипе çыру перекетленнине ĕнентерĕр.

**Халăх – хĕлĕх, курăк – кĕрĕк, калăп – килĕп, турат – турать, тупал – тĕпел, пур – пӳр, сăнлав – пуплев, тăванлан – тĕревлен.**

**Ă**с – **ă**са, **ă**спа, **ă**слă; тур**т** – тур**т**а, тур**т**са; тăлă**п** – тăлă**п**а, тăлă**п**лăх; ывă**с** – ывă**с**а, ывă**с**ран; халă**х** – халă**х**ăн, халă**х**шăн; па**х**а – па**х**ча.

**249.** Шухăшлăр: Психологсем вĕрентнĕ тăрăх, ачасем калаçма вĕрениччен малтан предложенисене вĕсен кĕвви тăрăх туяççĕ, каярахпа сăмах пĕрлĕхĕсемпе сăмахсене, унтан сыпăксемпе сасăсене уйăрма тытăнаççĕ. Ачасем калаçма вĕреннипе çыру аталанăвĕ хушшинче пĕрешкеллĕх пур теме юрать-и? Ку мĕнрен килет?

**250.** Сĕннĕ темăсенчен пĕрне суйласа илĕр те презентаци хатĕрлĕр. Темăсем: «Пиктографи çырăвĕ», «Идеографи çырăвĕ», «Сас паллисемпе усă куракан çыру – анлă сарăлнă çыру».

## Чăваш çырăвĕн аталанăвĕпе паянхи сăн-сăпачĕ

➤Чăваш çырăвĕн историйĕ сасса пĕлтерекен паллăсенчен пуçланнă. Паллисем вара ялан пĕрешкел пулман. Акă авалхи пăлхар тапхăрне ***руна*** çырăвĕ кăтартуллă пулнă. Руна паллисене йывăç е чул çине каснă. Вăтам пăлхар тапхăрĕнче ***араб графикипе*** усă курнă. XVIII ĕмĕртен сыхланса юлнă текстсенче чăваш сăмахĕсене ***латин графикипе*** çырнă. Хальхи çырура эпир ***кириллицăпа*** усă куратпăр. Вăл чăваш çырăвне XVIII тата XIX ĕмĕрсен чиккинче кĕрет. Кириллица малтанхи вăхăтра чăваш чĕлхинчен чылай уйрălса тăнă.

**251.** «Руна çырăвĕ», «Араб çырăвĕ», «Латин çырăвĕ» темăсенчен пĕрне суйласа илĕр те презентаци хатĕрлĕр.

Портрет профессора Н.П. Петрова



➤Чăваш пуплевĕн фонемисене туллин кăтартакан çырăва тăван халăха çутта кăларакан Иван Яковлевич Яковлев (1848.04.13 – 1930.10.23) 1871 çулта тунă. Чăваш алфавитне тума пулăшмашкăн Хусан университетĕче вĕренекен Иван Яковлева Николай Иванович Ильминский профессор университет студентне В.А. Белилина тата крешĕн тутар шкулĕнче вĕренекен С.Н Тимрясова сĕнет. Тимрясов тутарла çырнă текстсене тӳрех чăвашла куçарса вуланă. Тимрясов вуланине Белилин вырăс сас паллийĕсемпе çырса пынă. Пухăннă текстсене И.Я. Яковлев хăйĕн юлташĕсемпе пĕрле Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вĕренекенсене вулаттарать. Белилин çырни чăваш пуплевĕнчен чылай инçетре тăни паллă пулать. Çамрăксем чăн чăвашсен пуплевне ятарласа тĕпчеме тытăнаççĕ. Белилин чăваш чĕлхинче хăйне евĕр хупă тата уçă сасăсем пуррине асăрхать. Çакна Ильминские пĕлтереççĕ. Ушкăнпа сӳтсе явнă хыççăн анатри чăвашсен пуплевĕнче 8 уçă сасă, 37 хупă сасă пуррине тупса палăртнă. Çакă, Н.П. Петров профессор шухăшĕпе, «чăннипех те пысăк пĕлтерĕшлĕ открыти пулнă». Иван Яковлев алфавит тума тытăнать. Малтанхи алфавит 47 сас паллинчен тăнă, мĕншĕн тесен унта хупă фонемăсен янăравлă тата янăравсăр вариантĕсем валли те, хытă тата çемçе варинчĕсем валли те ятарлă паллăсем пулнă. Янравлă вариантсене вырăссен **Бб, Гг, Дд, Жж, Зз** сас паллийĕсемпе, янравсăррисене **Пп, Кк, Тт, Шш, Сс** сас паллисемпе кăтартмалла пулнă. Хупă сасăсен çемçе варианчĕсемшĕн сас паллисен сылтăм енне çӳле апостроф лартнă: **Б́б́, П́п́, Ѓѓ, Ќќ, Л́л́** т. ыт. те. Апострофсăр **Фф** кăна пулнă. Фонемăсен пулеври варианчĕсене кăтартакан 47 сас паллиллĕ алфавитпа 1872 çулта Хусанта «Чăваш ачисене çырăва вĕрентмелли кĕнеке» тухать.

Ку çыру мелсĕррине кура 1872 çулта И.Я. Яковлев 25 сас паллиллĕ алфавит тăвать. Акă вăл: **Аа, Пп, Вв, Кк, Тт, Тт, Ђђ, Ее, Шш, Сс, Çç, Ии, Јј, Лл, Љљ, Мм, Нн, Њњ, Оо, Рр, Уу, Ў̆ў̆, Фф, Хх, Ъъ, Ьь, Ыы.** Ку алфавитпа 1872 çулта Хусанта «Çырăва вĕренме тытăнмалли кĕнеке» тата «Чăн тĕн кĕнеки» тухать. И.Я. Яковлев хыççăн тĕрлĕ улшăну пулса иртет (1923 çулта **о** сас паллине, 1926 çулта **ф** сас паллине, 1933 çулта **б, г, д, ж, ц** сас паллисене, 1938 çулта **э, ю, я, щ, ь, ъ** сас паллисене кĕртеççĕ, 1926 тата 1938 çулсенче хӳреллĕ **ђ** сас паллине **ч** сас паллипе улăштараççĕ, 1938 çулта хӳреллĕ **љ, њ** тата тăрăллă **т** сас паллисене пăрахăçлаççĕ) те, алфавит хальхи сăн-сăпатне йышăнать.

**252.** Хальхи чăваш алфавитне аса илĕр те сас паллисене хăйсен йĕркипе тетрадьсене çырăр.

**253.** Яковлевчченхи сас палли çырăвĕ мĕнле пулнине Интернет материалĕпе усă курса е Н.П. Петров профессорăн «Чăваш çырулăхĕ» (Шупашкар: Чăваш кĕн. ид-ви, 1971. – 5 – 14 С.) тата «Чăваш литература чĕлхин историйĕ» (Шупашкар: Чăваш патш. ун-чĕ, 1978. – 110 с.) кĕнекисене вуласа пĕлĕр.

➤ Алфавита, тĕпрен илсен, чĕлхен фонемисене кăтартмалли паллăсене кĕртеççĕ. Ку паллăсемпе çырура епле усă курмаллине ***орфографи ăслăлăхĕ*** татса парать. Апла пулин те орфографи картинче чĕлхен фонемисене палăртассипе кăна мар, ытти ыйтусемпе те ĕçлеме тивет.

Чăваш орфографийĕн тĕп пайĕсем çаксем: 1) сăмахсен фонема тытăмне палăртасси; 2) ырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсене çырасси; 3) пĕрле, уйрăм тата дефиспа çырасси; 4) сăмаха пысăк сас палинчен пуçласа çырасси; 5) сăмахсене кĕскетесси тата кĕскетсе

çырасси; 6) çыракан сăмахăн пайĕсене пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарасси. Кашни пайăн хăйне кăна тивĕçтерекен принцип пур. Паллах, орфографин тĕп пайĕ ***фонема принципне*** пăхăнать, мĕншĕн тесен ку пай чĕлхен фонемисене палăртассипе ĕçлет. Орфографин иккĕмĕш пайĕшĕн вырăс чĕлхнчен çырупа кĕнĕ сăмахсене çырасси пĕлтерĕшлĕ. Ку сăмахсен улшăнман пайне эпир, тĕпрен илсен, вырăссем пекех çыратпăр – хăйне майлă цитатăлатпăр. Çавăнпа ***цитата принципĕ*** çинчен калаçмалла. Сăмахсене пĕрле, уйрăм тата дефиспа çырассинче ***лексема принципĕ*** палăрать. Сăмахсене пĕчĕк тата пысăк сас паллинчен пуçласа çырасси ***пĕлтерĕш принципĕнчен*** килет, мĕшĕн тесен эпир сăмах пайăр ят пулнипе пулманнине пăхатпăр. Сăмахсене кĕскетсе çырассин принципĕ, ăслăлăх çыннисем каланă тăрăх, ***правилăсенче каланă кăтартуран*** тухса тăрать. Сăмахăн пайĕсене пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарасси ***сыпăк принципне*** пăхăнать.

**Шухăшлăр**

Чăваш радиовĕн пĕр программи «Юрă пултăр парне!» ятлă. Программăна ертсе пыракансем мĕн тесшĕн: «Юрă парне пултăр! – тесшĕн-и. – Парне юрă путăр!» – тесшĕн-и?

- Чăваш орфографийĕн правилисене 1919, 1923, 1926, 1933, 1938, 1949–51, 1961, 1967 тата 1992–94 çулсенче улăштарнă. Улшăну час-часлăхĕ, ытларах чух, вырăс сăмахĕсене çырассинче тата сăмахсене пĕрле, уйрăм тата дефиспа çырассинче пулса иртнĕ. Ку чăваш чĕлхипе вырăс чĕлхи хушшинче уйрăмлăха курманнипе, тăван чĕлхене тĕпчесе çитерейменнипе çыхăннă. Тĕслĕхрен, вырăссен *лапа, уха* йышши сăмахĕсенче янăравсăр <п>тата <т> фонемăсем пур. Вĕсем йĕкĕр мар, пĕччен. Çавнашкалтарах

илтĕнекен *аппа* тата *няхха* йышши чăваш сăмахĕсенче вара йĕкĕр фонемăсем çинчен калаçмалла. Çакна пĕлменнипе 1920-мĕш çулсенче *маттематтиккă, ламппă*, *парттă* (пĕр пек икĕ хупă сас палли лартса) çырма пуçлаççĕ. Ку вара çырăва кăткăслатнă, илемсĕрлетнĕ. Орфографипе ĕçлекенсем вырăс сăмахĕсене вырăссем пекех çырас çул çине тăраççĕ. 1938 çултан чăваш орфографийĕ икĕ системăллă пулса каять: *ată – ода, васан – ваза, аппа – Анапа.* Икĕ системăлăха пула пирĕн чăваш сăмахĕсен орфографине те, вырăс сăмахĕсеннине лайăх пĕлмелле, чăваш культурипе çыхăннă пайăр тата пайăр мар сăмахсене вырăсла мĕнле çырмаллине чухламалла. Тĕслĕхрен, *Ухсай* псевдонима чăвашла та, вырăсла та пĕр пек çыратпăр, анчах *Хусанкай* (чăвашла), *Хузангай* (вырăсла) – расна.

**254.** Литературăпа искусство çыннисен ячĕсемпе псевдонимĕсене мĕнле çырмаллине таблицăра кăтартăр. Таблицăна малалла тăсма юрать.

| Чăвашла çырнă ят псевдонимсем | Вырăсла çырнă псевдонимсем |
|---|---|
| | Сарби |
| Урташ | |
| Кипек | |
| Чулкаç | |
| Шуçăм | |
| | Сеспель |
| | Садай |
| | Кибеч |
| | Пегиль |
| | Ярандай |

➤ Пĕрле, уйрăм тата дефиспа çырас пирки те ăслăлăхра яланах тавлашу пулнă. Уйрăмах сăмах майлашăвĕсем шухăшлаттарнă. Вĕсене пĕрисем пĕрле çырма ыйтнă, теприсем хирĕçленĕ. Ку тавлашу паян кун та пырать. Пĕрле çырас шухăшлисем, тĕпрен илсен, чĕлхемĕрĕн тытăмне мар, чăвашла пуплеве тĕпе хураççĕ, вăл вырăссенни пекех тесе шухăшлаççĕ. Чăн чăваш пуплевĕнче предложенин интонацийĕ кăна вырĕссенни евĕр, сăмах майлашăвĕн вара пачах урăхла: сăмахсем вырăсла калаçнă чухнехи пек яр уйрăлса тăмаççĕ – пĕрлешсе каяççĕ. Çакна пула паузăпа пауза хушшинчи сăмах майлашăвĕсене сăмах тесе пăхмалла пек туйăнать. Интонацие тĕпе хуракансен орфографийĕ яланах хирĕçӳлĕх патне илсе пырать. Акă интонацие пăхса тунă кивĕ орфографие пăхăнас тăк *хĕрача* (пĕрле), *ар ача, ывăл ача, хĕр пултăр, ывăл пултăр* (уйрăм) çырмалла. Сăмах майлашăвĕсен пайĕсене пĕр-пĕринчен уйрăм çырнине хӳтĕлекенсем чĕлхе çине таянаççĕ, майлашура тĕрлĕрен сăмах тĕл пулма пултарнине кураççĕ, ку е вăл сăмах майлашăвне ытти çавнашкал сăмах майлашăвĕпе танлаштарса кăтартаççĕ. Чăваш чĕлхинче сăмах майлашăвĕсем мĕнле тытăмлă пулнине, вĕсен интонацийĕ пуплевре еплерех иккенне И.А. Андреев профессор хальхи ăслăлăх çитĕнĕвĕсене шута илсе ăнлантарнă.

Чăваш орфографине ятарласа çак учĕнăйсем тĕпченĕ: Ф.Т.Тимофеев (Тимухха Хĕветĕрĕ), А.И. Васильев, С.П. Горский, Р.И. Цаплина, А.И. Иванов, И.А. Андреев, И.П. Павлов т. ыт. те.

Портреты Ф.Т.Тимофеева (Тимухха Хеветере), А.И.Васильева, С.П. Горского, А.И. Иванова, И.А. Андреева, И.П. Павлова

**255.** *Патвар сăмса* кайăк ячĕн ĕлкипе пулнă ытти сăмах майлашăвĕсене тупăр. Вĕсем кайăк ячĕсем те, чĕр чун ячĕсем те, ӳсен-тăран ячĕсем те пулма пултараççĕ. Кам нумайрах ят пĕлет, вăл çĕнтерет.

**256.** *Упа сарри* сăмах майлашăвĕн ĕлкипе пулнă сăмах майлашăвĕсене аса илĕр.

**257.** Кун тата каç ячĕсем *юман йывăç* йышши сăмах мйлашăвĕсен ретĕнче тăнине ĕнентерĕр.

➤Ку е вăл чĕлхе çинче йĕркеленсе тăракан çыру пурри çав чĕлхеллĕ халăхăн аталанăвĕ çӳллĕ шайра пулнине çирĕплетет. Çыру пире тăван чĕлхемĕре шкулта вĕренме май парать, ăслăлăхра ĕçлеме çул уçать, тĕрлĕ çĕрте пурăнакан чăвашсемпе çыхăнтарать. Çырăва пула пĕтĕм культура аталанать: хаçат-журнал пичетленет, шкул, театр ĕçлет, эфира радиопа телевидени передачисем тухаççĕ... Чи лайăххи – литература чĕлхи тарăн тымарлă пулни, унăн жанрĕсемпе стилĕсем аталанса вăй илни.

## Публицистика стилĕ

**258.** 5–8 классенче «Текст» вĕреннĕ май эсир мĕнле стильсемпе паллашнине аса илĕр.

**259.** Текст публицистика стильне кĕнине, сирĕн шухăшăрпа, мĕнле паллăсем тăрăх пĕлме пулать?

## Катек «Шевли» – лауреат

Чулхула облаçĕн Сартаково ялĕнче йăлана кĕнĕ фольклор фестивалĕ кăçалхипе 11-мĕш хут иртнĕ. Фестивале пирĕннисем те – Канаш районĕн Катек ялĕнче ĕçлекен «Шевле» фольклор ушкăнĕ те – хутшăннă. Хутшăннă çеç мар, иккĕмĕш степень лауреачĕ те пулса тăнă.

Халăх юррисене кăмăллакансем «Хрусталь çăраççи» фестивале Раççейĕн тĕрлĕ кĕтесĕнчен пухăннă: Удмурт, Мари, Пушкăрт,

Чăваш, Тутарстан республикисенчен, Киров, Ярославль, Чулхула облаçĕсенчен.

Пĕтĕм Раççей фольклор фестивалĕ пурин чĕри патне те уçă тупнă темелле. Фестивальте унта тĕрлĕ çĕртен ятарласа килнĕ ушкăнсем çеç мар, Сартаково ял çыннисем те хăна пулса тăнă: коллективсемпе пĕрле юрланă, савăннă, сăн ўкерттернĕ. Алă ăстисен ярмăркки те шавласа-кĕрлесе çеç тăнă. *(Надежда Георгиева.)*

**Пурин патне те уçă тупнă* сăмахсемпе автор мĕн каласшăн?

*⭘ *Тĕрлĕ кĕтес* сăмах майлашăвĕн тĕп сăмахне *(кĕтес)* мĕншĕн нумайлă хисеп аффиксĕ йышăнтарман?

*⭘ *Шавласа-кĕрлесе* (дефиспа) çырни мĕнрен килет: пĕр сăмаха икĕ хут кланинчен-и, икĕ сăмаха мăшăрлатнинчен-и?

**260.** Вуласа тухăр. Текст публицистика жанрне кĕнине ĕнентерĕр.

**Л.П. Сергеев профессор Патшалăх премине тивĕçрĕ**

Чăваш патшалăх педагогика университечĕн профессорĕ Л.П. Сергеев «Чувашский язык: диалектологический аспект. Том 1, 2» (Шупашкар: Чăваш патшалăх педагогика университечĕ, 2008) кĕнекешĕн Чăваш Республикин 2012 çулхи патшалăх премине илме тивĕçлĕ пулчĕ. Ку кĕнекере Чăваш Республикинче тата республика тулашĕнче пурăнакан чăвашсен пуплевĕн уйрăмлăхĕсене тишкернĕ, диалектологи карттипе çыхăннă ыйтусене пăхса тухнă.

Кĕнекере ученăйăн нумай енлĕ ĕçĕн чи кăсăкланса тунă пайне пĕтĕмлетнĕ теме пулать, мĕншĕн тесен Леонид Павлович ăслăлăх çулне диалектологирен пуçланă, хăйне яланах диалектолог тесе шутланă.

Диалектолог ĕçĕ – чи йывăр ĕç, мĕншĕн тесен яланах вĕçĕмсĕр çӳревре пулмалла, пур çĕрте те çынсемпе калаçмалла, çынсен калаçăвне итлеме тата илтме пĕлмелле, калаçнине çырса илме ĕлкĕрмелле, мĕн çисе ăçта выртса-тăрса пурăнас пирки те шухăшламалла. Тĕпчевçĕ йывăрлăхсенчен хăраман, çанталăк юрлă е çумăрлă пулнине пăхман – район хыççăн района кайнă, ял хыççăн яла утнă. Кутамккара куллен кирлĕ япаласем пулнă, алăра – пăт ытла таякан магнитофон.

Ученăй хăй ĕçне аслă шкулта вĕренекенсене, шкулта чăваш чĕлхипе ĕçлеччĕр тесе пысăк программа тунă, ăна чăвашсем пурăнакан ялсене пĕтĕм Раççей çĕрĕпе салатнă. Тĕпчевçĕ программипе ĕçлекен кашни чăвашран каярахпа тăван ял калаçăвĕпе кăсăкланманни никам юлмарĕ теме юрать.

Фотография проф. Л.П. Сергеева

Кĕнекепе тĕпчевçĕсем кăна мар, ытти тĕрĕк чĕлхеçисемпе финн-угр чĕлхисен тĕпчевçисем те уса курма пултараççĕ, мĕншĕн тесен кунта тăван чĕлхемĕрĕн тата кӳршĕллĕ халăхсен чĕлхин тытăмне, историне, халăхсен кун-зулне ăнлантармалли нумай-нумай материал тупма пулать. Чăваш диалекчĕсене пĕлни пире литература чĕлхине пăхăнса калаçма тата çырма пулăшать.

Ученăй чăваш чĕлхин диалектологи карттине тĕрĕк чĕлхеçисенчен чи малтан тунă. Ку картта, шел те, тĕрлĕ сăлтава пула (Совет Союзĕ арканни, укçа-тенкĕ çитменни т. ыт. те) паян кунччен те пичетленсе тухман. Апла пулин те ку ĕз те халăх вуламалла пуласса шанатпăр.

Л.П. Сергеев профессора Патшалăх премине илнĕ ятпа чĕререн саламлатпăр, пурнăçра ырлăх-сывлăх, малашнехи ĕçре ăнăçу хыççăн ăнăçу тума сунатпăр. *(Ю. Виноградов.)*

➤ **Публицистика стилĕ** вăл – журналистсем, писательсем, политикăпа общество деятелĕсем усă куракан стиль.

*Публицистика* сăмах – вырăс чĕлхинчен çырупа кĕнĕ сăмах. Вырăссем латин чĕлхинчен publicus сăмаха йышăннă.

Публицистика тексчĕсенче хальхи обществăн политика, экономика, культура тата çынсен хутшăнăвĕн паян куншăн пĕлтерĕшлĕ проблемисемпе ыйтăвĕсене çутатса параççĕ. Публицисика стилĕн тексчĕсем общество пурнăçĕшĕн пĕлтерĕшлĕ уçăмлă проблема пуррипе тата автор хăй тапратнă ыйту çине мĕнле пăхни кĕреттĕн курăнса тăнипе, чĕнӳлĕхпе уйрăлса тăраççĕ. Публицистика тексчĕ пурне те ăнланмалла пулмалла.

Публицистика стилĕн тĕллевĕ – информаци парасси, çынсен кăмăл-туйăмне витĕм кӳресси, обществăн шухăшне кирлĕ енне çавăрасси.

Публицистика стилĕн çакнашкал тĕсĕсем пур: таса публицистика стилĕ, хаçат стилĕ, радиопа телевиденин публицистика стилĕ, оратор пуплевĕ.

**261.** Текста вуласа тухăр, кĕвви тăрăх тата стилĕ енчен хăш ушкăна кĕнине калăр.

### Кунран кун каялла-и?

Чăваш чĕлхи сӳнсе пыни çинчен хаçатра та çыратпăр, телевиденипе те калаçатпăр.

Чăваш вырăсланĕ-ши? Çак ыйту уйрăмах юлашки çулсенче çивĕч. Хăшĕсем вырăсла йĕркеллĕ калаçма пĕлмеççĕ пулин те, сăмахĕсене пăсса перкелешеççĕ. Чăвашăн чи малтан тăван чĕлхепе тĕрĕс те илемлĕ калаçма вĕренмелле.

Ватăсем патне Шупашкартан мăнукĕсем каникула пырса тулаççĕ те, пĕрисем чăвашла, теприсем вырăсла пĕлменнипе

тертленеççĕ вара. Хăшĕ-пĕри шкул пĕтерсенех хулана килсе пĕр-икĕ шурă кулач çинипех вырăсланса каять. Яла пырсан çӳреççĕ вара сăмсисене каçăртса. Ялтан тухнисемех хулара пилĕк – вунă çул пурăнаççĕ те чăвашла калаçакансене: «Фу, деревня», – тесе хăртаççĕ.

Ял çыннисене ала çинче йатса çӳремелле, мĕншĕн тесен пĕтĕм хула халăхне апат-çимĕçпе тивĕçтереççĕ. Заводсенче ĕçленипех хырăм тăранмасть.

Шупашкарта чăвашла калаçнинчен мĕн вăтанмалли пур? Тĕп хуламăрта 70 процент чăваш пурăнать. Ачасем хулара çуралса ӳсеççĕ, ашшĕ-амăшĕ чăваш пулин те хăйсене: «Эпир – вырăс!» – теççĕ. Ăçтан вырăс пулччăр вĕсем?

Чăваш чĕлхине пур енчен те хĕснине пула ял çамрăкĕ ирĕксĕрех чăвашла калаçма манса пырать, чĕлхене пула хăй тӳссе ирттернĕ нушана ачи ан куртăр тесе ăна вырăсла вĕрентет. Чăваш ялĕнче пурăнакан е çуралнă чăвашсенчен сасартăк «вырăс» çурални кулăшла-çке.

«Эпĕ – чăваш!» – тесе хăпартланса, кăкăр çапса çӳренипе аякка каяймастпăр. Нумай çынна ют халăхпа хутшăнса унпа пыма çăмăлрах пек туйăнать пулмалла. Çут çанталăк саккунĕ хăйĕннех тăвать пулас. Пысăкки пĕчĕккине хĕстерет.

Пирĕн, тăвансем, мăн асаттесем ламран лама парса пынă тăван чĕлхене темле йывăр пулсан та пĕтме парас марччĕ. Хамăр мăнуксене те çепĕç чĕлхене вĕрентесчĕ. *(Александр Кириллов.)*

* Текст манерĕнче ăславăн мĕнле паллисем пур?

* Текста мĕнле тĕллевпе çырнă: информаци парас тĕллевпе-и, мĕн те пулин тума чĕнсе-и?

* Текстăн иккĕмĕш предложенийĕ тĕллевĕ енчен мĕнле? Автор хăй лартнă ыйтăва хуравлать-и? Хурав ырлăх енне туртать-и, йывăрлăх енне-и?

* Эсир автор çырнипе пуринпе те килĕшетĕр-и? Чăвашла пуплев талккăшне сарас тесен мĕн тумалла? Шухăшлăр: пурнăçра мĕн лайăх – пĕр чĕлхе пĕлни-и, нумай чĕлхе пĕлни-и? Чăвашла пуплеве сыхласа хăварас тесен миçе чĕлхе пĕлмелле?

* *Чăваш чĕлхи сӳнсе пыни, хулана килсе пĕр-икĕ шурă кулач çинипех, сăмсисене каçăртса, алă çинче йăтса çӳремелле, кăкăр çапса çӳремелле, пысăкки пĕчĕккине хĕстерет* сăмах çыхăнăвĕсене мĕнле ăнланмалла? Ку сăмах майлашăвĕсенчен хăшне ансат калаçуран илнĕ теме пулать? Ансат калаçуран автор тата мĕнле сăмахсемпе усă курнă? Асăннă сăмах пĕрлешĕвĕсемпе ăслăлăх текстĕнче усă курма юрать-и?

* *Перкелешеççĕ* сăмахăн пĕлтерĕшĕ тӳрĕ-и, куçăмлă-и?

* «Вырăс» сăмаха кавычкăна мĕншĕн илнĕ? Кавычкăсăр çырас пулсан мĕнле ăнланмалла? *Перкелешеççĕ* сăмаха кавычкăна илме кирлĕ-и? Мĕншĕн?

➤ Публицистика стилĕнче ыйтуллă тата çуклă предложенисем, риторикăллă ыйтусем тата ăнлантару тата туйăм функциллĕ кӳртĕм сăмахсемпе предложенисем тĕл пулаççĕ.

➤ Публицистика стилĕ ытти стиле çывăх: ăслăлăх стильне, илемлĕ литература стильне. Публицистикăра литература чĕлхин мелĕсемпе те, ансат пуплев мелĕсемпе та анлă усă кураççĕ.

Публицистика стилĕн **тĕп жанрĕсем** шутне заметка, репортаж, очерк, интервью, статья тата ытти кĕрет.

**Заметка** вăл – публицистика стилĕн информаци жанрĕ. Заметка çыракан хăй умне пĕр-пĕр кăсăк пулăм е факт çинчен пĕлтерес тĕллев лартать.

Информаци çак ыйтусен хуравне тупма пулăшать:

▪ информаци ăçтан тухнă?

▪ мĕн пулса иртнĕ?

▪ çырса кăтартнă ĕç хăçан тата ăçта пулса иртнĕ?

▪ пулса иртнĕ ĕçĕн сăлтавĕ мĕн?

▪ ĕçе мĕн тĕллевпе ирттернĕ?

Заметкăн уйрăмлăхĕсем çаксем:

▪ информацилĕх (мĕн пулнине пĕлтерни);

▪ информацин тĕрĕслĕхĕ;

▪ ăслав, хаклав элеменчĕсем çукки;

**262.** Заметкăна вуласа тухăр. Текст темине тупăр. Заметка авторĕ мĕнле тĕллеве тĕп вырăна лартнă – информаци парас тенĕ-и, пĕр-пĕр ĕç тума чĕннĕ-и?

Елчĕк районĕн «Комбайн» кооперативĕнче тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсем 1439 га. Халĕ механизаторсем кĕрхи культурăсене (575 га) пухса кĕртеççĕ. Кашни гектартан кĕрхи тулă 22,7 ц, кĕрхи ыраш 26,7 ц тухать.

В. Капламов, В. Анисимов, В. Андреев комбайнерсем иртен пуçласа çур çĕрчченех хирте. Тырра йĕтем çине А. Васильев, Г. Николаев, Н. Головин водительсем турттарса ĕлкĕреççĕ.

Вырмана хутшăнакансене кунне икĕ хутчен апатлантараççĕ.

*(Юрий Михайлов.)*

**263.** Текста вуласа тухăр. Глагол формисем хăш вăхăта пĕлтернине сăнăр. Ку мĕнрен килет? Текст стиль тата жанр енчен хăш ушкăна кĕрет? Хăвăр шухăшăр тĕрĕс иккенне ĕнентерĕр.

### 10 пин çултан тупăннă

«Старко» фирма» ООО-ра ĕçлекен Константин Корочков рабочи Çĕнĕ Шупашкар хулин юхан шыв портĕнчен турттарса килнĕ вĕт чула пушатнă чухне хăйне майлă япала асăрханă. Тĕлĕнтермĕш çинчен Чăваш наци музейĕн ĕçтешĕсене пĕлтернĕ.

Вырӑна музейӗн археологипе авалхи истори секторӗн ертӳҫи Александр Волков, ӑслӑлӑх секретарӗ Татьяна Давыдова тата директорӑн ҫумӗ Валерий Бардасов пырса ҫитнӗ.

Александр Волков вӗт чул купи ӑшӗнче тупнӑ тӗлӗнтермӗш бизон мӑйраки пулнине палӑртнӑ. Ӑсчахсен шухӑшӗпе, бизон ҫӗр ҫинче 10 пин ҫул авалрах пурӑннӑ.

Малашне бизон мӑйраки музейӗн фондӗнче упранӗ. *(Надежда Георгиева.)*

**264.** Текста вуласа тухӑр. Текст стиль тата жанр енчен хӑш ушкӑна кӗрет? Мӗншӗн?

## Алексей Германовпа ун юлташӗсен ҫитӗнӗвӗ

Португалире спорт аэробики енӗпе тӗнче чемпионачӗ иртнӗ. Унта Раҫҫейӗн пӗрлештернӗ команди йышӗнче Чӑваш ен спортсеменӗ Алексей Германов ӑмӑртнӑ.

Раҫҫей команди «гимнастика платформи» дисциплинӑра (унта Алексей Германов та пулнӑ) 1-мӗш вырӑна тухнӑ. Тепӗр дисциплинӑра Алексей нацин пӗрлештернӗ комамандин ытти спортсменӗсемпе пӗрле 3-мӗш вырӑн йышӑннӑ. Кунсӑр пуҫне Раҫҫей спортсменӗсен команди пӗрлехи зачётра та ылтӑн медаль ҫӗнтерсе илнӗ.

Тӗнче чемпионатне килнӗ 38 командӑран Раҫҫейӗн пӗрлештернӗ команди команда зачӗчӗпе тата медаль йышӗпе пуҫласа ҫӗнтернӗ. Пирӗннисен пухкӑчӗнче – виҫӗ ылтӑн, пӗр кӗмӗл, пӗр бронза медаль. *(Роза Власова.)*

*● Текста «Алексей Германов – чемпион» ят парсан мӗнле йӑнӑш пулать?

*● Чи юлашки предложенире *медаль* сӑмаха нумайлӑ хисепре калама юрать-и? Мӗншӗн?

◆ Хальтерех пулса иртнӗ пӗр-пӗр мероприяти, пулӑм ҫинчен заметка ҫырӑр. Унта глаголӑн хӑш формисемпе усӑ курма пулать?

**Ас тӑвӑр**

*Аннен куҫӗсенчен куҫҫуль тухать. Йӑмӑк мана аллисемпе ҫупӑрласа илчӗ. Сан ҫӳҫӳсем вӑрӑм* тени йӑнӑш –*Аннен куҫӗнчен куҫҫуль тухать. Йӑмӑк мана аллипе ҫупӑрласа илчӗ. Сан ҫӳҫӳ вӑрӑм* темелле.

**265.** Заметка паллисем шутне мӗн-мӗн кӗнине тупса кӑтартӑр.

**Мӗн тери илемлӗ акӑш!**

Елчӗк районӗн Энтепе ялӗсем ҫывӑх пӗвене апатланма килнӗ кӑнтӑр акӑшӗсене курса тӗлӗнмеллипех тӗлӗннӗ.

Шап-шурӑ мӑшӑр шыв ҫийӗпе юнашар, пӗр-пӗрне яланлӑха ҫухатасран асӑрханса майӗпен ишнӗ. Чашӑлти акӑшсене ял ҫыннисем, юлашки хут, иртнӗ ӗмӗрте курнӑ.

Ку акӑшсен ятне республикӑн Хӗрлӗ кӗнекине кӗртнӗ. Ҫавӑнпа тӗлӗнтермӗш кайӑксене тытма, вӗлерме юрамасть.

Орнитологсем ҫирӗплетнӗ тӑрӑх, кӑнтӑр акӑшӗсем чӗпӗ Шупашкар шыв управӗнче, Атӑл йӑлӑмӗнче, Сӑр юхан шывӗн тата Улатӑр хулин тасату хатӗрӗсен тӑрӑхӗнче кӑлараҫҫӗ. Асӑннӑ вырӑнсенче, тӗпчевҫӗсем палӑртнӑ тӑрӑх, вунӑ – ҫирӗм ытла мӑшӑр йӑва ҫавӑрать. Чӑваш Ен урлӑ вӗҫсе иртнӗ чухне вӑтӑр – ҫӗр ытла мӑшӑр апатланма анать.

Тӗлӗнтермӗш акӑшсем пирӗн тӑрӑхшӑн яланлхи хӑнасем пулинччӗ! *(Юрий Михайлов.)*

**266.** Текста вуласа тухӑр та вӑл заметкӑран мӗн енӗпе уйрӑлса тӑнине тупӑр. Репортаж ҫинчен калаҫмалӑх мӗнле сӑлтав пур?

**Трак тӑрӑхӗнче Республика кунне чаплӑ паллӑ турӗҫ**

Республикăн кунне кăçал Чăваш Енĕн тĕп хулинче тата Трак енче сумлăн та чыслăн палăртрĕç.

Трак енсем патшалăхăн тĕп уявне ирттерме тĕплĕн хатĕрленнĕ. Красноармейски салине пырса кĕрсенех ырă улшăну палăрать, ку е вăл çĕнĕлĕх, хăтлăхпа илем куçа тыткăнлать.

Çĕнтерӳ паркĕнче Чăваш Ен Пуçлăхне Михаил Игнатьева «Атăл леш енĕ» клубăн «Шурăм пуçĕ» ача-пăча фольклор ансамблĕ юрласа-ташласа кĕтсе илчĕ. Михаил Васильевич декораципе хушма искусствăн «Ăстасен урамĕ» куравĕпе паллашрĕ. Уявăн чаплă саманчĕ «Факел» стадионта «Эпир аваллăх тĕнчинчен – Упи паттăр йăхĕнчен» концертпа пуçланчĕ.

Уяв вăл – юрă-кĕвĕ кăна мар, тунă ĕçе пĕтĕмлетни те. Ĕçре пуçаруллисемпе хастаррисене тĕрлĕ наградăпа чысларĕç. Михаил Игнатьев Красноармейскин пушар чаçне икĕ çĕнĕ машина уççине пачĕ. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ Наци конгресĕн президенчĕ Николай Угаслов Трак ене «Кетра» строительство керамикин заводĕнчен 1 миллион тенкĕ уйăрнине пĕлтерчĕ.

Район çыннисемпе пĕрле Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕ Валерий Филимонов, Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин депутачĕсем Леонид Черкесов, Николай Малов тата Алёна Аршинова савăнчĕç.

Михаил Игнатьев «Ăстасен тăкăрлăкĕнче», ял тăрăхĕсен «картишĕсенче» алă ăстисен пултарулăхĕпе хавхаланса паллашрĕ.

Красноармейски салинче каçченех юрă-кĕвĕ янăрарĕ, шăрăхран хăрамансене вăй виçме спорт вăййисем кăчăк туртрĕç.

Мĕн калас тенине манăн:

«Красноармейски, Красноармейски,

Ешĕл сад пек эс ялан.

Красноармейски, Красноармейски,

Ӳс, çĕклен эс, хăватлан!» – сăмахсемпе пĕтĕмлетес килет. *(Роза Власова.)*

* Текстра публицистика стилĕн мĕнле паллисем пур?

* Текстра усă курнă предложенисен казуемăйĕ глаголăн хăш формисенчен пулнă? Вĕсем мĕнле вăхăта пĕлтереççĕ? Каласа панă пулăмсене автор хăй курнине мĕн тăрăх пĕлме пулать?

* Автор хаклавĕ хăш предложенисенче палăрать

➤ Публицистикăн анлă сарăлнă жанрĕсен шутне **репортаж** кĕрет.

*Репортаж* сăмаха чăвашсем вырăс чĕлхинчен йышăннă; вырăссем французсен reportage, акăлчансен to report «пĕлтер» пĕлтерĕшлĕ сăмахĕсене пăхнă.

Репортаж вăл – автор хăй мĕн курнине-илтнине информаци хатĕрĕсене пĕлтерни. Репортаж заметкăран пулса иртнин картинине (мĕнле, мĕншĕн ыйтусене шута илсе) кăларса тăратнипе, мĕн курнипе илтнине хакланипе, автор хăй шухăш-туйăмне кăтартнипе уйрăлса тăрать. Çавăнпа текстăн çыру манерĕнче калав та, ăслав та пулать.

Хăйне те кăтартнăран репортажра автор 1-мĕш сăпат тата таврăну сăпат местоименийĕсемпе, 1-мĕш сăпатри глаголсемпе час-час усă курать. Пулса иртнĕ ĕç-пуçа хăй те хутшăннине автор глаголăн пĕрре иртнĕ е темиăе иртнĕ вăхăт формисемпе усă курнинчен те пĕлме пулать. Кунсăр пуçне текстра вăхăта пĕлтерекен сăмахсем, тӳрĕ тата тӳрĕ мар пуплевлĕ предложенисем тĕл пулаççĕ. Истори факчĕсене аса илтерекен сыпăксем пулма пултараççĕ.

▲ Репортажра акă мĕн пулмалла:

▪ автор пуррилĕхĕ;

▪ пĕтĕмлетӳ, автор хаклавĕ;

▪пулса иртнине сăнарлă кăтартни.

**267.** Текста вуласа тухăр та репортаж паллисене тупăр. Ку репортаж Роза Власова репортажĕнчен мĕн енчен уйрăлса тăрать?

**Мускав тата пĕтĕм Раççей патриархĕ**

**Чăваша килсе кайни**

2015 çул. Çурла уйăхĕн 1-мĕшĕ. Каçхи ултă сехет çурă иртсен Шупашкар аэропортне Пĕтĕм Руç Патриархĕ Кирилл вертолетпа вĕçсе çитрĕ. Вырăс Православи чиркĕвĕн Пуçлăхне Шупашкар тата Чăваш митрополичĕ Варнава, Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх туса пыракан Михаил Игнатьев, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн председателĕ Юрий Попов тата ытти патшалăх ĕçлĕ çынсем кĕтсе илчĕç.

Журналистсене Кирилл Патриарх Чăваш Ене чи ырă кăмăл-туйăмпа çитнине пĕлтерсе çапла каларĕ: «Чăваш çĕрĕ çинче – Шупашкарта – эпĕ пĕрремĕш хут 1969 çулта пултăм. Пĕлетĕп: унтанпа Чăваш Енпе Шупашкар хули кулленхи пурнăçа хăтлăлатас тата Чиркĕве аталантарас тĕлĕшпе пысăк çул-йĕр утса тухнă. Манăн Чăваш Енĕн çĕнĕ сăнне курас тата кунта сăваплă вырăнсенче пулса сирĕн халăхăрпа пĕрле кĕл тăвас килет. Пурне те пил парса Турă юратăвне Чăваш Енре пурăнакан кашни çын патне çитерес кăмăлăм та пысăк».

Мана, çылăхлăскере, каçарăр, анчах та çак сăмахсене Мускав тата Пĕтĕм Руç Патриархĕ Сăваплă Кирилл пĕр мана куçран пăхса каланă пек туйăнчĕ. Ун пек пулма пултараймасса ăспа питĕ лайăх ăнланатăп, анчах чун-чĕрепе туятăп. Çакă ĕнтĕ вăл, Руç Патриархĕн шалти вăй-хăвачĕ, харăсах пурне те пил пама пултарас тивлечĕ. Те

вертолета пула, аэропортра нихҫанхинчен вичкĕн те сивĕ ҫил вĕретчĕ, кăнтăрлапа пуҫланнă ҫумăр лӳшкетчĕ — Патриарх сăнĕ лăпкă та ҫутăччĕ... Килес кун янкăр та хĕвеллĕ пуласса систерниех пулчĕ-тĕр ку.

Пукрав тата Татиана соборне чиркӳ тулли халăх пухăннă. Чиркӳре мĕн калани урамра та илтĕнет, экран ҫинче те уҫҫăн курăнать. Чăваш митрополичĕ Варнава республика халăхĕ Кирилл Патриарх килессе епле тĕмсĕлсе кĕтни ҫинчен каларĕ: «Эпир Сирĕн чунăра пĕлетпĕр. Эсир — миссионер», — терĕ. Аслă Архиерей сăмахне пуҫлас умĕн Кирилл Патриарх ҫапла каларĕ: «Чиркӳсенче ҫамрăк сăнсене, вырсарни шкулне ҫӳрекенсене, ҫамрăксем мăшăрланас умĕн пил илме килнине, ачасене тĕне кĕртнине курса чун савăнать. Ҫакă пирĕн халăхра Православи тĕнĕ чĕрĕ пулнине ҫирĕплетет», — терĕ.

Шупашкар тата Чăваш митрополитне Варнавăна нумай ҫул ăнăҫлă ĕҫленĕшĕн тав тунă май Кирилл Патриарх: «Нумай нациллĕ халăх ҫынсем пĕр-пĕрин культурине, чĕхине, йăли-йĕркине хиеплесе пурăнсан кăна упранса юлаять,— терĕ, Республика Пуҫлăхĕ Михаил Игнатьев енне ҫаврăнса. — Эсир Чиркӳ пурнăҫне пысăк тимлĕх уйăратăр, пĕтĕм чун-чĕререн тăван халăх ырлăхĕшĕн ĕҫлетĕр. Малашне те ҫапла пулма Турă пулăштăр, — терĕ.

Ҫурла (август) уйăхĕн 2-мĕшĕнче, святой Илия пророка асăнса уянă кун, Апостолпа тан святой Владимир аслă кнеҫ ячĕпе Ҫĕнĕ Шупашкарта лартнă соборта 9 сехет ҫурăран пуҫласа 12 сехет те 30 минутчен Литуриги турĕ. Ҫак сăмах «пĕрле тумалли ĕҫ» пĕлтерĕшлĕ. Кĕлли мĕн пур кĕлĕрен аслă кĕлĕ шутланать.

Кăнтăрлахи пĕр сехет иртсен Кирилл Патриарх Шупашкарта Зоя Яковлева урамĕнче «Ҫĕнтерӳ» асăну комплексĕ умне чечек кăшăлĕ хучĕ, панихида турĕ. Аслă Атăл тупанĕ ҫинчи пек курăннă

вырӑнта патшалӑх ҫыннисемпе пӗрле тата ытти нумай-нумай халӑх пулчӗ. Тӑван ҫӗр-шыв хӳтӗленӗ фронтовиксене тав тунӑ тата вӑрҫӑ хирӗнчен таврӑнман паттӑрсене асӑнса кӗлӗ тунӑ хыҫҫӑн Патриарх Евангелире: «Хӑй тусӗсемшӗн чунне параканӑн юратӑвӗнчен пысӑкрах юрату ҫук», – тенӗ сӑмахсене аса илтерчӗ.

Кирилл Патриарх Таса пурнӑҫпа пурӑннӑ Сергей Радонежский ячӗпе Шупашкар лартакан чиркӗвӗн никӗсне асӑну капсулине хывнине курма, Патиарх сӑмахне итлеме халӑх питӗ йышлӑ пуҫтарӑннӑччӗ. Мускава таврӑнас умӗн Святейши Патриарх капсула та хыврӗ, кӗлӗ те турӗ, халӑха вӗрентсе те каларӗ.

Мӗнпе асра юлчӗ-ха Кирилл Патриарх Чӑваш Ене килсе кайни?

Патриарха ҫывӑхранах курни, унӑн сӑмахӗсене итлени Евангелире: «Таса чӗреллисем кӑна Турра курма пултараҫҫӗ», – тени чӑн сӑмах пулнине тепӗр хут ӗненме май пачӗ. Апла пулсан – пирӗн пурин те шухӑш-кӑмӑлӑмӑра, ӗмӗт-тӗллевӗмӗре май пур таран тасатмалла, пӗр-пӗрин телейӗпе ҫитӗнӗвӗшӗн, таса пурнӑҫӗшӗн савӑнма хӑнӑхмалла. *(Римма Прокопьева.)*

* Текстра публицистика стилӗн мӗнле паллисем пур?

* Автор мӗн курнине-илтнине хӑй туйӑмӗсене палӑртса калать-и, палӑртмасӑр-и?

* Автор хаклавӗ хӑш предложенисенче палӑрать?

* Текст планне тӑвӑр та ун тӑрӑх, мӗн вуланин содержанине каласа парӑр.

**268.** Текста вуласа тухӑр та вӑл репортаж пулнине ӗнентерӗр.

## Уяв пӗрлештерет

Уяв Тутар Республикинче пурӑнакан пӗтӗм чӑвашӑн йӑлана кӗнӗ праҫникӗ шутланать. Унта, паян кун та, авалхи пекех, чӑваш

юрри-кĕвви янăрать, фестивальпе конкурссем иртеççĕ, наци апат-çимĕçĕпе сăйлаççĕ, халăх ташшисемпе, ал ăсталăхĕпе тĕлĕнтереççĕ. Вăйă лапамĕнче ача-пăча хĕвĕшет, пăхаттирсем кĕрешеççĕ. Чипер те хастар хĕрсем «Уяв пики» конкурсра тупăшаççĕ.

Уява 1993 çултанпа питĕ анлăн ирттереççĕ. Кăçал чăваш халăх культурин уявне Аксу поселокĕ йышăнчĕ. Кунта чăвашсем ытти регионсенчен те чылайăн килчĕç: Пушкăртстанран, Самар тăрăхĕнчен, Чăваш Енрен тата ытти çĕртен. Хăйсен юрри-ташшине виçĕ сцена çинче 102 коллектив кăтартрĕ.

Уява Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, Тутарстан Президенчĕ  Рустам Минниханов тата ытти сумлă хăна хутшăнчĕ. «Ку уяв тĕрлĕ наци çыннисене пĕрлештерет. Авалтан пыракан йăла-йĕркене тытса пыни обществăна тĕреклетет, халăхсемпе регионсен туслăхне çирĕплетет, ăрусен çыхăнăвне вăйлатать», – терĕ Рустам Нургалиевич.

Михаил Васильевич глобализаци тапхăрĕнче ырă йăлана сыхласа хăварнăшăн тав турĕ, уяв çынсен ăсталăхне аталантарма, çемьен паха енĕсене упрама май панине палăртрĕ, Тутар çĕрĕ яланах тарават та ăшă пулнине аса илтерчĕ. Чăваш кльтурине аталантарма ырми-канми ĕçленĕшĕн Тутарстан чăвашĕсен культра автономийĕн ертӳçине Дмитрий Самаренкина «Чăваш Республики умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» орден медалĕпе чысларĕ. Аксу район пуçлăхне Камиль Килманова сехет парнелерĕ.

Икĕ регион ертӳçисем Чăваш халăх поэчĕн Николай Полоруссов-Шелепин Аксура уçнă палăкĕ умне чечек хучĕç.

Уява кашни çулах савăнăçлă кĕтсе илеççĕ. «Вăл нумай ялта иртет. Питрав кунĕнче Уява улăха кайса ăсатса яратпăр. Пуç кăшăлĕсем çыхатпăр та шывпа юхтарса яратпăр, пĕтĕм усал-тĕсел, инкек-синкек кайтăр тетпĕр. Ун хыççĕн вылятпăр-кулатпăр,

юрлатпăр-ташлатпăр. Уявр картинче яш каччăсем хĕрсемпе паллашаççĕ, туслашаççĕ, çемье çавăракансем те пулаççĕ. Çак йăлана асатте-асанне, атте-анне тытса пынă. Пирĕн ачасем те уява манмасса шанатпăр», – терĕ Аксу районĕн Китлĕпуç ял тăрăхĕн «Çеçпĕл» ансамбль солисчĕ Надежда Иванова. Пултарулăх коллективĕн репертуарне, тĕпрен илсен, Аксу ен чăвашĕсен хăна юррисемпе такмакĕсем кĕреççĕ иккен.

Чăваш Ентрусьел ялĕнче пурăнакан Лариса Енидеркина чăвашпа Валентина Копнева пуканесем ăсталама маттур. Ал ăстисен енче чăваш уяĕсемпе пĕрле вырăссенне те ирттереççĕ. Мӳт ял çынни Татьяна Захарова сăра ăсти иккен.

Чăваш Ен ушкăнĕпе Тутарта пултарулăх коллективĕсемпе ал ăстисем, предпринимательсем общество организацийĕсен хастарĕсем, Чăваш наци конгресĕн ĕçченĕсемпе писатель-поэтсем пулчĕç. Акă Патăрьел районĕнче Тури Чакăра ĕçлекен «Чемен» фольклор ушкăнĕ вара Уявра кăçал иккĕмĕш хут пулчĕ.

Чăваш Ен пултарулăх ушкăнĕнчен Уяв парнисене тивĕçлисем пулчĕç. Шупашкар районĕн «Тăрăн ен» ансамблĕ туй йăлине кăтартнăшăн диплома илчĕ. «Тăрăн ен» ертӳçи Валерий Васильев хут купăсçăсен конкурсĕнче иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ. *(А. Михайлов.)*

**269.** Мĕнле те пулин спорт ăйăинчен, олимпиадинчен е кампа та пулин ирттернĕ тĕл пулуран репортаж тăвăр.

**270.** Вуласа тухăр. Ткста публицистика стилĕпе çырнă тесе мĕншĕн калама пултаратпăр? Ку текст заметкăсемпе репортажсенчен мĕн енчен уйрăлса тăрать? Ку уйрăмлăха кура текста публицистикăн хăш жанрне кĕртме пулать?

**Аристарх Гаврилович Орлов-Шуçăм**

Эпĕ Аристарх Гаврилович Орлов-Шуçăм композиторпа 1982-мĕш çулта утă уйăхĕн 2-мĕшĕнче паллашрăм. Ун чухне хăйсем тĕллĕн вĕреннĕ композиторсен хайлавĕсене хаклакан пĕртен пĕр çын Аристарх Гавриловиччĕ. Композиторсен союзне эпир Григорий Васильевич Моклаковпа пĕрле кайрăмăр. Вăл ман «Çĕнĕ кун» сăвва хывнă юрă кĕвĕленĕччĕ.

Çĕнĕ юрра Аристарх Гаврилович пианинăпа ик-виçĕ хутчен ĕнерсе каларĕ, унтан хаваслăн юрласа ячĕ. Çĕнĕ кĕвĕпе хавхаланнă музыкант пианино клавишĕсене ачашланăн пусса киленчĕ. Аристарх Гаврилович ăçта-ăçта якатмалли пуррине пĕлтерет те татах юрласа ярать. Çĕнĕ юрра итлеме пур пӳлĕмрен те тухаççĕ. Кĕвĕ пурне те çунатлантарать иккен.

Копозитор кĕçех ура çине сиксе тăчĕ, пире çĕнĕ юрă çуралнă ятпа саламларĕ. Аристарх Гаврилович çӳллĕ çын, хăйне сăпайлă тытать, çинçе сасăпа кулать. Кулли чуна уçать.

Çывăхрах паллашма композитор пире хăй патне хваттере чĕнчĕ. Аристарх Гаврилович чаплă композитор тата дирижёр кăна мар, пултаруллă ал ăсти те иккен. Хваттерте музыкант хăй аллипе тунă физгармони органĕ, хăй илемлетсе тунă шкапсем, панносем, сăн ӳкерчĕкĕсем...Эпир тата паллă композитор лайăх поэт, платник, сехет юсавçи, кинооператор, пушмак тĕплекен, йывăç турачĕсенчен тем те пĕр ăсталакан маçтăр пулнине те пĕлтĕмĕр.

Аристарх çемьере чи кĕçĕн ача, улттăмĕшĕ, пулнă. Ашшĕ вилсен ачана купăс илсе паракан та пулман. Аристарх кĕвĕсем калама аллине куккăшĕн купăсĕпе хăнăхтарнă. Юрăсем çырма хăй тетĕшĕнчен Фёдор Павлов композитортан вĕреннĕ.

Вăрçăра пулнă-и, Мускав консерваторийĕнче вĕреннĕ-и, çарта музыка енĕпе ĕçленĕ-и – Аристарх Гавриловича яланах Чăваш çĕрĕ,

хӑй ҫуралса ӳснӗ Ҫӗрпӳ тӑрӑхӗн Уйкас ялӗ канӑҫ паман, чӑваш юрри-сӑвви кӑсӑклантарнӑ. *(Сарра Баранова.)*

**Ҫӗнӗ юрра Аристарх Гаврилович пианинӑпа ик-виҫӗ хутчен ӗнерсе каларӗ, унтан хаваслӑн юрласа ячӗ* предложенире *каларӗ* сӑмах выранне *вылярӗ* теме юрать-и? Шухӑшӑра ӗнентерӗр.

* *Ҫӗнӗ юрра итлеме пур пӳлӗмрен те тухаҫҫӗ* предложенире *пур пӳлӗмсенчен те* тесен мӗнле йӑнӑш пулать? Тӗрӗссипе епле каламалла?

➤ Публицистикӑн паллӑ жанрӗ тесе **очерка** калама юрать.

Очерк вӑл – калӑпӑшӗ енчен пӗчӗк литература хайлавӗ, пулӑмсемпе фактсем ҫинчен кӗскен пӗлтерни е каласа пани.

Очеркра сӑмах, тӗпрен илсен, пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулӑм е факт пирки пырать. Автор информаци парас, вулакана хӑй енне ҫавӑрас тӗллев лартать. Очерк калава тата репортажа ҫывӑх.

Очеркра автор ку е вӑл пулӑма е факта тишкрет, хак парать. Автор хӑй шухӑшне пӗлтернипе пӗрлех вулавҫа шухӑшлама, фактсене танлаштарса пӗтӗмлетӳ тума пулӑшать. Очеркра илемлӗ литератрурӑпа публицистикӑн паллисем пӗр-пӗринпе ҫыхӑнса кайма пултараҫҫӗ.

Очерк час-часах ҫынсен ку е вӑл тӗл пулӑвӗсене, калаҫӑвӗсене кӑтартакан пӗчӗк сыпӑксенчен, обществӑпа ҫут ҫанталӑка сӑнланисенчен, вӗсем пирки шухӑшланисенчен тӑма пултарать.

Автор калавӗсӗр пуҫне очеркра ун геройӗсен пуплевне вулама пулать.

Очеркра пуплевӗн тӗрлӗ тӗсӗпе – сӑнлавпа, калавпа тата ӑславпа усӑ кураҫҫӗ.

Очеркӑн тӗп уйрӑмлӑхӗсем:

- документлӑх, фактсемпе пулӑмсен чӑнлӑхӗ;

▪ пурнăçра пулнă е пур çын çинчен, вăл пурăнакан чăнлăх çинчен каласа пани;

▪ автор тĕп çул-йĕртен пăрăнса шухăшлани;

▪ авторăн очерк вĕçĕнчи пĕтĕмлетĕвĕ, тапратнă ыйту пирки йышăннă позицийĕ;

чĕлхен сăнарлăх мелĕсемпе усă курни.

➤ Очеркăн çак тĕсĕсене уйăраççĕ: **портрет очеркĕ, документ очеркĕ, çул çӳрев очеркĕ.**

Портрет очеркĕ вăл героя илемлĕх мелĕсемпе усă курса тишкерни. Хайлавра геройăн сăн-пичĕ кăна мар, вăл ытти çынсемпе мĕнле хутшăнни, мĕнле условире пурăнни, тавралăхпа мĕнле çыхăнура тăни яр уççăн курăнать. Çакă пĕтĕмпе çыннăн кăмăл-туйăмлăхне, шалти тĕнчине кăтартма пулăшать.

## Асăрхăр

Чăваш чĕлхинче падеж системине кĕмен ***-чен(-ччен)*** аффикс пур. Вăл, В.И. Сергеев профессор асăрханă тăрăх, ят сăмахсен, наречисен тĕпĕ çумне тата глаголăн пули-пулми причасти аффиксĕ çумне хушăнать: *kaçчен, ирччен, эпирччен, вуннăччен, паянччен, ыранччен, хальччĕн, халĕччен; çураличчен, авланиччен, сивĕниччен.* *Халиччен* тенине грамматика йăнăшĕ темелле, мĕншĕн тесен *халĕ* сăмах глагол мар.

271. Вулса тухăр. Текста портрет очеркĕ теме пулать-и?

## Ялта пурăнакан писатель

Патăрьел районĕнче Çĕньялта пурăнакан Мария Мадюкова çыравçа тахçантанпах пĕлетĕп. Пуçласа Мария Ильиничнăпа Чăваш халăх поэчĕпе Геннадий Айхипе писательницăн тăван ялне кайсан

паллашрӑм. Ун чухне Мария Ильинична ял шкулӗн музейне ертсе пыратчӗ. Тепрехинче ял клубне ҫине тӑрса юсаттарнӑ чух куртӑм. Халь ак ман паллакан ҫын ял тӑрӑхӗн пуҫлӑх лавне туртса пырать, ҫав вӑхӑтрах шкулта 40 ҫул ытла чӑваш чӗлхипе литературине вӗрентет. Чунӗпе хавхаланса таҫта вӑрттӑн кӗтесре сӑвӑсем, тӗпчев ӗҫӗсем ҫырать.

Сакӑр класс пӗтернӗ ытти тантӑшӗсемпе пӗрле Матюк Мани (ҫапла чӗннӗ ялта Мдюкова Мария хӗре) 1974 ҫлта Турхан шкулне ҫул тытать. Кунта чӑваш чӗлхипе литературине Любовь Васильевна Мартьянова поэтесса вӗрентме килнӗ. «Чӑваш чӗлхине юратасси шӑпах ҫакӑнта ҫуралчӗ, – аса илет Мария Ильинична. – Икӗ метр тӑршшӗ «Ешӗл хунав» стена хаҫачӗ кӑларатгӑмӑр, унта хамӑрӑн сӑвӑ-калава ҫыраттӑмӑр. Любовь Васильевна хӑйӗн сӑввисемпе паллаштаратчӗ. Ман сочиненисене класс умӗнче вулани те асрах. «Мария, сан чӑваш чӗлхи учителӗ пулмалла», – тетчӗ вӗрентекенӗм. Учительница ертсе пыракан драмкружок виҫӗ пысӑк спектакль лартрӗ».

Мария Мадюкова халь хӑй сӑмах ӑсти, анчах ҫул уҫса параканне асран кӑлармасть. Пуҫарullӑ ҫын самантлӑха та ал усса лармасть. Ертӳҫӗсем те ӗҫ тупсах тӑраҫҫӗ. Ҫамрӑклах Мария Ильиничнӑна хӗрарӑмсен канашне ертсе пыма шаннӑ. Канаш ертӳҫи «Хӗрарӑмсен сасси» хаҫат кӑларнӑ, сӑвви-тӗрленчӗкне хӑех ҫырнӑ, хӑех ӳкерчӗксемпе илемлетнӗ.

Тӗрӗссипе, вулама Мадюковсен ҫемйинче пурте юратнӑ. Ашшӗ вуланине ачасем кӑна мар, асламӑшӗ те, амӑшӗ те итленӗ. Ҫак юрату паян кун та сӳнмен-ха. Ҫавӑнпах пулас, Мария Ильинична хаҫат-журнал ҫырӑнса илет, илемлӗ литература та туянсах тӑрать, малаллах ӑнтӑлать.

Поэтесса хальтерех кăна «Шкул вальсĕ» кĕнеке кăларнă. Унта «Шкул вальсĕ» калав, «Чĕрĕк ĕмĕр иртсен», «Асран кайми уроксем» тĕрленчĕксем», Пирĕн этнограф тата фольклорист», «Айхи тымарĕ» тĕпчевсем «Шкул музейĕ» эссе тата ытти хайлав кĕнĕ.

Мария Ильинична *Айхи* псевдоним епле пулса кайнине тĕпчесе пĕлнĕ. Çынсем каланă тăрăх, поэт валли хушма ят аслашшĕ «тупнă» иккен, мĕншĕн тесен вăл тăтăшах *хайхи* сăмахпа усă курнă, анчах сăмахăн малтанхи [х] сассине каламасăр хăварнă.

Мария Ильиничнăн тĕлĕнмелле пуçарăвне палăртса хăварас килет. 1916 çулта хастар хĕрарăм çыравçă Çĕньялта Матюк Ахванеç йăх-тымарĕн пирвайхи слетне пуçтарнă. «Пĕр кăкран тухнă çамрăксем пĕр-пĕрне палламаççĕ, мĕншĕн тесен паянхи çăмăл мар пурнăç çынсене тĕрлĕ еннелле салатать. Çавăнпа тăванлăх туйăмĕ çултан çул чакса пырать. Шăпах çакна кура тăванлăх слетне ирттерес терĕм», – тĕлĕнтерчĕ Мария Мадюкова. Кашни слетра Мария Мадюкова поэтесса хайланă гимн янăрать. Унта: «Чун савăнать тăвансем лайăххипе», – сăмахсем пур. Хитре сăмахсем. *(Н. Смирнова.)*

* Тĕп информаци тесе мĕне пăхмалла?
* Текстăн стиль уйрăмлăхĕсене калăр.
* Текст содержанийĕ тăрăх автор хăй çырнине ырланипе ырламаннине, хавхаланнипе куляннине туйма пулать-и?
* Текстра очерк паллисене тупăр.
* *Чун савăнать тăвансем лайăххипе* предложенин тытăмне ăнлантарăр.

**272.** Текста вуласа тухăр. Ку текст «Ялта пурăнакан писатель» текстран мĕн енчен уйрăлса тăрать? Текстсене иккĕшне те очерк теме юрать-и? Мĕншĕн?

## Мария Мадюкова

Мария Мадюкова Патăрьел районĕнче Çĕньялта 1959 çулта çуралнă. 1974 çулта ял шкулне пĕтерсен 1974 – 1976 çулсенче Турхан вăтам шкулĕнче вĕреннĕ. 1982 çулта Чăваш патшалăх университечĕн чăваш уйрăмне пĕтернĕ. Тăван шкулĕнче 1977 çултанпа ĕçлет. Аслă вожатăй, учитель, шкул директорĕн çумĕ пулнă. 1998 çултанпа аслă категориллĕ учитель. «Илем» ансамблĕн хастарĕ. Пушă вăхăтра çыхма, тĕплеме, çĕлеме юратать, чунĕ хавхаланупа тулсан çырма ларать. Сăвăçă – виçĕ кĕнеке («Шурăшурă чечексем», «Ачалăхăм сăпки – Чиккен касси» тата «Шкул вальсĕ») авторĕ. Хайлавĕсем район тата республика хаçат-журналĕнче пичетленеççĕ.

273. Текстра мĕнле-мĕнле документсене асăннă? Панă текста документлă очерк теме  пулать-и? Хăвăр шухăшăра текстра тĕл пулакан фактсем çине таянса ĕнентерĕр.

### Ашмарин пурăннă çурт

2020 çулта паллă тюрколог Н.И. Ашмарин  çуралнăранпа 150 çул çитет. Ку датăна чăваш халăхĕ епле паллă тăвĕ? Ашмарин çурчĕн шăпи епле пулĕ? Шел те, Николай Иванович кун çути курнă çуртăн пуласлăхĕ савăнтармасть.

Н.И. Ашмарин 1870 çулхи юпа уйăхĕн 4-мĕшĕнче Етĕрнере купса çемйинче çуралнă. Çакна 1863 – 1958 çулсенче çырса пынă чиркӳ метрики çирĕплетет. Ашмарин çуралнă çурт ашшĕн тăванĕн - 2-мĕш гильдири купсан Александр Филиппович Ашмаринăн пулнă. Пĕр хутлă çуртра бакалей тата апат-çимĕç лавкки вырнаçнă, Ашмаринсен пысăк йышлă çемйи пурăннă.

Совет тапхăрĕнче çурт çĕнĕ власть туртса илет, иккĕмĕш хутне хăпартать. Çуртра тĕрлĕ вăхăтра тĕрлĕ организаци вырнаçнă пулнă. 1998 çулта иккĕмĕш хутра пушар тухнă. Ун хыççăн, 1997 çултанпа

регион пĕлтерĕшлĕ историпе культурăн палăкĕ (211510257780005 номерпа регистрациленĕ) шутланакан çурт арканма пуçланă.

Унтанпа 20 ытла çул иртнĕ. Историшĕн паллă çынсене – СССР халăх артистне Н.Д. Мордвинова, медицина ăслăлăхĕн докторне К.В. Волкова асăнса музейсем уçма хал çитернĕ Етĕрнере Н. И. Ашмарин юбилейĕ тĕлне татса памалли ыйтусем нумайлансах кайнă иккен.

Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Алиса Геннадьевна Иванова акă мĕн каласа пачĕ:

– Паллă тюрколог тата чăваш чĕхи тĕпчевçи Н.И. Ашмарин çуралнă тата пурăннă çурт (Ленин урамĕ, 18) хальхи вăхăтра Етĕрне тăрăхĕн балансĕ çинче шутланать. Çуртăн пĕр хутлă чухнехи ӳкерчĕкĕ сыхланса юлман. Çурт авариллĕ. Ашмарин çуртне тата уес училищин çурчĕсене арендăна парас план тăрăх торг ирттермеллеччĕ, анчах унта хутшăнас текенсем пулмарĕç.

Администрацин социаллă пай пуçлăхĕпе Галина Архиповăпа Ашмарин çурчĕ патне Ленин урамне çитсе килтĕмĕр. Ученăй çуралнă çуртпа паллашни чунра ырату çуратрĕ. Çуртне Николай Иванович хăй курсан мĕн калĕччĕ-ши?

Етĕрне тăрăхĕн пуçлăхĕ Павел Николаевич Бажейкин Ашмарин çуралнă çурта юасаса çĕнетме инвесторсем шыранине пĕлтерчĕ.

Николай Ашмарин çуралă çуртăн шăпи, ман шухăшăмпа, Етĕрнесене кăна мар, пĕтĕм чăваш халăхне кăсăклантармалла. Паллах, республика е Раççей шайĕнче пулăшмасан хула хăй тĕллĕн вăй çитереймĕ. Шанатăп: çак ĕçрен чăваш тĕнчи пăрăнмĕ. Кирлĕ пулсан нимене те тухăпăр. *(Н. Георгиева.)*

**274.** Текст публицистика стилĕпе çырнă документлă очерк пулнине ĕнентерĕр.

## Игоь Николаев юрăçăн чăваш тымарĕсем

Шупашкар хулин кунне уявланă май 2018 çулхи çурлан 19-мĕшĕнче хулан Чаплă лапамĕнче çăлтăр хăнасем шутĕнче юрăçă тата композитор Игорь Николаев пулчĕ. Вăл сцена çинчен пĕтĕм халăх умĕнче пурте илтмелле: «Чăваш Республики маншăн ют мар. Манăн асатте – чăваш. Эппин, эпĕ те – саккăртан пĕр пайĕ чухлĕ чăваш...» – терĕ.

Чăнах та çапла иккен...

2019 çулхи кăрлачра редакцие шăнкăравларăç. Шăнкăравлаканни Тренкасси хĕрарăмĕ Елена Витальевна Гурьева иккен. Вăл каланă тăрăх, Чăвашра Игорь Николаевăн тăванĕсем йышлă. Вĕсенчен пĕри – Игорь ашшĕн иккĕмĕш сыпăкри йăмăкĕ Калина Изосимовна Петрова.

Елена Витальевнăпа Калина Изосимовнăна Шупашкара тĕл пулăва чĕнтĕм. Сăмах çине сăмах – вăхăт çур çĕр патнеллех кармашрĕ.

Çырусем, документсем, сăн ÿкерчĕкĕсем... Çемье архивĕ чăннипех те пуян...

– Эпĕ Игорь Николаевăн виççĕмĕш сыпăкри йăмăкĕ пулатăп, - каласа парать Калиса Изосимовна. – Манăн анне Юлия Васильевна – Игорь ашшĕн Юрий Ивановичăн иккĕмĕш сыпăкри йăмăкĕ. Игорĕн мăн аслашшĕ Николай Иванович Качанов лартнă çурт Хыркассинче халь те пур. Çурт хуçи шăпах эпĕ пулатăп та. Хамăр, тĕпрен илсен, Шупашкарта пурăнатпăр, анчах кашни эрнерех ялта эпир.

Калиса Ивановна каласа панă тăрăх, Николаевсен кун-çул йĕрĕ çапларах иккен.

Игорь Николаевăн мăн аслашшĕ Николай Иванович Кочанов çут тĕнчене 1874 çулта килнĕ, икĕ хутчен авланнă. Пĕрремĕш арăмĕнчен  Мария хĕрĕ тата Иван ывăлĕ çуралнă. Мăшăрĕ вилнĕ. Николай Иванович юрлама юратнисĕр пуçне, вулама-çырма пĕлнĕ. Революцичченех çĕр виçевçинче ĕçленĕ, ял историйĕпе çыхăннă документсене пухнă, вĕсене каярах ял шкулне парнеленĕ. 1930 çулсенче çĕнĕ çĕре Пермь облаçне тухса кайнă та унта тата  çичĕ çултан авланнă.

Николай Иванович Кочанвăн Иван ятлă ывăлĕ (Игорь Николаевăн аслашшĕ)  Кочанов хушамат килĕшсех кайманнипе Николаев хушамат йышăнать. Çакăнтан пуçланать те ĕнтĕ Николаевсен йăх турачĕ. Иван Николаевичăн хăйĕн виçĕ ывăл пулнă: Валентин Иванович, Никита Иванович, Юрий Иванович. Юрий Иванович − Игорь Николаевăн ашшĕ.

Пĕрремĕш Николаев та, Иван Николаевич Николаев,  вĕреннĕ çын пулнă: Канаш финанс техникумне пĕтернĕ, колхоз экономистĕнче ĕçленĕ. Тăван çĕр-шыв вăрçи пуçлансан çара кайнă, Берлина çитнĕ. Иванăн аслă ывăлĕ Валентин Иванович 1998 çулхи ака уйăхĕн 9-мĕшĕнче çырнă çырăвĕнче çакнашкал йĕркесем пур: «1947 çулта эпир аттепе вебовкăпа Сахалина кайрăмăр. Унта иксĕмĕр эпĕ Тинĕс çарĕн училищине вĕренме кĕриччен, 1951 çулччен, пурăнтăмăр. 1951 çулта Сахалина аннепе шăллăма − Юрий Ивановича чĕнсе илтĕмĕр. 1960 çултанпа Иван Николаевичăн пурнăçĕ хăй  виличчен, 1983 çулхи ака уйăн 2-мĕшĕччен, Саратовпа çыхăннă...»

Юрий Иванович (Игорь ашшĕ) Сахалинтах юлать, Светлана ятлă хĕрпе çемье çавăрать. Игорь ывăлĕ, пулас юрăçă тата композитор, тĕнчене  Сахалин облаçĕн Холмск хулинче 1960 çулта кăрлачăн 17-мĕшĕнче килет.

Игорĕн ашшĕ (пултаруллă журналист, поэт, инçе ишев капитанĕ) 1981 çулхи утă уйăхĕн 6-мĕшĕнче çамрăклах (46 çулта чухне) вилнĕ. Игорĕн аслашшĕ Иван Николаевич ку тĕнчерен Саратовра хăй хваттерĕнче 1983 çулта ака уйăхĕн 2-мĕшĕнче кайнă.

– Паллах, – сăмах пĕтсе пынине пĕлтерет Калиса Изосимовна, – тĕнчене паллă тăван пурри пире те савăнтарать, мăнаçлантарать, анчах та эпир кун çинчен кашни çĕрте калаçса çӳреместпĕр. Кирлех-ши Игорь Николаева Чăвашра пурăнакан тăванĕсем? Мĕн тесен те, Атăл хăлхинче иртнĕ концертра хăйĕнче чăваш юнĕ те чупнине, аслашшĕ кунтан тухнине қаланă пулсан – хĕпĕртетпĕр кăна. Игорьпе çемйине Чăваш Енре яланах хапăл туса кĕтетпĕр. Николаевсен тĕп килĕн алăкĕсем тăванăмăрсем валли яланах уçă. *(Амина Турхан.)*

*****Шухăшласа пăхăр: Игорь Николаевăн ашшĕ чăвашла пĕлнĕ-и?

**275.** Панă текст Амина Турхан очеркĕнчен мĕн енчен уйрăм? Текст публицистика очеркĕ пулнине ĕнентерĕр.

2019 çулхи пуш уйăхĕн пĕрремĕш кунĕнче чăваш çыравçисен, юрăçисен, ташă ăстисен пĕр ушкăнĕ Тутар Республикин Нурлат çĕрĕ çинче пулса килчĕ. Ку тăрăх – чаплă юрра кĕнĕ: «Вун саккăрта чух юратрăм хĕре – Ас тумастăп хăш вăхăтрине», – сăмахсен авторĕн Григорий Гаврилович Калининăн тăван çĕрĕ.

Çул çӳрев тĕллевĕ Нурлат çĕрĕнче пурăнакан чăвашсемпе, вĕсен çыравçисемпе çывăхрах паллашассиччĕ. Паллах, пирĕн «Тăван Атăла» халăхра сарас шухăш та пурччĕ. Пирĕн йышра Лидия Филиппова (журнал редакторĕ), Альбина Юрату, Улькка Элмен, Арсений Тарасов, Владислав Николаев, Анатолий Хмыт, Евгений Турхан, Николай Ларионов, Инесса Шашкина çыравçăсем,

Владимир Милютин ташă вĕрентӳçи, Наци библиотекин ĕçченĕ Галина Соловьева пулчĕç.

Шупашкар хăнисене Нурлатăн Туслăх çуртĕнче тараватлăн, çăкăр-тăварпа кĕтсе илчĕç. Чаплă кермен кĕрлесе тăчĕ. Нурлата Аксу, Çарăмсан, Чистай, Çĕнĕ Шешмĕ, Элкел, Алексеевка районĕсенче, Самар тата Чĕмпĕр тăрăхĕсенче кӳршĕллĕ пурăнакан йăхташсем килсе çитнĕ. Çакă хăех халăх тăван сăмаха, аваллăха хисепе хунине çирĕплетет.

Нурлат районĕнчен нумай писатель тухнă: Михаил Захаров, Елизавета Илюшкина, Петĕр Андреев, Василий Орлов, Хĕветĕр Савгачев, Владимир Данилов, Елизар Абакшин. Вĕсен сăваплă та пархатарлă ĕçне «Туслăх» хаçат ертсе пыракан «Асамат кĕперĕ» литература пĕрлешĕвĕнче тăракансем малалла тăсаççĕ. Литпĕрлешӳре халĕ вунă ытла çыравçă чăмăртаннă. Вĕсенчен иккĕшĕ – Андриян Григорьев, Валентин Бурайкин уявра хăйсем сăввисене вулама тивĕç пулчĕç.

Районта чăваш чĕлхине манмаççĕ. Çакна халăх «Тăван Атăл» журнала юратса вулани те çирĕплетет. Сăмах май, журнала çырăнса илес енĕпе Нурлатсем Аксусем хыççăн Тутар Респбликинче иккĕмĕш вырăнта тăраççĕ. Çыхăнăва малалла та аталантарса пырас тĕллевпе «Тăван Атăл» редакцийĕпе «Асамат кĕперĕ» пĕрлешӳ ятарлă килĕшӳ туса алă пусса çирĕплетрĕç. Вăл малашне вăйсене пĕрлештерме май парса тăрасса шансах тăратпăр.

Тавах сире, аякра пурăнсан та чуна çывăх йăхташăмăрсемпе ĕçтешĕмĕрсем! Пире ултă сехет çул уйăрса тăрать пулин те пирĕн малашне те кӳршĕллĕ пĕр-пĕрне ăнланса тата пулăшса пырасчĕ, инçе çула çывăхлатасчĕ. Ĕçĕр-хĕлĕр ăнса пытăр, вăй-халăр тапса тăтăр! *(Г. Федотов.)*

* Хаҫат-жрнал ҫырӑнтарасси паян кун мӗншӗн пысӑк плтерӗшлӗ ыйту шутланать?

* Тутар Республикинче тата ытти ҫӗрте ушкӑнӑн-ушкӑнӑн пурӑнакан чӑвашсем ҫинчен кӗске презентаци хатӗрлӗр. Ун тӑрӑх каласа пама хатӗрленӗр.

* *Вӑл малашне вӑйсене пӗрлештерме май парса тӑрасса шансах тӑратпӑр* предложени тытӑмӗпе мӗнле – ӑнлантарӑр.

**276.** Текста вуласа тухӑр та темипе тӗп шухӑшне тупӑр. Манерӗ енчен текст хӑш ушкӑна кӗрет? Мӗншӗн? Текста публицистика стилӗпе ҫырнӑ-ши?

**«Караслӑ пыл» романа вуланӑ хыҫҫӑн ҫуралнӑ шухӑш-кӑмӑл**

Шетешке вӑл – «Караслӑ пыл» романра автор ҫырса кӑтартакан вӑрман. Хӑтлӑ вӑрман. Шӑпах халӗ эсир, хаклӑ вулаканӑмсем, ҫав вӑрман ҫывӑхӗнче пурӑнакан ҫынсемпе паллашатӑр. Романта сӑнланӑ сӑнарсене пӗр чӑмӑра чӑмӑртаса тӑраканни Шетешке вӑрманӗ пулсан – Анисса леснике вара Вӑрман амӑшӗ темелле пуль: ун тавра хайлавӑн пӗтӗм ӗҫ-пуҫӗ ҫаврӑнать.

... Романӑн тӗп илемӗ, паллах, ҫӗр ҫине тӑн-тӑн килнӗ Анисса сӑнарӗ. Унашкал ҫынсем чӑваш хӗрарӑмӗсен йышӗнче ҫук мар. Анисса – паттӑр хӗрарӑм, ҫут ҫанталӑк ҫуратса янӑ ҫул пуҫӗ. Ача ҫулӗсенче, калӑпӑр, шӑпаналла ӳснӗ. Ҫавӑнпа Аниссана тусӗсем пахча ҫимӗҫ шӑпанисен (ПҪШ) ертӳҫине суйлаҫҫӗ те. Ҫакӑ ӳсерехпе ӗмӗте кӗрет. Лесник ӗҫне тытӑнсан Анисса татах та пӗлӳ пухать, вӑрмана чунӗ-чӗрипе юратса пӑрахать. Апла пулин те, юратса качча тухнӑ ҫыннӑн тӗттӗм чунне ыр сунакан ҫул хунарӗпе ҫутатаймасть, хаклӑ ҫынна тӳрӗ ҫул ҫине илсе тухаймасть.

Романа каҫӑхса кайса вулатӑн. Роман авторӗ ӗҫе ӗҫ шайӗнче, чун ыйтнипе тӑвасине тӗп вырӑна хунӑ. «Караслӑ пыл» ахаль-махальлӗ хайлавпа ҫуралман – чун тарӗпе ҫуралнӑ.

Вулаканăм, чăваш вулаканĕ! Эсĕ ку хайлава эпĕ юратса вуланă пекех тимлесе ăша хыв. Чăваш чĕлхипе илемлĕ хайлав сăнарлама пултарулăх çитернĕ Ангелина Павловскаяна чун-чĕререн хĕпĕртемеллипех хĕпĕртесе тав сăмахĕ кала. Шетешке çыннисен кашнин шăпи сан чунна та манăнни пекех сăнарлăн кисретессе шансах тăратăп эпĕ, вулаканăм. *(Хв. Коновалов.)*

- **Хаклав (отзыв)** вăл – кам çинчен те пулин, мĕн çинчен те пулин йĕркеленнĕ шухăша кĕскен калани, шухăш-кăмăл, сĕмленӳ, кама та пулин е мĕне те пулин кĕскен хаклани.

Кĕнеке хаклавĕ вăл – вулавçă кĕнеке пирки аргументласа çырнă текст.

Хаклава ăслав майлă çырма юрать. Çавăнпа текстра тезис та, ĕнентерӳ те, пĕтĕмлетӳ те пулмалла. Юлашкинчен хаклав авторĕ кĕнекене вулас пирки ытти çынсене мĕнле те пулин сĕнӳ çырать.

Отзывра кĕнекепе мĕнле паллашине, мĕнле эпизодсем уйрăмах асра юлнине, ытларах мĕн килĕшнине пĕлтерме юрать. Кун пек чухне ытларах калав манерĕпе усă кураççĕ.

Кĕнекене полиграфи енчен мĕнле илемлетнине çырнă чухне сăнлавпа усă курмалла.

## Сыхланăр

Чăваш чĕлхинче çуклăха палăртакан мелсем предложенин сказуемăйĕ çумĕнче пулма тивĕçлĕ: *Эсир тĕрĕс каламастăр.* Çавăнпа *Эсир тĕрĕс мар калатăр* йышши предложенисемпе усă курассинчен сыхланмалла. Грамматика енчен *Çу-ук, Сергейпе эпир юлташсем çеç* йышши предложенисем те тĕрĕс мар. *Çу-ук, Сергейпе эпир тăвансем мар, юлташсем çеç* темелле. Скауемăйран инçетре тăракан *çук* татăк хăй пĕччен предложение çуклă туса çитереймест.

**277.** Вуласа тухăр. Текст хаклав жанрне кĕнине ĕнентерĕр.

### Чун хистенипе çырнă

Тĕрлĕ юрă-сăвăра, романпа повеçре, кинофильмра чĕрĕлсе тăнă граждан вăрçи геройĕсем, паллах, ӳсекен ăрăва, пăшăрхантармасăр, шухăша ямасăр хăварман.

Унчченхи паттăр çынсен витĕмĕ пирĕн ăрушăн, иртнĕ вăрçă вăхăтĕнче ӳснĕ ачасемшĕн, тата та вăйлăрах пулнăн туйăнать, мĕншĕн тесен эпир çурма тăлăх çитĕннĕрен Тăван çĕрĕн-шывăн вăрçă тапхăрĕсене кирлĕ пек танлашмарма, тĕрĕс хаклама пултаратпăр. Çавăнпа «Урхамахпа юлан утçă» сăвă Порфирий Афанасьев поэзине ахальтен пырса кĕмен.

Асăннă сăвва çырма поэта мĕн ытларах хистенĕ-ши? Тен, пĕр-пĕр кĕнеке геройĕ, тен, вăрçăран аманса таврăннă пĕр-пĕр кӳрши пулĕ? Юнлă çапăçура пуç хунă тăванĕ-и тен? Ку ыйтусене хурав тупма йывăр, мĕншĕн тесен çыравçă ĕçĕ вăрттăнлăх. Сăвва вуланă чух унта туйăм хĕрӳлĕхĕ, романтикăллă çунатлăх пурри сисĕнет.

Эппин, автор хăйне хăй хистесе сивĕ кăмăлпа ларса çырман.

*(Юрий Айташ.)*

* Текстра ăслав паллисене тупăр.

* Юрий Айташ çырнă текстра хутлă предложенисенчен хăшĕсем тĕл плаççĕ?

* Текстăн темипе тĕп шухăшне калăр. Текст ятĕнче ун теми палăрать-и, тĕп шухăшĕ-и? Çавнашкал шухăшлама мĕнле сăлтав пур?

**279.** Повесть тăрăх çырнă хаклава вулăр. Хаклавăн тĕп шухăшĕ мĕнле? Хаклав йĕркипе тытăмĕ епле?

### Анатолий Ырьятăн «Вутра çунман уртăш» повеçĕ çинчен

Чăвашсен паллă çыравçи, журналисчĕ Валентин Урташ çинчен Тутарта пурăнма тытăнсан çеç тĕплĕнрех пĕлтĕм. Çакă халĕ тĕлĕнмлле пулĕ, анчах Урташ çинчен манпа пĕр вăхăтра ӳснĕ çынсенчен питĕ сахалăшĕ илтнĕ. Çавăнпа Урташ сăвăçпа пĕр ялта çуралса ӳснĕ Анатолий Ырьятăн «Вутра сӳнми уртăш» повеçне Пăва районĕн «Ялав», Чĕмпĕр облаçĕн «Канаш» тата Тутар Республикин «Сувар» хаçачĕсенче пичетлеме пуçласан питĕ савăнтăм.

Ку кĕнеке вăрçă çинчен çеç мар, этем чысĕпе тивĕçĕ, халăхсем хушшинчи туслăх, патриотизм çинчен те. Хайлав этем ăс-тăнне çӳллĕ шая çĕклет. Çамрăксемшĕн пурăнма вĕрентекен çутă çăлтăр пулса тăрать. Паллă сăвăç, юрăçă, куçаруçă, журналист пурнăçĕ пире пурне те таса чунлă пулма, ĕçе, Çĕрĕмĕр-шывăмăра юратма вĕрентет. Пĕр ӳстермесĕр калатăп: повеçпе паллашнă хыççăн хама урăхларах туйма, тĕрĕслĕх яланах çĕнтерессе çирĕпрех ĕненме, этемлĕх умĕнчи яваплăха ытларах туйма пуçларăм. Ман шухăшăмпа, шкул ачисене, аттестат илсе çĕнĕ çулпа утма пуçлакансене, пурнăçра хăйсен вырăнне шыракансене шăпах çакăн пек кĕнеке кирлĕ те.

Повеçре автор тĕп геройăн туйăмĕсене, савăнăçĕпе чĕри çуннине питĕ ăста уçса pană. Поэт ăсталăхĕ вырăн-вырăн куççуь кăларать. Автор кашни героя пысăк тимлĕх уйăрнă, кашнине хăйĕн евĕрлĕ кăмăл, чун хевти уйăрса панă, кашнине вулаканăн тусне çавăрнă.

Сюжечĕ чăнлăхпа тулса пынăран, чуна пырса тивнĕрен повеçе куççуль кăлармасăр вулама çук. Вăрçă ӳкерчĕкĕсене питĕ уççăн, чăнлăхпа çыхăнтарса çырса кăтартнă. Вуласа пынă май, геройсем мĕн тӳссе ирттернине чун витĕр куратăн. Кунта пĕтĕмпех пур: вăрçă та, куççуль те, юрату та, çĕнтерӳшĕн ăнтăлни те...

Хайлав стилĕ, чĕлхи хай евĕр тата. Анатолий Ырьят çут çанталăка, тавралăха епле ăста, епле ĕненмелле кăтартать?!

Автор повеçре Валентин Урташ сăввисемпе пĕлсе, вырăнлă усă курать. Çакă хайлава хитрелетет, вăйлатать çеç. Халăх каларăшĕсемпе, ваттисен сăмахĕсемпе усă курни те – ырă тĕслĕх.

Совет çыннисен вăрçăченхи, вăрçăри, вăрçă хыççăнхи пурнăçне кăтартнипе пĕрлех автор манăçа тухма пуçланă истори пулăмĕсене куç умне кăларса тăратать. Çавна май воспитани парса ку чухнехи ăрăва, уйрăмах çамрăксене, ырă ĕç тăвать. Çĕнĕ повесть Анатолий Ырьят пултарулăхне çĕнĕ пусăма çĕклет.

Валентин Урташ пысăк чĕреллĕ, пултаруллă та çирĕп кăмăллă, таса чунлă тĕлĕнмелле çын пулнă. Унăн пурнăçне тĕплĕн тишкерсе документлă повесть çырса кăларни – хăй пĕр паттăрлăх. *(Е. Турхан.)*

*Сирĕн «Вутра çунман уртăш» повеçе алла илсе вулас килмест-и?

* Сирĕн шухăшăрпа, Е. Турхан çырнă рецензие мĕн çитмест? Ку йăнăша автор рецензи йĕркине пĕлменнипе тунă-и е юриех-и?

280. Пĕр-пĕр çĕнĕ кĕнекене е журналта пичетленнĕ калава илĕр те рецензи çырăр. Рецензисен конкрсне ирттерĕр. Чи лайăх рецензие «Тантăша», «Саманта» е «Тăван Атăла» ярса парăр.

281. Вуласа тухăр. Текст хаклав-и е хыпарлав-и? Хаклав (рецензи) валли мĕн-мĕн çитмест?

Паллă чăваш çыравçин Мария Ухсайăн ачасем валли çырнă хайлавĕсем паянхи куншăн та вырăнлă. Тĕрлĕ çулта хайланăскерсем ырă чунлă, ĕçчен пулма вĕрентеççĕ, пĕр-пĕрне пулăшмаллине аса илтереççĕ.

Чăваш кĕнеке издательствинче писательницăн «Улаçка» кăларăмĕ кун çути курчĕ. Ăна Мария Ухсай хĕрĕ Ульха Ухсай пухса хатĕрленĕ. Кĕнекене «Ташă», «Улаçа», «Ясмăк пĕрчи, «Хăйă çутни» калавсем, «Ирхи сывлăм» юмах тата «Тăрна чăпчăмми» пьеса юмах кĕнĕ. Вĕсенче автор тавралăх илемне кăтартса парать, ачасене ĕçчен те тăрăшуллă пулмалллине асăрхаттарать. *(«Тăван Атăл».)*

**282.** Вуласа тухăр. Текст интервью иккенни кĕрет курăнать. Çакă мĕнре палăрать?

**Чĕлхе Америкăна çитернĕ**

Светлана Хозяинова Шупашкар 12-мĕш шкулне «5» паллăсемпе пĕтернĕ хыççăн Федерацин Хусан университетне вĕренме кĕнĕ, бакалавриата хĕрлĕ дипломпа пĕтернĕ. Кăçал магистратура пĕтернĕ май дипломне «5» паллăпа хӳтĕлерĕ.

Федерацин Хусан университечĕ СШАн Филадельфи онкологи центрĕпе тачă çыхăну тытать. Унта Хусансем чи пултаруллă студентсене ĕçлеме яраççĕ. Çав студентсем шутне Светлана та кĕрет.

**– Акăлчан чĕлхине мĕн вăхăт вĕрентĕн?**

– Акăлчан чĕлхипе университетра пĕлӳ илнĕ вăхăтра кăсăкланма тытăнтăм. Хам тĕллĕн чылай вĕрентĕм: вĕçĕмсĕррĕн кĕнеке вуларăм, фильмсем куртăм. Ку хăнăху çителĕксĕр пулнине ют тăрăхра туйса илтĕм. Йĕркеллĕ калаçма ик уйăхран çеç пуçларăм. Паллах, малтан питĕ йывăрччĕ.

**– Светлана, Америкăна кайма чи пултаруллисене суйласа илни паллă. Пĕлĕве пахаланă чух тĕп вырăна мĕне хураççĕ?**

– Акăлчанла калаçма, тĕрĕс çырма пĕлекенсене суйласа илчĕç. Ĕнентерӳ çырăвĕ, резюме çыртарчĕç. Кайран вара Америкăра пире ăслăлăх енчен ертсе пырас çынсемпе канашларăмăр.

**– Филадельфи онкологи центрĕнче мĕн ĕçлетĕр?**

– Онкологи центĕпе юнашарах лабораторисем пур. Унта шăшисемпе усă курса шыçă чирне, сăмахран, пĕвер, ӳпке тата ыти орган ракне, тĕпчетпĕр. Кунтах онкологи больници вырнаçнă. Çавна пула чирлисен анализĕсене тишкеретпĕр. *(В. Петрова.)*

* Интервью текстĕнче предложенисене хулăн тата çутă сас паллисемпе пичетлени мĕн парать?

* Диалог умĕнхи текст мĕн тума кирлĕ?

➤ **Интервью** (акăлчанла *interview*), журналистика енчен илсен, калаçу формипе йĕркеленĕ жанр шутланать. Интервьюра журналист кампа та пулин калаçать. Калаçаканнине çав çын мĕне те пулин лайăх пĕлнине, ку е çав енĕпе специалист пулнине кура суйласа илеççĕ. Интервью тĕллевĕ – мĕн те пулин пĕлесси.

283. В. Петрова ирттернĕ интервьюра журналист черетпе 12 ыйту панă. Вĕсем çаксем:

**1) – Акăлчан чĕлхине мĕн вăхăт вĕрентĕн?**

**2) – Светлана, Америкăна кайма чи пултаруллисене суйласа илни паллă. Пĕлĕве пахаланă чух тĕп вырăна мĕне хураççĕ?**

**3) – Филадельфи онкологи центрĕнче мĕн ĕçлетĕр?**

**4) – Филадельфире халăх еплерех пурăнать? Çамрăксемпе паллашрăн-и?**

**5) – Çĕнĕ юлташусене эсĕ хамăр апат-çиеçпе сăйларăн-и?**

**6) – Апат-çимĕç хаклă-и? Сăмахран, çăкăр мĕн чухлĕ тăрать?**

**7) – Раççейпе танлаштарсан вĕренӳ тытăмĕ еплерех?**

**8) – Культура шайĕ еплерех? Килсĕр-çуртсăр çапкаланса çӳрекен йыт-кушак пур-и?**

9) – Эсир, студентсем, ăçта пурăнатăр? Хваттер тара тытма хаклă-и? 10) – Америкăра чăвашсене тĕл плмарăн-и?

11) – Светлана, магитстратура хыççăн эсĕ каллех АПШ-на ĕçлеме каятăн. Унта сан малалла вĕренме май пур-и?

12) – Тавах калаçушăн. Эппин, ăнăçу пултăр сана!

Интервью паракаканăн хуравĕсене вуласа тухăр. Хуравсем журналистăн хăш ыйтăвĕсемпе килĕшсе тăраççĕ? Хăвăр шухăшăра таблицăра ыйту номерĕсене лартса палăртăр.

| Хуравсем | Ыйту номерĕсем |
| --- | --- |
| – Шупашкарта çуралса ӳснĕ, кайран Питĕре куçса кайнă, халĕ Амреикăра пурăнакан хĕре тĕл пултăм. Ăнсăртран. Тăвана курнăнах туйăнчĕ. Вырăсла калаçнине илтсенех йăлт-ялт çаврăнса пăхатăп. Пĕлĕшсем, тăвансем утнăн туйăнса каять. Америка çамрăкĕсемпе чăваш халăхĕ пирки калаçса пăхма пикентĕм, анчах чăвашсем çинчен пĕлекенсем пулмарĕç. | |
| – Шкулта 12 çул вĕренеççĕ. Аслă шкула пурте каяймаççĕ, мĕншĕн тесен тӳлевсĕр вырăнсем çукпа пĕрех. Аслă шкулта вĕренес тесен кредит илмелле, ăна вĕренсе пĕтерсен ĕçлесе илнĕ укçапа татмалла. Эп паллакан пĕр çыннăн вĕреннĕшĕн 30 çул тӳлемелле. Медицина пĕлĕвĕ илес тĕк 10 çул вĕренмелле. | |
| – Купăста яшки пĕçерсе çитертĕм. Унсăр пуçне «Оливье», «Мимоза» салатсем хатĕрлерĕм. Килĕштерчĕç. Америка çыннисем, ытларах, бургер, пицца çиеççĕ; çуллă, пылак апата кăмăлласçĕ. | |

| | |
|---|---|
| Çавăнпа, тулли кĕлеткеллĕ çынсем нумай. Çамрăксем те. | |
| – Филадельфи – хитре хула, анчах Шупашкара çитмест. Урамра хуçасăр çӳрекен йытă-кушака курма çук. Вĕсем валли приютсем тунă. Бомжсене вара час-час тĕл пулатăн. | |
| – Аспирантура пĕтерме пулать. Тепĕр 6 – 8 çул вĕренмелле. Ун хыççăн биологи кандидачĕ пулма май пур, анчах эпĕ вĕренĕве малалла Хусан университетĕнчех тăсасшăн. Кĕркунне аспирантурăна вĕренме кĕме палăртатăп. | |
| – Çăкăр 3 доллар (пирĕнннипе 180 тенкĕ ытла). Лавккана пĕрре кайма вăтамран 100 доллар кирлĕ. Лавккасенче экологи енчен таса çимĕç çук. Фермерсем тӳррĕн сутакан апат-çимĕç экологи тĕлĕшпе таса, паха, анчах питĕ хаклă. Ку тăрăхра ял туризмĕ вăйлă аталланнă. Çывăхра пурăнакансем фермерсем патне çырла пуçтарма, çăмарта, сĕт-çу туянма çӳреççĕ. | |
| – Эпир субсидиленĕ хваттерсенче пурăнатпăр. Уйăха 750 доллар (пирĕн укçапа 45 – 50 пин тенкĕ) тӳлетпĕр. Çурт-йĕр питĕ хаклă. Кил-çурта кашни хăй тĕллĕн хăпартма ирĕк çук: стройкăра чăн-чăн профессионалсем кăна ĕçлеме пултараççĕ. | |
| – Америка çыннисем хаваслă, тараватлă. Палламан çынсем: «Ырă кун пултăр! Салам!» – тесе иртеççĕ. Аслисем çеç мар, çамрăксем те ăш пиллĕ. Эп çамрăксемпе те паллашса ĕлкĕртĕм. Пĕрисен кайрăмашшĕ-амăшĕ патне хăнана кайрăм. Ун чухне | |

| | |
|---|---|
| уявччĕ – тав тумалли кун. Çавна май тăван-пĕтене тав тăваççĕ, парнесем параççĕ. Уяв апачĕ вара – духовкăра пĕçернĕ кăркка.<br>Пурнăçа саплаштарма халăх, ытларах, кредит илет. Паллах, вĕсен пирĕнпе танлаштарсан кредит ставки чылай пĕчĕк. Шалу та аван. Тӳлемелли «шăтăксем» тупăнсах тăраççĕ, çапах кун пирки çынсем пăшăрханмаççĕ. | |

* Журналистăн юлашки репликинче *Эппин, ăнăçу пултăр сана!* предложение *Эппин, ăнăçу сана!* предложенипе улăштарма юрать-и? Хуравăра ĕнентерĕр.

* Хуравсенчен пĕринче *Палламан çынсем: «Ырă кун пултăр! Салам!» – тесе иртеççĕ* предложени тĕл пулать. Тӳрĕ пуплевĕн малтанхи предложенине *Ырă кун!* предложенипе улăштарма май пур-и?

### *Пуплев стилĕсене вĕреннине аса илни*

**284.** Таблицăпа усă курса стильсем çинчен каласа парăр.

**Пуплев стилĕсем, вĕсен жанрĕсем**

| Калаçу стилĕ | Кĕнеке стилĕсем | | | |
|---|---|---|---|---|
| | ăслăлăх стилĕ | ĕçлĕ стиль | публицистика стилĕ | илемлĕ литература стилĕ |
| Жанрсем | | | | |
| калаçу (кĕрет калаçу, телефонпа калаçни), | аннотаци, рецензи, хаклав (отзыв), план, тезис, | законсем, указсем, çыру, заявлени, шану, | заметка, очерк, репортаж, фельетон, интервью, | сăвă, поэма, пьеса, калав, повесть, |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| каласа пани, çыру, СМС | конспект, реферат, доклад | расписка, резюме, инструкци | статья (хаçатра, журналта) | роман, эпопея |

**285.** Панă кашни характеристика тăрăх сăмах мĕнле стиль çинчен пынине пĕлĕр.

1) Хыпара логика енчен килĕшӳллĕ, çыраканнин кăмăлне палăртмасăр, тĕрĕс çитернĕ.

2) Информацие икĕ майлă ăнланасран сыхланса, ĕçлĕлĕхе сыхласа, йышăннă стандартпа килĕшӳллĕ, документ формипе тунă.

3) Калаканни хăй шухăшне литература чĕлхи çинчен шухăшламасăр ирĕккĕн пĕлтерет.

4) Ку е вăл пулăм е факт пирки шухăшланă май автор хăй позицине тӳррĕн пĕлтерни, итлекене е вулакана мĕн те пулин тума чĕнсе калани.

5) Вулакана норма енчен якалса çитнĕ тата сăнарлăх тума юрăхлă чĕлхе хатĕрĕсемпе, сăнарлăх системипе усă курса витĕм кӳни.

**286.** Текстасене вуласа тухăр. Кашни текстăн темипе тĕп шухăше тупăр. Ятра мĕн палăрать – тема-и, тĕп шухăш-и? Пуплев тĕсне тата текст стильне палăртăр. Куна мĕнле паллăсем тăрăх пĕлтĕр? Вĕсене текстра тупăр.

1

**Юбилей чаплă иртĕ**

Шупашкар хулин 550 çулхи юбилейне кăçал çурла уйăхĕн 18 – 25-мĕшĕсенче паллă тăваççĕ.

Уяв программи пуян пулĕ. Спорт вăййисем те иртĕç. Çĕрле велосипедсемпе чупăва тухĕç. Хула çыннисене, хăнасене саламлама летчиксен «Вĕршĕнсем» ушкăнĕ вĕçсе çитмелле.

Уява талисманпа – кăвакал чĕппипе – кĕтсе илĕç. Кăвакал чĕппи талисмана лавккасенче, парксенче, суту-илӳ центрĕсенче

çурла уйăхĕн пуçламăшĕнчех сутма тытăнĕç. *(«Хресчен ссси», 2019, 07, 24.)*

## 2

## Сĕм ĕлĕкхи несĕлсем

Тĕрĕк, монгол, тунгуспа манчжур халăхĕсен чи авалхи несĕлĕсен историпе этнос пĕрлĕхĕ Тĕп Азире йĕркеленме пултарнă.

Б.А. Серебренников чĕлхеçĕ ученăй шухăшĕпе, «хальхи чăваш чĕлхин тĕп аслашшĕ таçта Байкал кӳлли çывăхĕнче темле монгол чĕлхисемпе кӳршĕллĕ пулнă пулмалла».

Чăвашсен сĕм ĕлĕкхи несĕлĕсем Байкал тăрăхĕнче ытти тĕрĕксемпе, монголсен союзĕсемпе çыхăну тытни чĕлхере çеç мар, пурлăхпа ăс-хакăл культуринче те палăрса юлнă.

Тĕпрен илсен, чĕлхепе истори материалĕсем чăвашсен тĕрĕк чĕлхипе калаçнă аслашшĕсем чĕлхе, йăх-ăру тĕлĕшĕнчен хăйсемпе хурăнташлă авалхи тĕрĕксемпе, монголемпе хунсен тапхăрĕнчех çыхăну тытнине кăтартса параççĕ. *(В.Каховский.)*

* *Тĕрĕк, монгол, тунгуспа манчжур халăхĕсен чи авалхи несĕлĕсен историпе этнос пĕрлĕхĕ* сăмахсен çыхăнăвне кăтартакан схема ӳкерĕр.

### Тимлĕ пулăр

***Чунăм мана ахальтен мар шыв хĕррине туртать*** предложенре çуклăха тĕрĕс палăртман. *Чунăм мана шыв хĕррине ахальтен туртмасть* предложени кирлĕ.

## *3*

## БАМ трасси çинче

Кун хыççăн та чылай утрăм эп. Нумай куртăм. Дусэ-Алинь хырçи урлă каçрăм. Геологсене тĕл пултăм. Вĕсен поселок пеккинче çĕр выртрăм. Парти начальникĕн Николай Иванович Божковăн тăваттăри ывăлĕ çăмарта юратать тесе геологсем хăйсемпе пĕрле

чăхсем те илсе килнĕ. Чăххисем каçхине йывăç туратти çине хăпарса лараççĕ. Çĕртен хĕрлĕ тилĕ шăлне хăйраса пăхать. Кăнтăрла хурчкасем явăнаççĕ.

Тискер кайăк вăййи кунта. Çĕрĕ-шывĕ те вĕсем валли ятнех ĕнтĕ. Тайга. Ту-чакăл. Çырма-çатра.

Ман çула (пулас БАМ трассине те) Дусэ-Алинь тăвĕ пӳлсе илчĕ. Ун витĕр вăрçă умĕн тоннель чавса уçнă пулнă. Унта халь пăр тулса ларнă. Тоннеле чукун çул хывма тасатса типĕтмелле те бетон-гранитпа çирĕплетмелле. Тоннелĕн ку енчи пуçĕнче çынсем чакаланаççĕ, çĕр чавакан машина хашкать.

Ĕнтĕ чипер çулах палăра пуçларĕ. Куçа курăнакан йĕр. Тĕл-тĕл асфальт та сарнă. Мана таçти геологсем патне пăр турттарса кайнă машина хăваласа çитрĕ. Чарса кабина алăкне уçрĕç.

– Ларăр.

– Сирĕн ăçталла каймалла?

– Ургала.

Нивушлĕ çитсе ӳкĕп эп унта?!

Эпĕ çамрăк водитель çумне хăпарса лартăм. *(Хв. Уяр.)*

* Хайлав çул çӳрев очеркĕ маррине мĕнпе ĕнентерме пулать?

* *Нивушлĕ çитсе ӳкĕп эп унта?!* предложени чăн пуплеве пĕлтермелли мелсен ретĕнче тăнине ĕнентерĕр. Ку меле мĕнле терминпа паллă тăваççĕ?

* *Вĕсен поселок пеккинче çĕр выртрăм* предложенин схемине ӳкерĕр. Чи юлашки çыхăнăвăн мелĕ мĕн? Тĕп членĕсене кура предложени хăш ушкăна кĕрет? Предложени тулли-и, тулли мар-и?

* Шухăшлăр: *вĕсен поселокĕ* тенипе *вĕсен поселокĕ пекки* тени хушшинче мĕнле пĕрешкеллĕх тата мĕнле уйрăмлăх пур? Ку уйрăмлăха сăмахсен çыхăнăвне кăтартакан схемăра палăртма май пур-и?

4

**2012 çул**

**Нарăс, 28** – Чăваш Ене РФ Президенчĕ Дмитрий Медведев килнĕ, Патшалăх Канашĕн пултаруллă ачасемпе çамрăксене пулăшас енĕпе ĕçлекен комиссийĕн ларăвне ирттернĕ.

**Çу, 30** – Пушкăрт Республикинче Чăваш культурин кунĕсем пуçланнă.

**Çĕртме, 16** – Мордва çĕрĕ Раççей патшалăхĕпе пĕрлешнĕрĕнпе 1000 çул çитнине халалласа Пăрачкав районĕн Напольное ялĕнче халăх пултарулăхĕн «Арта» фестивалĕ иртнĕ.

**Утă, 2** – Муркаш районĕнче ӳсекен 480 çулхи юмана Раççейĕн чи ватă йывăçĕсен реестрне кĕртнĕ.

**Утă, 13** – «Олимп» стадионта Пĕтĕм Раççей ял спорчĕн çуллахи вăййисем пуçланнă.

**Утă, 14** – Тăвайра «Аль» спорт керменĕ хута кайнă.

**Утă, 28** – Шупашкар хули 550 çул тултарнине, Чăваш автономи облаçне туса хунăранпа 100 çул çитнине паллă тăвасси çинчен указ кăларнă.

**Çурла, 5** – Чăваш Ен марафонки Татьяна Архипова Лондонра иртнĕ Олимп вăййисенче бронза медаль çĕнсе илнĕ. *(«Хыпар».)*

**5**

**СПЕЦИАЛИСТСЕН ХУШМА ПРОФЕССИ ВĔРЕНĔВĔ (КВАЛИФИКАЦИНЕ ӲСТЕРЕКЕН) «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ВĔРЕНӲ ИНСТИТУЧĔ» БЮДЖЕТ ВĔРЕНӲ УЧРЕЖДЕНИЙĔ**

2013.11.07 В13-321 №

Шупашкар хулин
професси енĕпе вăтам пĕлӳ паракан
«Шупашкар машиностроени техникумĕ»
автономиллĕ учрежденийĕн директорне

Чăваш Енĕн Вĕренӳ министерствин специалисчĕсен хушма професси вĕренĕвĕн (квалификацине ӳстерекен) «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» бюджет вĕренӳ учрежденийĕн физкультура тата пурнăçпа ĕç-хĕл хăрушсăрлăхĕн никĕсĕ кафедри 2013 çулхи чӳк уйăхĕн 18-мĕшĕнчен пуçласа «2013 çулхи раштав уйăхĕн 6-мĕшĕччен «Çăмăл атлетикăн тĕсĕсене тата волейбола вĕрентессин çĕнĕ çул-йĕрĕ» программăпа физкультура учителĕсен ăсталăхне ӳстерекен курсне ирттерет.

Çак курса иртме физкультура преподавательне Григорий Васильевич Григорьева чĕнетпĕр.

Курс иртекенсем çитмелли кун – 2013 çулхи чӳк уйăхĕн 18-мĕшĕ. Адрес: Шупашкар хули, М. Горький пр-чĕ, 5-мĕш çурт, 222-мĕш пӳлĕм.

Курсантсене регистрацилеме 8 сехет те 30 минутра тытăнаççĕ.

Занятисем 10 сехетре пуçланаççĕ.

Проректор Г.В. Николаева

## 6

## Ялта пурăнма, ĕçлеме пулать-и?

Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕнчен вĕренсе тухсан Регина Михайлова Элĕк районĕн «Çĕнĕ çул» ЯХПКĕнче тĕп зоотехникра ĕçлеме тытăннă. Хĕре, Ульяновск облаçĕн пĕр поселокĕнче çуралса ӳснĕскере, ют тăрăхра пурăнма тата ĕçлеме тивни хăратман. Тĕрĕссипе, магистратурăна вĕренме кĕнĕ хĕр хулара çăмллăнах тымар яма пултарнă.

– Республикипе паллă хуçалăхра ĕçлеме сĕнсен хаваспах килĕшрĕм, – паллашарчĕ хĕйĕн ĕçĕ-хĕлĕпе хĕр. – Выльăх-чĕрлĕхе ача чухнех килĕштереттĕм, пурнăçа выльăхсеме çыхăнтарма

ĕмĕтленеттĕм. «Ҫĕнĕ ҫул» ЯХПКĕнче мана лайăх кĕтсе илчĕҫ, пурăнма хваттер уйăрса пачĕҫ. Аслăрах ĕҫтешсенчен вĕренмелли нумай, мĕншĕн тесен, хăш чух, опыт ҫукки чăрмантарать.

Комплексра ĕҫлекенсем каласа панă тăрăх, хуҫалăхра 300 ытла сыснапа 1 пин те 500 ĕне выльăх. Пĕтĕм ĕнерен – сăваканнисем 480.

Ăратлă выльăх-чĕрлĕхе аталантарасси тĕп вырăнта тăрать. Юлашки ҫулсенче ҫĕнĕ витесем хута яраҫҫĕ, ĕҫе ҫăмăллатмалли технологисемпе усă кураҫҫĕ. 2019 ҫулта 4200 тонна сĕт суса илме палăртнă. Кĕтӳ пысăкланмалла.Пысăк предприятире ĕҫлекенсен яваплăхĕ те ӳсет. Хуҫалăхра ĕҫлеме тата канма лайăх услови туса пама тăрăшаҫҫĕ.

Чи пысăк йывăрлăх – кадрсем ҫитменни. Хуҫалăхра ҫамрăксем сахал. Пур пек ĕҫченсем ватăлса пыраҫҫĕ. Ватăлакансене никампа улăштарма ҫук, ахальлĕн фермăра икĕ сменăпа ĕҫлеме пулĕччĕ. Ăратлă выльăха пултаруллă ҫынсене шанмасăр май ҫук.

Юлашки вăхăтра шкулсенче агроклассем уҫма тытăнчĕҫ, анчах ҫывăхри шкулăн агрокласĕнче вĕренекенсем хуҫалăха ҫитсе курма вăхăт тупаймаҫҫĕ. Хуҫалăх специалисчĕсем шкул ачисемпе тĕл пулма, ферма пурнăҫĕпе, машинăпа трактор паркĕн ĕҫĕ-хĕлĕпе паллаштарма хирĕҫ мар – шкул чĕнни кăна кирлĕ.

– Юратнă ĕҫ вăй-хăват парса тăрать. Ҫавăнпа, вăхăт иртнине те сисместĕп. Магистратурăран вĕренсе тухсан та кунтах ĕҫлесшĕн. Пушă вăхăтра юлташсемпе тĕл пулатпăр, тĕрлĕ ҫĕре курма ҫӳретпĕр. Пĕрле вĕреннĕ юлташсенчен ялсене ĕҫлеме кайнисем пур: ҫамрăксем ял хуҫалăхĕнчен пачах сивĕнмен-ха, – терĕ Регина Михайлова хăйĕн шухăшне пĕтĕмлетсе. *(Л. Никитина.)*

* *Тĕп зоотехникра ĕçле* тенипе *тĕп зоотехник пулса ĕçле* тени хушшинче мĕнле уйрăмлăх пур? Кăтартнă вариантсенчен хăшĕ тĕрĕс? Зоотехник пулса мĕн тума пулать?

**7**

Çав çулхине эпĕ хамăр ялта пуçламăш шкултан вĕренсе тухнăччĕ. Килте иккĕн çеç тăван акипе, Марипе, пурăнаттăмăр. Апи унччченех вилнĕччĕ. Ати те пурччĕ, анчах вăл ялта мар, çичĕ çухрăмра Хура Кĕсре ятлă вăрман поселокĕнче ĕçлетчĕ. *(А. Угольников.)*

**8**

– Ман пата, – терĕ сиввĕн Юля Воробьев Олег ĕне выльăх çине пăхнă пекех пăхса.

– Апла, пардон, мадам, – Олег Воробьев каялла çаврăнчĕ. – Авташкин, яла хăçан каян?

– Пĕлмес, – терĕ Веня.

– Ну, латнă, – Воробьев хăй çулĕпе уттарчĕ те, Юля тинех ирĕклĕн сывласа ячĕ. *(Б. Чиндыков.)*

* Текст сыпăкĕче хăш стиль сĕмĕ палăрать?

## *Синтаксиса вĕреннине аса илмелли тĕрлĕ ĕç*

**287.** Текстсен кашни предложенине синтаксис тишкерĕвĕ тăвăр, хутлă предложенисен схемисене ӳкерĕр. Çăлтăрпа паллă тунă предложенсен шухăш тытăмне ăнлантарăр, сăмахĕсем епле çыхăннине кăтартакан схемăсем ӳкерĕр.

### *Хутсăр предложенисенчен тăракан текст сыпăкĕсем*

**1**

Ман мĕн тумалла ĕнтĕ? Тӳрех асатте ялне[1] тухса чупрăм. Ура тĕпне çĕре лектермесĕр[2]. Яла çитиччен те пăшăхмарăм, ĕшенмерĕм,

хăшкăлтăка[2] та ермерĕм. Çитрĕм те яла тӳрех медпункта кĕрсе кайрăм[1]. Веркка шурă халат тăхăннă та сĕтел хушшинче тем çырса ларать. *(Д. Гордеев.)*

**2**

Пĕр вăтăр-хĕрĕх утăмра, мăн çул хĕрринче[1], икĕ хутлă чул çурт ларать*. Ун тавра чăшăл тикĕс туратлă чăрăшсем[1] ӳсеççĕ*. Улмуççи йывăççисем[1] те пайтах. Çĕр çырли. Тĕрлĕ тĕслĕ чечексем... *(Р. Ярантай.)*

**3**

Утать Антун. Хашкаса, çав тери хыпаланса утать*. Каччăн хăвăртрах яла çитмелле. Миккана[1] тĕл пулмалла. Ăна вунă пин тытттармалла та парăмран татăлмалла[2]. *(Р. Ярантай.)*

**4**

Ан васка, шăллăм. Йăлтах ăнлантаратăп[2]. Антун кĕçĕр Йăмраллă[1] вара пырать. Унта ăна шукăль[1] тумланнă пĕр çын кĕтет*. Хуларан килнĕскер. Антуна укçа парать. Вунă пин! *(Р. Ярантай.)*

**5**

Хуракасси вун пилĕк çул каялла[1] малашлăхсăр[2] ял пулса тăнă ахăр. Çав вăхăтра кунта пĕр çĕнĕ çурт та лартман. Çамрăксем вăтам шкул пĕтерсен ялтан туха-туха кайнă*. *(Р. Ярантай.)*

*Çĕнĕ тата çамрăксем сăмахсем мĕн енчен пĕрешкел, мĕн енчен расна?

**6**

Юлия Ивановнăна ăсатнă хыççăн амăшĕпе хĕрĕ палатăна кĕчĕç[2]*. Регина тумбочки çинче вут тĕслĕ çирĕм пилĕк роза çыххи. Ăна хрусталь вазăна вырнаçтарнă[2]. Юнашар[1] – илемлĕ открытка, уçă çыру, выртать. *(А. Ырьят.)*

***Хутсăр предложенисенчен тата кăткăсланман хутлă предложенисенчен тăракан текст сыпăкĕсем***

1

Эпир йывăçа[1] тĕпрен касса яни[1] сахал пулнă. Вăйлă çил тухать-и – мĕн чухлĕ хăрăк йăвана-йăвана каять?! Çавсене татса сыпăлаттăмăр[2]. *(В. Кервен.)*

2

Çамрăк ĕмĕр иртсех кайман пулин те, ачалăх самаях[1] хыçала юлни шухăшлаттарать[2]. Ара, кайăк[1] хурсемпе те çыхăннăччĕ-çке вăл... *(В. Кервен.)*

3

Авкаланчăк çырма çумĕпе çул тăсăлса выртать*. Çырмапа çул мана яланах[1] алла аллăн çавтăнса е савăнăçлăн тĕрткелешсе пынăн туйăнатчĕç[2]. Пĕр-пĕринчен нимпе те хăпасшăн марччĕ çав: çырми ăçталла пăрăннă, çулĕ те – унталлах. Çак çирĕп туслăха ăмсанса сăрт çамки патне пырса тухрăм та – шухăш улшăнчĕ. Кунта эпĕ тахçантанпах мухтаса пурăннă туссем уйăрăлаççĕ иккен. Мĕншĕн-ши? Çулĕ талпăнса тăвалла хăпарать – çырми вара авкаланса аналла анать. Хăшне айăплас[1]? *(В. Кервен.)*

4

Ниме те уямасăр[1] ешĕл газон урлă каçса кайрĕ[1] Генриетта. Халĕ ури нӳрленнине[2] туйсан çеç каялла çаврăнса пăхрĕ: сип-симĕс курăка тĕшĕрсе хăварнă иккен вăл. Вăйлă çумăр тинтерех кăна çуса иртнĕ май тăпра тачкаланнине пула ури пута-пута кĕнĕ-мĕн. Хĕр йĕр çине тепре çаврăнса пăхрĕ те – йĕрес килсе кайрĕ ун. Çутă ĕмĕтлĕ ачалăхне çеçкене ларас çамрăклăхĕ таптаса каçнăн туйăнса кайрĕ. *(В. Кервен.)*

* Пĕрремĕш предложенири *урлă* сăмах хăш пуплев пайĕ: хыç сăмах-и, паллă ячĕ-и? Тулли мар пĕлтерĕшлĕ сăмах çинчен калаçма мĕнле сăлтав пур?

**5**

Кунта салтаксем Мельник команди куллен çырса çирĕплетекен[2] менюпа тăранса пурăнаççĕ иккен. Сменăра хăйĕн[1] поварĕ пур. Темиçе гектар вăрмана тимĕр пралукпа тытса çавăрнă та, хăйне майлă заповедник пулса тăнă. Пиртен никам та вăрмана шала кĕрсе курман*. Унта мĕн пуррине[1] те пĕлместпĕр. Салтаксен йышĕнче тайга çыннисем те пур. *(Д. Гордеев.)*

* Юлашки предложенире *йышĕнче* сăмах вырăнне *хушшинче* сăмахпа усă курсан мĕнле йăнăш пулать – грамматика йăнăшĕ-и, пуплев йăнăшĕ-и?

**6**

Раман ман енне[1] кăллĕн пăхса илчĕ*. Эпĕ хуравламарăм[2] та, шăпланчĕ. Веркка ырă шăршăллă чее[1] вĕттĕн-вĕттĕн сыпнă май тем шухăшларĕ. Чей куркине айккинерех тĕртсе лартрĕ те пирĕн енне ӳпĕнчĕ. *(Д. Гордеев.)*

**7**

– Ямăт[1] укçа çынна пăснине пĕлетĕр-и эсир? Пĕлмесен те – илтнĕ. Манăн, çын пекех, пăсăлмасăр пурăнас килет*.

– Çын пек пурăнма шăпах енчĕк тулли пулмалла та. *(Д. Гордеев.)*

**8**

Ватти ерипен[1] пускаласа сĕтел патне иртрĕ*. Сăппăн[1] тӳрленсе ларчĕ. Умĕнче мĕн пурри-çуккине пăхса илчĕ. Сĕтел пĕрре те тулăх мар. Чечекленме[2] пуçланă касма сухан пур та, çăкăр касса хунă. *(Д. Гордеев.)*

**9**

Гуппи пулăсем аквариумра вилнин тĕп сăлтавĕсенчен[2] пĕри вăл – шыв пахалăхĕ. Шыв яланах таса пултăр тесен кашни эрнере шывăн çирĕм процентне улăштармалла. Пулăсем ватлăх çитнипе те вилеççĕ. Фильтр таса марри те витĕм кӳрет*. Фильтр губки çинче сиенлĕ[1] бактерисем ĕрчеççĕ. Нумай апат та сиенлĕ. Пулăсем çисе ярайман[1] апат çĕрме пуçлать. Çавна май микрофлора улшăнать. Гупписем патне аквариума çăткăн пулăсене яма юрамасть. *(А. Борисов.)*

**10**

Çуркунне. Çанталăк тĕлĕнмелле аван. Тĕпсĕр тинĕс евĕр кăн-кăвак тӳпе тăрăх сарă хĕвел ылтăн карап пек ишет. Куç куракан[1] тавралăх, пур çĕрте те, тин çеç тапса тухнă ӳсен-тăранпа витĕнсе капăрланнă. Кайăк-кĕшĕк савăнса юрлать. Пĕтĕм сывлăш чечеке[1] ларма хатĕрленнĕ йывăç-курăкран сарăлакан ырă шăршăпа тулнă*. Сывлама çăмăл. Кăкăр кашни хăпарса анмассерен[2] ăша çĕнĕ вăй-хăват пырса кĕрет. *(М. Кипек.)*

**11**

Хамăрăн пахча пур. Чечексем ӳстеретпĕр. Эс илсе килнĕ пекки те пур унта. Хăшĕ-пĕрин халĕ те çеçки тăкăнман*. Атя сана кăтартам. *(О. Васильева.)*

### *Кăткăс тытăмлă предложенисем пур текст сыпăкĕсемсем*

**1**

Эпĕ пуç çаврăннине, чĕре йăшканине туйса илтĕм. Кун пекки хальччен нихçан та пулманччĕ-ха. Ура та тĕнсе ларчĕ пек. *(Д. Гордеев.)*

* *Кун пекки хальччен нихçан та пулманччĕ-ха* предложенин шухăш тытăмне ăнлантарăр, сăмахĕсем епле йĕркепе çыхăннине кăтартакан схема ӳкерĕр.

* *Ура та тĕнсе ларчĕ пек* предложенире сăмахсен йĕрки прогрессиллĕ-и, регрессиллĕ-и? Шухăшăра ĕнентерĕр.

**2**

– Ырă пирĕштийĕм, – пăшăлтатрăм хам, – каласам...

Вăл каласа, эпĕ илтсе ĕлкĕреймерĕм – ним кĕтмен çĕртен алăк хăйăлтатса уçăлчĕ те, пирĕшти куçран çухалчĕ. Эпĕ те куç уçрăм. *(Д. Гордеев.)*

* Текстра *куç* сăмах икĕ хутчен тĕл пулать. Юлашки предложенире *куççене уçрăм* теме юрать-и? Мĕншĕн?

* *Те* татăк *Эпĕ те куç уçрăм* предложенин шухăш тытăмне мĕнле витĕм кӳрет?

**3**

Вăрăм курăк çинчи сывлăм хĕрлĕ, сарă, кăвак,симĕс шăрçасем пек йăтлтăртатать. Пăхма питĕ илемлĕ, анчах утма питех мар. Çур сехет сывлăмлă курăка ашса пынă хыççăн Тараев пилĕк таранах исленчĕ. Ăна ура айĕнче пылчăк та лачăртатма пăрахни тата пусмассерен шыв пакăртатми пулни çеç хăпартлантарчĕ. *(М. Кипек.)*

**4**

Ăçта кайса кĕчĕ-ши ку каскăн хĕр? Кил тулли ĕç – вăл пур таçта сиккелесе çӳрет. Ăна курсан эс кала-ха: киле хăвăртрах таврăнтăр! *(М. Кипек.)*

**5**

Çурлара çăлтăр çуни – кĕр часах пулассин палли. Çумăр умĕн, тухнă вăхăтра, хĕвел пысăкланнă пек туйăнать. Малтанхи ăшă çил хыççăн кăтра çумăр пĕлĕчĕсмпе пĕрле сасартăк сивĕ вичкĕн çил вĕрме пуçласан – аслатиллĕ çумăр пуçланасса кĕт. Йĕпе-сапа,

ытларах, кӑнтӑр ҫилӗпе пулать*. Ҫӗрле уяр ҫанталӑк пулсан кӑнтӑрла та ҫавӑн пекех. *(«Хыпар»».)*

**6**

Илен кунӗ тӑрӑх малашне мӗн пулассине те палӑртнӑ. Илен кун ҫумӑр ҫусан, килес ҫул ыраш ӑнса пулать имӗш, пушарсем сахал тухаҫҫӗ иккен. Ирхи ӑмӑр ҫанталӑк кӗрхи тырӑсене час акма пуҫлассине, тырӑ-пулӑ ӑнса пулассине систернӗ. Илен кунӗнче утӑ ӗҫне пӗтернӗ. Илен кун ӗҫлеме, ҫынна кӳрентерме, усал шухӑш-кӑмӑла ирӗке яма юрамасть*. *(«Хыпар».)*

**7**

Пӗччен юлсан читлӗхри кайӑкӑн курчӗ хӑйне Маша*. Шан! пырса ҫапрӗ чӑмӑрӗпе стенана – алли ыратрӗ те – чунӗ лӑпланмарӗ. *(О. Васильева.)*

**8**

Хӗр ҫавах парӑнмарӗ – кӗрт аша-аша утайми пулчӗ пулсан та, малалла шуса кайрӗ. Кофти айне юр кӗнине те туймарӗ, хӑрах кӑҫатти хывӑнса юлнине те сисмерӗ. Темле алӑк патне ҫитсе тухрӗ*. *(В. Элиме.)*

### Йӑнӑш тӑвас мар

Хытӑ шӑннипе урасем чӗтреҫҫӗ тени йӑнӑш *Хытӑ шӑннипе урасем чӗтреҫҫӗ* тени йӑнӑш – *Хытӑ шӑннипе ура чӗтрет* тени тӗрӗс.

*5 – 9 классенче вӗреннине аса илмелли тӗрлӗ ӗҫ*

**288.** Текстсене вуласа тухӑр та 2-мӗш текст тӑрӑх панӑ ӗҫе (пӗтӗмпе 4 вариант сӗннӗ) тӑвӑр.

**1**

Ирхине алӑка шаккани илтӗнчӗ. Пӳлӗме Константин Иванов кӗрсе тӑчӗ те Чӗмпӗр чӑваш шкулӗн директорне темиҫе тетрадь тӑсса пачӗ.

Иванов тетрачĕсене пăхма Иван Яковлевич Яковлевăн вăхăт шкулпа çыхăннă ĕçсем пĕтсен тин тупăнчĕ. Чи малтан Иван Яковлевич çиеле хунă тетраде тытрĕ.

– «Нарспи», – вуларĕ Яковлев тетрадь хуплашки çинче çырнине. – Поэма. Кур-ха эс ăна, шăпăрлана: поэма та çырнă. Хăш вăхăтра ĕлкĕрет-ха Константин?! Ĕçчен, ĕçчен. Ĕçчен те, сăпайлă та, талантлă та.

Яковлев çамрăк поэт мĕн çырнине малалла вулама пуçларĕ. Иванов çырăвĕ шăрçа пек. Поэма сăвви шыв юххи пек юхать.

Константин Иванов талантлă çамрăк иккенне Иван Яковлевич питĕ лайăх пĕлет, çапах та вун çиччĕри яш çапла хитре çырасса шутламанччĕ. Малалла вуланăçемĕн поэма Яковлевăн пĕтĕм чунчĕрине ярса илчĕ. Шкул директорĕ каç пулнине те, апат çиме вăхăт çитнине те, хăй тĕрлĕ ĕç туса ыйăннине те манса кайрĕ. Арăмĕ кĕрсе тăрсан тин пуçне çĕклерĕ.

– Катенька, Катя! – терĕ Иван Яковлевич арăмне. – Пĕлетĕн-и, мĕскер вуларăм эпĕ? Тĕлĕнмелле поэма! «Нарспи» ятлă. Гени ăстăнĕпе çырнă. Авторĕ – пирĕн Константин Иванов! Пирĕн пек çынсенчен пин хут ытла тарăнрах шухăшлать! Çакнашкал хăват вун улттă тултарса вун çичче çеç кайнă ачара ăçтан тупăннă-ха? Мĕнле талант?! Нарспи вара – ытарайми чăваш пики сăнарĕ!

Каллех хавхаланса, хăпартланса вулать Яковлев. Иван Яковлевичăн сасси пĕрре савăнса çĕкленсе каять, тепре поэмăра сăнланă çынсемпе ĕçсемшĕн кулянса чĕтреме тытăнать.

Акă поэмăн юлашки сăмахĕсем янăрарĕç. Иван Яковлевич куçне тулнă куççульне тутăрĕпе шăлчĕ, ним тума пĕлеймесĕр арăмĕ çумне пырса тăчĕ. Калаçрĕ те калаçрĕ, хăй çав тери ыйăннине те манса кайрĕ. (*Юхма М.)*

2

(1)Сăмах Константин Иванов çулталăкĕ çинчен тапрансан куç умне Слакпуç тавраšĕ, «Нарспи» поэмăра кăтартнă сăнарсем тухса тăраççĕ.

(2)Слакпуçне «Нарспи» поэма авторĕн Константин Васильевич Ивановăн пурнăçĕпе ĕçне-хĕлне хальхи куçпа пăхса çĕнĕлле хаклама май паракан вырăн теме пулать. (3)Слакпуçĕн пĕлтерĕшне Митта Ваçлейĕ, 1927 çултах, Петĕр Хусанкай патне янă пĕр çырура питĕ пысăка хурса хакланă, гени поэтăмăр Константин Иванов çĕрне-шывне кайса курас кăмăлĕ пысăк иккенне пĕлтернĕ. (4)Тус поэтсем Ясная Пляна, Болдино, Турхан йышши сăваплă çĕр чăвашсене те кирлĕ пулнине питĕ лайăх ăнланнă. (5)Çавăнпа та халь пирĕн Константин Ивановăн çулталăкĕпе питĕ пĕлсе усă курмалла: пĕрремĕшĕнчен, Слакпуçне туристсен маршрутне уçмалла, иккĕмĕшĕнчен, Константин Иванов пурнăçĕпе тата пултарулăхĕпе çыхăннă вырăнсене илемлетсе хăтлăх кӳмелле. (6)Ку проектпа пирĕн ĕç тахçан маларах пуçламаллаччĕ, мĕншĕн тесен вăл чĕлхемĕре, культурăна, ницин хăйне евĕрлĕхне упраса хăварма пулăшĕччĕ. (7)Слакпуçне каймассерен унтан эпир тĕрлĕ киревсĕрлĕхпе çылăхран Константин Васильевич тасалăхĕпе тасалса, гений халалĕпе хавхаланса таврăнăттăмăр.

(8)Унччен, çынсем çырнине вулаттăм та куç умне Слакпуçне, ун тавралăхне – юхан шывсене, çăл куçĕсене, ту хысакĕсемпе улăх-çарана кăларса тăраттаттăм, анчах вĕсене çын сăмахĕ тăрăх пĕлмелле мар иккен – хăвăн кайса курмалла.

(9)Силпи улăхĕ... (10)Кунта поэтăмăр телейсĕр шăпаллă Нарспипе Сетнершĕн кулянса, куççуль кăларса шухăша кайса миçе хутчен ларнă-ши!? (11)Чылай пуль. (12)Асамлă вырăн чуна сисĕмлетет, туйăма çивĕчлетет. (13)Ура айне тимлесе пăхатăн та,

гений утăмласа пуснă вырăнсенче палăри-палăрми йĕрсем курăнса каяссăн туйăнать. (14)Поэт чунĕпе ман чун темле пытарăнчăк çыхăнăва кĕнине ăнкарса илетĕп. (15)Поэт сăнланă Силпи ялĕ куç умĕнчех чĕрĕлет. (16)Поэмăра кăтартнă сăнарсем мана темшĕн кинори пек курăнаççĕ.

(17)Трагедие хутшăнакансенчен пĕри те хăй айăпне йышăнмасть. (18)Геройсем хăйсен чун-чĕрине уçмаççĕ пулин те поэт лару-тăру сăлтавне ӳнерçĕ куçĕпе тишкерет, çавна май пире калаçăва йыхăрать. (19)Акă Нарспи ырра шаннă, тĕнче çине тасан пăхнă, анчах кĕтни тӳрре тухман. (20)Çавăнпа чăн малтан поэт идеалне ăнланса илес пулать. (21)Константин Иванов чăн-чăн таса юратăва аслăлать, ун ячĕпе гимн хывать. (22)Юрату – Нарспин хытнă чунлă ашшĕпе амăшĕшĕн тата Тăхтаманшăн куç ултавĕ çеç. (23)Тĕрлĕ сăнара, вĕсен ĕçне тишкерсе автор уйрăм çын яваплăхĕпе тивĕçĕ пирки ыйту лартать: тĕрĕслĕх пĕччен çын енче пулма пултарать-и?

(24)Шухăшлатăн та, вилĕмсĕр «Нарспи» поэма тавра пурне те калаçтаракан гени поэт умĕнче пирĕн иксĕлми парăм пурри яр уççăн тухса тăрать. *(Ю. Артемьев.)*

## 1-мĕш вариант

**1. Икĕ текста мĕнле шухăш пĕрлештерет?**

1) Йăвашпа ухмах пĕр танах.

2) Салтак çăкăрĕ ват пек йӳçĕ.

3) Тăвăр çĕлĕк пуçа хĕсет.

4) Сăвва та ăсламасăр, тăрăшмасăр çырма çук.

**2. Хăвăр вуланă текстра автор шухăшне хăш предложени уçса парать?**

1) Чараксăр чĕлхе – çурăк чан.

2) Гени поэт умĕнче пирĕн иксĕлми парăм пур.

3) Нумай пĕл – сахал калаç.

4) Яш ĕмĕр иккĕ килмест.

**3. Текст стилĕпе тĕсне палăртăр.**

1) наука стилĕ, ăслав

2) илемлĕ литература стилĕ, калав.

3) ĕçлĕ стиль, калав

4) публицистика стилĕ, ăслав элеменчĕллĕ сăнлав

**4. Кăтартнă предложенисенчен хăшне умĕнчи юнашар предложенипе местоимени çыхăнтарать?**

1) 2 2) 3 3) 4 4) 5

**5. 23-мĕш предложенири *сăнара* сăмахпа синонимлă сăмах хăш предложенире тĕл пулать?**

1) 18 2) 19 3) 20 4) 21

**6. Сасă шучĕ сас палли шутĕнчен ытларах сăмах хăшĕ? (Сăмахсене 3-мĕш предложенирен илнĕ.)**

1) Слакпуçĕн 2) Петĕр 3) янă 4) пĕлтернĕ

**7. 8-мĕш предложенири иккĕмĕшле сăмах (*тавралăхне)* мĕнле пулнă?**

1) ***тав*** ыр суну сăмахĕ çумне ***-ра*** аффикс хушăннипе

2) ***тавра*** паллă ячĕ çумне ***-лăх*** аффикс хушăннипе

3***) та*** союз çумне ***-в*** аффикс хушăннипе

4) ***тавралăх*** япала ячĕ çумне ***-ĕ, -н*** тата ***-е*** аффикссем хушăннипе

**8. 1-мĕш предложенири *умне* сăмах мĕнле пуплев пайĕ пулать?**

1) япала ячĕ 2) наречи 3) глагол 4) паллă ячĕ

**9. *Çавăнпа чăн малтан поэт идеалне ăнланса илес пулать.* предложенире (20 №) шухăш тĕшши хăш сăмах(сем) çине ӳкет?**

1) ***чăн малтан*** сăмахсем çине

2) ***çавăнпа*** сăмах çине

3) ***поэт идеалне*** сăмахсем çине

4) ***ăнланса илес пулать*** сăмахсем çине

**10. 14-мĕш предложени тытăмĕ енчен хăш ушкăна кĕрет?**

1) пайĕсене падеж аффиксĕпе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложени

2) пайĕсене вырăнĕ-йĕркипе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложени

3) пайĕсене деепричасти аффиксĕпе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложени

4) хыç сăмахлă пăхăнуллă хутлă предложени

**2-мĕш вариант**

**1. Итленĕ текстпа вуланă текста мĕнле шухăш пĕрлештерет?**

1) Поэт пулма талантсăр пуçне тăрăшулăх та кирлĕ.

2) Йăвашпа ухмах пĕр танах.

3) Сахăр парсан упа та ташлать.

4) Çиекен лаша çултан юлмасть.

**2. Хăвăр вуланă текстра автор шухăшне хăш предложени уçса парать?**

1) Иртĕхнĕ çынна икерчĕ те апат мар.

2) Ирĕк чун ирĕкех туртать.

3) Чăваш литературине К.В. Ивановран тĕслĕх илсе аталантармалла.

4) Ĕçе майне пĕлсе ĕçлеççĕ.

**3. Текст стилĕпе тĕсне палăртăр**.

1) наука стилĕ, ăслав

2) публицистика стилĕ, ăслав элеменчĕллĕ сăнлав

3) ĕçлĕ стиль, калав

4) илемлĕ литература стилĕ, калав

**4. Кăтартнă предложенисенчен хăшне умĕнчи юнашар предложенипе местоимени çыхăнтарать?**

1) 23 2) 22 3) 21 4) 20

**5. 18-мĕш предложенири *геройсем* сăмахпа синонимлă сăмах хăш предложенире тĕл пулать?**

1) 15 2) 16 3) 13 4) 14

**6. Сасă шучĕ сас палли шутĕнчен ытларах сăмах хăшĕ? (Сăмахсене 8-мĕш предложенирен илнĕ.)**

1) çынсем 2) юхан 3) хысакĕсене 4) кайса

**7. 18-мĕш предложенири иккĕмĕшле сăмах *(калаçăва)* мĕнле пулнă?**

1) ***ка*** евĕрлев сăмахĕ çумне ***-ла*** аффикс хушăннипе

2) ***кала*** глагол çумне ***-ç*** аффикс хушăннипе

3) ***кала*** глагол çумне ***-ç*** тата **-ăв** аффикссем хушăннипе

4) ***калаçу*** япала ячĕ çумне ***-а*** аффикс хушăннипе

**2.8. 24-мĕш предложенири *умĕнче* сăмах мĕнле пуплев пайĕ пулать?**

1) наречи 2) глагол 3) япала ячĕ 4) паллă ячĕ

**9. *Çавăнпа чăн малтан поэт идеалне ăнланса илес пулать* предложенире (20 №) шухăш тĕшши хăш сăмах(сем) çине ӳкет?**

1) ***поэт идеалне*** сăмахсем çине

2) ***чăн малтан*** сăмахсем çине

3) ***ăнланса илес пулать*** сăмахсем çине

4) ***çавăнпа*** сăмах çине

**10. 4-мĕш предложени тытăмĕ енчен хăш ушкăна кĕрет?**

1) пайĕсене вырăнĕ-йĕркипе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложени

2) пайӗсене падеж аффиксӗпе ҫыхӑнтаракан пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени

3) пайӗсене деепричасти аффиксӗпе ҫыхӑнтаракан пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени

4) хыҫ сӑмахлӑ пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени

**3-мӗш вариант**

**1. Итленӗ текстпа вуланӑ текста мӗнле шухӑш пӗрлештерет?**

1) Кӗркунне ҫерҫи те пуян.

2) Пӗччен йывӑҫ час тӳнет.

3).Тӑрӑшмасан талант сӑвӑҫӑ пулма пулӑшаймӗ.

4) Йытӑ та кил тӗлне пӗлет.

**2. Хӑвӑр вуланӑ текстра автор шухӑшне хӑш предложени уҫса парать?**

1) Кучченеҫ вӑл – хире-хирӗҫ япала.

2) Пӗр-пӗччен пӗкӗ те аваймӑн.

3) Тиркекене тирӗк тӗпӗ тивнӗ.

4) Писатель-поэтӑн Константин Иванов пек пулма тӑрӑшмалла.

**3. Текст стилӗпе тӗсне палӑртӑр**.

1) публицистика стилӗ, ӑслав элеменчӗллӗ сӑнлав

2) наука стилӗ, ӑслав

3) ӗҫлӗ стиль, калав

4) илемлӗ литература стилӗ, калав

**4. Кӑтартнӑ предложенисенчен хӑшне умӗнчи юнашар предложенипе местоимени ҫыхӑнтарать?**

1) 23 2) 22 3) 21 4) 20

**5. 1-мӗш предложенири *сӑнарсем* сӑмахпа синонимлӑ сӑмах хӑш предложенире тӗл пулать?**

1) 16 2) 17 3) 18 4) 19

**6. Сасă шучĕ сас палли шутĕнчен ытларах сăмах хăшĕ? (Сăмахсене 22-мĕш предложенирен илнĕ.)**

1) ултав 2) тата 3) хытнă 4) юрату

**7. 23-мĕш предложенири иккĕмĕшле сăмах (*пултарать)* мĕнле пулнă?**

1) *пул* глагол çумне *-тар* аффикс хушăннипе

2) *пу* евĕрлев сăмахĕ çумне *-л* аффикс хушăннипе

3*) пул* глагол çумне *-т* аффикс хушăннипе

4) *пултар* глагол çумне *-ат* аффикс хушăннипе

**8. 23-мĕш предложенири *енче* сăмах мĕнле пуплев пайĕ пулать?**

1) наречи 2) япала ячĕ 3) глагол 4) паллă ячĕ

**9**. ***Поэмăра кăтартнă сăнарсем мана темшĕн кинори пек курăнаççĕ*** **предложенире (16 №) шухăш тĕшши хăш сăмах(сем) çине ӳкет?**

1) *мана* сăмах çине

2) *темшĕн* сăмах çине

3) *кинори пек* сăмахсем çине

4) *курăнаççĕ* сăмах çине

**10. 15-мĕш предложени тытăмĕ енчен хăш ушкăна кĕрет?**

1) пайĕсене вырăнĕ-йĕркипе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложени

2) пайĕсене падеж аффиксĕпе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложени

3) пайĕсене деепричасти аффиксĕпе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложени

4) хыç сăмахлă пăхăнуллă хутлă предложени

**Йăнăш тăвасран асăрханулла пулăр**

Пĕр ушкăна кĕрекен япаласем çав япаласем хушшинче пулма пултараймаççĕ. Çавăнпа *Раççейре шыçă чирĕсем хушшинче ӳт ракĕ пĕрремĕш вырăнта тăрать* йышши предложенисемпе усă курасран сыхă пулăр. *Раççейре шыçă чирĕсем йышĕнче ӳт ракĕ пĕрремĕш вырăнта тăрать* темелле.

**4-мĕш вариант**

**1. Итленĕ текстпа вуланă текста мĕнле шухăш пĕрлештерет?**

1) Выç хырăмăн вăйă шухăшĕ мар.

2) Пултарулăх тĕшши талантпа тăрăшулăх пĕрлешнипе пулать.

3) Кашни ялта хăйне уйрăм йăла.

4) Ватăлсан çăпатан та сухал тухать.

**2. Хăвăр вуланă текстра автор шухăшне хăш предложени уçса парать?**

1) Писатель-поэтăн К. Ивановран тĕслĕх илсе ĕçлемелле.

2) Сутман сурăхăн хакĕ çук.

3) Вĕçкĕн хыççăн вĕçме хушмаççĕ.

4) Çар иртсен паттăр нумай.

**3. Текст стилĕпе тĕсне палăртăр**.

1) ĕçлĕ стиль, калав

2) наука стилĕ, ăслав

3) публицистика стилĕ, ăслав элеменчĕллĕ сăнлав

4) илемлĕ литература стилĕ, калав

**4. Кăтартнă предложенисенчен хăшне умĕнчи юнашар предложенипе местоимени çыхăнтарать?**

1) 5　　2) 4　　3) 2　　4) 3

**5. 15-мĕш предложенири *сăнланă* сăмахпа синонимлă сăмах хăш предложенире тĕл пулать?**

1) 19　　2) 18　　3) 17　　4) 16

**6. Сасă шучĕ сас палли шутĕнчен ытларах сăмах хăшĕ? (Сăмахсене 23-мĕш предложенирен илнĕ.)**

1) енче 2) çын 3) тĕрĕслĕх 4) пулма

**7. 3-мĕш предложенири иккĕмĕшле сăмах (*пĕлтерĕшне)* мĕнле пулнă?**

1) *пĕл* глагол çумне *-тер* аффикс хушăннипе

2) *пĕ* евĕрлев сăмахĕ çумне *-л* аффикс хушăннипе

3*) пĕлт* евĕрлев сăмахĕ çумне *-ер* аффикс хушăннипе

4) *пĕл* глагол çумне *-тер* тата *-ĕш* аффикссем хушăннипе

**8. 8-мĕш предложенири *умне* сăмах мĕнле пуплев пайĕ пулать?**

1) наречи 2) паллă ячĕ 3) глагол 4) япала ячĕ

**9. *Çавăнпа чăн малтан поэт идеалне ăнланса илес пулать* предложенире (20 №) шухăш тĕшши хăш сăмах(сем) çине ӳкет?**

1) *чăн малтан* сăмах çине

2) *поэт идеалне* сăмахсем çине

3) *ăнланса илес пулать* сăмахсем çине

4) *çавăнпа* сăмах çине

**10. 4-мĕш предложени тытăмĕ енчен хăш ушкăна кĕрет?**

1) пайĕсене вырăнĕ-йĕркипе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложени

2) пайĕсене деепричасти аффиксĕпе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложени

3) пайĕсене падеж аффиксĕпе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложени

4) хыç сăмахлă пăхăнуллă хутлă предложени

**Хуравсем**

| Ыйтупа ĕç номерĕсем | Вариантсем | | | |
|---|---|---|---|---|
| | **1** | **2** | **3** | **4** |
| 2.1 | 4 | 1 | 3 | 2 |
| 2.2 | 2 | 3 | 4 | 1 |
| 2.3 | 4 | 2 | 1 | 3 |
| 2.4 | 4 | 4 | 4 | 1 |
| 2.5 | 1 | 2 | 3 | 4 |
| 2.6 | 3 | 2 | 4 | 1 |
| 2.7 | 2 | 3 | 1 | 4 |
| 2.8 | 1 | 3 | 2 | 4 |
| 2.9 | 3 | 1 | 3 | 2 |
| 2.10 | 1 | 2 | 1 | 3 |

◆**289.** Панă темăсенчен кирек хăшне суйласа илсе ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.

Хăвăр шухăшăра икĕ аргументпа ĕнентерĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

Аргументсене (ĕçсемпе пулăмсене, фактсене) маларах вуланă икĕ текстран ( хăнăхтару) илме юрать. Хăвăр курни-илтни, унччен вулани çине таянма та май пур.

## Темăсем

1. «Эпир вĕреннĕ Константин Иванов».
2. «Пире шкулта вĕрентнĕ Константин Иванов».
3. «Мĕн пур çын пĕлекен Константин Иванов».
4. «Эп пĕлекен КонстантинИванов».

# ТУПМАЛЛИ

*Чăваша чăваш чĕлхи кирлĕ.........................................................*
*Вĕреннине аса илни.........................................................................*


Сыпăнуллă хутлă предложенисем

1. Сыпăнуллă хутлă предложенисен тĕсĕсем....................................
2. Сыпăнтаракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем................
3. Сыпăнтаракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси..............................................................
4. Хирĕçлекен союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем.....................
5. Хирĕçлекен союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси..............................................................
6. Уйăракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем...............
7. Уйăракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси......................................................
8. Сыпăнуллă хутлă предложенисене тишкересси......................
*«Сыпăнуллă хутлă предложени» темăна вĕреннине аса илмелли тĕрлĕ ыйтупа ĕç..................................................................*


Пăхăнуллă хутлă предложенисем

9. Пăхăнуллă хутлă предложени пайĕсем...................................
10. Пăхăнуллă предложение тĕп предложенипе çыхăнтаракан мелсем.........................................................................
11. Пăхăнуллă предложенин хутлă пĕрлĕхри вырăнĕ....................
12. Пăхăнуллă хутлă предложенисенче чарăну палли лартасси.....
13. Пăхăнуллă хутлă предложени ушкăнĕсем................................
*Пăхăнуллă хутлă предложенисене тишкермелли йĕрке..............*
14. Союзлă пăхăнуллă хутлă предложенисем...............................
15. Союзла сăмахлă пăхăнуллă хутлă предложенисем..................
16. Хыç сăмахлă пăхăнуллă хутлă предложенисем..............,.........
17. Пайĕсене аффикссемпе çыхăнтаркан пăхăнуллă хутлă предложенисем.........................................................................

Пайĕсене **-и** аффикспа çыхăнтаркан пăхăнуллă хутлă предложенисем..........................................................................................

Пайĕсене падеж аффиксĕсемпе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложенисем..........................................................................................

Пайĕсене падеж системине кĕмен аффикссемпе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложенисем....................................................

Пайĕсене глаголăн деепричасти аффиксĕсемпе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложенисем......................................................

Пайĕсене причасти аффиксĕсемпе çыхăнтаркан пăхăнуллă хутлă
предложенисем..........................................................................................

18. Пайĕсене вырăнĕ-йĕркипе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложенисем..........................................................................................

*Пăхăнуллă хутлă предложенисене вĕреннине аса илмелли тĕрлĕ ĕç..........................................................................................*

Кăткăс тытăмлă хутлă предложенисем

21. Хутлă предложенисем кăткăсланни...........................................

22. Кăткăс тытăмлă çыхăну паллисĕр хутлă предложенисем...........

23. Кăткăс тытăмлă сыпăнуллă хутлă предложенисем....................

24. Кăткăс тытăмлă пăхăнуллă хутлă предложенисем.....................

*Хутлă предложенисене вĕреннине аса илмелли тĕрлĕ ĕç...............*

*Синтаксиса вĕреннине аса илмелли тĕрлĕ ĕç...............................*

Текст

25. Чĕлхе, пуплев тата çыру...........................................................

26. Чăваш çырăвĕн аталанăвĕпе паянхи сăн-сăпачĕ........................

27. Публицистика стилĕ...................................................................

*5 – 9 классенче вĕреннине аса илмелли тĕрлĕ ĕç............................*